Николай
КУШМАНОВ

# ЙĂМРА КАШЛАВĔ

Шупашкар 2012



**Николай**
**КУШМАНОВ**

# ЙĂМРА КАШЛАВĔ

**1 том**

Шупашкар
2012

УДК 894, 344
ББК 84 (2 Рос — Чув) - 4
К - 96

К 96 Николай Кушманов, Йăмра кашлавĕ. Сăвăсемпе поэмăсем, 1 том. Шупашкар. 2012 ç. — 328 с.

Кĕнекене "Сăваплă вырăнсем", "Ик чун шыранă юрату", "Йăмра кашлавĕ", "Мул — эрнелĕх, ăс — яланлăх", "Уйрăлу" ярăмсене тата çавăн пекех "Уйрăлу", "Çул пуçламăшĕ", "Тăван ен йыхравĕ","Тăван ял-йышăм хушшинче" поэмăсемпе "Кун-çул ытамĕнче" сонет кăшăлне кĕртнĕ. Библин Кивĕ Завстĕнчи «Соломонăн хайлавĕсем» те паллă вырăн йышăнаççĕ.

Произведенисен тĕп тематики — тăван тавралăх, унăн иртнĕ сăн-сăпачĕпе паянхи улшăнăвĕсем. Калас тенине автор хăлаçланмасăр, кăшкăрашмасăр, сăпайлăн та лăпкăн калать.

ББК 84 (2 Рос — Чув) - 4

© Кушманов Н. К. 2012 ç.



## Николай Кушманов
## (Алеметин)
## Николай Константинович)
## 6.11.1949

Сăвăçă, куçаруçă, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР, Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ.

Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Турхан ялĕнче çуралнă. Турханти вăтам шкултан вĕренсе тухсан Совет Çарĕнче службăра пулнă. Шупашкарти строительство тхникумĕнчен, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Чылай çул хушши Шупашкарти коммуналлă хуçалăх организацийĕсенче ĕçленĕ. Каярахпа "Коммунизм ялавĕ" (халĕ "Хыпар") хаçат редакцийĕнче, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ, председателĕн заместителĕ, Чăваш кĕнеке издательствин аслă редакторĕ пулса вăй хунă, чăваш писателĕсен "Калем" издательствин директорĕн заместителĕ пулнă.

Литература ĕçне 70-мĕш çулсенче тытăннă. Унăн "Кун-çул ытамĕнче", "Тăван ен кĕввисем", "Çул пуçламăшĕ", "Кокель" "Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр" (2 том) кĕнекисем тухнă.

Унсăр пуçне юлашки çулсенче поэт куçару ĕçĕнче те тухăçлă ĕçлерĕ. Вăл Библин "Авалхи Саккунсен Халалĕн" "Псалтирь", "Иов кĕнеки","Соломонăн Ўкĕт Кĕнеки", "Екклезиаст Кĕнеки", "Соломонăн "Юрăсен юрри" Кĕнеки", "Соломонăн Ăслăлăх Кĕнеки", "Иисус ывăлĕн Сирахăн Ăслăлăх Кĕнеки" хайлавсене чăвашла сăвăласа куçарчĕ.

Вулакансем патне вĕсем "Ăслăлăх кĕнеки"(1994 ç.), "Чун кĕнеки" — 1, 2, 3 томсем (1995 ç., 2000 ç.) ятсемпе çитрĕç.

2001 çулхи декабрĕн 13-14-мĕшĕсенче Мускавра иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери вырăс халăхĕн VI соборĕ Николай Кушмановăн пичетленнĕ ĕçĕсене пысăк хак пачĕ, çавна шута илсе поэт Библи кĕнекисене куçарас енĕпе малалла ĕçлерĕ: "Çĕнĕ Заветăн" пур кĕнекине те (4, 5, 6 томсем), çавăн пекех Кивĕ Заветăн "Исаия пророк кĕнекине" (7 том) чăвашла сăвăласа куçарчĕ.

Омар Хайям çырнă рубаисене, Алишер Навоинăн, Саади Ширазинăн чаплă хайлавĕсене те поэт пысăк ăсталăхпа куçарчĕ.

# САВАПЛĂ ВЫРĂНСЕМ

* * *

Ытарайми,
Нихçан манми Чăваш çĕршывĕ!
Сăпайлăн,
Шăппăн юрататăп эп сана.
Кăтра вăрман, сар хирӳсем чĕремшĕн çывăх,
Кирек хăçан хапăлласа кĕтен мана.

Атте-аннен,
Чи çывăх çыннăмсен çĕршывĕ,
Сивве, терте —
Пурне те чăтнă эс пайтах.
Пурнăçăмра
Ман пулас марччĕ саншăн хывăх,
Ман пулас марччĕ саншăн кивĕ, пуш сăмах.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Мĕн ачаран пит çывăх манăн чуншăн
Чечекленсе çĕнĕлекен çĕршывăм.
Çурхи садсемшĕн,
Ырă, тăнăç куншăн
Тавах ăна.
Вăл пултăр ĕмĕр сывă!

Хум вылятан уй-хир,
Каш-каш йăмралăх,
Ун хӳттине пытаннă савнă енĕм.
Кăшт леререх вăрман,
Кăвак туйралăх
Çӳл тӳпене епле хитре çĕкленнĕ.

Тăван çĕршыв!
Санран инçе кайсан та,
Анне пекех пире шанса тăратăн.
Çул-йĕрĕ пулмасан та тикĕс, янтă,
Чăрмавлăха çĕнме вăй-хал паратăн.

Нихçанхинчен те халь тĕреклĕ эсĕ:
Ыр сунакан йышпа татуллă, туслă.
Сан хăватна татах çӳле çĕклесчĕ,
Кунран-кун пирĕн пурнăç пултăр тулăх.

Тăван çĕршыв!
Эс, çамрăклăх пек, шуххăн
Нихçан уçман çулпа пыратăн паттăр.
Санра яшсен вăй-халĕпеле шухăш
Пач иксĕлми,
Телейлĕн курăнатăн.

* * *

“Упи каҫми” варсемлӗ ман ҫӗршывӑм.
Тӳрем ҫӗрсем тӗл пулӑн пит сайра.
Йӑмралӑх шавӗнче эп ыррӑн-сыввӑн
Ҫил-тӑвӑл хыҫҫӑн ӳсрӗм артакра.

Йӑх-несӗлсен ҫул-йӗрӗ пулнӑ йывӑр,
Час-час пӑчланнӑ сас хӗн-асапра.
Кӗтмен ҫӗртен хӑрса кайсан та йывӑҫ,
Ҫут шанчӑк юлнӑ пурпӗр хунавра.

Ҫав хунавсем вӑрах тымар ярса
Кирек епле ҫанталӑкра ӗрченӗ,
Хӗвеллӗ, тӑнӑҫ кунсене ӗненнӗ.

Ҫынсен кун-ҫулӗ те шӑп ҫакӑн евӗр
Ниме пӑхмасӑр аталаннӑ евӗк,
Кӑвак хуппи уҫӑласса шанса.

* * *

Кашни пӗлет аван: ҫӗршыв мӑнаҫлӑ,
Илем тени таҫта та пур тӗнчен.
Казах ҫыннин, ав, уйӗ-хирӗ аслӑ,
Ҫанталӑк ырӑрах Кавказ енче

Ҫапах та эпӗ пурпӗр юрататӑп,
Ҫырма-ҫатраллӑ Чӑваш ен, сана.
Кунта хама телейлӗрех туятӑп,
Кунта вӗҫевлӗрех ман чун-ҫунат.

Кирек ӑҫта пулсан та ӑмӑрткайӑк
Тупать часах ҫуралнӑ йӑвине.
Этем те ҫавнашкал — таҫта та кайӗ,
Анчах та манмӗ вӑл тӑван килне.

Хӗрӳ чӗре пурӑнаймасть тапмасӑр,
Чӑн-чӑн этем — хӑй ҫӗршывне савмасӑр.

* * *

*Пур хăватлă, таса çыхăну*
*Халăхпа тăван çĕрĕн...*
*В. Тимаков*

Çутçанталăк пытанчăк вăйпа
Ĕмĕрсем хушшинче аталаннă,
Этеме чĕнекен çутăпа
Паянхи кун енне çул кăтартнă.

“Вĕç çӳлте — кăн-кăвак тӳпере”,—
Кайăка вăл çунат парнеленĕ.
*Вăрманта, пушхирте, тинĕсре* —
Чĕрчунсем пур çĕрте те ĕрченĕ.

Пĕр пек мар сăн-сăпачĕ вĕсен,
Ятсене нихăçан пăтраштармăн.
Халăхсем те çапла — тĕрлĕрен —
Уйăрма кашнине эс пултарăн.

Ут çинче, пăравус-пуйăспа
Ĕмĕрсем малалл шав васканă.
Паллашсассăн çынсем хурлăхпа,
Ĕçпеле, туслăхпа çывăхланнă.

Халăхсен утса тухнă кун-çулĕ —
Иртнипе паянхи çыхăнни.
Малашне те тĕпре пулĕ, юлĕ
Пурнăçа яланах çĕнетни.

* * *

Кашни кунах, ялан савӑнтаратӑн
Ытарайми ӑван тавралӑхӑм мана.
Сив хӗл ҫитсен шап-шур пустав саратӑн,
Ҫулла чечеклӗ ҫарану ҫӗклет чуна.

Ытарайми ӑван тавралӑхӑм, мана
Нихҫан, нихҫан та эс йӑлӑхтармастӑн.
Куҫ алчӑрать, пӗрмай пӑхса тӑрсан сӑнна,
Асамҫӑ пек ҫиҫетӗн эс хавассӑн.

Сив хӗл ҫитсен шап-шур пустав саратӑн,
Чӗнен пас ункисемлӗ лӑпкӑ вӑрмана.
Е каҫ пулсассӑн уйӑхна ҫакатӑн,
Ҫул кӑтартса сапатӑн йӑлтӑр ҫуттуна.

Ҫулла чечеклӗ ҫарану ҫӗклет чуна,
Кашни ҫынра ыр туйӑм ҫурататӑн,
Мухтатӑп сан тӳлеклӗхне, ылмашӑвна,
Эс вилӗмсӗр пулнишӗн савӑнатӑп.

* * *

Чӗрчун тӗнчи валли кӑна-и кирлӗ
Кӑтра вӑрман, ҫут кӳлӗ е ҫаран?
Епле вӗсен илемлӗ каҫӗ, ирӗ,
Юмаххӑн курӑнать кашни самант.

Анчах юханшывсем типсе лараҫҫӗ,
Куҫ умӗнчех хӑраҫҫӗ йывӑҫсем.
Чӑн айӑпӗ камра? Ҫакна туясчӗ,
Ялан васкан пулсан та сан, этем.

Сӑх ӗмӗте пула хӗрӳ тӗллевӗн
Ҫул-йӗрӗпе пымастӑн, иртӗхен.
Ыр чунлӑ Ҫӗр, юратнӑ амӑш евӗр,
Каҫарӗ тейӗн-и-ха халлӗхе?

Хӑйне вӑл хӗрхенме куллен чӗнет,
Курма пултарӑн хурлӑх хӑв та тет.

* * *

Пурнатпăр ирĕк çĕршывра телейлĕн,
Калатпăр уççăн: çыншăн çын — тăван.
Ĕçчен этем мала пăхать тĕллевлĕн,
Мире, хăйĕн çĕрне савать чунтан.

Анчах та лăпкă мар-ха пур çĕрте те,
Унта-кунта сиксе тухать пушар.
Усал вăйсем чĕрчунсене, çĕре те,
Этемлĕхе те кăтартасшăн шар.

Эппин, пирте ан сӳнтĕр сыхă ĕмĕт:
Тăван çĕре ялан куç пек упрар.
Ачамăрсен те пултăр вăрăм ĕмĕр,
Çакна куллен-кун асăмра тытар.

Халь эп те, эс те миршĕн кар тăрсан,
Тĕнчемĕр пулĕ лăпкăрах ыран.

* * *

Этемлĕх ялан пурăнать кĕрешсе.
Телейшĕн мĕн чухлĕ юхтарнă тар, юн?
Эппин, çĕнелӳ пĕрмай тăтăр çиçсе,
Çĕр çаврăнтăр шиксĕр, васкатăр çĕн Кун.

Анчах Икĕенлĕх пĕтмен, çухалман —
Кивви Çĕннине хирĕç тăрĕ куллен.
Нихçан юрамасть тĕлĕрме-лăпланма,
Этем пурнăçра ырă куртăр тесен.

Чĕртетпĕр садсем, ӳстеретпĕр тырпул —
Çĕршыв вăй пухса мăнаçлантăр тесе.
Кунтан та ырри тата халĕ мĕн пур,
Хастар халăхпа хĕн-хура çĕнтерсен.

Пĕртен-пĕр телей вăл — мала талпăнни,
Хĕвеллĕ тĕллевщĕн хĕрӳллĕн çунни.

* * *

*Куҫа суккӑрлатакан симӗс ҫутӑ,*
*Шартлатса ҫурӑлни, самантрах —*
*Вӗри сывлӑш хумӗ килсе ҫапать.*
*Мӗнпурӗ ҫунма тытӑнать.*

*(Япони художникӗсем — Тосикӑпа*
*Ири Маруки курни)*

Ҫын тӳснисем ума тухаҫҫӗ:
Ахлатнӑ, кӑшкӑрнӑ сассем.
Пире-ҫке асӑрхаттараҫҫӗ
Японире чӑн пулнисем.

Суккӑрлатан сип-симӗс ҫутӑ,
Шартлатнӑ сас, хӑруш сӑнсем.
Тавралӑхра асать вут-ҫулӑм,
Самант... Вилеҫҫӗ-ҫке ҫынсем.

Суккӑрлатан сип-симӗс ҫутӑ,
Пур чӗрлӗхе пӗтерекен.
*Ӑна пула пӗри пит* тутӑ,
Тепринщӗн пурнӑҫ ҫук иккен.

Тин ҫеҫ тырпул ӳсетчӗ селӗм,
Ҫил хӑвалатчӗ хумсене,
Пучахсене сӑрланӑҫемӗн
Хӗвел сапатчӗ ҫутине.

Кӗрлет хула. Ӗҫлет хавассӑн
Малашлӑха утӑмласа.
Самант... Янрать шартлатнӑ сасӑ,
Кӗл купи ҫеҫ юлать тӑрса.

Эй, ҫутҫанталӑк! Ҫӗр-аннемӗр!
Ҫакна-и пирӗн кӗтмелле?
Санпа чухне кӑна пӗртен-пӗр
Кун-ҫул, ача-пӑча, телей!

Эппин, тĕп пултăр-им вăрманĕ,
Чĕрчун йăлт пĕттĕр-им ыран?
Кĕллентĕр-им чечен çаранĕ,
Ача ан чуптăр-им çарран?..

Çук! Çук! Пăчлантăр вăрçă-харçă
Çак çĕр çинче яланлăхах.
Эсрелщĕн çын ан пултăр тарçă,
*Ун хăйне хăй сыхламаллах.*

Тăщман çĕлен пек чашкăрсан та,
Вăрçа мир пурпĕр çĕнтерет.
Ăна ялан сыхлар, тус-тантăш,
Савса хĕвеллĕ çут ире.

* * *

Тĕллев! Малашлăхпа эс йĕкĕреш-тĕр:
Чĕнетĕн çутă çăлтăр пек çиçсе,
Ыр ĕçщĕн çынсене кĕрештеретĕн,
Ан пултăр хурлăх нихăçан тесе.

* * *

Ытарайми илемлё ман çĕршывăм,
Ăна саватăп эп чунтан-вартан.
Кунта эп ӳснё те çёкленнё сыввăн,
Телейёме те тупнă çакăнта.

Историе аса илетпĕр халĕ:
Пит çăмăлах пулман утма пире,
Тӳсёмлёхре хăйне сыхланă халăх,
Туптаннă вĕрире те сивĕре.

"Вутра çунман, шывра путман",— калаççĕ,
Сăмах пулсассăн паттăрсем çинчен.
Малта пыракана ялан хаклаççĕ,
Çакна туйса тăратăп эп куллен.

Халăхпала кăна телей-хăват,
Эп унсăрăн — типсе хăран турат.

* * *

Пин-пин тĕспе çиçет умра тавралăх,
Çу кунĕ халь ача кулли пекех.
Çĕршывăмра тăрать тӳлек çанталăк,
Синкер-сехмет хуçаланмасть текех.

Анчах аса илетпĕр халь те эпĕр
Уйсем-хирсем вутра çуннисене:
Тăшман мĕн чухлĕ тунă сăтăр, тетпĕр,
Манма юрать-и пирĕн вĕсене:

Хатыньпеле Майданекĕн кĕлне те,
Европăра фашист пуçпулнине?..
Тăван çĕре этем юнпа çĕнетнĕ
Шанса тăрса сар çу пек кунсене.

Телей — пĕлетпĕр — çăмăллăн килмен,
Ăна, куç шăрçи пек, упрар куллен.

* * *

Юлташăм, канăçсăр эс питĕ,
Тĕпчевçĕ пек мала пăхан.
Çĕнетĕве кӳресшĕн витĕм,
Хальччен курман çулпа утан.

Ĕнер шанни паян пач кивĕ,
Шутламаллах пуль кун пирки.
Вучах кĕлленĕ хыççăн сивĕ,
Çаплах-тăр пурнăçăн йĕрки...

* * *

Йăшсассăн та кун каçипе
Чĕремшĕн ют-ха ăшă вырăн.
*Çут ĕмĕтĕн хавалĕпе*
Шанса тăран:
малашлăх ырă.

Лăпкăлăха сивлетĕн тек,
Çунатлă шухăш илĕртӳллĕ:
*Каçхи кăвайт та çакăн пек,*
Чĕнет хăйĕн патне хĕрӳллĕн...

* * *

Кашнин пур хăйĕн вăхăчĕ:
Çанталăкăн, этемĕн.
Кĕç çулçăсем йăлт тăкăнĕç:
Каять тавра илемĕ.

Тин çеç кунта çу кунĕччĕ,
Сип-симĕсчĕ вăрманĕ,
Чечексемпе пин куçлăччĕ
Çиçсе выртан çаранĕ.

Хаваслă кайăк-кĕшĕкĕн
Юррийĕсем саламлăн
Пĕрмай янратчĕç кĕвĕллĕн,
Ирпе-каçпа асамлăн.

Ах, хамăр та пит шухăччĕ,
Лара-тăра пĕлмен çав.
Пуçра пин тĕрлĕ шухăшчĕ,
Ăçта кăна çитмен-ши?

Тем те тăвас пек ĕмĕтлĕн
Çӳреттĕмĕр. Вăй-халлă.
Сисмен те — çамрăк ĕмĕрĕн
Çут кунĕсем çухалнă.

Сив çил çеç халь, ав, чăрсăррăн
Кумса çӳрет хураххăн.
Ларать сип-симĕс чăрăш та
Уçланкăра хăраххăн...

Кашнин пур хăйĕн вăхăчĕ
Çанталăкăн, этемĕн.
Кĕç çулçăсем йăлт тăкăнĕç,
Каять тавра илемĕ...

## ИКЁ УЯВ

Анне аса илетчĕ: “Эс çуралтăн
Пĕр пысăк уяв умĕн, кĕркунне.
Аçун сăн-пичĕ кулăпа çуталчĕ
Курсан-илтсен çĕн кайăк килнине.

Палатăри хĕрарăмсем пуплеççĕ:
“Мĕнле-ха пĕлтĕн çуратма, Матюк?
Ӳссессĕн ывăлу мухтанĕ,— теççĕ,—
Пулнишĕн уншăн ик уяв тăрук”.

Çынсем эс кун курнишĕн хĕпĕртенĕн
Клуб еннелле утатчĕç савăнса.
*Ялав та транспарант кашни çĕкленĕ,*
Выртаттăм эпĕ вĕсене пăхса...”

Çав кун тĕпрен арканнă кивĕ пусмăр,
Ĕçхалăхĕн пусланнă çуркунни.
Ăна хăратайман тек юр та çумăр,
Янк! уçăлнă кăвак хуппин ани.

Çулсем иртӳçĕн, чăн та, савăнатăп
Çав кун пулнишĕн маншăн ик уяв.
Манми Октябрь!
Эп сана мухтатăп,
Атте-анне, сире те ĕмĕр тав!

## АЧАЛĂХ

Ялан аса илетĕп эп
Ача чухне çарран
Урамсенче тусан
Вĕçтернине,

Каç пуличчен юлташсемпе
Шута манса щывра
Кăвакал пек чăмса
Ăмăртнине.

Е тĕпĕр-тĕпĕр тутарса,
Хаваслă сăн-питпе
Ахăлтатса кулса
Алхаснине.

Ачалăх!
Çăтмахри кунсем!
Шухăшăмра кăна
Ман ĕненес килмест
Вăл кайнине.

## ТĂВАН ЯЛТА

Хула шăв-шавĕ хыççăн лайăх
Туйса тăма кил ăшшине.
Пĕве хĕрри.
Тем тĕрлĕ кайăк
Шăрантарать, ав, юррине.

Кунта эп туссемпе вылянă
Е *чăмпăлтатнă пĕвере*.
Хур-кăвакал сасси
Ăсаннă
Ачалăха асилтерет.

Хĕвелĕ ялăмра ачашшăн
Хĕмне сапать ĕлĕкхиллех.
Тирекĕн çулçисем хавассăн
Çатăлтатаççĕ çилпеле...

* * *

Ялйышăмăн калаçăвĕ ансат:
Аван, тет вăл, кăçал тырри ăнсан,
Хĕл касипе çитсе тăрсассăн утă,
Ĕни те сурăхĕ пулаççĕ тутă.

Ялти çынсен калаçăвĕ тӳлек,
Таçта, таçта шырас темест телей,
Тăван çĕрпе вĕсен пĕрлешнĕ çулĕ,
Унпа пĕрле кашнин ăс-халĕ, мулĕ.

Пĕр-пĕр ăсчах витлевлĕ ят парсан,
Ăна кунта манмаççĕ нихăçан.
Хăшне-пĕрне кӳрет вăл чăн-чăн витĕм,
Сăмахĕсем кусаççĕ ĕмĕр витĕр.

Кӳрентерсессĕн, çилленес йăла
Ик-виç куна — пăтратмăн кăмăла.
Хуйха-суйха ялан пĕрле пайлаççĕ,
Ĕçчен çынна кăна сума сăваççĕ.

Ялти çынран вĕренмелли нумай,
Еткерлĕхре мĕн чухлĕ ун юмах?
Йăх-несĕлĕм кунта çут кун курнишĕн,
Хăй тымарне вăл упрама пĕлнишĕн

Аваллăхри тăвансене тавах,
Тавах...

## ЧĔЛХЕМĔРЕ

Аннен сĕчĕпеле кĕрсе вырнаçрăн
Чуна, юна.
Туптарăн ăс-хала.
Аттен çирĕплĕхне, вăйне туймашкăн
Вĕрентĕм эпĕ пĕр сана пула.

Вĕрентĕм эп илемлĕхе курмашкăн,
Хĕвĕшўри шавра ырра савма,
Хаваслă юрăсем шăрантармашкăн,
Эс вилĕмсĕр пулнишĕн савăнма.

Ют ăсчахсем санран пит тĕлĕнеççĕ:
Епле сыхланнă-ха ку таранччен?
Сăмахĕсем ахах пек илĕртеççĕ,
Тĕпченĕçем таçтах çитет инçет.

Ытла та хăйнеевĕрлĕ, юп-сумлă,
Арпашăнса кайман ют чĕлхепе,
Кўрши-арши унпа пулсан та туслă,
Пурнас темен вĕсен витĕмĕпе.

Чи пысăк алана вăл асилтерĕ,
Çўп-çап тени вĕçсе кăна тăрать.
Çынсем хăш сăмаха пит килĕштерĕç,
*Çав çеç ун çўпçине кĕрсе юлать.*

Мĕн тăвăн?
Пур-ха манăçнă чĕлхе те
(Кулянмалли çут тĕнчере нумай).
Пур — халăх чĕлхине типĕтекен те,
*Йăх-ях чуна кирлех-ши ăнланма?*

Анчах çавсем, çавсем хăш чух алхапăл
Параççĕ сĕнўсем те хушусем:
Сăмах-юмахĕпе хăйсем пит сапăр,
Ĕçпе пăхсассăн — шĕкĕ хурчĕсем.

Чăваш ятне ан çĕрт!
Е çавăн евĕр
Каларăшсем, вĕрентнĕ сăмахсем
Асамлăхпа тулса янраççĕ евĕк,
Пит ăслă пулнă мар-и ватăсем?

Çырулăх пулмасассăн та чухланă
Йăх-несĕлсем чĕлхе пит кирлине.
Ламран лама куçса ăна упранă,
Ăмсанĕ кирек кам еткерлĕхне.

Раççей вăрманĕнче çĕр тĕрлĕ йывăç —
Çĕр тĕрлĕ халăх — хăй вырăнĕнче.
Кашнин чĕлхи упрантăр ыррăн-сыввăн
Хĕвел шевлиллĕ аслă Çĕр çинче.

Чăваш чĕлхи!
Ăçта кăна çитмерĕн?
Тĕтресĕр пултăрччĕ малашлăху.
Вутра, шывра,
Сив космосра çĕтмерĕн,
Санпа мухтантăр ĕмĕр халăху!

## МУСКАВ ЧӐВАШӖСЕМ

Ҫӳретӗн-и эс шавлӑ метрора
Е пиншер ҫынлӑ урампа утатӑн.
Чӑвашсене курсассӑн ӑнсӑртран
Ача пекех хӑпартланса каятӑн.

Тӗпчен вара:
"Ӑҫтан?
Хӑш енчисем?
Кунта пурнатӑр е курма ҫеҫ килнӗ?"
Чӑваш пулсассӑн та ҫуралнӑ килӗ
Кашниййӗн тӗрлӗ вырӑнта вӗсен:

Пӗрин тӑван-пӗтенӗ Ҫӗпӗрте,
Теприн, пушкӑртсемпе пӗрле пурнаҫҫӗ...
Виҫҫӗмӗшсен йӑх-несӗл Чӗмпӗрте,—
Яковлева чунтан сума сӑваҫҫӗ.

Пуплеҫҫӗ:
"Кунтисем е килнӗ ҫеҫ.
Май кунӗнче пӗрле пуҫтарӑнатпӑр.
Сип-симӗс Ваганьков масарӗнче
Учитель тӑприне пуҫа таятпӑр.

Кӑҫал ак йӗркеленчӗ пирӗн ушкӑн,*
Ертӳҫӗ — генерал-майор, чӑваш.**
Пӗр-пӗринпе эпир пурнатпӑр туслӑн,
Хӑнасене курма ялан хавас.

Тавах сире, эсир пире манмастӑр:
Час-час кунта пулаҫҫӗ артистсем,
Килеҫҫӗ поэтсем те юрӑҫсем.
Вӗсен ячӗсене асран ямастпӑр.

Ҫук, пытармастпӑр, тунсӑхлатпӑр эпӗр,
Ҫуралнӑ енӗ хӑй патнех чӗнет,
Ирпе каҫпа вӑл питӗ илӗртет.
Чунтан шанса тӗлпулӑва кӗтетпӗр".

*Мускаври чӑвашсен обществи пирки сӑмах пырать.*

***А. Г. Николаев, виҫҫӗмӗш космонавт.*

Мускав чăвашĕсем...
Куллен çӳретĕр
Шăв-шавлă завода, фабрикăна.
Çемçе кăмăлăрпа шав ĕненетĕр:
Сӳнми телей — хĕрӳ ĕçре кăна.

Тем-тĕрлĕ халăх ывăл-хĕрĕ туслăн
Пурнаççĕ сирĕнпе юнашарах.
Вĕсем сăнаççĕ:
Эсĕр элчĕ пулнăн
Чăваш ятне çĕклетĕр таврара.

Мускав чăвашĕсем,
Йыш-хушăрта
Пур академик,* гобоисчĕ** чаплă.
Пур — балерина,*** паллă поэта****
Европăра та хисеплет халь халăх.

Янташăмем,
Чĕлхемĕре манманшăн,
Ят-сумăра çĕкленĕшĕн ĕçре,
Йăх-несĕлĕмĕрсен чысне яманшăн
Пуçа тайса эп тав тăвап сире.

*Ма пытарас?*
Эпир те тунсăхлатпăр
Йăмра, тирек кашлавĕнчи ялта.
Шур тумлă лăпкă Шупашкарăмра та
Сирĕнпеле пуплес килет чунтан.

Мускав чăвашĕсем,
Куратăп эпĕ
Сăн-питĕрте пытаннă тунсăха.
Шанатăп чĕререн:
Яланлăхах
Сирте упранĕ халăхăн хисепĕ.

---

**Г. Н. Волков, **А. Любимов,*
****Н. Павлова, ****Г. Айхи.*

## ЗАВОДРИ ТĔЛПУЛУ

"ЗИЛра"* пырать чăваш концерчĕ,
Янраççĕ савăк кĕвĕсем.
"Куракансем пит хĕпĕртеччĕр",—
Тесе юрлаççĕ юрăçсем.

Поэчĕсем памаççĕ маххă,
*Вĕсем те ăмăртаççĕ тан.*
Шăраннă сăмахсем ахаххăн
Вут-хĕм сапаççĕ пек кунта.

Черетлĕн янăрать пĕр евĕк
Ик халăхăн юрри-кĕвви.
Йăлт салтăннă пек чун тĕвви,
Вĕçет çӳлте вăл мамăк евĕр.

Лараççĕ чăвашсем сăпайлăн,
Кашниĕ лекнĕн çăтмаха.
Каласшăн пек:
"Ан тăвăр айăп,
Сисмесĕрех куççуль тухать".

Тăванăмсем!
Аван сисетпĕр
Чун-чĕрери тунсăхăра.
Пире курсан, эсир çӳретĕр
Çырма-çатраллă Чăвашрах...

**Мускаври Лихачев ячĕпе хисепленекен автомобил завочĕ.*

* * *

Мускав хулин ем-ешёл паркёнче,*
Илемлё бюст вырнаçнă варринче.
Çўл йывăççем çилпе чўхеннё майăн,
Тăрать вăл лăпкăн çынсене сăнанăн.

Кирек хăçан кунта иртен-çўрен,
Чечекёсем те, ав, епле ёлккен.
Тавралăха кăвар-хёлхем сапаççё,
Чуна çут факел евёр ăшăтаççё.

Утатпăр виççён:
Скульпторпа ик сăвăç.
Ман çывăх тусăм Исмуков поэт
Майраслова ыйту парса тёпчет:

"Ильич-ха ку.
Ăсталаканё кам?
Ăна-кăна, ентеш, эс чухлакан".
"Туссем, пуçăрсене ытла ан ватăр,
Вăл юнашар тăрать-иç.
Эпё — автор". —

Тăвай чăвашё хуравлать сăпайлăн.
Çакна илтсен, ун-кун пăхса, аптранăн
Тёсетпёр скульптора тёлёнерех:
"Чăнах та-и?
Ун авторё эсех?"

Сăнатпăр палăка эпир темччен,
Вăл курăнать пире тата ёлккен.
Ăстаçăна питех те хисепленён
Тав сăмахне калать пек аслă Ленин...

**Мускаври 3-мёш Интернационал ячёпе хисепленекен Культура керменён скверё пирки сăмах пырать.*

## СКУЛЬПТОР ПАТĔНЧЕ

*Алексей МАЙРАСЛОВА*

Сан мастерскойунта пулса курсассăн
Тем тĕрлĕ шухăш çуралать пуçра.
Е пăлханатăн, е сывлатăн ассăн
*Ĕçне тĕсенĕ хыççăн çывăхран.*

Епле ăшпиллĕ эс килен-каяншăн,
Хăпартланса хаваслăн калаçан.
Хăну-вĕрлӳ чăваш çынни пулсассăн
Кăшт тунсăхлă чунна яри уçан.

Умри тĕллевĕм пурнăçлантăр, тетĕн,
Шăп çавăнпа шеллемĕп вăй-хала.
Хастар çынсем мал ĕмĕтлĕ ялан,
Вĕсем пекех эп хам та кĕрешетĕп.

Чăрмавĕ, терчĕ...
Вăл пĕтмест, чухлатăп.
Анчах та парăнма эс çуралман.
Чунпа, юнпа чăвашлăха упратăн,
Эп çакăншăн, тăванăм, савăнатăп.

Хĕрӳллĕ Çеçпĕл, Яковлев сăнарĕ,
Яш Кĕçтенттин, Нарспипеле Сетнер...
Пурне те асăнма май килмĕ харăс,
Сан патăнтан çула тухаç чипер.

Шыратăн символ,
Кирлĕ, тен, концепци,
Сăнар тулли те хӳхĕм пулмалла...
Шухăшупа йăлт килĕшетĕп эпĕ,
Вĕсем поэзире те шăп çапла.

Çул-йĕр, чăнах та,
Скульпторпа поэтăн
Юратнă халăхпа ялан пĕрле.
Ăстаçă!
Сан палăкусем, сисетĕп,
Кирек хăçан та курнĕç çĕнĕлле!

## МАКОВСКИЙ МОЛЬБЕРЧЁ

Эп тарăн шухăша кайса тăратăп
Асамлă çак реликви умĕнче.
Маковскийĕн манми ятне упрать вăл,
Вырнаçнăскер пĕр скульптор* патĕнче.

Çулсем васкавлăн иртнĕçем кивелнĕ,
Ларать вăл кĕтесре тунсăхласа.
Тен, çĕнĕ хуçана хытах кӳреннĕ,
Куллен-кун сырса илнĕрен тусан.

Тен, асилет пуль:
"Питĕ тăрăшаттăм
Куллен юрас тесе Маковские.
Эп курнă Репина, Кардовские.
Вĕсен калаçăвне пĕрмай тăнлаттăм.

Пуласлăхшăн епле хыт кĕрешетчĕç,
Ялан сивлетчĕç тĕрĕсмарлăха.
Тавлашура пĕрне-пĕри итлетчĕç,
Чунтан саватчĕç ĕçлĕ халăха.

Чим, аса илтĕм:
Кокеле пĕлеттĕм,
Ăна пит хисеплетчĕ ман хуçа.
Сан янташу вăл.
Эп ăна итлеттĕм,
Унпа чухне усмастăмччĕ пуçа.

Хыт тăрăшатчĕ,
Хăй ятне ямарĕ,
Çын пулчĕ вĕренсе Петербургра.
Çич çул хушши вăл ман умран каймарĕ,
Кайран, пурнатчĕ, тетчĕç, Харьковра..."

Эп тарăн шухăша кайса тăратăп
Маковскийĕн мольберчĕ умĕнче.
Чылай ята пĕлет-ха вăл, чухлатăп,
Чылай художник унăн асĕнче.

---

*Асăннă мольберт А. П. Майраслов скульптор мастерскойĕнче упранать.*

## *"АННЕМ, МАНА ÇӐЛ ТУ ÇИНЕ ХӐПАРТРĔÇ..."*

Паян уяв Колоннӑллӑ залра,
Мухтавлӑ поэта чыслать Мускавӑм.
Кашниййӗн сӑнӗ-питӗнче куран:
Çынсен, чӑнах та, кӑмӑл ырӑ, савӑк.

Президиум сӗтелӗ хушшинче
Хисеплӗ йыш.
Лараççӗ сумлӑн.
Шап-шурӑ люстрӑсен ялтравӗнче
Хӑвна асамлӑха çакланнӑн туйӑн.

Поэт кунтах.
Чи чаплӑ вырӑнтан
Сӑнать пурне те вӑл ӑшпиллӗн.
Кӗске кун-çулӗ унӑн иртнӗ пиллӗн.
Паян та халӑхпа пӗрле утать.

Эсрелӗ ун чунне илме килсен
Хӑй амӑшне вӑл каласа хӑварнӑ:
***"Аннем!***
***Мана çӑл ту çине хӑпартрӗç..."***
Чӑн пулчӗç пурнӑçра кайран çаксем.

Çӑл ту...
Поэт ун чӑн хакне чухланӑ.
Сӑртсемпеле пуян асри Слакпуç.
Шупашкарта та халь çак вырӑн пур.
"Юнеско" шайӗ те унпах танлашӗ...

Колоннӑллӑ залра иртен уяв та
Поэт ятне çӗклет çӳлтен çӳле.
Нарспи чапне кунта аван туятӑн,
Паян та вуланать вӑл çӗнӗлле.

Зал лӑк тулли.
Сив çумӑра пӑхмасӑр
Пуçтарӑннӑ Мускав чӑвашӗсем.

Кун пек уяв, калатăп мухтанмасăр:
Пĕрремĕш хут пулса иртет вĕсен!

Тухса калаçаканĕсем пĕр енлĕн
Вĕçлеççĕ сăмахне хĕрӳленсе:
Репьях, Исаев, Михалков, Семенов...
Пурне те асăнма май çук, туссем.

Антракт.
Ун хыççăн пуçланать концерт.
Чăваш Нарспийĕсем епле чипер!
Сстнерĕсем вут кăларса ташлаççĕ,
Сисмесĕрех иртет ак туслăх каçĕ.

Пăхать поэт,
Пăхать пурне те ăшшăн,
Кĕç чĕрĕлсе тăрса утас пекех.
Пире чунне уçса парасшăн лăпкăн,
Каласшăн:
Терт çук сирĕнпе текех.

Паян уяв Колоннăллă залра,
Манми поэтăмăр çĕр çул тултарчĕ.
Çĕршыв,
Тĕнче тытать ăна асра
Тĕлĕнтернишĕн яланах таланчĕ.

* * *

*“Эпир пулнӑ! Пур! Пулатпӑр!*
*П. ХУСАНКАЙ*

Хӑш чух чӑваш ачинченех илтетӗп:
“Тӑван чӗлхе пӗтет час”,— тенине.
“Айван ҫын — тарӑхатӑп — эс пӗлместӗн
Эпир куллен-кунах вӑй илнине”.

Тӑван чӗлхе!
Пире эс парнелерӗн
Сетнерпеле Нарспин йӑхӗсене.
Тӑхтамансен йышне ҫуллен сивлетӗн,
Пӗлеп
Вӗсен хӑвачӗ чакнине.

Тӑван чӗлхе!
Сана чунтан юратнӑ
Мухтавлӑ Ҫеҫпӗл, харсӑр Хусанкай,
Элкер, Алга, Митта, Шавли ҫуралнӑ:
Ҫӗкленччӗ эс тесе татах кал-кал.

Ятсем, ятсем...
Вӗсем мӗн чухлӗ санӑн:
Кашни хӑй ҫӑлтӑр,
Эсӗ тӑлӑх мар!
Санпа кӑна чылайӑш хавхаланӗҫ,
Санран вӗренӗҫ пурӑнма, савма!

Эппин, пирте ялан, ялан упрантӑр ҫынлӑх,
Ыр ӗҫшӗн ҫеҫ ӑнтӑлтӑр вут-чӗре!
Куллен-кун аталантӑр ҫирӗп туслӑх,
Ҫӗклентӗр чӑваш ячӗ тӗнчере!

Чӗлхемӗре халь сивлекенсенчен
Тӑрӑхласа, кулса ҫеҫ пӑрӑнатпӑр,
Йӑлтах тасалӑпӑр ҫӳп-ҫапсенчен,
Тасалӑпӑр:
Эпир ялан пулатпӑр!

* * *

*Аттене, Константин*
*Михайлович Алеметкина*

Пӳрт умӗнче эс лартнӑ йӑмрасем.
Çурт çумӗнче эс чӗртнӗ хӳхӗм сад.
Ялан кӗтеççӗ пек эс килессе,
Калаççӗ пек: "Аçу кӗç таврӑнать".

Пӑхаттир пек çӳреттӗн-çке, атте,
Виç вӑрçӑ витӗр тухнӑ ветеран.
Пире пит тараватчӗ çак кӗтес
Эс чӗрӗ чух пӗрле пуçтарӑнсан.

Карап пек туйӑнатчӗ пирӗн çурт,
Ун пуçӗнче тӑраттӑн-çке ялан.
Кун-çулунта чылай тӗл пултӑн хур,
Анчах нихçан та эс пуçна усман.

Тулличчӗ пирӗн кил.
Вӑл халь пушах,
Йӑмра кашлавӗ янӑрать пуçра.
Крыльца çинче çеç, ав, ларать кушак,
Сан ачусем халь пурте хулара.

Пӳрт умӗнче эс лартнӑ йывӑççем,
Çурт çумӗнче эс чӗртнӗ хӳхӗм сад,
Ялан кӗтеççӗ пек эс килессе,
Калаççӗ пек: "Аçу час таврӑнать".

## БОЛЬНИЦĂРА

Палатăсем, палатăсем...
Çиçет тасалăх пур çĕрте.
*Ыйтуллă, ыйхăсăр каçсем:*
"Ку чир хăçан иртет?"

Авал чăваш каланă пек
Пăтпа чир-чĕр кĕрет.
Тухать калла вăл пĕрчĕпе,
Врачсем сипленĕрен.

Сейсмографсем пекех вĕсем
Тăраççĕ сыхăра.
Хăçан канаççĕ-ши хăйсем?
Ялан палатăра.

Чылай чир-чĕршĕн хамăрах,
Тен, айăплă эпир?
Ăса кĕретпĕр каярах,
Ăна туймастпăр ир.

Сасартăк шăплăха çурса
Постра шăнкрав янрать.
Шур тумлă хĕр лăплантарса
Тÿлеккĕн калаçать.

"Ыран ман операци",— тет
Пĕрле выртаканскер,
Çухатнă канăçне хăй, тен:
"Мана мĕскер кĕтет?"

Тепри, сывалнăскер, кунтан
Сывпуллашса тухать.
Хаваслăскер, чунтан-вартан
Пурне те тав тăвать.

Шур тумлă ырă тухтăрсем,
Тавах, тавах сире,—
Куллен сывалнăшăн çынсем,
Çĕнтернĕшĕн чире.

## ТУХТĂРСЕНЕ

*В. Е. Волков профессорпа*
*Н. А. Ефимов тухтăра*

Сывах чухне йăлт хаклаймастпăр
Пит пархатарлă ĕçĕре,
Чирлетпĕр те вара пире
Сыватасса шанса пурнатпăр.

Сăпайлăх, çынлăх, тараватлăх,
Çынна çунатлă тăвасси,
Инкек килсен пулăшасси —
Чунра ку сирĕн, çакă хаклă.

Палатăна эсир кĕрсессĕн,
Чĕре хăпартланса тапать,
Усал чире хĕссе çĕнтернĕн,
Шур тум куçа шартса тăрать.

Тўлек саспа ыйтса пĕлетĕр
Хăçан, епле чирленине.
Канмасăр ир те каç сиплетĕр,
Телей пиллетĕр çынсене.

Тумхахлă, чыслă ĕçĕрте,
Пĕлетпĕр, шырамастăр канăç.
Çынсемшĕн тăрăшатăр тек,
Паратăр вĕсене çут шанăç.

* * *

Çут тĕнче!
Çĕр çинче пурăнма
Ăнсăртран çеç килетпĕр эпир, ăнсăртран.
Вĕренетпĕр кунта юратма,
Çилленме те пĕлетпĕр эпир ачаран.

Çыннисем те вара тĕрлисем:
Çывăххи, йăваш йытă пекех çыртакан...
Нумай мар çав чи çывăх туссем,
Ёнерхи юлташу та паян, ав, тăщман...

Çын сăн-пичĕ!
Унра вуланать:
Кĕвĕçӳ,
тарăху,
юрату,
хумханни...
Темĕн тĕрлĕ сăлтав упранать...
Епле хаклă ялан пĕр-пĕрне ăнланни!

Çут тĕнче!
*Тус-йышпа пурăнма*
Ăнсăртран-çке килетпĕр эпир, ăнсăртран.
Вĕренесчĕ чăн-чăн çын пулма,
Кĕрешме,
çĕнтерме те пĕлесчĕ ялан!

## АННЕҪЁМ УМЁНЧЕ ПУҪА ТАЯТĂП

*Кушманова Матрена Ивановнăна*

Ҫул хыҫҫăн ҫул хыҫа ăсаннăран
Хĕрарăм шăпине чунтан хаклатăп.
Аннеҫĕм умĕнче пуҫа таятăп,
Чи хаклă ҫын вăл пулнăран.

Ун кăкăр сĕчĕпе эп аталаннă,
Вăй илнĕ тĕнчене савса.
Сăпкара чух йăл-йăл кулсан
Манпа пĕрле вăл савăннă, юрланă.

Утма пуҫличченех, тен, шухăшланă
Ӳссен эп кам пулас пирки.
Чухлатăп, шухăшăн йĕрки
Шиклентерсессĕн вăл ҫухатнă канăҫ.

Ҫакна та асăмран нихҫан ямастăп:
Тин тунă ҫурт ҫунса кайсан,
Тумтирсĕр, хӳтлĕхсĕр юлсан,
Аннеҫĕм асапне йăлт ăнланман-тăр.

Ҫапах та вăл мана шкула ăсатнă:
"Вĕрен, ачам, ҫын пул", — тесе.
Тертне те куҫҫульне пиртен пытарнă,
Малашлăха ҫеҫ ĕненсе.

Ҫунат сарсан, шух ĕмĕтсем чĕнсессĕн,
Тăван ялпа сывпуллашсан,
Инҫе ҫĕрте чухне, аннеҫĕм, эсĕ
Мана пит кĕтнĕ-ҫке ялан!

Виҫ кунлăха яла килсен,
Тантăшсемпе пĕрле пуҫтарăнсассăн,
Мана ăсатрăн пиллесе
Ҫĕршывăма савса хуралламашкăн...

Ик ҫул иртсен, епле, епле хаваслăн.
Эс кĕтсе илтĕн ывăлна!

Йăл-йăл кулса кĕрекере чысларăн.
Тавах пуриншĕн те сана!..

Çул хыççăн çул хыçа ăсаннăран
Шухăшлăрах тавралăха сăнатăп.
Аннеçĕм умĕнче пуçа таятăп,
Чи хаклă çын вăл пулнăран.

## АННЕНЕ

### 1

Çулсем иртеççĕ пуйăс евĕр хăвăрт,
Эп çамрăк-ха, анчах эс ватăлан,
*Шăп çавăнпа чуна хăш чух пит тăвăр,*
Хĕрарăм шăпине ăнланнăран.

Аннеçĕм, халь епле-ха пурăнатăн?
Эс аякра та, манăн канăç çук,
Шупашкарта пĕччен çӳренĕ чух
Шухăшăмра санпа çеç калаçатăп.

Тăван ялта йăва çавăрманран,
Ытти çынсен ачисем пек пулманшăн
Ӳпкев сăмахĕсем, тен, эс упран,
Анчах ăна пĕрре те палăртмастăн.

Кун-çулăма, эп мĕншĕн çуннине
Манран та лайăхрах пĕлсе тăратăн.
Кăшт йăнăшсассăн, ăшшăн ăс паратăн,
Вара манмастăп эс вĕрентнине:

Санра мĕн чул вăй-хал — пит тĕлĕнетĕп,
Пиллерĕн эсĕ пурнăç улт çынна.
Килсе çӳреççĕ пурте сан патна,
Шăп çавăнпа:
“Эп пит телейлĕ”,— тетĕн.

Сана пуриншĕн те эп тав тăватăп,
Ху сывлăхна, ху сывлăхна упра.
Ĕçпе тинех ан хуçăл ватлăхра.
Кун-çулунта телей кăна сунатăп.

## II

Паян, аннеçём, çитмĕл çул тултартăн,
Епле илемлĕ эс уявунта.
Çулу-йĕрӳ хĕн-хурлă пулнă, тарлă,
Пурне те чăтнă хăв пурнăçунта.

Ларатăн эсĕ чыслăн, сумлăн, лăпкăн
Ачусемпе тулли кĕрекере.
Анчах аса илетĕн халĕ шăппăн
Нушаланса ӳстернине пире.

Эс вăрçă асапне те, выçлăха та
Тӳссе ирттернĕ халăхпа пĕрле.
Çут классенче вĕренеймен, çапах та
Ялтранă пурпĕр умăнта тĕллев:

"Атьсем ăс пухчăр, аталанччăр, ӳсчĕр.
Вĕсем маттур пулсан, мана аван".
Ĕмĕтленни сан çитрĕ: ăшшăн, туслăн
Халь улттăн тан пăхатпăр куçунтан.

Сан ачусем, аннеçĕм, çунат сарнă,
Кашнин шăпи телейлĕ те аван.
Пурнаççĕ пурте шăкăл-шăкăл, савăк,
Кашнин çемье, мăнукусем патвар.

Уяв курки çĕкленĕ майăн пурте
Сана ыр сывлăхпа телей сунар.
Пач чирлемесĕр эс, тăванăм, пурăн,
Пул яланах паянхи пек хастар!

* * *

"Ирсерен кама кĕтетĕн, эс, йăмра?"
— Сан аслаçуна, вăл лартнăччĕ мана.
"Килес çук нихçан: вăл вилнĕ вăрçăра".
— Пурĕпĕр кĕтетĕп яланах ăна...

## ЁМЁРХИ ӲКЕРЧЁК

Хёвел тухсан, тёпелён кукринче
Анне куллен чуста ҫăратчĕ.
Шевле вылянăҫем ун питĕнче
Пӳрте часах ыр шăршă сарăлатчĕ.

Ҫулсем иртӳҫĕн ҫав сăнах умра,
Пĕр улшăну ҫеҫ — кухньăра ман арăм.
Кăмакана хывать ҫĕн ҫăкăра,—
Чĕремшĕн ҫак ӳкерчĕк ҫывăх, тарăн..

## ДАНКО ПЕК

Пĕр суккăр хĕр Лакрей вăрманĕнче
Хăй ҫырнă сăввине каларĕ.
Хайлавĕ пулчĕ ун хĕвел ҫинчен,
Ăна пур кăмăлтан мухтарĕ.

Кайран ăнкартăм:
Вăл ăна курман
Синкерлĕхне кура пĕрре те.
Ачаранпах сĕм суккăр пулнăран
Хĕвел пирки пĕлмест ĕретлĕн.

Итлекенсем хĕре те мухтаса,
Те хĕрхенсе часах ал ҫупрĕҫ.
Сăн-пичĕ лешĕн илчĕ туртăнса,
Унтан чаршав хыҫне вăл тухрĕ.

Пĕлмерĕм эпĕ сăвăҫ кăмăлне,
Мĕн-ма кӳреннине пĕлмерĕм.
Чухлатăп ҫеҫ ҫакна:
Хăй шăпине,
Ҫын сисмен чух, вăл пит шеллерĕ...

Калаҫҫĕ-ха, те чăн ку, те суя:
Суккăр ҫынсен пит пысăк сисĕм.
Ҫутта кашниех чунпа туять,
Аллисемпе тытать пек ҫиҫĕм.

Маттур çак сăвăç,
Чун ĕмĕчĕпе
Кирек ăçта çитерĕ тӳсĕм.
Утать сĕм тĕттĕмре вăл Данко пек,
Юлташĕсемшĕн хĕр — ертӳçĕ.

* * *

*От жизни той, что бушевала здесь...*
*Ф. ТЮТЧЕВ*

Кунта масар пулни çинчен
Ялти çынсем аса илеççĕ.
Нумай тĕмескесем çинче
Кĕреш пек йывăçсем ӳсеççĕ.

Хĕресĕсем пурин те çĕрнĕ —
Палли те çук масар пулни.
Хушаматсем, ятсем йăлт çĕтнĕ,
Çапах асран каймасть иртни:

Пĕри — хăйне пытариччен
Чылай куççуль е юн юхтарнă,
Е уй-хире тарпа шăварнă
Хура элчелĕ çитиччен.

Тепри — татах пуяс шутпа
Чухăнсене асап кăтартнă,
Улталаса, чее майпа
Тĕрĕслĕхе ялан пытарнă.

Иртнисене аса илмесĕр
Хĕвел пăхать ĕлĕкхиллех.
Хĕмне тăкать вăл хĕрхенмесĕр —
Ун çĕннине ĕрчетмелле.

Мĕн юлнă-ха çав çынсенчен?
Мĕнпе пире асилтереççĕ?
Вĕсем кунта пулни çинчен
Çак йывăçсем çеç систереççĕ...

# ИК ЧУН ШЫРАНӐ ЮРАТУ

* * *

Тин чӗрӗлен ҫанталӑк сӑнӗпе —
Ҫуркуннепе — сана танлаштаратӑп,
Сӑн-сӑпатна хӑпартланса сӑнатӑп,
Илӗртнӗрен таса илемӗпе.

Санра лайӑххине кӑна куратӑп,
Туйса тӑратӑп яланах ӑсна.
Ыр кӑмӑлна мухтатӑп та шанатӑп
Кирек хӑҫан пулӑшасса мана.

Кун-ҫул таппи, ун иксӗлми хавалӗ,
Телейӗм те санра ҫеҫ упранать.
Ҫул иртнӗҫемӗн ытларах саватӑп,
Чӗре сана, сана ҫеҫ йышӑнать.

* * *

«Пӗрпек шутлатпӑр,— тетӗн эсӗ,—
Ҫакна туйманччӗ халиччен.
Сан ӗмӗтне пӗлес тесессӗн,
Ман пулмалла кӑшт ҫеҫ пӗччен.

Ун чух чӗре — хӑй анлӑ Атӑл,
Шух хумӗсем — ман шухӑшсем.
Ҫыранӗ — эс,
Ӑнтӑлтаратӑн
Ӑс-хакӑла ҫивӗчлетсе...»

* * *

Тӗлпулусен хитре саманчӗсем
Яр-уççăн куç умне тухаççӗ.
Ыр туйăмпа хавхалатса вӗсем
Мала утма хăват параççӗ.

Анчах та ăш вăркать:
Мӗскершӗн
Хăш чух пит аякра ман çут тивлет?
Савниййӗмçӗм,
Сиссемччӗ эс, куллен
Ман чун çунать
Çав ыр кунсемшӗн.

Хитре çеçке хӗвелӗн хӳттинче
Куçне уçса йăл-ял çиçесшӗн.
Чиперӗмçӗм,
Санпа чухне веçех
Сив тунсăха хамран сиресшӗн.

Эппин, хӗвел пек, ăшăтсам чуна,
Куллен-кун вăй парсамччӗ эс мана.

* * *

Мӗн чуль асамлăх сан куçусенче:
Кăвак тӳпе хӗвелӗ вӗсенче.
Вăл курăнать çут кӳлӗ евӗр тарăн,
Сисмесӗрех унта путма пултарăн.

Мӗн чухлӗ ăшăлăх куçусенче:
Чӗрӗлекен тавралăх вӗсенче.
Чун-чӗреме çунат, вăй-хал парççӗ,
Умри пуласлăха шанма хушаççӗ.

Мӗн чухлӗ вăрттăнлăх куçусенче:
Çут çăлтăрсен ялтравӗ вӗсенче.
Шуçăмчченех сӳнмест вӗсен кăварӗ,
Çавна пула вăйланчӗ чун пушарӗ...

* * *

Ытти хёрсен сăнёсене мантартăн
Ума асамçă пек тухса тăрса.
Ёмётён тёнчине аслăлатса
Ыр туйăмпа мана хавхалантартăн.

Сана пула эп кунсерен тасалтăм
Çитменлёхрен те уçăмсăрлăхран.
Ăс-хакăла çивёчлетсе васкатрăн,
Систертён пек:
Часах юмах куран.

Çăвать-и çумăр,
Аслати кёрлет-и,
Килеççё-и хăрушшăн пёлётсем,
Умра йăлтăртатсан сăну илемлён,
Мана вара хăратмёç чăрмавсем.

Йывăççенчи çулçăсене тăкса,
Сив çил хуçалансассăн та усаллăн,
Тётрелёх ăщёнче
Çут кун курса,
Йывăрлăха эп сирёп, тусăм, саншăн...

* * *

Çулсем иртўçён тёвёленчё
Ик чун шыранă юрату.
*Çунат сарса чун çеçкеленчё:*
Эс çеç халь маншăн çывăх тус.

Тинех эп, чи юратнă çыннăм,
Хавхалану тытăнёнче:
Епле хитре умри тёнче!
Епле тата сана эп çывăх!

Пуласлăха мала хурса
Утар, чиперём, çума-çумăн,
Хисеплесе, сума суса
Пурнар татуллă та пит сумлăн.

* * *

Эп — чирлӗччӗ, эс шантараттӑн
Мана часах сываласса.
Куллен телей, вӑй-хал сунса
Сиплеттӗн ӑшшӑн, тараватлӑн.

Сив шухӑшсем манран таратчӗҫ
Сирме пӗр эс ҫеҫ пӗлнӗрен.
Чӗремӗрсем хӗрӳн тапатчӗҫ
Ӗмӗтсене ӗненнӗрен.

Сывалтӑм эп, ак халь ҫӳретпӗр
Касҫхи хула урамӗнче,
Умра — ҫӗн пурнӑҫ, ӗненетпӗр,
Умра — телейлӗ ыр тӗнче.

* * *

Санпа чухне кӑна ман пӳлӗм ҫутӑ,
Кӗтетӗп, тунсӑхпа хуҫӑлнӑскер.
Тӑватӑп эпӗ утӑм хыҫҫӑн утӑм,
Иртет минут та пӗр сехет пекех.

Килетӗн те каятӑн, сивӗ тунсӑх
Татах, татах чунра хуҫаланать:
Эс пурччӗ те — чӗре юрлатчӗ, тусӑм,
Эс ҫук — хаваслӑх хӑвӑрт ҫухалать.

* * *

Унччен сисмен ҫӗн туйӑм,
Савниҫӗм, ман чунра.
Пурнатпӑр иккӗн уйрӑм:
Ялта та хулара.

Ытла та пит вӑраххӑн
Шӑваҫҫӗ кунӗсем.
Кайӑксем пек аманнӑн
Вӗҫеҫҫӗ шухӑшсем.

«Кӗтекенсем телейлӗ»,—
Тесе каланинче
Пур шанчӑкӑм,
Пӗлетӗп:
Йӑлт улшӑнӗ тӗнче.

Чухлатӑп:
Эс кӗтетӗн,
Мана ҫеҫ ӗненетӗн.
Пӗрне-пӗри шанар:
Ҫав ыр куна курар!..

* * *

Кун пек хумхану чунӑмра ман пулман
(Ҫакна ашшӗ-амӑш туять пит аван):
Ача пек сикетӗп,
Кулатӑп чунтан:
Атте паянтан эп,
Атте — паянтан!

Кашни саламлать халь,
Ыйтать кӑмӑлтан:
«Епле арӑму?
Ывӑлу-и патвар?»
Эп хирӗҫ калатӑп:
«Аван, пит аван,
Ятне ҫеҫ Загсра халлӗхе ҫыртарман!..»

## УН ПУРНĂÇĔ
## ТЕЛЕЙЛĔ ПУЛТĂР

Хĕвеллĕ кун çуралчĕ ывăл,
Ачаш, илемлĕ ун кулли.
Шутлатпăр иккĕн: ӳстĕр сывă —
Ку пирĕншĕн халь чи хакли.

Шутлатпăр иккĕн: ӳстĕр хăвăрт,
Телейлĕ пултăр пирĕн пек.
Кун-çулĕ ун ан пултăр ăмăр.
Вăл куртăр шав кăвак тӳпе.

Ман ывăлăм халь сăпкара-ха,
Хăш чух йĕрет, хăш чух кулать.
Ӳсет те вăй илет вăраххăн,
Пире кăна сăнать, паллать.

Васкавлă вăхăчĕ иртӳçĕн
Ăнланĕ пурнăç мĕнлине,
Ан пултăр çеç вăл уншăн йӳçĕ,
Ан килтĕр хурлăх ун килне.

Ăнланĕ вăл: тӳлек кунсемшĕн
Аслашшĕсем кĕрешнине.
Çак тăнăç пурнăçшăн, телейшĕн
Этем нумай юн тăкнине.

Хĕвеллĕ кун çуралчĕ ывăл,
Ачаш, илемлĕ ун кулли,
Шутлатпăр эпĕр: ӳстĕр сывă —
Çын пултăр, çакă — чи хакли.

## УТАТПĂР ИККĔН...

Утма вĕреннĕ ывăлпа
Тӳрем çулпа хире тухатпăр,
Тавралăха савса сăнатпăр
Хăпартлануллă кăмăлпа.

Пире хĕвел те ачашланăн,
Анне алли пек çупăрлать.
Хирпе пымашкăн ырă, лайăх,
Кашни сас-чӳ чуна лăпкать:

Çӳл тӳпери тăри шăнкравĕ,
Тĕкĕлтура сасси, ташши,
Таçтан килен машина шавĕ,
Е клеверăн пыл пек шăрши.

Кунта хĕвел те ăшăрах,
Йӳç тĕтĕмĕ, чăнах та, тутлă.
Кашни сăнарĕ асăмра,
Ял-йышăмпа ман çирĕп туслăх.

Шăп çавăнпа ялан килеттĕм
Тăван яла çулсеренех.
Тус-тантăшсен ĕçĕсене
Савса пăхаттăм, киленеттĕм.

Кăçал, ак, пĕчĕк ывăлпа
Çуралнă енĕме сăнатăп,
Тин çеç вăраннă туйăмпа
Сисмесĕр шухăша путатăп:

Тахçан эп пĕчĕккĕ чухне,
Атте манпа пĕрле утатчĕ,
Хисеплеме хресчен ĕçне,
Тăван хире савма ыйтатчĕ.

Унтанпала чылай хутчен
Ял-йыш кунта тыр-пул пуçтарчĕ,
Тавралăх улшăнчĕ хуллен,
Çынсен кун-çулĕ çăмăлланчĕ.

Тинех эп хам та ача мар:
Тӑнлав кӑвакарма пуҫларӗ.
Ӳсет, ак ывӑлӑм хастар,
Кӗҫ парта хушшине те ларӗ.

Ҫулсем хыҫа ӑсаннӑҫем
Атте ятне те вӑл час илтӗ,
Кунта килсе ҫӳренӗҫем
Ун чух мана, тен, аса илӗ...

Утма вӗреннӗ ывӑлпа
Тӳрем ҫулпа хуллен пыратпӑр,
Тавралӑха савса сӑнатпӑр
Хӑпартлануллӑ кӑмӑлпа.

* * *

Халӑхӑма пит ҫывӑх авалтан:
Ёҫченлӗх, тӳсӗмлӗх, сӑпайлӑх.
Манра ҫак енсенчен пӗри пулсан
Хама тин туйӑп: эп вӑй-халлӑ.

* * *

Нумай ҫисессӗн пыл та йӳҫӗ, теҫҫӗ.
Тен, тӗрӗслӗх кунта пурах.
Сахалтарах ӑна ман астивесчӗ,
Тӑварӗ пултӑр ытларах.

* * *

Ма пытарас?
Ҫул сакӑлталлӑ.
Калаҫар мар-ха пит хатарлӑ.
Уяр кунра аҫа та ҫапӗ,
Ун чух вӑйланӗ чун асапӗ.

Ҫавах хӗвел шевлиллӗ шанӑҫ
Ан кӳтӗрех ултавлӑ канӑҫ.
Малашлӑх вут-кӑварлӑн ҫиҫтӗр,
Ёмӗтленни ҫывхартӑр, ҫиттӗр!

* * *

*Ёнер кăна каçса кайса мухтатчĕç:*
«Вăл — гени!
Таврара ун пек çын çук!
Унпа терте çĕнсе утатпăр тачă,
Тĕллевлĕ пирĕн унпа çеç кун-çул».

Кăларчĕç пуçлăхран ăна васкавлăн,
*Пуçланчĕ ак пач урăх калаçу.*
Çав çынсемех-çке критиклеççĕ шавлăн:
«Хăйне мăнна хуратчĕ ăçтиçук...»

* * *

«Чăн инкеке сиссех эс йĕтĕн пулĕ,
Ыран çунса каяс чух, çĕрĕпе.
Пушарĕ тухрĕ те, хаяр вут-çулăм
Çĕн çурт-йĕре пĕтерчĕ тĕппипе.

Каларăм аçуна — вăл ĕненмерĕ:
«Ялан ан сӳт-ха тĕшмĕш çăмхине».
Синкер пулать, кулатăн кăлăх, — терĕм,—
Çавна эс туйнă», — сăмахлать анне.

Çынра, чăнах та, пур-тăр пысăк сисĕм,
Ялан чухлать-тĕр хурлăх пуласса.
Чуна шиклентерсессĕн шухăш-çиçĕм
Вăхăтлăха, тен, тăрĕ аптраса.

...Каçпа, ак, макăрма пуçларĕ хĕрĕм,
Пĕлместĕп, темшĕн лăпкă мар чунра.
Кумать вĕçĕ-хĕррисĕр шухăш йĕрĕ:
Епле-ши пулĕ самани ыран?

Тӳлек кунсем иртсессĕн те черетлĕн,
Усаллăх шутламасть-ха парăнма.
Кĕтмен çĕртен хăйса чĕрре кĕрет те
Пурсăмăра пуçлать салхуллатма.

Эфир щавлать: сассем янраççĕ урмăш,
Çынмаррисемшĕн шурă та — хура.
Вĕсен кашниййĕн хăйне евĕр курмăш,
Сиенлетесшĕн чăнлăха-ырра.

Вăрăмах мар та сив элек çул-йĕрĕ,
Çапах та телее юнать, пÿлет.
Çакна халех туять-шим манăн хĕрĕм?
Пĕчĕккĕскер, ĕсĕклесе йĕрет...

* * *

Чĕкеç чĕлхиллĕ пĕчĕк хĕрĕм,
Кулса-çиçсе кĕтсе илен.
Капланнă ыйтăву тем-тĕрлĕ,
Пурне те ман пĕлесчĕ, тен.

Эппин, хурав тупаймасассăн,
Вăрттăнлăхне кĕç уçăп хам.
Малаш шăпу епле-ши санăн?
Çакна çеç калаймасть никам...

* * *

Ача ÿсет, чупса çÿрет хавассăн,
Çул-йĕр ансат-ха ун малтанлăха.
Мăн çын пек хăш чухне сывлать вăл ассăн,
Пулăшсан çеç çĕнет чăрмавлăха.

Эпир те, аслисем, шăп çакăн евĕр,
Чăнах та, терт куратпăр хушăран.
Ялан пулмастпăр пĕр-пĕриншĕн евĕк,
Шик туйăмĕ пуссан кăткăслăхра.

Е тепĕр чух виç пусшăн сапалатпăр
Тапса тăран вăя хĕвĕшÿре.
Сăлтавсăрах, кун-çул, сана хурлатпăр
Кая тăрса юлсан кĕрешÿре.

Çакна шанатпăр: эпĕр тунă йăнăш
Килес ăрусенче пулмасть тек, тăтăш.

# ЙӐМРА КАШЛАВӖ

## ШУХӐШӐМА

*Ҫӗклен, ҫӗклен, сулмаклӑ шухӑш,*
Васка ҫынсен чунне кӗме.
Илемлӗхпе пӗр вӗҫӗм хутӑш,
Вӑй тупчӗ тумхаха сирме.

Васка ҫынсен чунне кӗме,
Ҫунатлӑн вӗҫ тӗтрелӗх витӗр,
Вӗрен хӑюллӑн кӗрешме,
Ҫут тӗллевӳн хавалӗ ҫиттӗр.

Илемлӗхпе пӗр вӗҫӗм хутӑш
Ҫурхи ейӳн ялтравӗнче.
Ҫил-тӑвӑлран нихҫан ан ютӑх,—
*Шыра телей ун кӗввинче.*

Вӑй тупчӗ тумхаха сирме,
Ҫӗнтерӗве те сумлӑн кур эс.
Ан хӑй нихҫан та шикленме,
Пулас ӑрушӑн ыррӑн пурӑн.

* * *

Тапса тăран çăлкуçĕ хăй — поэзи,
Кирек хăçан та кăмăла уçать.
Ун сиплĕ шывĕ вăй-хала куçать,
Ăна рехетленсе, юлташăм, ĕçĕн.

Тапса тăран çăлкуçĕ хăй — поэзи,
*Йăлтăртатать вăл çуттăн ĕмĕрех.*
Пит пархатарлă унăн чыслă ĕçĕ,
Юрра-кĕвве шăнкăртатса кĕрет.

* * *

Хĕвелĕн çутинчи çăлкуçĕ
Чĕркĕмĕллĕн йăл-ял çиçет.
Ун шывĕ Шлипшура кĕç куçĕ,
Кайран ăна Пăла кĕтет.

Унтан çул тытĕ вăл тĕллевлĕн
Мăн Атăла пĕр чарăнми...
Çăлкуçăм!
Манăн ĕç сан евĕр
Пулинччĕ тетĕп иксĕлми...

## МАНĂÇМАН ПОЭТСЕМ

*Поэты забытые! Ваши могилы*
*Покрыты травами, засыпаны снегом...*
*Кайсын КУЛИЕВ.*

### I

Авалхи сăвăçсем,
Манăçа тухнисем,
Паян кун та эсир
Юнашар пирĕнпе —
Чун-чĕре çутипе,
Ялтăран хĕмĕпе.

Чыс-хисеп пурнăçра
Сирĕнтен пăрăнсан,
Эсĕр пурпĕр нихçан
Усала пуççапман.

Сăввăрсем-кĕввĕрсем
Упранаççĕ куллен:
Шăнкăр-шăнкăр шывра,
Кашлакан йăмрара,

Çаранти чечекре
Юр сапан тирекре,
Аслати сассинче,
Шăпчăксен юрринче,

Вăштăр-вăштăр çилре,
Сар хĕвел хĕмĕнче,
Тăван çĕр пулăхне
Упракан çынсенче!

### II

Авалхи сăвăçсем,
Манăçран тухнисем,
Çут тĕнче илемне
Юратма чĕннисем.

Хĕн-хурта кĕввĕрсем
Татăлсан та пит ир,—
Чăрмава çĕнтерсе
Мала утнă эсир.

Авалхи тăвансем,
Сиртен кулнă çынсен
Ячĕ-сумĕ юлман,
Нўр çĕрпе хуплансан.

Сăнĕ-пичĕ вĕсен:
Пиçенре, кикенре,
Нăйăлти сассисем —
Вăрманти ўпрере.

### III

Авалхи сăвăçсем!
Юрăсем, такмаксем
Хайлама пĕлнĕрен,
Вĕсене авалтан
Çухалма паманран,

Упранишĕн куллен
Тав тăватпăр сире
Кăмăлтан, чĕререн.
Эпĕр ĕнтĕ пуян
Çĕр пин юрă пуртан.

Авалхи сăвăçсем,
Чи маттур юрăçсем,
Пит сăпай пулнăран
Ятăрсем упранман.

Чун-чĕре сăввине,
Чун-чĕре кĕввине
Шăрататпăр паян.
Ыррине ырласа,
Хуррине хурласа.

Халь калатпăр чунтан:
Сире ĕмĕр мухтав!

Сăввăрсем çухалман,
Кĕввĕрсем манăçман,

Усала парăнман,
Çичюта пуççапман!
Тин вĕсем ирĕкре
Çĕр çинче, тӳпере!

### IV

Авалхи сăвăçсем,
Тар тăкан сухаçсем,
Манăçран тухнисем,
Ятăра çĕтнисем,

Паян кун та эсир
Юнашар пирĕнпе,
Чун-чĕрен хĕмĕпе —
Ялтăран çутипе!..

## ХĔВЕЛ УРИ

Хаваслăн хирпеле утатăп,
Сăнатăп эпĕ тӳпене.
Сăнанăçемĕн мал енне,
Хĕвел ури унта куратăп.

Чăн-чăн илем! Куçа шартса
Хĕлхемĕсем çӳлте çиçеççĕ.
Шур пĕлĕт витĕрех анса,
Вăрман çине çитсе ӳкеççĕ.

Самантлăх шухăшсем çухалнăн,
Пытанчĕç кĕç пайăркасем.
Тăратăп эп, такам тухатнăн,
Çак илеме татах кĕтсе.

* * *

Мала кăнаваскать сукмакĕ,
Инçет чĕнет —
Тĕллев ун çакă.
Чăрмав умра пулсассăн та
Пĕтесшĕн мар-ха вăл кунта.

Шăп çакăн пек мăн çул енне
Ачаранах эпир васкană.
Вĕçертес марччĕ —
Шухăшланă —
Ӳссен шух ĕмĕт йĕвенне.

Шух ĕмĕт йĕвенне!
Тытасшăн
Кашни этем пурнăçĕнче.
Тытма вăл çăмăл пек айваншăн,
Ăслишĕн кăткăс та инçе...

Çулсеренех маттуртарах
Эпир пулсассăн та,
Çаплах
Васкать кăна малаш сукмакĕ,
Инçет чĕнет —
Тĕллев ун çакă...

* * *

Тӗп хулара кун-ҫулӑм иртнӗҫемӗн
Пӗччен чухне ӑш-чик вӑркать-ҫке темшӗн:
Тӑван ялтан кайса эп тӗрӗс турӑм-ши,
Пин сукмакран пӗрне пӗлсе суйларӑм-ши?

Асилӳре Турханӑма куратӑп,
Пир сумка ҫакнӑскер, шкула утатӑп:
Тирекпеле йӑмра кашлавӗ хӑлхара,
Лӗп ҫилӗ ӑшшӑн ҫупӑрлать ман кӑкӑра...

Ӳсерехпе Пучамасран иртетӗп,
Ун сиплӗ ҫӑл шывне ларса ӗҫетӗп.
Тухатӑп уй-хире.
Пуҫ тӑрринче — тӑри,
Мӗн чухлӗ шухӑш ҫуратать чунра юрри.

Юнашарах вӑрман,
Мӑнаҫ кӗрлевӗ.
Тем тӗрлӗ кайӑксем юрлаҫҫӗ евӗк.
Ухсай каланӑ пек: вӑрман вӑл чӗрӗ храм.
Ун илемне курсан пуҫ тайӗ кирек кам.

Юратнӑ вырӑнсем!
Сире-и манӑн?
Сар каччӑ савнӑ хӗршӗн тунсӑхланӑн,
Ирпе каҫпа та тӗмсӗлетӗп уншӑнах,
Йӑмраллӑ ялӑмшӑн ҫунатӑп ҫулӑмпах.

Кунта кун курнӑ та, кунтах ҫын пулнӑ,
Кунта тӑванӑн ыр вӑйне ҫеҫ туйнӑ.
Атте-анне ҫукпа пура пайланӑҫем,
Сисмен те, ӳссе ҫитрӗҫ пирӗн ҫунатсем.

Унтан кашнийӗ ӗмӗтне ҫиҫтерчӗ:
Часрах, часрах вӑл пурнӑҫлантӑр, терӗ.
Хаваслӑччӗ эпир — пӗрле вӗреннисем,
Вӑй-халлӑччӗ эпир — пӗрле яш пулнисем.

Пёрне-пёри савакансем те пурччё,
Ăçтан пёлес?
Кайран вёсем тем курчёç...
Ма пытарас?
Вут хыпнăччё мана кунта,
Сар çÿçлё пикене юратнăччё чунтан.

Çулсем юпленчёç.
Юрату саманчё
Шап-шур тётре пек сирёлчё, арканчё.
Паян та вутăш-хёр чуна хумхантарать,
Кун-çулăм иртнёçем чуна хăват парать...

Сăваплă вырăнсем!
Сире-и манăн?
Тав сăмахне калас килет халь манăн.
Ӳстернёçем куллен çёршывăн хăватне
Пёлетпёр элёр туслăхăн вăйне, хакне.

Тантăшăмсем!
Сире те ăмсанатăп,
Эсир яла юлнишён савăнатăп.
Чăн-чăн телей— тăвансенчен уйрăлманни,
Чăн-чăн телей — тăван çёрпе пёрле пулни.

Сиртен эп уйрăммăн телей шырарăм,
Анчах ăна хальччен те тупаймарăм.
Тен, ял-йышран уйрăлмалла пулман?
Çак ыйтăва пула ăшчик вăркать халь ман...

## ЭПИР – МИР ÇЫННИСЕМ

Эпир — мир çыннисем,
Ăна сыхлакансем.
Юратнă Çĕр-аннен
Упрар-ха канлĕхне!

Мухтатпăр хĕвеле,
Пурнасшăн çĕнĕлле.
Тĕнчен пур халăхне
Чĕнетпĕр мир ретне!

Мула юратакан,
Ăна пуççапакан
Итлесшĕн мар пире,
Юнасшăн çут мире.

Çынпа çын тус-тăван
Пулсан — епле аван!
Телейĕн сăпкине —
Сыхлар Çĕр чăмăрне!

Кашни мире савсан,
Ун хăватне сарсан,
Çитеççĕ ыр кунсем,
Чакаççĕ тăшмансем.

Калатпăр уççăн халь,
Тĕллев те пирĕн çак:
Ирттермĕпĕр ахаль
Пĕртен-пĕр пурнăçа.

Ӳстерĕпĕр куллен
Тыр-пул та хӳхĕм сад.
Вăрçа çĕнтермелле
Кашни çын кар тăрсан.

Хула та ял калать —
Ĕмĕтленни пулать.
Савать мире ĕçчен
Çĕр чăмăрĕ çинче!

## КИЛТИ КАЛАÇУ

Савса пăхать аслашшĕ мăнукне:
Аталанать-çке лешĕ хăвăрт.
Унпа тупать çухалнă канăçне
Хăш чух чунра пулсан та тăвăр.

Ватти —
Виç вăрçă витĕр тухнăскер,
Хăюллă пулнă,
Халь ак халсăр.
Тепри çӳрет шкула,
Вăл — пионер
Ĕçре, вĕренӳре пит харсăр.

Çапла кунсеренех:
Пĕри ӳсет,
Теприн хухса пырать вăй-халĕ.
Çанталăк чĕрĕлет.
Шур юр ӳкет.
Кашниййĕн хăйне май хавалĕ.

Каç пуласпа çемье пуçтарăнать,
Час-час янрать хаваслă юрă.
Ĕмĕтленсе лараççĕ яланах —
Унран хакли мĕн пултăр урăх?

Паян та, ав, лараççĕ виççĕн тан,
Калаçăвĕ халь тĕрлĕ енлĕ:
Кашниййĕ шухăшне калать чунтан,
*Сăмахĕсем кашнин тĕллевлĕ.*

**Аслашшĕ:**

Мăнукăм, мĕн пирки шутлан:
Мĕскер сана çитмест:
Кала.
Пĕлетĕп: вĕренен аван,
Юлташусем те халь чылай.

Хăвах куран:
Сан пурте пур,

Аçу-аннӳ ĕçре маттур.
Вĕсем пек эсĕ ăслă пул,
Тусусенчен кая ан юл.

Çитсе пырать ĕмĕтленни,
Сирте телейлĕ çут малаш.
Чакать ман пурăнас тени,
Сан мар, халь ман хурланмалла...

Аран çӳретĕп халь, анчах
Эпир çунни сая кайман —
Иртмерĕ пурнăç кăлăхах,
Çĕршыв лайăхланать ялан.

**Аншĕ:**

Çапла.
Асрах-ха аллăмĕш çулсем,
Çĕршыв хăй хăватне саратчĕ.
"Телейлĕ пулччăр ачасем",— тесе,
Йӳнеçтерсе çынсем пурнатчĕç.

Ун чух уй-хирсенче е фермăра
Ĕçленĕ ытларах ал вĕççĕн.
Лайăххине курса тăрса умра
Çĕнтернĕ чăрмава пĕр вĕçĕм.

Куç умĕнчи пек çав ӳкерчĕксем:
Ялта фронтовиксем çӳретчĕç.
Уксах, чăлах е суккăрччĕ хăйсем,
Вĕсен пĕрмай чакатчĕ речĕ.

Е тепĕр сăн:
Шур юр çинех выртса
Кив тракторне юсать пĕр паттăр.
Ăна тĕллев тăрать хавхалатса:
«Часрах çĕре вăл сухалатăр!»

Тепри ват асанне пекех лаçра,
Яра куна ĕçлет канмасăр,
Шăлсем çеç шурă, хăй, ав, хуп-хура,

Юсать пурне те:
Чăн-чăн маçтăр.

Анчах та вăхăчĕ васканăран,
Вĕсен ĕçне манма пăхатпăр.
Ун чух ватти-вĕтти тăрăшнăран
*Эпир фашистсене аркатнă.*

Сан аслаçу хăна-вĕрле пухсан,
Вĕсен калаçăвне тăнлаттăм.
Шăкăлтатса ларатчĕç кăмăлтан,
Кашниййĕшнех эп ăмсанаттăм.

Килти махоркăн йӳçĕ тĕтĕмне
Рехетленсе пĕрмай çăтусăн,
Фронтра куллен тӳссе курнисене
Асилӳре сăнлатчĕç уççăн.

Пуплетчĕç:
«Кăмăл туличчен
Эпир туртса курман пирус та.
«Штыкпа атакăна!» — приказ илтсен,
Çĕкленнĕ те, чакман пĕр пусăм.

Пурăнас чух куç хупрĕç йĕкĕтсем
Хаяр вăрçа пула мĕн чухлĕн?..
Çĕнтертĕмĕр.
Тăшман татах килсен
Хăй вилĕмне çеç тупĕ ӳлĕм».

Кун-çул,
Тăван çĕршыв пуласлăхне
Вĕсем ялан шанса тăратчĕç.
Ларатчĕç калаçса шуçăмччченех,
Унтан кайма пуçтарăнатчĕç.

Пит çирĕпчĕ вĕсем кăмăлĕпе,
Ĕçре — хастар,
Килте — пит ырă.
Анчах чылайăш çук халь пирĕнпе,
Хĕвел вĕсемшĕн çунмĕ урăх.

**Мăнукĕ:**

Чăнах та,
Манăн пурте пур,
Выля та кул,
Шав ырă кур.
Эсир хастарлă пулнăран
Нуша курмастăп эп паян.

Ма кулянан тесе ыйтсан,
Хуравăм манăн çапларах:
Миçе ача халь выçлăхра
Вилет куллен, пурнать аран.

Вĕсем — леш чикĕ енчисем,
Пуян çынсем — нӳхреп куçсем
Тăваççĕ çĕнĕ бомбăсем,
Хăрушшисем те çĕннисем.

Эпир вылятпăр мечĕкпе,
Вĕсем вылясшăн вутпала.
Эпир вылятпăр «вăрçăлла»,
Вĕсем вылясшăн вилĕмпе.

**Аслашшĕ:**

Сăмахунта сан чăнлăх пур,
Ăна пĕлсе тăни аван.
Чăнах, хăрушă вăрçă — мур,
Чылай хĕн кӳчĕ çĕршыва.

Эппин, эс ӳснĕçем ялан
Хăюллă та тĕреклĕ пул.
Сана пиллетĕп çут малаш,
Чăн-чăн этем пулма ăс пух.

**Ашшĕ:**

Танмарлăх сăлтавне шкулта чухне
Вĕреннĕ май татах ăнланăн.
Аслаçусем епле кĕрешине,
Телей пит хаклине ăнкарăн.

Вĕсем çĕкленĕ çĕршыва ялан,
Кирек ăçта та пулнă паттăр.
Çавна пула эс урамра вылян,
Çавна пула аван пурнатпăр.

**Мăнукĕ:**

Тăнăçлăхра пурăннăран
Сире эп тав тăвап чунтан.
Татах та пулĕччĕ аван:
Çынна çын хĕн кăтартмасан.

Кашни ача йăл-йăл кулсан,
*Танмарлăх пур çĕрте пĕтсен.*
Пысăккисем çапăçмасан,
Хаяр вăрçа йăлт тĕп тусан...

* * *

Çапла касра ларăççĕ виççĕн тан:
Калаçусем те виçĕ енлĕ.
Кашниййĕ шухăшне калать чунтан,
Сăмахĕсем кашнин тĕллевлĕ.

Виç ăрăвăн калаçăвĕ...
Унра
Çĕршывăн шăпине туятăн.
Экран çинчи пек, ылмашуллăхра
Тем-тĕрлĕ сăнара куратăн...

Часах ак çутă сÿнчĕ çак çуртра,
Аслашшĕ сăмахне вĕçлерĕ.
Мăнукĕ çывăрса кайсан, вăрах
Сĕм-тĕттĕмре ÿсĕркелерĕ.

Çывраççĕ пурте.
Эп ыйха татса
Шутлатăп мир çинчен васкавлăн.

Ыран хĕвел хĕлхем сапса тухсан,
Пĕлетĕп: кунĕ пулĕ шавлă.

Шанатăп çирĕп:
Аслă çĕршывра
Татах та ырăланĕ пурнăç.
Эппин, Мире куç шăрçи пек упрар,
Этем нихçан ан куртăр хурлăх!

## ÇУРХИ ИЛЕМ

Тăри юррилĕ савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хама туятăп çăмăл, çирĕп,
Канатăп ыррăн эп кунта.

Тӳпе — таса та çутă, ирĕк —
Кăвак шевлепеле ялтрать.
Ача пекех ачаш çу ирĕ!
Хĕвел çĕре савса лăпкать.

Мăнаçлă Атăл — çамрăк каччă —
Аякранах вăл курăнать.
Ун умĕнче колхозăн сачĕ
Туй тумĕ — шупăр — тăхăнать.

Тăри юррилĕ савнă хирĕм,
Сан сарлака ытамунта
Хавхаланатăп каç та ир эп.
Çĕн ĕмĕт çуралать кунта!

## ХИРТИ ЎКЕРЧЁК

Хир карапё — мăнаçлă комбайн
Уя тухрё паян васкаса.
Улăп пек ёçлесе шунă майăн,
Вăл кёрлет ылтăн хум пуçтарса.

Улшăнать ман умра сар тавралăх,
Ял енне шав васкаç машинсем.
Тăрăшса ёçлесен тăван халăх
Пуян пулёç колхоз пўлмисем!

* * *

Тўпе кăвак. Хёвелё ывăнмасăр
Шевлепеле сăрлать пучахсене.
Утатăп сукмакпа пёр чарăнмасăр,
Итлетёп путене авăтнине.

Хум хыççăн хум шуса килет вăраххăн,
Йăлтăртатса илет тулли пучах,—
Каласшăн пек мана:
"Ёçченём, савăн,
Эс тар тăкни пулмарё кăлăхах".

## ШКУЛ АЧИСЕН ЮРРИ

Ирпе путене авăтаь-и,
Çил-тăвăл урать-и кăран —
Эпир малаллах çул тытатпăр,
Çунать çутă çăлтăр умра.

Ут тёрёс çулпа,
Тăван халăхпа,
Упра хăв чысна çамрăкла.

Эпир тăрăшса вёренетпёр,
Тăван çёршыва юратса.

Ĕçе хăнăхса çитĕнетпĕр,
Чунра пысăк ĕмĕт тытса.

Утатпăр эпир тус-тăванлă,
Телей пире халăх пиллет.
Кун-çулăмăр ирĕк те анлă,
Мала васкатать çут тĕллев.

Ут тĕрĕс çулпа,
Тăван халăхпа.
Упра хăв чысна çамрăкла.

* * *

Август уйăхĕ тирпейлĕ,—
Кăмăллать лăпкăлăха.
Сахалрах тăкать хĕвелĕ
Вут-хĕмне тавралăха.

Вăрманта утма пит канлĕ
Çакă ырă вăхăтра.
Шухăш ирĕк, шухăш анлă
Пынă май уçланкăра.

Ăшă.
Лăпкăлăх.
Анчах та
Çул çинче сар çулçăсем
Пĕрмаях тĕлпулнăçем
Тунсăха путан вăраххăн.

## КУН-ÇУЛ КĔВВИСЕМ

### I

Йĕрсе килет çын çĕр çине,
Пĕлмест хăçан каяссине.
Хĕвел шевлиллĕ кунсене
Курас килет-çке ун ялан.

"Телей вăл чĕрĕлĕх кăна",—
Теессĕ сарă çулçăсем.
Сенкерлĕхе сăна-сăна
Ÿкессĕ çĕр çине вĕсем.

Этемĕн ĕмĕр канăç çук,
Кĕтсе пурнать лайăххине.
Çут ĕмĕчĕ илĕртнĕ чух
Куллен шанать пуласлăхне.

Хĕвел вылять, хĕвел кулать,
Лĕп çилĕ ăшшăн çупăрлать.
Е ахрăмăн сасси янрать:
Ау! Уа!-па ылмашать...

Хĕвел куçа йăмăхтарать,
Ун шевлинче телей курнать.
Анчах та вăл мĕхел çитсен
Тарать хуллен çын умĕнчен...

### II

Эй, çĕр-анне!
Кăкăрунта
Мĕн чухлĕ упранать вăй-хал?
Этемлĕх пурăнсан пĕр тан
Пĕтерĕ пур хуйха-суйха.

Эй, çĕр-анне!
Илем хуçи:
Çуллен чечек шăтса тухни.
Çынсен пулас кунсен уççи —
Ача пулни, çĕнни килни.

Эй, çĕр-анне!
Малашлăху:
Этем куллен-кун тăрăшни.
Чылай сан тĕрлĕ халăху,
Хакли — вĕсем кăна пулни!

Эс çаврăнсам кăруççель пек,
Ярăнтарсам вĕççĕрлĕхре...
Çынсем халь санăн пилӳпе
Илемлĕ, ăслă тĕнчере!

### III

Эп юрататăп пурнăçа:
Асапланма та юп курма.
Танмарлăха вăрçа-вăрçа
Çĕн куншăн ялкăшса çунма.

Усал вăя йăлт тĕп тусан
Мĕн чухлĕ пурнăç упранать...
Этем хăй вырăнне тупсан
Малашлăха вăл çул хывать.

### IV

Этем, нумай çĕн çул шыратăн,
Шанса пурнатăн ыррине.
Хăш чух синкерлĕхре пулатăн,
Пайлан юлташăн хуйхине.

Е савнăçне пĕрле пайлатăн
Пач кĕвĕçмесĕр, савăнса.
Çут чăнлăхшăн пуçна хуратăн
Тăван çĕре чунтан савса...

Пехил сана, пĕртен-пĕр пурнăç,
Чĕрем, пурне те тӳс ялан.
Юп курăн е тĕл пулăн хурлăх,
Çапах та ан пис пурнăçран!

* * *

Этемлёх ялан пурăнать кĕрешсе,
Телейшĕн мĕн чухлĕ юхтарнă тар, юн?
Эппин çĕнелӳ пĕрмай тăтăр çиçсе,
Çĕр çаврăнтăр шиксĕр, васкатăр çĕн Кун.

Анчах Икĕенлĕх пĕтмен, çухалман —
Кивви Çĕннине хирĕç тăрĕ куллен.
Нихçан юрамасть тĕлĕрме-лăпланма,
Этем пурнăçра ырă куртăр тесен.

Чĕртетпĕр садсем, ӳстеретпĕр тыр-пул —
Çĕршыв вăй пухса мăнаçлантăр тесе.
Кунтан та ырри тата халĕ мĕн пур,
Хастар халăхпа хĕн-хура çĕнтерсен.

Пĕртен-пĕр телей вăл — мала талпăнни,
Хĕвеллĕ тĕллевшĕн хĕрӳллĕн çунни.

* * *

Йĕри-тавра халь ылтăн кĕркунне!
Çулталăкăн чечен саманчĕ.
Кăвар тăкма пуçларĕ вĕрене,
Кермен пек курăнать вăрманĕ.

Паян кунта çӳретĕп эп пĕччен,
Ума çу кунĕсем тухаççĕ шăппăн.
Тăраттăн эс çак хурăн çумĕнче,
Кăвак уçланкăна сăнаттăн лăпкăн.

Шеллетĕп темшĕн иртнĕ вăхăта,
Çак хурăна, пĕчченскере, шеллетĕп.
Сана асилӳре куратăп та
Унчченхинчен те вăйлăн хĕмленетĕп...

## ПĔЛĔТСЕМ

*М. Ю. Лермонтов майлă*

Пĕлĕтсем, ушкăн-ушкăн васканăн,
Шухă çил варкăшса вĕрнĕрен,
Тĕксĕм сăнлăн, питех те хурланнăн,
Ма таратăр-ха Çурçĕр енчен?

Каласамăрччĕ:
Мĕншĕн куçатăр,
Шунă май хĕвеле ма хуплатăр?
Канлĕ пурнăç пĕрмай шыраса,
Тен, пурнатăр эсир ăмсанса?

Пĕлĕтсем пек пулмастăп эп вăйсăр,
Вĕсене ăмсанмастăп нихçан.
Манăн шиксĕр чĕре — харсăр кăйкăр
Çиле хирĕç кĕрешĕ ялан!

## ДАГЕСТАН

Пĕлĕтсем айлăмри тапăра
Майĕпен-майĕпен пухăнаççĕ.
Мăн тусем шăплăхра, шухăшра,
Улăпсем пек мăнаçлăн тăраççĕ.

Эп тăратăп çÿлтен сăнаса:
Аялта шывсикки, урса кайнăн,
Ыткăнать малалла васкаса,
Ĕмĕрхи чулсене хускатасшăн.

Симĕс тумлă çаран, вăрмансем,
Аулсем инçетре курăнаççĕ.
Кукăр-макăр çулсем.
Машинсем
Ту çине майĕпен хăпараççĕ.

Ирĕке юратан Дагестан!
Эп сана çак сăнсемшĕн юратрăм,
Сан çинчен çĕнĕ юрă юрларăм
Маншăн эс тăван пек пулнăран.

## ТИНĔСЕ

Шавла, шавла пĕр чарăнмасăр...
Хумсем, шав чупăр малалла.
*Çак тинĕс пек ман чунăм харсăр,*
Ялан ун евĕр пулмалла.

Хумхан, хумхан эс, аслă тинĕс,
Кисрентĕр çыр, ташлатăр чул.
Этем, кунта лăпланмăн тин эс,
Эппин, ыр ĕçшĕн çунтăр чун!

Шавла эс, тинĕс, чарăнмасăр...
Хумсем, хумсем, чĕвен тăрса,
Тем тĕрлĕ тĕслĕн ялтăрса
Мала сулмаклăн ыткăнсамăр.

Хавхалаланатăп,
Хумханатăп.
Сирĕнпеле эп ирĕкре!
Эй, тинĕс!
Эсĕ — вăй-хăватăм,
Сан пек пăлхавлă ман чĕре!

* * *

Хумсем, пĕрне-пĕри тĕртсе,
Мала çĕмрен пек ыткăнаççĕ,
Е чашкăрса кăпăкланаççĕ,
Хăватлăн, шуххăн çĕкленсе.

Вĕсем ялан мала васкаççĕ,
Кăмăлласа чăрсăрлăха.
Е çырана пырса çапаççĕ
*Сивленĕ май лăпкăлăха.*

Урса кайсассӑн путараççӗ
Мӑн карапа та авӑра...
Е тепӗр чух, тӳлек кунра
Сӑпкари пек ярӑнтараççӗ.

Çак шух хумсем чуна пит çывӑх,
Хӗрӳ шухӑшсемпе танах.
Вӗсем сӗнеççӗ:
Эс ан ывӑн,
Ялан кӗреш, пул вӑйлӑрах.

* * *

*И вечный бой!*
*Покой нам только снится.*
*Александр БЛОК.*

Ялан, ялан кӗрешмелле!
Хӗрӳ чӗрешӗн канлӗх ют.
Мала кӑна чӗнет тӗллев,
Унта çитме вӑй пух та ут.

Лӑпкӑлӑхра йӑсӑрланни —
Асрах тыт! —
Вилнипе пӗр тан.
Ыраншӑн кӗрлесе çунни
Пире пӑрмасть тӗпри çултан.

Çӗршыв-анне хӗрӳ ӗçре...
Эй! Кам хыçра,
Часрах çӗклен!
Малашлӑхра кӗтет пире
Ӗçри çитӗнӳпе телей

* * *

«Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те,
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать...»
Кĕвĕ-çемĕ янăрать те,
Чĕрене кулянтарать.

Çырана хум çапăнсан та
Тĕпĕнче ват чул юлать.
Хурлансан та, юп курсан та
Пирĕн хыççăн кун пулать.

Çак юрра хайланă сăвăç
Уй-хирте е ĕшнере.
Хăйне май ун философи,
Пурнăç пĕтмĕ тĕнчере:

Сар хĕвелĕн чакмĕ хĕмĕ,
Пĕр пек тăрĕ çулсерен.
Хăть хăçан та çутă ĕмĕт
Çунĕ, йăлкăшĕ хитрен.

«Шухăшлар-ха, тăвансем те,
Шухăшлар-ха, тăвансем:»
*Савăнсан та, эрленсен те*
Иртсе кайĕç ыр кунсем...

# ЙĂМРА КАШЛАВĔ

I

Йăмра кашлавĕнче мĕн чухлĕ шухăш
Пытарăнать пек ĕмĕр-ĕмĕре.
Тен, çавăнпа унпа ман тунсăх хутăш,
Тен, çавăнпа хăш чух сӳлет чĕре.

Сив çилĕн кĕввине итленĕ майăн,
Сăнатăп ӳкекен çулçăсене.
Яш кунăмсем те çакăн евĕр кайĕç
Шăв-шавлă ĕмĕрсен кив сĕмлĕхне.

Шухăшăмсем чуна пит пăлхатаççĕ:
«Ау!» — тесе янраççĕ пек вĕсем.
Асри кунсем — аманнă кайăксем—
Çӳл тӳпери ирĕклĕхе саваççĕ.

Тем-тĕрлĕ пулăмсем ума тухаççĕ,
Ылмашăнса çиçеççĕ черетпе.
Е ямшăк шăнкăравĕ пек янраççĕ,
Илсе каяс тесе çав çул-йĕрпе.

Анчах та иртнине васкавлă вăхăт
Тавăраймасть калла самантлăха та.
Шав малалла хăлат пек ыткăнать,
Ăнтăлура кăна телей шырать.

Этем куллен хавхаланса шанни
Пĕр унăн аллинче кирек хăçан та.
Нихçан пурнăçланмасть ĕмĕтлении
Пуш шухăша кăна мала хурсан эс.

Ăспа кашни çын палăраймĕ уççăн:
Пĕри — çӳлте, тепри — пит аялта.
Хăшĕ-пĕрин иртет кун-çулĕ уссăр,
Утма хал çук хастар çынпа пĕр тан.

Эппин чунупала туйсассӑн парӑм,
Ӗҫле, вӗрен, кӗреш, ҫӗнтер ялан!
Йывӑрлӑха сирсем, нихҫан ан парӑн,
Вара тӗллевлӗ пурнӑҫ пулӗ сан!

II

Ик хут килмест-ҫке ҫын ҫут тӗнчене,
Пӗр чарӑнсан тапмасть тепре чӗремӗр.
Эппин, хӑш чух эпир ӑс-тӑн вӑйне
Пӗр уссӑрах мӗскершӗн пӗтеретпӗр?

Кермен пек ҫуртсене ҫӗмӗрттеретпӗр,
Аманттаратпӑр хӳхӗм садсене.
Кайран каллех ҫӗклетпӗр е чӗртетпӗр
Телей сӗнсе пулас ӑрусене...

*Этем ик хут килмест ҫут тӗнчене,*
Чӗри, пӗр чарӑнсан, тапмасть тепре ун.
Эппин, мӗскершӗн куҫҫульпе пӗрле юн
Юхать-ха чарӑнмасӑр ҫӗр ҫине?

Мӗн-ма ытла та хапсӑнчӑк ҫынсемшӗн
Тар тӑкмалла куллен-кун чурасен?
*Эппин умра — пӗртен-пӗр ҫул вӗсен:*
Кӗрешмелле хӗвел пек ҫут кунсемшӗн.

Чеелӗх хамелеон пек пулсассӑн,
Ҫуллен ҫул улталаймӗ пурнӑҫра.
Е путсӗрлӗх шӑлне пит хӑйрасассӑн,
Пӗр ҫул кӑна:
Хӑй ӳкӗ авӑра!

Ҫӗршывӑн,
Халӑхӑн ҫул-йӗрӗ тӗрлӗ.
Ҫакна пӗлетпӗр:
Пулсанах ҫут пӗрлӗх,
Этем мала хӑюллӑн ӑнтӑлсан
Нишлӗлӗхрен тухма май пур ялан.

### III

Этемлĕхĕн шыравлă çулĕ-йĕрĕ
Хĕрӳ самантсенчен тĕвĕленсе
Мăнаçлăн тĕрлĕ юхăмсене кĕрĕ,
Çын çыншăн пултăр тус-юлташ тесе.

Эппин, пуш ĕмĕтпе çеç вĕçес марччĕ
Мăнаçлă çутă чăнлăх тӳпине.
Чунлăхпала ăса мала хурасчĕ,
Туйса тăрасчĕ халăх нушине.

Халсăррисем те пулччăр ăраскаллă,
Усал вăйсем шикленччĕр чăнлăхран.
Этем телей курма кăна çуралтăр,
Хĕвел шевли çеç çиçтĕр пурнăçра!

...Йăмра кашлавĕнче мĕн чухлĕ шухăш
Пытарăнать пек ĕмĕр-ĕмĕре.
Ун шавĕнчен иртме май çук çав туххăм,
Çавна пула лăпланаймасть чĕре...

* * *

Çĕр çаврăнать хăй чиккинчен тухмасăр
Ӳкеççĕ ун çине çут шевлесем.
Хĕвел савать пурне те уйăрмасăр:
«Телейлĕ пулччĕр этемсем тесе».

## СĂРЛАС МАРЧЧĔ
## ХУРАПА ПУРНЕ ТЕ...

### I

Шухăшсем ирех, çунат сарса,
Кайăксем пекех, çула тухаççĕ.
Янкăр тӳпене кăмăлласа,
Малалла хăюллăн ыткăнаççĕ.

Чăн та, халь вĕсемшĕн ют иккен:
Чурăслăх, кичемлĕх, пушсăмахлăх.
Тӳпере епле тĕнче ĕлккен,
Илĕртӳллĕ уçăмлăх, кăваклăх!

Касмăкраччĕ ĕнер çеç вĕсем,
Тĕмсĕлсе ырра шанса пурнатчĕç.
Тухăпăр час ирĕке тесе,
Паянхи кун килессе шанатчĕç.

«Тĕрĕс мар сан шух ирĕклĕхӳ,
Кăлăхах, айван, тапаçланатăн»,—
Çакăн евĕр е тата хĕрхӳ
Сăмахсем илтсессĕн лăпчăнатчĕç.

Халь хыçра вĕсем — асилӳсем,
Ĕмĕтсем тин чăрсăр та хăюллă.
Шухăшсем — вăй илнĕ кăйкăрсем,
Пурнăçран, эппин, тăрса ан юлăр!

### II

Тӳпере вĕçни кăна сахал:
Ан-ха, тусăм, хура çĕр çине те.
Пуш ĕмĕтлисем чылай-çке халь,
Тен, вĕсем пекех эс ĕнĕрлетĕн?

Сăмахпа маттур пулнин çук хал.
Е тепри, ав, калаçать çеç вирлĕ.
Ĕç умне тăрсасăн хăй — кахал,
Пурпĕр кăшкăрать:
“Парсамăр ирĕк!”

Чавсипе хирсе ăнтăлакан
Хурласа, йĕрсе тăвать карьера.
Çухрашать:
"Ку манăн, пирĕн эра!
Пире хирĕç тăраймасть никам".

Пур чеереххи: çын аллипе
Кăвара туртма пĕлет алхапăл.
Курăнать кайран ĕç-хĕлĕпе,
Хăй тусне сутма ялан вăл хатĕр.

Пурнăç! Çĕр-анне!
Тен, ăнсăртран
Пуш палкавçăсем паян йышланчĕç?
Ыйтусем пуçра çапаççĕ чан,
Шухăшсем çавна пула пăтранчăк.

### III

Тӳпере вĕçни кăна сахал,
Çынсене парать-и-ха вăл усă?
Çĕр-анне аманнă, хаклă тусăм,
Ĕлĕкхи пек сывламасть кал-кал.

"Ӳстеретпĕр унăн пулăхне,
Химире кăна телей, пуласлăх!"—
Çакăн пек хĕрӳ сăмахсене
Кăшкăраттăмăр эпир хаваслăн.

"Совет çĕрĕ питĕ те пуян,
Унăн çук пуçламăшĕ те вĕçĕ",—
Çапрăмăр миçе çул параппан,
Ырлăхне кӳмерĕ пурпĕр ĕçĕ.

Атăлта чакаççĕ пулăсем,
Пуррисем вилсе пĕтеççĕ хăвăрт.
Шывсăрах Арал çыранĕсем,
Чĕрĕ чуншăн пурнăç тăвăр, тăвăр.

Çĕр йĕрет,
Ун йӳçĕ куççульне

Кам-ши типĕтĕ вăй шеллемесĕр?
Вăл ÿпкелешет: "Ачăрсене
Хăвааратăр хăвăрах телейсĕр..."

## IV

Тÿпере кăна вĕçни сахал,—
Кăкăра уçсан та уçă сывлăш.
Çĕр çинче хухать, ав, çыннăн сывлăх,
Тĕтĕмĕ куллен палкать пал-пал!

Сăвăра мухтанă заводем
Унсăр пурнаймаççĕ çав.
Мĕн тăвăн?
Йÿнерех ĕçлесчĕ-ха тесе
Пуç тени пулса тăмасть-ши хăвăл?

Куллен-кун, пĕрмай йÿнеçтерсе,
Айвана тухмастпăр-ши пĕр хушă?
Çакăн евĕр мĕскĕне персе,
Ĕмĕтсем юлмаççĕ-ши пуш-пушă?

Сивлеместĕп:
Кирлĕ перекет,
Хуçа евĕр хамăра туясчĕ.
Анчах пултăрччĕ ялан сипет,
Ыранхи пирки те шухăшласчĕ.

Çутçанталăк панă ырлăха
Шав упрасчĕ виçерен тухмасăр.
Урăхла пулсассăн — шырлăха
Кĕрсе ÿкĕпĕр, телей курмасăр.

## V

Экологи тетпĕр, шайлашу
Пур ÿсентăраншăн питĕ кирлĕ.
Кирлĕ этеме те пулăшу,
Хирĕçле пулсан — тавралăх чирлĕ.

Тăтăр пур çĕрте те килĕшӳ,
Çакăншăн эпир — çынсем — явaплă.
Ăмсануллă вĕчĕ, кӳлешӳ
Çĕр чунне ан тутăр тек суранлă.

Вăрманпа Руç çĕрĕ пит пуян.
Вăл çĕршыв ӳпки тесе калатпăр.
Анчах йышĕ ун чакать ялан,
Çăткăнла ăна эпир касатпăр.

Шăрăх кунсенче тата мĕн чул
Алхасать çил-тăвăлĕ, пушарĕ?
Хăçан хытрĕ пирĕн ырă чун,
Явапне, юлташăм, кам-ха парĕ?

Çын кун-çулĕ вăрăм мар — кĕске,
Утса тух ăна, Этем, тирпейлĕн.
Ан хăвар хăв хыççăн, эс, инкек,
Çĕн ăру та пурăнтăр телейлĕн.

### VI

Шухăшсем — аманнă кайăксем —
Халăхсен хутшăнăвне сăнаççĕ.
Тĕлĕнеççĕ:
Мĕн çитмест хальхаççăн,
Мĕн пайлаççĕ Çĕр çинче çынсем?

Хаçатра та тĕрлĕ митингра
Иртнĕ вăхăта хĕрсех хурлаççĕ.
Уямасăр хурапа шурра
Пĕр-пĕрне кӳрентерсе пурнаççĕ.

Хирĕçӳ те сивĕ курайманлăх
Çынсенче йăл илчĕ-ха хăçан?
Ĕнер çеç пурнатчĕç туслăн, танлăн,
Вăрçăшас йăла вĕсен пулман.

Лайăххи те пулнă çĕршывра,
Сăрлас марччĕ хурапа пурне те.
Йăнăшсем пĕрмай шыра-шыра,
Пурнăçа тĕпрен епле çĕнетĕн?

Тĕрĕсленнĕ, хаклă туслăха
Хавшатма, юлташăм, парас марччĕ.
Утнă май тӳлек пуласлăха,
Ачасем валли ăна упрасчĕ.

* * *

«Пĕлтер, этем,
Кун-çул юхăмĕнче
Ăçта чее тăшман тĕл пулнă
Е çывăх тус та эсĕ тупнă?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче.

Хăв иртнĕ çул-йĕрӳн чăтлăхĕнче
Ĕмĕтӳпе ăçта йăпаннă,
Вăйна çухатнă, хастарланнă?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче.

Васкавлă вăхăт урапи çинче
Мĕне хаклатăн, кăмăллатăн?
Виличченех ăçта пулатăн?
— Ырăлăхпа хаярлăх хушшинче!

## ЙĔС ШĂНКРАВ КĂНА ЯНРАТĂР...

### I

Кур-ха, кур-ха, çунасем
Карап евĕр, ыткăнаççĕ.
Шурă çулăм чĕлхисем
Вут кăларнăн явăнаççĕ.

Пĕкĕ, хăмăт эрешленнĕ,
Вĕлкĕшеççĕ хăюсем.
Пичĕ-куçĕ, ав, хĕрелнĕ
Катаччи чупакансен.

Çунасем çинче лараççĕ
Каччăсем те сар хĕрсем.

Çĕнĕ юрă янратаççĕ,
Кашниех хавас вĕсем

Сулнăк.
«Тыт, тархасшăн, пулăш,
Тыт, ўкеп кўме çинчен!»—
Çуйăху та шўтлĕ кулă
Сивĕ хĕл уявĕнче.
Йĕс шăнкравĕ илĕртўллĕн
Тикĕс те тўлек янрать.
Ун кĕвви-çемми чĕнўллĕ,
Хăй патне вăл йыхăрать.

## II

Çуркунне çиçет умра:
Çеçкере садсем, çаранлăх.
Телей тупнă мăшăра
Ял çынни курма хаваслă.

Туй кўми васкать, васкать,—
Çамрăксен халь çулĕ уçă.
Йĕс шăнкравĕ питĕ уççăн
Кĕмĕл сасăпа янрать.

Ваттине вăл асилтерчĕ
Иртсе кайнă вăхăта.
Яшсене хуллен систерчĕ:
«Пулăр хăвăр та хăта».

Ун сасси чунра вăратĕ
Ырă, çутă туйăмсем.
Шухăшсем капланнăçем
Сĕнĕ:
«Пĕр-пĕрне юратăр».

Шăнкăравĕ шăнкăр-шăнкăр...
Хĕр юрри пек янăрать.
Эй, пускил,
Ташла та шăхăр,
Туй илемĕ савнăçра!

## III

Тепĕр сăн каймасть умран:
Тутлă ыйхăра ял-йышăм.
Чан чĕнет:
«Тухсамăр йышлăн,
Сӳнтерер вут-кăвара!

Çурт çунать.
Хăрушă çулăм
Алхасать. Кӳрет типшар.
Эй, çынсем!
Хăюллă пулăр!
Вăй илсех пырать пушар».

Чан сасси епле кĕрлерĕ:
«Тухăр, тухăр пулăшма,
Ырлăх-пурлăха çăлма!
Инкеке йышпа çĕнтерĕр».

Пур кунта вут чĕртекенĕ,
Йăпшăнать вăл хӳтлĕхе.
Пит-куçне кĕççе çĕленĕ,
Ма çаплах-ши иртĕхет?

Чан сасси йыша пухать,
Кашниннех кунта пĕр шухăш:
«Вирт-пушар ан астăр шуххăн».
Çулăм чакнăçем чакать.

## IV

«Иртнине ан ман тет,— чан,—
Сас-пĕлтерĕшĕм пит анлă.
Хатыньре янравăм ман.
Бухенвальд манпа канашлă.

Е тата, ав, Хиросима
Хурлăха асилтерет:
Нихăçан та «кăрăç-çимĕç»
Хĕн ан кӳтĕрччĕ сире.

Тамăкри сассем хăрушшăн
Çӳçентерĕç чĕрене:
Çĕр-сăпка ан юлтăр пушă,
Чечеклентĕр кулленех.

Пĕрлĕх,
Туслăх кар! çĕкленччĕр,
Сассăма тăнла-тăнла.
Ырă усала çĕнтертĕр,
Пурăнтăр этем çынла.

Манăн шав чăрмавсăр пухтăр
Хăй тавра хастар йыша.
Кунран-кун сивлеклĕх хухтăр,
Пĕттĕр çĕр çинче нуша!»

## V

Чуншăн çывăх ĕмĕр-ĕмĕр
Йĕс шăнкравăн çут сасси.
Пур унра çунатлă ĕмĕт,
Пысăк шанчăк, пуласси.

Анчах чан та систерет,
Пĕлтерет:
Синкер пĕтмен-ха.
Кур, ав, инкекре Армени,
Пулăшу пиртен кĕтет.

Йыхăрать те:
«Нимене!»
Çĕкленет çĕршыв, тĕнчемĕр,
Асапа пĕрле çĕнер,
Вăйлă-ха унран этемлĕх.

Чан сасси шав кĕрлесе
Чĕрене ан ыраттартăр.
Тултăр ĕмĕчĕ çынсен,—
Йĕс шăнкрав кăна янратăр!

* * *

*Çеçпĕл Мишшине*

«Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ...»
Çак шухăш ялан чĕремре.
Чăваш чăннипе халь мухтанĕ,
Ун ячĕ кĕрлет тĕнчере.

Сап-сар тырă хумĕ — тавралăх —
Çăра вăрмансен хӳттинче.
Эс кĕтнĕ, юратнă малашлăх —
Çĕршывăн кашни кунĕнче.

Çур ĕмĕр ăсанчĕ — юлмарăн,
Сăнарăн Чăваш уттине.
Эс килтĕн.
Татах шантаратăн
Çĕн Кун çĕнелсе килнине.

* * *

Çынсем...Çынсем... Сиртен вăй-хал илетĕп,
Туйса ăс-хакăл хăватне, чапне.
Кун-çулăмра ялан пĕлесчĕ, тетĕп,
Ырра курма, çĕнме чăрмавсене.

Хăш чух эп тилĕ пек «туссем» тупатăп
Е тĕл пулатăп йĕксĕк чунсене.
Çапах шăпа мĕн пӳрнине чăтатăп,
Шанатăп тӳрĕлĕхĕн ыр вăйне.

Çанталăк шухă тăвăл иртнĕ хыççăн
Хĕвелĕн ырлăхне çеç шаннă пек,
Çавнашкалах-çке манăн шухăш уçă —
Пурнать куллен-кун çутă ĕмĕтпе.

Пĕлеп: ырришĕн çеç этем çунсан,
Ун ĕçĕ харама каймасть нихçан.

* * *

“Выртакана çапма хушмаççĕ ĕлĕкрен,
Çăлма вĕрен мĕн ачаран путакана...”—
Епле ыр сăмахсем, куллен кунах пире
Ăс панă килтисем, çакна хурса чăна.

Анчах та ӳснĕçем ĕç-хĕл пач урăхла:
Пĕри савать хăйне, теприн телей — мулра...
Çын пĕлменни нумай, çапла шутла-шутла
Иртеççĕ ыр кунсем, чăмаççĕ авăра.

Аналла утма кирек хăçан ансат,
Çӳле шав кармашма
Çитмест хăш чух вăй-хал.
Çапах эпир саватпăр пурте кăмăлтан
Кĕрешӳре туптаннă пысăк чăнлăха.

Калатăп эп: мухтав малта пыракана,
Чĕресене кăвар-хĕлхем сапакана!

* * *

Çывăххине, инçетрине те,
Çăмăллине, йывăррине,
Çĕкленнине те, ӳкнине те
Эпир илетпĕр чун патне.

Çул-йĕр пулсассăн та чăрмавлă,
Çиçсен те шанчăк сахалрах,
Чĕремĕрте пĕтмест хастарлăх,
Утатпăр пурпĕр малаллах.

Хăш чух халсăрланса çитсен те,
Вăй-хал тупатпăр хамăртах.
Çĕнтерĕве çын ĕненсессĕн,
Вăл вăйлă пулĕ яланах.

* * *

Хуракăшсем,
Эсир туятăр-ши —
Шух чунсенче
Мĕн чухлĕ тунсăх,
Çĕнĕ шухăшсем
Эсир вĕçсе кайсан юлаççĕ çĕр çинче?
Çавна пула пит канăççăр çынсем.

Туман ĕççем,
Арканнă ĕмĕтсем,
Манми туссем
Çак самантра тухаççĕ ман ума.
Сисместĕн те,
Ӳпкев кăшлать сана,
Е шанчăк çуттăн илĕртет
Татах мала утма,
Е ыр ĕçӳ лăплантарать чунна.

Хуракăшсем!
Сассăрсенче —
Такам пит хурланни.
Е вĕрентни пире шухăшлама.
Каятăр та —
Пуçлатпăр ăнланма:
Яр-уççăн курăнать —
Ĕç пуçланни, пуçланманни...

## КĔРХИ ШУХĂШСЕМ

*Мăшăрăма — Гальăна*

I

Çулçăсене тăкма пуçларĕ сад,
Тĕмсем çаралчĕç, чечексем те шанчĕç.
Сив çил халь пур çĕрте хуçаланать.
Чунра халал йĕркийĕсем çуралчĕç.

Сана каласшăн ăшă сăмахсем,
Халь вĕсене илтмешкĕн эсĕ тивĕç.
Садра хуçалансан та сив кунсем,
Чечен юратăва нихçан тăм тивмĕ.

Савнийĕмçĕм!
Кунран-кун эс хитре,
Çулсем мала чупсассăн та чарусăр.
Телей *шевли çĕтмест-ха сăн-питре*,
Кĕрхи кунсем иртмеççĕ кăлăх, уссăр.

Ан тив, хĕвелĕ перекетлĕрех
Хĕмне те, çутине те сапалатăр.
Юратăву, калатăп, пурпĕрех
Умри çула çут çăлтăр пек çутаттăр.

II

Ялан куç умĕнче паллашнă кун:
Садсем пĕркеннĕчĕ ун чух шур шупăр.
Сана курсан вутланчĕ шухă чун,
Чĕрÿ, тавах, пулмарĕ маншăн хупă.

Шăпамăр çырнинчен иртмест этем,
Тен, çавăнпа-ши пăрăнса утмарăн?
Чăн турăн ырă, çутă ĕмĕте,
Сан умăнта кунран-кун ÿсрĕ парăм.

Тавах, шухăшсене çыхса тĕвве,
Пĕр çул-йĕрпе утма эс килĕшнишĕн.

Манпа пёрле хёне-терте, сивве
Пач найкăшмасăр çёнтерсе пынишён.

Сăнатăп сан кашни хусканăвна,
Вёсем чĕремшĕн питĕ çывăх, ырă.
Туйса тăратăп эпĕ яланах:
Эс манăн çепĕç туйăм, çĕнĕ юрă.

### III

Илемлĕ иртнĕ кунăмсен тĕнчи,
Анчах хыçа тăрса юлать вăл хăвăрт.
Йăлтăртатса çунать вĕсен ĕнчи,
Шăп çавăнпа чуна хăш чух пит тăвăр.

Çапах сÿнми телейĕн чăн хакне,
Савнийĕмçĕм, санпа кăна эп туйрăм.
Эппин пурнас кунра та малашне
Çул-йĕрĕм нихăçан ан пултăр уйрăм.

Тавах, ачашлакан аллусене,
Вĕсен ĕçченлĕхне ялан мухтатăп.
Хĕлхем сапан кăвак куçусене,
Вĕсен тĕпсĕрлĕхне чунтан саватăп.

Кунсем васканăран юмахри пек,
Сăн-питÿнте çут тунсăх çуратаççĕ.
Эс маншăн пурĕпĕр çурхи чечек.
Ăш куçусем куллен хавхалатаççĕ.

### IV

Чÿречерен пăхатăн сад çине:
Сар çулçăсем ÿкеççĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр.
Кĕтсе илетпĕр хĕл кунĕсене,
Улмуççисем кĕç уртĕç шурă чĕнтĕр.

Калатăн эсĕ:
«Эпĕ ытларах
Çуркуннехи сада килĕштеретĕп.

Ун чух тавралăх симĕс, çутăрах...»
*Çапла, санпа сăмахсăр килĕшетĕп.*

Сăнатпăр иккĕн: çўллĕ тўпере
Хуракăшсем кăнтăралла вĕçеççĕ.
Пит шухăшлăн пăхан чўречерен,
Кĕрхи садра сар çулçăсем ўкеççĕ.

### V

Садра халь ирĕк çил ачисене,
Ши! шăхăрса чарусăррăн кумаççĕ.
Тăкаççĕ хурăнсен тенкисене,
Вĕсемпеле сукмаксене сăрлаççĕ.

Ларатпăр юнашар, тĕсен куçран,
Чипер сăнна пăхса çамрăкланатăп.
Шур юр пĕрчисене суйлан пуçра,
Сисмен чухне эс вăрттăн хаш! сывлатăн.

Ёлĕкхиллех чуна тыткăнлатан,
Ачаш куллу ытарайми илемлĕ.
Пĕрмай санпа, санпа çеç пулнăран
Мана пĕрре те хăратмасть кичемлĕх...

Çулçисене тăкма пуçларĕ сад,
*Тĕмсем çаралчĕç, чечексем, ав, шанчĕç.*
Юратăву, тавах, пиллет хăват,
Сив кунсене чăтма хушать çут шанăç.

* * *

Тунсăхларăм паян эп, юлташăм,
Тăрнасем вĕçнине сăнаса.
Уй-хирте вĕсемпе сывпуллашрăм,
Тăрса юлтăм пĕччен, ал сулса.

Тăрса юлтăм... Мĕскер-ши çухатрăм
Тăрнасем инçете вĕçнĕ чух?..
Кĕркунне çитсен çеç эп ăнлантăм:
Çамрăк ĕмĕр тепре килес çук.

* * *

Вăрман хуралчĕ.
Инçетре çеç чăрăш
Çу кунĕнчи пек симĕс курăнать:
«Эс чунупа нихçан ан ватăл, тăрăш»,-
Тесе мана калан ăн туйăнать.

## ПĔРРЕМĔШ ЮР

Паян тинех ак улшăнчĕ çанталăк,
Шап-шурă тĕс çиçет йĕри-тавра.
Пĕрремĕш юр — чуна килен тасалăх
Йăлтăртатать кăшт уçăрах садра.

Ирпе хĕвелĕ вăтанса хăпарчĕ
Шур тум пĕркеннĕ çӳллĕ сăрт çине.
Каланăн: ку вăл малтанхи хыпарçă,
Эппин кĕтсемĕр хĕл кунĕсене.

## ЫТКĂН-ЫТКĂН ЙĔЛМЕ ЙĔЛТĔР

Мамăк евĕр вĕлтĕр-вĕлтĕр
Шур юр çурĕ çĕрĕпе...
Ыткăн-ыткăн, йĕлме йĕлтĕр,
Ирхи янкăр уй-хирпе.

Çил ачи манпа çӳресшĕн,
Алхассах чĕрре кĕрет.
Кăлăхах çула пӳлесшĕн,
Вĕт юрпа питрен перет.

Шур пуставлă уй-хир урлă
Икĕ йĕр хыçа юлать.
Йĕлме йĕлтĕрĕм хăюллă,
Çилçунат пек ыткăнать!

# МУЛ – ЭРНЕЛӖХ
# ӐС – ЯЛАНЛӐХ

* * *

Ваттисен сӑмахӗсем —
Ӑслӑ, тарӑн хайлавсем.
Вӗрентеҫҫӗ пурӑнма,
Ырӑ ӗҫшӗш кар тӑма.

* * *

Ӗмӗр вӑрӑм, ҫул кӗске ҫав,
Шутлӑ ӗҫӗ те сахал.
Ҫырӑнинччӗ пӗр йӗрке ҫеҫ,
Кун иртмест вара ахаль.

* * *

Кашнин шӑпи хӑйне кура,
Кашни шанать ҫут ҫӑлтӑра.
Тӗл пулмасан хура-шура
Телей тулан-ши пурнӑҫра?

* * *

Вилӗме кӗтме хушмаҫҫӗ
Чӑвашсем мӗн авалтан.
Пурнӑҫа шанар хальхаҫҫӑн
Пӑрӑнмасӑр тӗп ҫулран.

* * *

Кунпа кун тӗрлӗ пулнӑран
Иртеймӗн улшӑнусенчен.
Тӑринччӗ лӑпкӑрах тӗнче,
Ҫак шанчӑк упранать ҫынра.

* * *

Такăнмасăр ÿкес мар,
Ватăлмасăр вилес мар.
Кирлĕ-кирлĕмаршăнах
Кĕрес çук чĕрре ăсчах.

* * *

Пурнăç çулĕ, тус-юлташăм,
Сарлака е сакăлталлă.
Чечек пухăн е кĕрт ашăн,—
Пурпĕр илĕртĕ малашлăх.

* * *

Нуша тĕревлĕ
Тата ĕрчевлĕ.
Унпа этемĕн
Хухать илемĕ.

* * *

Эпир хăш чух çапла пуплетпĕр:
"Телей лекмест çав тетеле".
Кахаллансан — çакна пĕлетпĕр —
Тĕл пулмăн пурнăçра тивлет.

* * *

"Ирпе ан кул, каçпа йĕретĕн",—
Калатчĕ вĕрентсе анне.
Ача чух темшĕн ĕненеттĕм
Çак сăмахсем чăн иккенне.

* * *

"Çав, вилнĕ шур ĕнен ăш сĕчĕ тутлă",—
Чăваш ытарлăн калаçать.
Юптарнă май теме шанать.
Леш тĕнчерен килет-шим уншăн пурлăх?

* * *

Иленет инкек пӗр илӗртмесӗр,
Иленет те, чун-чӗре ҫунать.
Лӑштӑр усӑнать вара ҫунат,
Сар хӗвел те курӑнать илемсӗр.

* * *

Кӳлӗ шывӗ пӑтрансан та,
Вӑхӑт ҫитӗ — тӑрӑлать,
Ыр ҫын чунӗ — ҫутӑ кантӑк,
Варласан та тасалать.

* * *

Инкек ҫине синкек,
Нуша вӑл — тикенек.
Сирес тесен хӗне,
Тусна ҫеҫ ан хӗне.

* * *

Ҫыхман милӗк саланать
Хуҫи сӳрӗкрех пулсан.
Ҫирӗп туслӑх сыхланать
Пӗр-пӗриншӗн кар тӑрсан.

* * *

Шӑкӑл-шӑкӑл урапи
Пӗр йӗрпе кусмасть час-час.
Ҫыннӑн та ҫаплах шӑпи:
Улшӑнсах тӑрать кас-кас.

* * *

Шыв тумла-тумла-тумла
Шӑтарать, ав, мӑн чула.
Чӑн сӑмах та, пурпӗрех,
Ултава ҫӗнтеретех.

* * *

Ҫӑкана ӳссе ҫитмесӗр
Тен, тӑхтан касса яма?
Ӗҫӗн йӗркине пӗлмесӗр
Кирлех мар пуль васкама.

* * *

Сар хӗвелӗ нихҫан та
Ҫутатмасть пӗр ҫыншӑн ҫеҫ.
Вӑл пиллет пурне те шанчӑк,
Вилӗмсӗр унпа тӗнче.

* * *

Ҫиларманӗ эс лартаймӑн
Ҫилленсе кайсан, пӗччен.
Тусунта тупсассӑн айӑп,
Алӑ пар ҫын сисиччен.

* * *

Халӑхпа пӗрле пулсан
Халу чакмӗ нихҫан.
Унран уйрӑлса кайсан,
Хӳтлӗхсӗр тӑрса юлан.

* * *

"Чӗлхен шӑмми ҫук",— тесе
Пӗр сӑлтавсӑр каламан.
Усӑсӑр сӳпӗлтетсен
Кӑмӑл хуҫӑлать ялан.

* * *

Ҫухатсан аҫун чысне,
Хӑвӑнне те эс упраймӑн.
Варласан чӑваш ятне,
Халӑхун сумне чакарӑн.

* * *

Ăслă çынпа калаçсан,
Пыл хыпатăн çăвара.
Ухмахпала туслашсан,
Тертпе хĕн кăна куран.

* * *

Пере пĕлмен алтуйи
Пырса тивнĕ, тет, хăйнех.
Улталаканăн суйи
Шăтса тухать çийĕнчех.

* * *

Çĕнĕ тус тупас пулсассăн,
Киввине, юлташ, ан ман.
Ытлашши каппайлансассăн,
Нимсĕрех тăрса юлан.

* * *

Тутăх çийĕ тимĕре,
Хурлăх витĕ чĕрене.
Ватлăх пуснăшăн пире
Вăрçăр мар çут тĕнчене.

* * *

Кайăк тӳпере вĕçсен те
Таврăнать хăй йăвинех.
Çуçӳрен таçта çитсен те
Асилет тăван килнех.

* * *

Выçă кашкăр хăш чухне
Сурăх тирĕ пĕркенет.
Майлă вăхăт çитсенех
Кăтартать асав шăлне.

* * *

Сăрă тĕсшĕн кăна мар
Хĕсĕрлессĕ кашкăра.
Айăпа кĕрет пĕрмай
Хăй пит çăткăн пулнăран.

* * *

Пурнăç çулĕ — ăслă çул,
Айккинче тăрса ан юл.
Шух чĕрӳ хĕрӳллĕн çунтăр,
Тусусемшĕн усă пултăр.

* * *

Сар хĕвел анса ларсан,
Хаклă саншăн уйăхăн çути те.
Яш кунсем иртсе кайсан,
Вĕсене чĕнетĕн тĕлĕк витĕр.

* * *

Асăрханă тĕрĕс авалах:
Шыв та шел-çке хыткукар этемшĕн.
Сăхăскер, тӳрре тухать çавах:
“Кĕрешетĕп эпĕ перекетшĕн”.

* * *

Улма йывăç çимĕçĕ
Ӳкмĕ вуллинчен инçе.
Ĕçчен çын ачи-пăчи
Пулĕ хăйĕн пек ĕçчен.

* * *

Ăш сăмах та, сив сăмах та
Пĕр çăвартанах тухать.
Хурлама та, ăнланма та
Вăхăтра пĕлес пулать.

* * *

Йёксёк чёлхи йёке мар,
Арча тёпне хума çук.
Ыр чуну сан таса чух,
Эс ăна ан варлаттар.

* * *

Калаçакан çăвара
Карта тытсан пӳлме çук.
Арăму сан чăркăш чух,
Юлăн пулăшусăрах.

* * *

Пăр пек сивё сăмахна
Виçё çул хушши упра.
Вăл вёçсе тухсассăнах,
Тыт ăна ăшра, чунра.

* * *

Пёр хёлхемпе ял çунать,
Сив сăмахпа çын пётет.
Ăшă, çутă ёмёте
Сыхлама пёлес пулать.

* * *

Куçупа курмасăрах
Çăварна тӳрех ан кар.
Пысăк йăнăш тăвасран
Вăхăтра хăвна ху чар.

* * *

Сăмахна хăв каличчен
Урлă-пирлё виç пёччен.
Вăл тухсассăн ирёке,
Лекён хăвăрт инкеке.

* * *

Пиментей пёлсен —
Симентей сисет.
Çинахви илтсен —
Çичё ял пуплет.

* * *

Нумай итле, сахал калаç,
Хёрсе кайсан пёл чарăнма.
Çынна, асту, сăмахпала
Пулать чёртме е амантма.

* * *

Ялан: пыл, пыл тенипе
*Пылак лекмё çăварна.*
Кайсан шăрчăк çулёпе
Мехел çитсен хурланан.

* * *

Шур хут çине çырнине
Май çук кусарпа хырма.
Сив сăмах пёлтерёшне
Мел çитмест хăш чух чарма.

* * *

Павра çыннăн çиларманё
Пушăлла çеç авăртать.
*Ёçлеме сёнсен*, чăрмавё
Çийёнчех ун тупăнать.

* * *

"Ёçе кура — хисепё",—
Ман тус-юлташ пуплет.
Анчах хăш чух кисепё
Ăнах пырса тивет.

* * *

Ёшенсен шăрăхра
Шыв чуна кантарать.
Ăш сăмах хурлăхра
Вăй парать, пулăшать.

* * *

Кам тăрăшарах ĕçлет,
Çавă ытларах илет.
Урăхла та пулкалать:
Ултавпа тепри пуять.

* * *

Ĕçесси ансат,
Мухмăрĕ асап.
Тытрăн-тăк эрех,
Кун сӳнет ирех.

* * *

Сивĕ çилĕ лăскасан,
Йывăç пĕччен чух тӳнет.
Вăхăтра пулăшмасан,
Çын кун-çулĕ час сӳнет.

* * *

Икĕ турта хушшинче
Виçĕ лаша тăраймасть.
Хăш чух тĕпел кукринче
Çĕн çын вырăн тупаймасть.

* * *

Çине тăрсан эс, тăрăшсан,
Уйри çиле тытаймăн.
Ялан пуш параппан çапсан,
Ăраскална тупаймăн.

* * *

Вунă така пулнăран
Пуян тесе ан мухтан.
Тепри — сурăх усракан —
Санран irттерет ыран.

* * *

Япăх хыпар хыт вĕçет,
Самолетран irттерет.
Ырри — паллă — ĕмĕрех
Тимĕр шапапа килет.

* * *

Купăс тытса ларнипе
Пурнăç каймĕ малалла.
Чи малтан ял-йыш хаклать
Палăрсан çеç çын ĕçпе.

* * *

Умри тăван çĕршыв-аннемĕр
Тивлетлĕ пулĕ-ха ыран.
Анчах та унсăр — ман — этемĕн,
Тулли телей пулмасть нихçан.

* * *

Вĕççĕр-хĕрсĕр çутă ĕмĕт
Çамрăк чух çынра нумай.
Вăхăт хăвăрт шунă май,
Мĕншĕн-ха чакать ун хĕмĕ?

* * *

Карма çăвар чăн шухăшне
Ялан пĕлтерĕ кăшкăрса.
Ăсли çеç хăйĕн кăмăлне
Систерĕ лăпкăн каласа.

* * *

Кёске те витёмлё пуплев
Пыл хурчё евёр туйăнать.
Ыр чунлине сар пыл пиллет,
Сăхать усал сунакана.

* * *

Ёмёрхи ват юмана
Тăвăл кӳмесен те хур,
Хăй сисмен чухне ăна
Сиенлет кăпшанкă-хурт.

* * *

“Часах пурне те сутăн эп илстёп”,—
Пуян хёрсе кайса мухтаннине
Илтсен ăсчах кулса çеç хирёçленё:
— Эс туянаймăн йывăç мёлкине”.

* * *

Юман ӳссессён те вăрах —
Кун-çулё ёмёр-ёмёре.
Этем ăс-халё те çавах,
Çухалмё вёçёмсёрлёхре.

* * *

Пурăннăçем çакна сисен:
Ăс-хакăл çӳллё йывăç евёр,
Ӳсмешкён пултарать тёллевлён,
Çёртен кăна сёткен илсен.

* * *

Лайăххи, çакна ăнланччё:
Паянхи кунран илет вăй-хал.
Пуç усса нихçан та ан тăр,
Хăвăнтах шыра куллен хавха.

* * *

Умра иксёлсенех апат,
Чăваш калать пит шахвăртса:
"Тип кашăк çăвара çурать,
Пулать-ши улшăну часах?"

* * *

"Укçашăн, чапшăн эс çыратăн".
— Пит йăнăшан,
Çак шухăш çук пуçра.
"Эппин, мĕн-ма хут варалатăн?"
— Вăхăчĕ ыйтнăран,
Чун хушнăран.

* * *

Таса шыв та пăнтăхать
Пӳлĕнсессĕн анлă юхăм.
Парăнсан лăпкăлăха,
Эс унтан тухаймăн туххăм.

* * *

Çĕр-анне тиркевçĕ,
Йышăнмасть кахал çынна.
Леш тупсан та евчĕ,
Çимĕçне памасть ăна.

* * *

Тĕксĕмленсессĕн çутă ĕмĕт,
Çунатсăр кайăк пек этем.
Эппин, ан чактăрччĕ илем,
Чунра вăл çунтăр ĕмĕр-ĕмĕр.

* * *

Кирек кам та йăнăшать,
Тӳрĕ çын та такăнать:
Япăххи те, лайăххи те,
Сăмахран илеççĕ витĕм.

* * *

Сарлака саккун сакки,
Пур йӳççи ун, пур — пахи,
Пур тата ун лайăх ен:
Улшăнать вăл çулсерен.

* * *

Усалпа туслашиччен,
Ырă çын çумне ларсам.
Ĕмĕтӳ сан тулмасан,
Пул самантлăха пĕччен.

* * *

Мул — эрнелĕх,
Ăс — яланлăх.
Хак — пĕр енлĕ,
Ĕмĕт — анлă.

* * *

Пуçа килнĕ шухăшна
Ан васка халь калама.
Сивĕтме ансат тусна,
Кансĕр çĕн юлташ тупма.

* * *

Кирлĕ мар çĕр сум укçа:
Паян — пур, пĕтет ыран.
Чи хакли — çĕр тус пулсан,
Аптрамастăн нихăçан.

* * *

"Чаплă, генилле роман",—
Пĕр юлташ хĕрсех пуплет.
— Мĕн çинчен-ха вăл?" — ыйтсан,
"Ыранах вулатăп",— тет.

* * *

Капан хывма пуҫличчен
Ваттинчен ăс илмелле.
Шур хута вараличчен
Шухăшлама пĕлмелле.

* * *

Пурнас текен — пурнайман,
Вилес текен — вилеймен.
Уссăр параппан ҫапма
Ваттисем пире хушман.

* * *

Кахал ҫын кирек хăҫан
Ăс памашкăн пит хатар.
Ĕҫлеме хăй пуҫăнсан,
Чĕмсĕрри упран хастар.

* * *

Телее шансан та,
Асра тыт ялан:
Пурнăҫ пулмĕ янтă,—
Эс ҫакна ан ман.

* * *

Ҫитĕнмешкĕн лайăх,
Ватăлма начар.
Ҫут тĕнче — хăналăх,
Пурăнма васкар.

* * *

"Ăслă, ҫирĕп пуласси,—
Паллă,— теҫҫĕ,— ачаран".
Пулкалать урăхларах:
Шанăҫран тухать асси.

* * *

Шанчăк ĕмĕр вĕçĕнче
Йĕп çăртти пекех юлсан та,
Е элчелĕ хăратсан та
Ырă ăсĕпе çын çеç.

* * *

Йĕппи ăçта,
Çиппи — унта.
Савсассăн ар,
Хĕр курмĕ шар.

* * *

Ывăл ӳснĕ май, çуллен,
Ашшĕн пуçĕ шуралать.
Хĕр пĕве кĕрсен хуллен,
Амăш чунĕ шуйханать.

* * *

Пĕрле пĕлĕм çинипе
Хаклама хушман çынна.
Пултарать-и ĕçĕпе?
Чи малтан эс пĕл çакна.

* * *

Чĕлхипе çеç васкакан —
Ĕç çинче пĕрмай наян.
Сăмахпа пит пултарать,
Хăйĕнчен шав култарать.

* * *

Ĕçкĕ нихăçан
Çынна ыр туман.
Эрех — сив çĕлен
Сăхать чĕререн.

* * *

Çиле хирĕç эс сурсан,
Сурчăку санах лекет.
Арăмна пит хурласан,
Сив сăмах хăвнах тивет.

* * *

Пĕчĕк чух, тăван ялта,
Савнă, лăпкă Турханта
Пуçлăхсем, чăнах, сахалччĕ.
Темшĕн халь вĕсем йышланчĕç.

* * *

“Çапла” — тесе каланипе
Çавал урлă эс каçаймăн.
«Ăшши пар-ха» — тенипех,
Сив мунчара çапăнаймăн.

* * *

“Çиччĕ виç те, пĕрре кас”,—
Кирлĕ ăстана виçе.
Юрăхли те, кур, кас-кас
Тивĕçтермĕ çĕвĕçе.

* * *

Сахăр пек пылак сăмах
Илтессе сар хĕр шанать.
Анчах йĕкĕт вăтанать,
Ăна тăхтать калама.

* * *

Читлĕхе курайманран
Тӳр сăмах тĕрме ватать.
Халсăр çын кирек хăçан
Хевтине илет унран.

* * *

Ыррине курас килсен
Тӳсмеллех-шим терт-хӗне?
Чӑнлӑха пӗлес тесен
Суймаллах-шим хӑш чухне?

* * *

Чӑн сӑмаха каламасан
Ырри путланӗ теҫҫӗ.
Йӳҫ эмеле, хӑвах чухлан,
Сывмар чухне ӗҫеҫҫӗ.

* * *

Ҫамрӑк чух та, ватӑ чух та
Чун ӑшши ҫынна пит кирлӗ.
Савни пур сан — пулмӑн чухӑн,
Ырӑ ӗҫшӗн тӑрӑн вирлӗ.

* * *

Ҫынна хытӑ каличчен
Шухӑшла пуҫу тавра.
Туй, эс, хурлӑх паянччен
Шурӑран тӑвать хура.

* * *

Вӗҫӗ пур вӗренӗн
Тӑрӑшса явсан.
Тар тӑкса вӗрен, эс,
Ҫын пулан кайран.

* * *

Сӑмсу чалӑш пулнӑран,
Тӗкӗре эс ан хурла.
Мӑшӑру, ӑна, ӑнлан:
Асӑрхаймӗ нихӑҫан.

* * *

Каçхи шухăш каялла,
Ирхи ĕмĕт малалла.
Миçе ĕмĕр йăпанса,
Çын пурнать çапла шанса?

* * *

Çулăхсан хура элек,
Амантать чун-чĕрене.
*Шăп çапла — лексен хĕне,*
Вăхăт çеç сана сиплет.

* * *

Сив элек ялан хура.
Варалать çын сăн-питне.
Йывăр тасалма унран,
Çитме кансĕр çул вĕçне.

* * *

Çынна усал тăвиччен,
Ырă туса пăх пĕрре.
Пĕрмаях кĕрсен чĕрре,
Тăрса юлăн эс пĕччен.

* * *

Ăсчах сăмахĕ пит хĕрӳллĕ,
Курнăçланмасть вăл нихăçан:
"Инкек-синкек ан пултăр ӳлĕм,
Юп куртăр çеç этем ялан".

* * *

Хура халăх ылхансан
Симĕс йывăç та хăрать.
Çынсенче кирек хăçан
Упранать сӳнми хăват.

* * *

«Ыр çын вилсен, ыр ят юлать»,— тесе
Каланă ваттисем тахçан.
Çын хушшинче тупма пулать хисеп
Куллен ĕçре çеç палăрсан.

* * *

Эй, ырлатчĕç,
Эх, мухтатчĕç:
"Вут та пăрăç Алванеç..."
Паян ак йăлтах ăнланчĕç:
Йăрă чăн та...
Хăйшĕн çеç...

* * *

Айван çыннăн пуçĕнче
Пурте çук çав, мĕн тăван?
Ма тесен, мĕн ачаран
Уншăн тикĕс çут тĕнче.

* * *

Ваттисем каланине
Çамрăклах хывсан ăша,
Тăнласан вĕсен пилне
Пăрăнĕ кайран нуша.

* * *

Çӳресен — çул усăлать,
Ӳркенсессĕн — хупăнать.
Ăс пухсам, эппин, хуллен,
Пурнăç улшăнĕ куллен...

# УЙРĂЛУ

* * *

Элек çути чăрмав курмасăр
Сан чунунта йăва тупсан,
Мана пĕрре те ăнланмасăр,
Савниçĕм, эсĕ уйрăлсан,

Йăлтах арканчĕ пирĕн туслăх.
*Тахçан пĕрле çӳренине,*
Хĕвел пек шанчăк çиçнине
Халь ĕненме те йывăр, тусăм.

Малашлăх та пит пушă пулнăн,
Йĕкĕлтесе е сиввĕн кулнăн,
Хакли, таси çухалнăнах
Чуна пăвать, тен, кăлăхах?

Çапах та эп сана кĕтетĕп,
Тĕлĕкĕмре санах чĕнетĕп.

* * *

*Айăпăма эс витĕрех куратăн,*
Виçетĕн ăсупа, туйăмупа.
Анчах йĕпрен эс пĕрене тăватăн
Тарăнлăха кĕрсе шухăшупа.

Кăлтăкăмăн сăлтавĕ, хаклăскерĕм,
Сана пула кăна, эс, ăнлансам:
Хăш чух эп роза вырăнне йӳç эрĕм
Суйлатăп пуль, çакна епле тунам?

Мĕнех, йăнăшасси пулать пурин те —
Анчах та çийĕнчех ăна сисни,
Пĕр çавăншăн хăвна айăплани —
Ку чи *кирли. Кайран хăратмĕ ним те...*

Ыратупа аманнă пурнăçна эп
Тӳрех ăнланайманшăн, каçарсам,
Малашлăх ячĕпе санран ыйтам:
Чечек пек туслăх вăй илсе хунатăр!

* * *

*В тот черный день (пусть он минует нас)*
*В. ШЕКСПИР*

Чӑтӑмлӑху йӑлтах пӗтсен,
(Ах, ку ан пултӑрччӗ, ан пултӑр!)
Асапланса кӳтсе ҫитсен
Кала:
“Ан кил, пӗччен эп юлӑп.

Туп ху пекки, ҫитет, ҫитет,
Сан шухӑшна эп халь ӑнлантӑм.
Ыр ятӑма ан асӑн тек,
Суя серепине ҫаклантӑн.

Унран нихҫан та хӑтӑлаймӑн.
Санпа, ҫав кӑлтӑка пула,
Ют ҫынсем пек халь уйрӑлар.
Пӗлсем:
Эп саншӑн тек кулянмӑп...”

Эпир, ҫапла кӳреннӗ чух,
Чӗрре кӗретпӗр, вӑрҫӑшатпӑр,
Тус-юлташран та пӑрӑнатпӑр
Тарӑхупа тулсассӑн чун.

Хӑш чух пӗр авӑк ҫил тухсассӑн,
Сарай тӑррисене сирет.
Умра аркану ҫеҫ куратӑн.
Анчах та..
Ҫак сехмет иртет.

Каллех хӗвел йӑл-йӑл ҫиҫсе
Пӗлӗтсене сирет васкавлӑн.
Этем те лӑпланать.
Сисет: вӑл вӑйлӑ-ха, пур ун хастарлӑх.

Шӑп ҫакӑн пек ман юрату
Пурне те тӳстӗр, асаплантӑр.
Килсе тухсан та ҫухату,
Пуҫне ан устӑр: пултӑр паттӑр!

## УЙРĂЛСАН

Санран вăтаннипе айван пулни,
Ĕмĕтсене куллен-кун ĕненни,
Шухăшăмпа юмахлăха кĕни
Ман чунăмра пĕтет-ха терĕн-и эс?

Шур акăш евĕр санăн уттуна,
*Шăнкрав сассиллĕ* уçă куллуна,
Тÿпе пилленĕ кăн-кăвак куçна
Тек нихăçан та курмăн терĕн-и эс?

Ÿпкевĕм çук.
Йăлт чăттăр ман чĕре:
Кăвар сапса хĕмлентĕр ирĕкре!
Пĕр саншăн çеç пулсан та инкекре,
Пуçа çухатмăп эсĕ уйрăлнишĕн...

* * *

Кĕтмен çĕртен ик çул юпленчĕ —
Чун хурланать халь вăйлăрах.
Сывпуллашу тин ĕнентерчĕ —
Эп çеç юратнă ытларах.

Çакна йăлтах ăнланнăран,
*Хама хам ыйтусем паратăп:*
«Эс ÿкĕнместĕн-ши кайран?» —
Пит шел, хурав халь тупаймастăп...

* * *

Хальччен ик ăс çĕкленĕ кермене
(Çич ют сăмаххине ĕненнĕрен-ши?)
Шухăшламасăрах эс çĕмĕресшĕн,
Пĕччен тупасшăн пек хăв телейне.

Иккĕленӳ амаланать пулсан
*Пĕр пытармасăр пĕлтерсем, тархасшăн.*
Çур сăмахран мана эс ăнлансан,
Пуласлăх ырă пулĕ, тусăм, саншăн.

Асил паллашнă ырă, çут куна,
Асил пĕрле çӳренине хавассăн.
Кичем чухне те ан сывлаччĕ ассăн,
Упраччĕ шанчăкна, юратăвна.

Вара эс элеке нихçан ĕненмĕн,
Манпа пĕрле чăрмавсене çĕнтерĕн.

* * *

Краççын сапса çунан вута сӳнтернĕн,
Хăтлантăн эс, чунра чĕртсе пушар.
Çут тĕллеве çапла хăвах пĕтертĕн,—
Кайран санпа пулмарăм юнашар.

Йăлтах, яланлăхах-ши эс çунтартăн
Малтан ик чун шыранă кĕпере?
*Ăна эс çеç халь çĕклеме пултарăн,*
Çĕн ĕмĕтпех-ха хĕмленет чĕре.

Шанманшăн, ăнланманшăн кирлĕ чух
Тепри, кӳреннипе, пит хăвăрт манĕ.
Е калĕ сиввĕн:
«Унăн чунĕ — чул,
Ăна мĕскершĕн пуççапас-ха манăн?..»

Анчах та эпĕ çаплипех шанатăп,
Кунран-кун ытларах сана саватăп!

* * *

Хӑш чух тивӗҫлипе, чунпа туймастпӑр
Этем ӗҫне, ун ырӑ тӗллевне.
Пулӑшас чух часрах ура хуратпӑр,
Ҫапла тататпӑр ҫыннӑн ӗмӗтне.

Ҫук, ҫӑмӑл мар, пӗрре те ҫӑмӑл мар
Тус тенӗ ҫын та сӗнмесессӗн алӑ,
Шӑп ҫакӑн пек пулать хӑш чух ҫанталӑк:
Пӗрре аҫа ҫапать, тепре уяр...

* * *

Чун ыратать — тупасшӑн хӳтлӗх.
Анчах ӑҫта-ха вӑл, ӑҫта?
Эй, шухӑшӑм!
Эс йывӑр хурлӑх
Ма тӗл пулатӑн-ха татах?

Сив сӑмаха тӳрех туятӑн,
Унран иртместӗн пӑрӑнса.
Ӑна сивлетӗн е хаклатӑн,
Е пурӑнатӑн тарӑхса.

Пӗлетӗп эпӗ:
Тӑвӑл хыҫҫӑн
Хӗвел йӑл! кулӗ ҫуталса.
Хӗн-хурпа савнӑҫ умлӑн-хыҫлӑн
Ялан тӑраҫҫӗ ылмашса.

Эппин, чуна мӗн пӳрнине
*Йышӑнасах пулать халь манӑн.*
Лӑпкӑлӑха ҫеҫ ырласассӑн,
Чухлаймӑн пурӑнӑҫ хакне...

* * *

Ик чун пӗрне-пӗри савать пулсассӑн,
Иккӗленмесӗр пӑрӑн вӗсенчен,
Ху кӑмӑллана хӗршӗн ҫеҫ эс савӑн,
Ун телейне, юратӑвне ӗнен.

Паллах, чуну сан аманса ыратӗ
Асаилӳн хӗрӳ ытамӗнче.
Хӑвна ӑнланакан ҫынна шыра эс,
Шыра: вӑл пур, вӑл пур ҫак ҫӗр ҫинче!

* * *

Пит кӗвӗҫсен аманӗ юрату,
Кӳлешнипе нихҫан пулмасть тату.
Хама ҫапла лӑплантаратӑп,
Анчах улталӑха курмастӑп.

Чее тӑшман та, тус та манӑн пур.
Чӗре хушать:
«Ырра мала ҫеҫ хур!»
Ача пек ҫынсене шанатӑп,
Чунра мӗн пуррине калатӑп.

*«Телей юратсан ҫеҫ пур»,—тетпӗр,*
Хӑш чух мӗн-ма иккӗленетпӗр?
Йӑпӑлтисем!
Тивлет курас тесе
Пурнатӑр мӗншӗн шав чееленсе?

Сирте пытарӑннӑ каварлӑх
Йӑваш ҫынна кӳрет асаплӑх.
Ҫапла пулсан та эп ултавҫӑна
Калатӑп: шар лекет кайран хӑвнах...

* * *

Ултавпа çёкленнĕ сас-хуран
Пур теме те пултараслăх.
Анчах çук унра пуласлăх —
Ĕмĕрĕ кĕске хăйне кура.

Хавшатать вăл çынсене вăрах,
Уншăн ют ялан тăванлăх.
Çуратать те *сив каварлăх:*
Çутă кун та каç пекех хура.

Шăп ăна пула миçе хутчен
Туслăх туслăха аркатнă.
Вăрçă тухнă, çын ахлатнă,
Хурлăх хуçаланнă çĕр çинче.

Питĕ шел: пурнать-ха вăл çаплах,
Парăнать, амаланать татах...

* * *

Тĕлпулусен хитре саманчĕсем
Яр-уççăн куç умне тухаççĕ.
Чунра киленĕç çуратса вĕсем
Мала утма хавхалатаççĕ.

Анчах ыйтасшăн эп:
Мĕскершĕн
Ытла та аякра халь ман тивлет?
Сиссемччĕ эс:
Чĕрем чечекленет
Санпа пĕрле пурнас кунсемшĕн.

Хитре çеçке хĕвелĕн çуттинче
Куçне уçса йăл-ял çиçесшĕн.
Чиперĕмçĕм,
Санпа чухне веçех
*Сив тунсăха хамран сиресшĕн.*

Эппин хĕвел пек, ăшăтсам чуна,
Куллен-кун вăй парсамччĕ эс мана.

* * *

Юлашки хут курса калаҫнӑ чух
Ӳпкев сӑмахӗсем пачах илтмерӗм.
Ыр кӑмӑлна та хаклама пӗлмерӗм,
Тен, ҫавӑнпа-ши манӑн канӑҫ ҫук?

Пӗлетӗп:
Саншӑн пултӑм эп юлташ ҫеҫ
Кун-ҫулӑмӑн хитре самантӗнче.
Шӑпа пире,
Тен, тӗрӗс уйрӑлтарчӗ
Е улталарӗ хӑй юхӑмӗнче?

Ҫапах та эсӗ пӑлханас теместӗн,
Ҫулсем юпленнине туйса илсен.
Асилӳре ҫеҫ пурӑнан,
Чӗнместӗн,
Ӗмӗтӗмре куллен илемленен...

* * *

Пӗлтер — ӳкӗтлесе ыйтатӑп —
Туйӑмсемпе эс выльӑн хӑҫанччен?
Ман чун ҫунать — кӑвайт хуратӑн —
Ун ӑшшипе эс ӑшӑнатӑн, тен?

Амаланать санра — туятӑп —
Кӑшт тӗлкӗшсе, анчах та ерипен
Ҫут пайӑрка,
Сивве сирсе хуллен,
Шырать пек вӑл хӗрӳллӗ тантӑш.

Эппин выля, выля эс вутпала,
Пӗрлештӗр ик кӑвайт хӗрӳллӗн —
Вӑл ҫунтӑрччӗ ҫап-ҫуттӑн, ҫӳллӗн,
Ан сӳнтӗр, ӑшӑттӑр пире ялан!

* * *

Телейлӗ эп, кӑвак куҫсен хӗлхемӗ
Чунра ыр шухӑшсем ӑвӑратнӑ чух.
Вӗсемпеле умри тӗнче илемлӗ,
Вӗсемсӗр маншӑн ҫутӑ кун та ҫук!

* * *

*«Не пой, красавица, при мне...»*
*А. С. ПУШКИН*

Эс ан илӗрт мана, авар хӗрӗ,
Тыткӑна илекен куллупа.
Юррупа та чуна кӑна кӗрӗн,
Анчах пулмӑп ялан эп санпа.

Илӗртӳллӗ хитре кӗввӳпе
Шухӑшсен тӗнчине ҫӗкленетӗп.
Асӑмри пӗр чӑваш пикипе
Йӑмрасен айӗнче эп ҫӳретӗп.

Е пит шавлӑ тӑван хулара
Анлӑ Атӑл хӗрне эп тухатӑп,
Сенкер тӗслӗ каҫхи шӑплӑхра
Ҫав хӗрпе шуҫӑмччен калаҫатӑп...

Тунсӑха пусарсам, авар хӗрӗ,
Шӑнкрав пек янракан сассупа.
Юррупа та чуна кӑна кӗрӗн,
Анчах пулмӑп ялан эп санпа.

* * *

Каллех, каллех эп тӑр-пӗччен,
Ҫумра, савниҫӗм, эсӗ ҫук.
Сив уйӑхлӑ каҫхи тӗнче
Асамлӑн йӑлтӑртатнӑ чух,
Шухӑшӑмсем ытла пӑтранчӑк.

Асаилӳ сулхӑнӗнче
Татах тӗл пултӑм та сана,
Вара ҫӳрерӗмӗр ирччен.
Итленӗ май калаҫӑвна
Сывларӑм ассӑн, пит пӑлхантӑм.

Уйрӑлнӑ ҫулӑн юппинче
Пушӑллӑха юратманран,
Ӗмӗтӗмсен пӑлхавӗнче
Ыр килӗшӳ тупайманран
Хама-и айӑплас халь манӑн?

Сана ҫеҫ пӳрнӗ сӑмахсем
Ытла та ҫепӗҫчӗ, пӗлсем.
Анчах та кайрӑн уйрӑлса,
Чуна  шеллевсӗр амантса,
Шӑп ҫавӑнпа ҫухалчӗ канӑҫ.

Ҫӳретӗп урамра пӗччен,
Ҫумра, савниҫӗм, эсӗ ҫук.
Сив уйӑхлӑ каҫхи тӗнче
Асамлӑн йӑлтӑртатнӑ чух,
Тивлетлӗ пуласса шанатӑп.

* * *

Аллу чӗтрерӗ...
Темшӗн эс пӑлхантӑн,
Анчах та пӑрӑнтӑн манран.
Ҫав каҫранпа ҫул хыҫҫӑн ҫул ӑсанчӗ,
Ҫапах та халь те эс асрах.

Эп юрататтӑм,
Эс ҫакна сисеттӗн,
Эппин пит шӑппӑн хурланса
Мӗскершӗн кайрӑн уйрӑлса?
Пӗртен-пӗр ҫутӑ шанчӑка пӗтертӗн.

Телейсӗр эп...
Телейлӗ-ши халь эсӗ?
Ҫулсем иртсен те ман ҫакна пӗлесчӗ...

* * *

Васкаса эс пытантăн сасартăк,
Тӳпери хĕвел пек, йăл! кулса.
Чĕрери туйăма вăйлатса
Шухăшсем, шухăшсем çеç хăвартăн.

Хаклă тусăм, эп питĕ те чирлĕ.
Сăлтавне йăлт чухлатăн аван.
Эх, илтесчĕ:
«Мана эсĕ кирлĕ».
Эх, илтесчĕ:
«Килсем, ан вăтан...»

Ĕмĕтри сăмахсем-чĕкеçсем,
Ĕмĕтри шухăшсем-туйăмсем
Илĕртеççĕ, таçта йыхăраççĕ,
Эсĕ çеç хӳтĕлессе шанаççĕ...

* * *

Юр пĕрчисем — шур чечексем
Хуллен-хуллен вĕлтĕртетсе
Ӳкеççĕ çĕр çине тирпейлĕн.

Уй-хир халь тарăн ыйхăра,
Уй-хир асамлă шăплăхра
Выртать тем кĕтнĕн, пит чиперрĕн.

Унччен ыраш хумханнине,
Ăрша илемлĕн куçнине
Хĕл кунĕнче умра куратăп.

Савнийĕн уçă сассине,
Вăл шăпчăк пек юрланине
Асилӳре пĕччен тăнлатăп...

* * *

Сана пула ман савӑнӑç çухалчӗ,
Ӑна тинех чӗнместӗп йӑлӑнса.
Чӗрем те кайӑк чӗппилле шуйханчӗ —
Пурнать вӑл ирӗке кӑмӑлласа.

Пӗлсем эс, саншӑн паянтан эп ют —
Ырри те, усаллине те йӑлт вӗçленнӗ,
Чееленсе ан тилмӗр тепӗр хут,
Ӗлӗкхилле айваннӑн тек хӗмленмӗп.

Ултав çӑмхин те вӗçӗ пур сӳтсен...
Унпа пӗрле эс çыхланса тӑллантӑн.
Мӗнех эп тӑвӑп юрату сӳнсен,
Ӑна малтан эс кӑшт та хакламарӑн.

Вӗçлентӗр терт, çитет асапланса,
Суя телей кӗленче пек йӑлт ваннӑ.
Чӗрем ман кайӑк чӗппилле шуйханнӑ,
Çунать вӑл ирӗке кӑмӑлласа.

* * *

Сывпуллашар ӳпкелешмесӗр
Юлашки хут çак вырӑнта тӑрса.
Тӗлпулусем татах та пуласса
Кӗтместӗн эсӗ, ӗненместӗн.

Çапах та тав тӑватӑп чунтанах
Ыр самантсем парнеленишӗн,
Ӑс-хакӑла çивӗчлетнишӗн,
Хӑш чух пӗлсе хакланӑшӑн мана.

Чӑрмантармастӑп тек, ал сулӑп:
Пӗр çӑвартан сурмаççӗ ют çынсем.
Чухлатӑп-ха, манран эс кулӑн:
«Хыçран чупатчӗ пӗр айван»,— тесе.

Сывпуллашар, эппин, ӳпкевсӗр,
Йӗкӗлтешмесӗр, кӳренмесӗр.

Тёлпулӑва тек кётмёпёр çунса,
Калаçмӑпӑр пёрне-пёри шанса...

* * *

Хёрпе каччӑн çулёсем
Хӑвӑрт пёрлешсе кайсассӑн,
Мала ӑнтӑлёç вёсем
Çут тивлет патне васкавлӑн.

Ун чухне çён пурнӑç килё,
Сад ешерё васкаса.
Пёр-пёрне ӑнланайсан
Ик пёчченлёх выртса вилё.

Савни пулё — ирхи шуçӑм
Çакӑ аслӑ пурнӑçра.
Ӑна тупё манӑн куçӑм,
Çавӑнпа та вӑл чунра.

* * *

Çын сӑмахне тек нихӑçан итлемёп:
Вӑл саншӑн çывӑх тус пулаймё, тенине.
Савнин ӑраскалне чунтан ёненёп,
Ёненёп унӑн ырӑ, çутӑ ёмётне.

Йёкёлтешсе кулакансем пулнишён
Тен айӑпё манра, пёрле тёлпулманран.
Шӑп çавӑнпа ӑна каçарӑп эп иртнишён,
Каçарӑп «тус» текенсенчен хӑпсан.

Уçланкӑри чечек хёвел ӑшшисёр,
Çёр питёнче упраннӑ нӳрсёр ӳсеймест.
Малашлӑх та паянлӑхӑн хевтисёр
Умри чӑрмавсене тӳрех çёнтереймест.

Пирте çунсассӑн юрату хёвелё,
Эпир те пулӑпӑр санпа телейлё.

* * *

Кётмен инкек пёрре те шеллемесёр
Сан черченкке чунна амантнăран,
Кӳреннёскер, пурнатăн ёненмесёр —
Начаррине кăна умра куран.

Каччăсене ӳпкелесе хурлатăн,
Шанмастăн темшён çирёп туслăха.
Пёчченлёхе кăна эс кăмăллатăн,
Итлес теместён ырă сăмаха.

Сив хёл те шăп çапла: хуçалансассăн,
Çуркуннене кайран парăнатех,—
Хăв шухăшна йăлтах улăштарсассăн,
Чун ыратни, сисетёп, иртетех.

Пёлетён-и, пулсассăн ёненӳ —
Вăйне çухатё хăвăрт кӳренӳ.

* * *

Юратнă ял енне ал султăм,
Вăл юлчё тунсăхлăн хыçра.
Манпа пырсассăн çеç эс, тусăм,
Телейём пулёччё умра.

Тăрса юлаççё питё хăвăрт
Чипер садсем, тăван уйсем...
Анчах чуна паян пит тăвăр:
Эсир ăçта-ши ыр кунсем?

Шăнтса тăрать чуна сив хурлăх:
Савниçём,
Мёншён пăрăнан?
Телей санра!
Санра ман ырлăх!
Эппин, мёскершён çухалан?..

# УЙРĂЛУ

*Ав çав калинкке умĕнче-çке,*
*Тахçан, эп вунулттăра чух,*
*Шур тумлă пике — ĕмĕтриччĕ —*
*Ачашшăн калаăнччĕ: «Çук...»*
*Сергей ЕСЕНИН*

I

Хыçа ăсаннă яш кунсем
Сисмесĕрех ума тухаççĕ.
Чун-чĕрене вара вĕсем
Ытла та пит пăлхантараççĕ.

Асилўри çут сăнарсем,
Мĕн тăвăн-ха?
Пиртен халь тарнă.
Анчах кашниййĕ çывăх, тарăн,
Куллен тăраççĕ илĕртсе...

II

Экзаменсем хыçа ăсанчĕç,
Умра халь пирĕн тĕрлĕ çул.
«Юратнă шкулăмăр, сыв пул!» —
Тесе туссем ыран саланĕç.

Ăçта каяс? Вĕренмелле-и?
Е юлма тивĕ-ши ялтах?
Ача чух тем те ĕмĕтленнĕ,
Пурнăçланаççĕ-ши йăлтах?

Вĕреннĕ чух калатчĕç:
«Çулăр
Шкул хыççăн тĕрлĕ еннелле.
Çĕршывшăн усăллă çын пулăр,
Кирек ăçта пĕрпек тĕллев.

Телей пулмасть хăй тĕллĕн, хăвăрт,
Халь çеç пурнатăр çăтмахра.
Ютра — шăв-шавлă хулара —
Малтанласа чуна пит тăвăр.

Унта çук сирĕн аçăр-аннĕр,
Апачĕ пăсланса лармасть.
Йывăрлăхра хăть эс ларса йĕр,
Сан нушуна никам курмасть...»

Вĕрентекен ăс панине
Тăнланă та шута хуман-ха.
Çăмăлттайла çеç шухăшланă,
Ăнтăлнă ĕмĕт тĕнчине.

Эпир яш чух кашни — романтик,
Пире ун хĕмĕ илĕртет:
Пĕр вырăнта нихçан та ан тăр,
Васкас пулать, чĕнет — инçет...

Эп шухăша кайса утаттăм,
Хĕре тĕл пултăм ăнсăртран.
Ăна курнишĕн хаваслантăм,
Чĕремçĕм тапрĕ хăвăртрах.

Вăтаннă май, хăю çитертĕм:
«Ăçта каян?» — тесе ыйтма.
Манпа вăл лăпкăн çеç пуплерĕ:
«Кăшт вăхăт пур-ха халĕ ман.

Сывпуллашу касне пыратăп,
Унччен пуласшăн-ха ялта».
Чĕнместĕп эп.
Вăл ак ыйтать:
«Тĕттĕмленсен шкулта пулатна?»

«Çапла»,— теп, пит хĕрелнĕ хамăн,
Çакна сисетĕп-ха аван.
Ал-урана йăлтах тăлланăн,
Тапранаймастăп вырăнтан.

Сăмах ваклас, чĕлхем çыхланчĕ,
Пăхма хăймарăм куçĕнчен.
«Касчен»,— теп,
Чун епле пăлханчĕ!..
Явапĕ пулчĕ ун:
«Касчен».

Ун çиййӗнче кӑвак кӗпеччӗ —
Тӳпен пӗр пайӑрки пекех.
Ун чух вӑл шӑп вунçиччӗреччӗ,
Эп хам та аслӑрах кӑшт çех.

Ял вӗçӗнче вӑл час çухалчӗ,
Тӳпе вӑрларӗ пек ӑна.
Шух чун унпа пуласшӑнах,
Шуйханчӑк кайӑк пек, çуйланчӗ.

Канӑçӑма çӗтсессӗн хӑвӑрт,
Хӗр акӑш пек утса кайсан,
Шыв сыпнӑ пек эп тӑтӑм шӑпӑрт
Хама вӑрçса та тарӑхса:

«Мӗскершӗн-ха пит вӑтанатӑп
Ӑна курсассӑн яланах?
Айван ача пек курӑнатӑп,
Хӑюлланма пӗлмеп пачах.

Юлташӑмсем унпа ялан
Пуплеççӗ-çке ним вӑтанмасӑр.
Вӑл пуринпе те сӑмахлать
Хӑйне нихçан мӑна хумасӑр...»

Эп тӑтӑм шухӑша путса,
Ӗмӗтленсе те, пӑлханса.
Умра мӗн пуррине курмасӑр,
Тавралӑх илемне туймасӑр.

Пике сӑнарӗ тыткӑнларӗ,
Чуна хӗстерчӗ, ыраттарчӗ.
Вӑл кӗчӗ ӗмӗт тӗнчине,
Вара илӗртрӗ хӑй патне.

Шухӑшӑмсем умра çуталчӗç,
Шупкалансассӑнах çухалчӗç.
Е хӑлхара шӑнкрав пек сас
Янрарӗ уççӑн, хӑратса...

### III

Сывпуллашма пуçтарăнсассăн
Пĕрле вун çул вĕреннисем,
«Шкул вальсĕ» кĕвĕ янрасассăн
Хурланчĕç пирĕн чĕресем.

Янрарĕ юрă хыççăн юрă,
Туссем ташларĕç савăнса.
Умра хĕр пит-куçне çеç куртăм
Хавхаланса, пăшăрханса.

Кăвак куççем епле пăхатчĕç
Чун-чĕрере вут-хĕм чĕртсе.
Вĕсем асамлăх сапалатчĕç
Шкулти зала илем кӳрсе.

Тӳле *мĕскер?*
Вăл танлашаймĕ
Çак куççемпе нихçан, юлташ.
«Юлашки хут-ши?..
Тек кураймăп...» —
Çак шухăш хăратать татах.

Сап-сарă çӳçĕ, шукăль тумĕ,
Чăнах, вăл — юмахри пике.
Унпа ташлас килет-çке сумлăн,
Анчах... çитме çук çав чикке.

Урасене йăлт çыхса лартнăн,
Тăратăп айккинче пĕччен.
"Мĕскершĕн эпĕ пит вăтанчăк,
Ма *именетĕп сар хĕртен?..*"

(Мĕскершĕн-ши?
Çакна паян та
Тĕшмĕртейместĕп пĕтĕмпех.
Сăлтавĕ — хыт юратнăран-тăр,
Вăл курăннă пирĕшти пек.

Класра, урок итленĕ май,
Куççем ун еннелле пăхатчĕç.

Магнит пек, хӑй патне туртма,
Ма пытарас?
Вӑл пултаратчӗ.

Хӑш чух манпа хӗр калаҫсассӑн
Эп вӗҫнӗ ҫӳллӗ тӳпере.
Шкултан тухсан сывланӑ ассӑн,
Унпа ҫӳренӗ ӗмӗтре.

Пушхирсенче иртен-ҫӳреншӗн
Шыв хаклӑ, теҫҫӗ, ылтӑнран.
Чунтан юратакан ҫынсемшӗн
Савни темрен те ҫывӑхрах.

Ӑна пӗрре куҫран пӑхсан та
Ҫар ҫу пекех эс ирӗлен.
Сӑну-питӳ сисмесӗр санӑн,
Хӑмач пусма пек, хӗрелет.

Тыткӑнлакан илемӗпе
Сана хӗр йӑлт суккӑрлатсассӑн,
Вара сисмесӗрех пуҫлатӑн
Хӑвна туйма тӗлӗкри пек.

Пуҫтахланма-и?
Ҫук ҫав хал.
Хӑюлӑху ҫухалӗ хӑвӑрт.
Чунри чи вӑрттӑн сӑмаха
Уҫса параймӑн,
Тӑрӑн шӑпӑрт.

Хӗре пула чун варланман ман,
Тасалӑха уянӑ шав.
Антив,
Унпа пӗрле утман эп,
Ҫапах калап:
«Пуриншӗн тав!

Тавах хитре ҫут ӗмӗтсемшӗн,
Яш чухнехи ӗлккен кунсемшӗн,
Куллен кӳнишӗн ҫӗн хавал.
Ыр самантсем иртмен ахаль...»)

Каярахпа пуху пуçланчĕ.
Директор лăпкăн калаçать.
*Чун-чĕререн тухан саламĕ*
Кашнийĕшнех хавхалатать.

Вĕрентекенсемпе пит сумлăн
Лараççĕ ашшĕ-амăшсем.
*Юнашарах, ав, çума-çуммăн*
Вырнаçнă ывăл-хĕрĕсем.

Кĕç янăрать ят хыççăн ят.
Яшсем илеççĕ аттестат.
*Çиçет сăн-питсенче мăнаçлăх,*
Хумханнăран кашни хаваслă.

Çак самантра епле тав тумăн
Хăвна ăс панă çынсене?
*Пире пула вĕсен ят-сумĕ*
Ан тĕксĕмлентĕр çулленех.

Шел, урăхла та пулкалать:
Тепри таса ятне ярать.
*Çавах та палăртасшăн эпĕ:*
Чылайăшĕн ўсет хисепĕ.

Шанатăп:
Пирĕн хушăран та
Кĕç тухаççех маттур çынсем.
Юратнă шкул та ял мухтанĕ
Вĕсен ятне аса илсе.

Пуху вĕçленчĕ те, каллех
Янрарĕ кĕвĕ хыççăн кĕвĕ.
Мĕн калăн?
Çак каçа пит кĕтнĕ,
Анчах вăл вĕçленет кĕçех.

Çуталнăçемĕн шурăмпуçĕ
Васкарăмăр вăрман енне.
Саланчĕç юрăсем пит уççăн
Тĕлĕрекен уй-хир çине.

Часах хĕвелĕ шăппăн тухрĕ
Пин-пин ялтра хĕлхем тăкса.
Тĕтре шур юр пек, куçрĕ, юхрĕ,
Тавралăха сапаланса.

Вăрман тӳлеккĕн, тараватлăн
Пире пуçтарчĕ ытамне.
Пуçларĕç шăпчăксем хавассăн
Хăйсен илемлĕ концертне.

Кăвайт чĕртсен татах та уççăн
Янрарĕç савăк юрăсем.
Унка тăрсассăн çума-çуммăн,
Ташларăмăр пĕрле тусем.

Тинех пиртен ачалăх кайрĕ,
Вĕсемпеле шкулти кунсем.
Кашни хăй ăшĕнче шутларĕ:
«Эпир те халь ак мăн çынсем...»

### IV

Çĕршывăн аслă çулĕсем
Пире нумай çĕре чĕнетчĕç.
Куллен-кунах пит илĕртетчĕç
Хальччен курман çĕн вырăнсем.

Шкулта чухне чылай вулані,
Кино та курнă тăтăшах.
Туссемпеле хăш чух тавлашнă
Çав вырăнсем пирки пайтах.

Инçе çула тухса курман.
Ял ачисен, тен, тавракурăм,
Çавна пула-ши, пысăк мар?
Хуларисен — умра, ав, пурте.

Чим, улталатăп-ха, юлташăм,
Çитсеччĕ «Спутник» хулана.
Химкомбинат ĕçне хастаррăн
Хутшăннăччĕ кăмăлтанах.

Кунта «Ударлă стройка» тетчĕç
Хаçат çинче çыракансем.
Çак вырăнта шкул ачисем
Аслисемпе пĕрле ĕçлетчĕç.

Эпир те пулнăччĕ унта.
Палатăллă хуламăрта
Пурнаттăмăр хаваслăн, туслăн.
Ютра пулсан та, çукччĕ тунсăх.

Тем-тĕрлĕ халăх ывăл-хĕрĕ
Ĕçе утаттăмăр ирех.
Шкул пĕтерсен кашнин çул-йĕрĕ
Пулать-ха тенĕ хитререх.

Çав «Спутник» тенĕ ят çук урăх,
«Çĕн Шупашкар» хули вăл халь.
Кунта чылай хитре ял пурччĕ,
Саваттăм эп çак тăрăха.

Йĕри-тавра тӳремлĕ хирччĕ,
Çеремлĕ, лăпкă вырăнсем.
Анчах машина сассисем
Çав шăплăха часах, ак, сирчĕç.

Кирлех-ши пулнă тетпĕр халĕ
Йăлт аркатмашкăн ялсене?
Çирĕплетсе çакна кам калĕ,
Пĕлме пулать-ши тупсăмне?..

Палатăллă хуламăрта та,
Шăв-шавлă аслă стройкăра
Чипер хĕре — ăна кураттăм,
Ĕçлеттĕмĕр юнашарах.

Тен, çавăн чух пĕрремĕш хут
Хĕрӳллĕ чунăм çулăмланчĕ.
Умра ялкăшрĕ те вут-хĕм,
Канăçăма йăлтах мантарчĕ.

Ма пытарас? Эпир çынна
Сăнатпăр пур енчен тĕпчевлĕн:

Ун кăмăлĕ начар е евĕк,
*Хăйне хумасть-и шав мăнна?*

Ĕçре епле вăл тыткалать,
Тус-тантăшне ура хумасть-и,
Таса чысне вараламасть-и,
Куллен кама сума сăвать?

Хăш чух çапла шыратпăр кăлтăк
Çын пурнăçне сăнанă май.
Тупсассăнах пĕр пĕчĕк шăйрăк,
Пуçлатпăр сиввĕн калаçма:

«Çав хĕр çапла та, ку — апла-ха»,—
Тиркевлĕн каччăсем сăнлаççĕ.
Çын сăмахне илтсе, паллах,
Хаклаймăн савнине пачах.

Чиперскере хурланине
Итмен эп ун чухне пĕрре те.
Тус-тантăшсем, çакна сисеттĕм,
Хĕре пит килĕштернине.

Çаран çинче ÿсен чечек
Ытла ачаш, ытла чечен.
Ăна курсассăн савăнатпăр,
Çĕр илемне унра куратпăр.

Çÿл тÿпери ĕçчен хĕвел,
Ăшши епле кĕрет хĕве.
Вăл пулнăран пит хĕпĕртетпĕр,
Çут тĕллеве хыт ĕненетпĕр.

Çĕртен тапса тухан çăлкуçĕн
Чĕр кĕмĕлĕ чунна йăлт уçĕ.
Ир-каç шăнкăртатса юхать,
Унра *пур иксĕлми хăват.*

Вĕтлĕхсенче пытаннă шăпчăк,
Юрри-кĕвви епле хитре.
Ăна илтсесĕнех эс шăп тăр,
Унпа лăпланĕ шух чĕре.

Хитре чечекӗ — хӗр сӑн-пичӗ,
Каччӑсене пит илӗртет.
Ӗҫчен хӗвел хӗрӳ-ҫке питӗ,
Вӑл савнине асилтерет.

Ҫӑлкуҫ шӑнкӑртатса юхать те,
Ун кулли евӗр илтӗнет.
Е шӑпчӑк савӑнса юрлать те:
«Ман сас ҫав хӗр сасси пек»,— тет.

Чӑваш сӑпайлӑхӗпе ҫынлӑх
Ӗҫченлӗн упранать унра.
Шӑп ҫавӑнпа мана хӗр сывӑх,
Хакли те вӑл ҫеҫ пурнӑҫра.

V

Каласҫӗ:
Иртнӗ кун ҫути
Нихҫан та каялла килеймӗ.
Анчах сар хӗр кулли, утти
Асилӳре ытла илемлӗ.

Шухӑшӑмра — эп ҫамрӑк, харсӑр,
Шухӑшӑмра — вӑл ҫеҫ умра.
Ҫӳретӗп унпа ҫеҫ хавассӑн
Таҫти-таҫти кӑваклӑхра.

Ҫапах та пит тӗлӗнмелле:
Мӗскершӗн яшлӑх илӗртӳллӗ?
Тахҫан илӗртнӗ чӑн илем
Тӗксӗмленмест ҫулсем иртӳҫӗн?

Мӗн-ма ҫухалнӑ сӑнарсем
Куллен-кун кӑсӑклантараҫҫӗ?
Мӗскершӗн хӑш чухне вӗсем
Чун-чӗрене ыраттараҫҫӗ?

Тӑнлав ҫине шур юр ӳксен те,
Асран каймаҫҫӗ ҫав кунсем.
Ӗмӗтсенче те, тӗлӗкре те
Чӗнеҫҫӗ хӑй патнех вӗсем.

Эппин илемлĕ самантсем
Йăлт çухалман явапсăр, сассăр.
Ир-каç тăраççĕ илĕртсе,
Çавна пула сывлатăн ассăн.

Шух çамрăклăх!
Çунатсăр, чăрсăр,
Унра виçесĕр вăй, илем.
Хăш чух чарусăр та е чăркăш,
Е сапалать хĕрӳ хĕлхем.

Сӳнмест иккен хĕвел-кăварĕ,
Чуна пĕрмай вăл ăшăтать.
Тен, çавăнпа пике сăнарĕ
Хуллен ман куç умне тухать.

...Шкулта, вăтанчăк пулнăран,
Унпа сăмах хушма хăраттăм.
Ăна сăнанăçем ялан,
Айван ача пек, савăнаттăм.

Куç пăвакан çын шухăшне
Уçма пĕлет хирĕçлесен те.
Тен, хĕр ман чун ыратăвне
Сейсмограф пек йăлтах сисетчĕ.

Туятчĕ пуль эп çуннине,
Туятчĕ пуль куç хывнине.
Анчах мана асăрхамастчĕ,
Ним тĕшмĕртмен пек пурăнатчĕ.

Паян та, ак, аса илетĕп
Тус-юлташсем каланине.
Вĕсем:
«Чăтма пит йывăр»,— тетчĕç,—
Çак хĕр пит тӳррĕн пăхнине».

Ĕненекеншĕн — çывăх Турă,
Вăл хăйне евĕр талисман.
Çут тĕнчере хакли çук урăх,
Ăна çеç пуççапать ялан.

Пике те Турă Амăш евĕр,
Шав илĕртнĕ пĕр хăй патне.
Ачаш сăмахăм пулнă евĕк,
Анчах илтмен вăл вĕсене.

## VI

Хăш чух эп шухăша путатăп
Çамрăксене сăнанă май.
Яш кунăмсем тухсан ума
Хамăннипе танлаштаратăп.

Мĕнре-ши уйрăмлăхĕ пирĕн,
Тслей пуçламăшĕ мĕнре?
Юратăвĕ çут тĕнчере
Хальхи яшсен, тен, питĕ çирĕп?

Тен, пулнă пирĕн пысăк тивĕç,
Кун-çулăмăр урăхларах?
Ма пытарас?
Кашни активнĕ
Терт-нушине мĕн ачаран.

Çавна пула сăпайлăх, çынлăх
Ман ўсĕмри çынсен чунра.
Аван туятпăр:
Мĕн вăл çынлăх,
Аван чухлатпăр: мĕн — хура.

Хальхи яшсем, тен, ăслă, паттăр,
Эпир, тен, пулнă айванрах?
Чĕрре кĕрес шут çук:
Ку — паллă —
Пуласлăх — çамрăк ăрура.

Çăмăлттайла тытакана:
«Стиляга эс»,— тесе тиркенĕ.
Пустуй пакăлтатакана —
Пуш-пушă параппанçă, тенĕ.

Хальхи пек тĕрлĕ ташăсем
Эпир пĕлмен — кирлех пулман.

Уйӑрнӑ намӑс-симӗсе —
Катемпилле хӑлаҫланман.

Енчен те, хӗр ҫине пӑхсан,
Вӑтаннӑран чӗлхе ҫыхланнӑ.
Вӗсен чысне эпир сыхланӑ,
Пули-пулми пакӑлтатман.

Халь, ак, сӑна-ха, хаклӑ тусӑм,
Пӑтрашӑнать тӗнче епле.
Тупайӑр-ши, яшсем, тивлет,
Пурах-ши сирӗн сисӗм-туйӑм?

Ӑна эсир камра куратӑр,
Хаклатӑр-и тасалӑха?
Тен, хӑвӑра ҫеҫ юрататӑр,
Кун-ҫулӑр, тен, иртет ахаль?

Ман ӳсӗмри яшсен кашниййӗн
Ҫунатлӑ пулнӑ идеал.
Вӑл халь те — хӑйне евӗр никӗс,
Куллет парать пире вӑй-хал.

Чӗнсессӗн комсомол,
Йышпа васканӑ
Казахстана ҫерем уҫма.
Ват ҫынсене тӑнланӑ май,
Пуласлӑха хӗрӳллӗн шаннӑ.

Эпир юратупа хӗмленнӗ
Сӑпайлӑха мала хурса.
Умра чӑрмавлӑх тӗл пулсан,
Ӑна тус-йышпала ҫӗнтернӗ.

Илемлӗ сӑншӑн кӑна мар
Сар хӗрсемпе эпир калаҫнӑ.
Ӗҫчен-и-ха вӗсем, хастар?
Чи малтанах ҫакна сӑнанӑ.

Ял хушшинче епле ят-сумӗ,
Ҫӑмӑлттай мар-и пурнӑҫра?

Типтерлĕ-и çипуçĕ, тумĕ,
Çемçе-и чунĕ е кăра?

Шур лĕпĕше пăхма хитре-ха,
Вĕлтĕртетсе умра вĕçет.
Анчах та эс ăна тĕпче-ха:
Вăл çынсене сиен кӳрет.

Ма пытарас?
Хăш чух çапла
Суя чиперлĕхе саватпăр.
Чухăнлатса ăс-хакăла
Ăна сăлтавсăр пуççапатпăр.

Кайран,
«Илем» хакне туйсан,
Тăна кĕрсессĕн, мăртăхса
Çав пикене хытах вăрçатпăр,
Тем тĕрлĕ ят парса хурлатпăр.

Тен, пит улталлă пирĕн туйăм,
Çакна та, тен, палăртмалла?
Анчах та систересшĕн, тусăм,
Юратăва сан тупмаллах!..

### VII

Хĕр юнашар ялта пурнатчĕ,
Çӳретчĕ ирсерен шкула.
Вĕренӳре вăл пултаратчĕ,
Мала хуратчĕ ăс-хала.

Алла илсессĕн аттестат,
Кашниййĕн ĕмĕт-шухăш тĕрлĕ:
Пĕриваскать института,
Теприн — техникума çул-йĕрĕ.

Енчен те ĕç ăнăçмасан —
Яла пырса кĕмешкĕн намăс.
Экзамена аван тытсан
Мăнаçланать-çке кирек кам та.

Эппин кёркуннечен татах
Ăс пухмалла çине тăрсах.
Çу кунĕсем ан иртчĕр кăлăх,
Ӳркев сана ан пустăр кăшт та.

Кун хыççăн кун хыçа ăсанчĕ,
Кĕтеттĕм тĕлпулу каçне.
Шанаттăм эп — хăюсăр каччă,
Хĕре часах курассине.

Хĕвел сăрта анса ларсассăн
Васкарăм эп вĕсен ялне.
Пĕр ĕмĕт çеç:
Ăна курасчĕ,
Итлесчĕ ун калаçăвне.

Пĕр ĕмĕт çеç:
Чун пăлхавне
Епле пулсан та пусарасчĕ.
Пĕлесчĕ хĕрĕн кăмăлне,
Унпа тӳлеккĕн сăмахласчĕ.

Пĕр ĕмĕт çеç:
Чун пушарне
Часрах, часрах хĕр йăлт сӳнтертĕр!
Куллен-кунах хыт шаннине
Ăнлантăр та мана ĕнентĕр!..

Часах тĕл пултăм эп ăна,
Чунри ыр туйăма пĕлтертĕм.
Итленĕ хыççăн вăл пуплерĕ:
«Ан кӳренсем...
Тăнла мана.

Сана эп хисеплетĕп-ха...
Эс пуçтах мар, илемлĕ йĕкĕт.
Чунна ан çунтарсам ахаль...
Урăххипе ман çулăм-йĕрĕм.

Савниййĕм пур, ăна саватăп,
Унпа пуласчĕ яланах.

Шăпа пĕрле утма хушман-тăр,
Санпа халь ман уйрăлмалла...»

Вăтанчăкскер, эп уншăн çуннă
Пĕр тĕмсĕлсе те, тĕлкĕшсе.
Таçта та чĕннĕ ĕмĕтсем.
Анчах вĕсем... йăлт кăлăх пулнă.

Илемлĕ кĕвĕ хыççăн хĕлĕх
Кĕтмен çĕртен татăлнă пек,
Чĕре тапмарĕ ыррăн тек,
Тен, куртăм эп хăрушă тĕлĕк?..

Çук! Çук!
Хĕр ман умрах тăрать-ха,
Ачашшăн, лăпкăн калаçать.
Хурлăхăма йăлт ăнлантать-тĕр,
Анчах та... уйрăлмаваскать.

Кĕтмен çĕртен арканчĕç хăвăрт
Чуна йăпатнă ĕмĕтсем.
Таса тӳпе те халь хăп-хăмăр,
Сип-сивĕ пек çу кунĕсем.

Епле вăл хӳхĕмччĕ, хитреччĕ
Йăмра çумне тайăннăскер.
Хĕр маншăн çывăхчĕ, инçеччĕ,
Сăмахĕ хурлăччĕ: «Вĕçлер... »

### VIII

Çул хыççăн çул хыçа ăсанчĕ,
Куç умĕнче шкул кунĕсем.
Юратнă хĕр...Телейĕм...Шанчăк...
Пĕрмай асилӳре вĕсем.

Кампа кăна эп тĕл пулман-тăр
Хуласенче е ялсенче?..
Шăпа пилленĕ çул çинче
Пулас килместчĕ сапаланчăк.

Çĕршыв хушсан салтак та пултăм
*Аттесемпе пиччесем пек.*
Мĕн пўрнине шырарăм, тупрăм,
Лăплантарса чуна ĕçпе...

Каллех тăван ялта çўретĕп,
Аса илетĕп иртнине.
Ĕмĕтĕмри хĕре кĕтетĕп,
Умра куратăп ун сăнне.

Пĕр шухăш явăнать пуçра,
Пĕрле тăрса тепре пуплесчĕ:
Телейлĕ-ши вăл пурнăçра,
*Паян хăть халь çакна пĕлесчĕ.*

Ял хĕрринчи юратнă шкул
Чĕнет:
«Ывăлăм, кĕрсе кур.
Ĕлĕкхиллех янрать шăнкравăм,
Тăхтав пулсан тăрать шăв-шав çеç».

Иртетĕп ун çывăхĕнчен,
Умри сукмакăма сăнатăп.
Ман асăмри хĕр ирсерен
Шкула çак çулпала утатчĕ.

Ун çиййĕнче кăвак кĕпеччĕ,
Тўпен пĕр пайăрки пекех.
Ун чух вăл щăп вунçиччĕреччĕ,
Эп хам та аслăрах кăшт çех.

Çулсем чарусăр шунăран
Çамрăклăха аса илетĕп.
Паян та, ак, ăнах чĕнетĕп,
Уйрăлу каçĕ ман умрах.

Епле вăл хўхĕмччĕ, хитреччĕ
*Йăмра çумне тайăннăскер.*
Хĕр чуншăн çывăхчĕ, инçеччĕ,
Сăмахĕ хурлăччĕ:
«Вĕçлер...»

Шăпа пире хăш чух шеллевсĕр
Питрен çупать, такăнтарать.
Юлсассăн та пĕччен, тĕрексĕр,
Кĕтетпĕр:
Çут тивлет пулать...

Халь ĕнтĕ яш кунсем çухалнă,
Асилӳре кăна вĕсем:
«Тахçан эпир хĕрӳн юратнă,
Пире те савнă-тăр хĕрсем...»*

Çак шухăшпа эп лăпланатăп,
Васкатăп юлташсем патне.
Сăнанă май çĕн çуртсене
Ял улшăннишĕн савăнатăп...

---

**Сергей Есенинăн «Анна Снегина» поэма йĕркисем.* 

## КУН-ÇУЛ ЫТАМĔНЧЕ

(Сонет кăшăлĕ)

*Кам ирĕкшĕн, кун-çулшăнкĕрешет,*
*Çав çеç этем ятне илтмешкĕн тивĕç!*
*И.Гете, Фауст.*

**I**

Этемĕн вăрăм мар пурнас кун-çулĕ:
Пĕри йăсăрланать ĕмĕрĕпе,
Тепри çунса тăрать вут-чĕрипе,
Чĕртет тус-йышĕнче хĕрӳллĕ çулăм.

Кĕмĕлленсе, йăлтăртатса çап-çуттăн
Кунсем килсе тăраççĕ черетпе.
Куçа йăмăхтараççĕ илемпе,
Тĕллевлĕрех çеç пултăр, тенĕн, утăм.

Хăш чух сан сукмакна тĕтрелĕх хуплĕ,
Ши! шăхăрса сив çил хăратĕ, улĕ.
Çапах шанан: çитет шăпа пӳрни.

Телей, çут çăлтăр пек, чĕнет ир-каçăн,
Ун патнелле эс яланахваскатăн —
Хавал парса тăрать ĕмĕтленни.

**II**

Хавал парса тăрать ĕмĕтленни
Тăван ене çур кунĕ тĕрĕсленĕн.
Хутран-ситрен сивлек кунсем çитсен те,
Пахчаçăна хăратмĕ тăм ӳкни.

Çавах садсем шур чатăрпа пĕркенĕç,
Çут сăнлăх кĕртĕ урама кашни.
Пуян-çке çутçанталăкăн парни —
Пин-пин чечек çаран çинче хĕмленĕ.

Ун чух, тавралăх симĕс тум уртсассăн,
Савниçĕм, çӳрĕпĕр пĕрле хавассăн,
Çуталĕ куллупа вăрман ĕшни.

Кашни тĕме, йывăççене ачашшăн
Тин курнă евĕр сăнăпăр, анчах та
Самантсерен, ав, илĕртет çĕнни.

### III

Самантсерен, ав, илёртет ҫённи:
Япаласен пуҫламăшĕ — вĕҫлевĕ,
Вак-тĕвекрен пуҫтараннă ҫĕклемĕ,
Аталанса, калăпланса пыни.

Вĕсен ылмашăвĕ вăя куҫни,
Пĕр хăйсене тивĕҫтерен тĕллевĕ
Тӳсĕмлĕхре ҫунса, йăл-ял кĕрлевлĕн
Чăрмавлăха сирни е сивлени...

Этемшĕн те ҫаплах, сӳнми ăс-хакăл
Кирек хăҫан ăна мала чĕнет,
Ҫул-йĕр пулсан та сакăлталлă, чуллă.

Халсăрлансан та пурнăҫ пурпĕр хаклă,
Вăл илĕртет, мала кайма хистет,
Ăна кашниййĕнех туясшăн чунĕ.

### IV

Ăна кашниййĕнех туясшăн чунĕ
Чĕрри — чĕрĕллĕхе кăна савать.
Кун-ҫулăн вĕҫĕнче, пĕтсен хăват,
Элчел ҫитсен пăлханмĕ ҫыннăн юнĕ.

Асамлă та ĕлккен малашлăх кунĕ
Ҫывхарнă май ҫăтмах пек курăнать,
Кĕҫ-вĕҫ пурнăҫланассăн туйăнать,
Харкам унта пулса курасшăн ҫунĕ.

Е пĕр-пĕр дилетант, тăрăшнăран,
Ҫут тĕллеве шав кăткăслатĕ, пӳлĕ,
Ăна пула, тен, вăрахланĕ утăм.

Ҫапах та куллен-кун ӳсет ыр туртăм,
Ăна сисетĕн те пĕлсех тăран:
Утас ҫул-йĕр ансат е хирĕҫӳллĕ.

## V

Утас çул-йĕр ансат е хирĕçӳллĕ:
Тĕл пулĕ сулнăк, ӳкĕ хăш-пĕри,
Çут ĕмĕт хыççăн ăнтăлĕ тепри,
Кун-çулĕ кĕвĕ пек ун, çĕкленӳллĕ.

Çав çын пекех пуласчĕ, тетĕн, ӳлĕм.
Чунна çĕклентерсен кун-çул юрри
Пулас килмест-çке сан элчел чури
Ирпе те, кăнтăрла та е каçкӳлĕм!

Эппин йыхравлă сасă, чан пек, уççăн
Мала утма хистетĕр — тин çул уçă —
Кăткăслансассăн та шанса тăни.

Чăрмав вĕçлентĕр те, ырри çĕклентĕр,
Çапах саккун пек юлтăр, никĕслентĕр
Хăйевĕрлĕ ăс-тăн иксĕлменни.

## VI

Хăйевĕрлĕ ăс-тăн иксĕлменни
Пит кирлĕ сивĕре те, ăшăра та.
Романтик пек, вара малта пыратăн,
Хыçа тăрса юлать сӳрĕкленни.

Кĕрещӳре ырри уçămланни
Сăх тăшмана чĕтретĕ те хăратĕ.
Вăл тин тăваймĕ шурăран хура тĕс,
Суя хакне хавшатнăран çĕнни.

Хавхалансам эппин: этем хавалĕ,
Мăнаçлăхĕ, нихçан чакман ăс-халĕ,
Хастарлăхĕ виçесĕр сарăлни

Илĕртекен çут кунсенче те пулĕ.
Çапах та халĕ те, кайран та юлĕ
Пĕлӳлĕхе ялан тĕпе хуни.

## VII

Пĕлӳлĕхе ялан тĕпе хуни
Сив космос таранах çынна çитерчĕ.
Этем тата мĕне кăна çĕнтермĕ,
Ку çеç-и пулĕ-ха тăвас тени?

Шух ĕмĕтсен чикки аслăланни
Ăна пĕрмай хĕрӳллĕн хĕмлентерĕ.
Пурнăçланан кĕтречĕ тĕлĕнтерĕ,
Ют пулĕ уншăн пуш сăмах çапни.

Вара пĕрлешнĕ вăйпала тăванлăх
Халсăррине çĕклет, парать хавал.
Çын çул-йĕрне пӳлмест терт-хĕнĕн чулĕ.

Чылай-çке йăнăшнă этем авал...
Кирек хăçан та пурĕпĕр пĕртанлăх
Ыр туртăмпа пĕрле тĕллевлĕн юлĕ.

## VIII

Ыр туртăмпа пĕрле тĕллевлĕн юлĕ
Усаллăха çĕнме чĕнен йыхрав.
Улшăнакан хĕрӳ саманара
Сасси кунран-кунах ун пит чĕнӳллĕ.

Пулсассăн та ик енĕ хирĕçӳллĕ
*Пурăнăçра тараймăн чăнлăхран.*
Тӳр кăмăллă этем туять, курать:
Чăн тĕрĕслĕх çеç ĕмĕр çĕнтерӳллĕ.

Ним курман пек тăмасть вăл айккинче:
Малта историн тертлĕ çулĕ, чапĕ,
*Пĕтинччĕ, тет, часрах çынсен асапĕ.*

Этем кĕрешĕ яланах телейшĕн
Паянхисемшĕн те ыранхисемшĕн
Ылмашăнса куçан çĕн кунсенче.

### IX

Ылмашӑнса куҫан ҫӗн кунсенче
Хавасланатпӑр е пит кулянатпӑр.
Хӑпартланатпӑр, кӑмӑла хуҫатпӑр
Пулсассӑнах эфир тыткӑнӗнче.

Эпир ҫӗн хыпарсем итленӗҫем
Тем тӗрлӗ тӗрӗсмарлӑх асӑрхатпӑр.
Ҫавна пула чунтан пӑшӑрханатпӑр,
Шутлатпӑр: пӗтчӗр кулленех вӗсем.

Ҫут тӗнчере ахӑлтатса хавассӑн
Пиншер ача телейлӗн выляймасть.
Нумайӑшсемшӗн ют-ха савнӑҫ, танлӑх.

Вӑйсӑрлӑха туйса сывлатӑп ассӑн...
Ҫапла пулин те шанӑҫ ҫухалмасть:
Илемлӗрех пулать тӗнче, малашлӑх.

### X

Илемлӗрех пулать тӗнче, малашлӑх
Халь куншӑн эс те, эп те кӗрешсен.
Пуласлӑхшӑн хӑюллӑн ҫӗкленсен,
Пӗр-пӗринпе пулсассӑн пӗр канашлӑ.

Ӗмӗтленни, паллах, ҫитет, тавралӑх
Ырӑланать таҫта та ҫулсерен.
Ӗҫсем калӑпланса шав ӳснӗрен,
Хӑюлланма пуҫланӑран пур халӑх.

Хӑй пулнӑран Ҫӗр чӑмӑрӗн хуҫи,
Йӗри-таври ун ҫулӗ анлӑ, уҫӑ.
Ҫунатлӑ ӑсӗ хӗвелпе танлашӗ.

Кирек епле ӗҫре вӑл пултаруҫӑ,
Эппин хӑйӗнче ҫеҫ телей уҫҫи.
Ҫынсем пӗр ҫемьери пек тӑванлашчӑр.

## XI

Çынсем пĕр çемьери пек тăванлашчăр,
Телей ялтравĕ çиçтĕр питсенче.
Кашнийĕнех кун-çул ытамĕнче
Татах та чаплăлантăр çут малашĕ.

Вара вăрçăпала этем тавлашмĕ,
Паянхи пек юн юхмĕ çĕр çинче.
Хĕвел шевлиллĕ тăнăç кунсенче
Ултавлăхпа çут чăнлăх тек хаклашмĕç.

Анчах нихçан та пурнăçра тап-такăр
Çул-йĕр чăрмавсăр, тертсĕр хывăнмасть.
Тĕллев хăй тĕллĕн пурнăçа кĕмест-тĕр.

Хăй тĕллĕнех хĕвеллĕ çутă тапхăр
Вăй-хал хумасăрах аталанмасть.
Эппин шух ĕмĕт чăнлăхпа пĕрлештĕр.

## XII

Эппин шух ĕмĕт чăнлăхпа пĕрлештĕр,
Йăл-ял вут-çиçĕм пек хăвачĕпе,
Йыхравлă, илĕртен чĕнĕвĕпе
Ăс-хакăла пĕр вĕçĕм çирĕплеттĕр.

Этем пĕлтерĕшĕ çӳле çĕклентĕр
Кĕрлен саманара хĕрӳ ĕçпе,
Хăйне тивĕçтерен ӳсĕмĕпе
Çĕр сăн-питне татах та чечеклетĕр.

Шав илĕртнишĕн тăнăçлăх-тĕреклĕх
Чун нишлĕхне сивленĕ ĕлĕкрен вăл,
Кун-çулĕнче ăна курайманран.

Ан тив, ăс-тăн малашлăхĕ çĕнтертĕр.
Ирĕклĕхе, мире юратнăран
Пуласлăхшăн вăл пĕрмаях кĕрештĕр.

## XIII

Пуласлăхшăн вăл пĕрмаях кĕрештĕр,
Сÿрĕклĕхе сивлетĕр яланах.
Пурнан кунăмăрта сана, мана
Ырра савма, терте çĕнме вĕрентгĕр.

Çулсем иртсе пыраççĕ пĕр черетĕн,
Тăнăçлăха илентĕр самана.
Сыхласчĕ куç шăрçи пекех ăна,
Çĕн сывлăшпа çеç варкăштăр кĕретлĕх.

Çынра вăй илтĕр ырă шухăш-кăмăл,
Унпа хăйне-хăй туйтăр харсăр, çăмăл.
Çакна вăл кĕтнĕ тĕмсĕлсе темччен.

Шăп çавăнпа тинех ун уçă куçĕ,
Шăп çавăнпа калать хĕрÿллĕн, уççăн:
«Хĕвеллĕ пултăр пурнăç çĕр çинче!»

## XIV

Хĕвеллĕ пултăр пурнăç çĕр çинче,
Тăванлăх, туслăх пур çĕрте çĕклентĕр.
Ача-пăча çуралтăр, тĕрекленгĕр,
Ан иксĕлтĕр хаваслăхĕ тĕнчен.

Заводсенче те, анлă хирсенче
Кĕвĕленсе ĕç шавĕ çеç кĕрлетĕр.
Хаяр вăрçа этемлĕх шав сивлетĕр,
Ан сÿнтĕр йăлтăр кулă пит çинче.

Эппин пĕрле тус-тăванла, татуллăн,
Куçран ÿкмесĕр пурăнар хисеплĕн,
Хавхаланса утар çитес çĕре.

Упрар пĕртен-пĕр Сăпкана-Çĕре.
Вăл чи хакли. Ăна хăвах сисетĕн:
Этемĕн вăрăм мар пурнас кун-çулĕ.

## XV

Этемĕн вăрăм мар пурнас кун-çулĕ,
Хавал парса тăрать ĕмĕтленни,
Самантсерен, ав, илĕртет çĕнни,
Ăна кашнийĕнех туясшăн чунĕ.

Утас çул-йĕр ансат е хирĕçӳллĕ:
Хăйеверлĕ ăс-тăн иксĕлменни,
Пĕлӳлĕхе ялан тĕпе хуни
Ыр туртăмпа пĕрле тĕллевлĕн юлĕ.

Ылмашăнса куçан çĕн кунсенче
*Илемлĕрех пулать тĕнче, малашлăх,*
Çынсем пĕр çемьери пек тăванлашчăр.

Эппин шух ĕмĕт чăнлăхпа пĕрлештĕр,
Пуласлăхшăн вăл пĕрмаях кĕрештĕр,
Хĕвеллĕ пултăр пурнăç çĕр çинче!

# ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔ
## ПОЭМА

*...1861 çулта, çулла, вăрманта урана сиктерсен манăн Пăва уесĕнчи Турханта ял старшини Богданов патĕнче сипленме тиврĕ. Вăл чăвашчĕ.*

*...1861, 1862 çулсенче те, каярахпа та, 1865 çулчченех эпĕ чăваш халăхне тăван чĕлхепе вулама тата çырма вĕрентес шухăша чĕрере упрарăм.*
*(И.Я.Яковлев асаилĕвĕнчен)*

### Вăрманти инкек

"Хура вăрман, эс иртенпе
Мĕне сиссе паян шавлатăн?
Армак-чармак туратсемпе
Хăлаçланатăн, хăмсаратăн.

Тен, пурнăçри сивлек çилсем
Сан ăш-чикне пăлхантараççĕ?
Тен, шавлă, тăвăллă кунсем
Тӳр кăмăлна ыраттараççĕ?

Чуну-чĕмӳ сан питĕ çывăх
Мала ăнтăлакан çынна:
Эс пулнăран çеç — ырă-сывă,
Эс пулнăран вăл пурăнать.

Çăралăхна сăнланă май
Хура тесе сана калаççĕ.
Çаплах чĕнеççĕ-ха хальхаççăн
Ĕçчен, сăпай халăхăма.

Эй, шухăш-шухăш!..Авăрне
Кĕрсе ӳксен — тухмашкăн йывăр.
Çын пек, çын пек ӳсет-çке йывăç,
Тăсасшăн вăл та ĕмĕрне". —

Вунвиççĕри ачан сăн-пичĕ
Йăлтăртатать, тĕксĕмленет.

Пурне те хăй пĕлесшĕн питĕ,
Ĕмĕчĕпе таçта çитет.

Улатăртан çула вăл тухрĕ
Пулас тесе тăван енре.
Хыçра, ав, çухрăм хыççăн çухрăм,
Шухăшĕнче килтех çӳрет.

— Патша саккун кăларнă теççĕ,—
Лавçи сăмах кĕç тапратать.—
Хресчен çĕр илĕ-ши, пĕлесчĕ,
Курать-ши вăл тинех пайта?

— Патша ултавçă,— тет хĕрӳллĕн
Унпа ларса пыран ача.—
Пуян татах ыр курĕ ӳлĕм,
Çакна ĕçчен сисмест пачах.

— Вăт, шăпăрлан! Епле хăятăн
Ыр патшана эс хурлама?
Тинех пулать ак ман та ят çĕр —
Пăрахăп çыншăн тар тăкма.

— Ят çĕр пулать...
Ăнлан, тархасшăн,
Шăпу йывăрланать татах.
Улпутшăн, çĕнĕ куланайшăн
Йӳç тар тăкма тивет пайтах.

Вут-шанкăшăн, çаран уттишĕн
Тара кайса ĕçлес пулать.
Каймастăн-тăк — тĕл пулăн нишлĕх,
Кайсан — улпут татах пуять.

— Эс калани тӳрре тухсассăн,
Пуян, эппин, хăват илет?
— Улпут, тен, пилĕк авĕ саншăн? —
Ача ыйтать. Леш тĕлĕнет:

“Вăт шĕвĕр, — шухăшлать ватти кĕç,—
Ăна хирĕçлеме май çук”.

Урарисем чупатчěç тикěс,
Умра, ак, халь тумхахлă çул.

Каç пуласпа сивлек çанталăк
Чунра салхулăх çуратать.
Тӳпе çитти — тăхлан шăналăк,
Сар хěвеле йăлтах хуплать.

Вăрман шавлать.
Çил ачисем
Ши! шăхăрса мала чупаççě.
Пуçне таяççě чечексем,
Тип туратсем шарт! хуçăлаççě.

Çӳçентерсе янрать те ахрăм —
Лавçи чěтрет,
Сăхха перет:
«Эй, Турăçăм!
Эй, Пихампарăм!
Çак тамăкран хăтарччě».— тет.

Лаши те, ав, темрен хăранăн,
Пăхмасăрах умри çула
Вăшт! ыткăнать чăтлăхалла,
Ăна тинех вăйпа чараймăн.

Кěç шăтăр-шатăр сас, унтан
Çилленчěклěн:
— Эй, чарăн, явăл! —
Тени хăюллăн янрасан
Ут чарăнать, йăваннă лавě.

Ларса пыракансем выртаççě:
Çамрăкраххи пит йынăшать,
Сиктерне урине — утаймě,
Хăюллă çын кунтах тăрать.

— Сана пула йăванчě лав ман, —
Ватти кěç ачана хăртать, —
Эс патшана пустуй хурларăн,
Инкек сăлтавě — çавăнта.

Кётмен хăна, чухлаканскер,
Пĕрре пăхса йăлтах ăнланчĕ:
— Тилхепўне тытман чипер,
Çавна пула лаву йăванчĕ.

Кăштах тăрсан:
— Ну, юрĕ, çитĕ,
Каяс пулать часрах яла.
Тамалчĕ пек кĕç шухă çилĕ,
Вĕсем васкаççĕ малалла.

**Турханта**

Часах тухаççĕ уй-хире,
Сивлек вăрманĕ те хыçра халь.
Лавçи:
— Хăранăччĕ сĕре,
Пире тĕл пултăн эс, юрать-ха.

— Ман хушамат — Богданов,— тет, —
Купти ял старшини хальхаççăн.
Ватти-вĕтти паллать, пĕлет.
Ан хăрăр.
Турхантах çĕр каçăр.

— Мана Çтаппан тесе чĕнеçĕ,
Çул-йĕрĕм — Чĕмпĕр еннелле.
Иван Улатăрта ĕçлет...
Кĕçех ял хапхинчен кĕреççĕ.

Ик-виç урам.
Чиркў мăнаçлăн,
Ял варринче вырнаçнăскер,
Кётмен çĕртен кăларчĕ сасă,
Каçхи кĕлле чĕнет иккен.

Ун умĕнчен иртсен, Богданов
Хăрах касри çурт тĕлĕнче
Чарма ыйтать:
— Çав пўрт, — тет, — манăн,
Хăна пулсамăр ыранччен.

Шăлне çыртса чăтать Иван:
Ури ун ыратать-çке питĕ.
Ларать хăй лав çинче аран,
Пир лек шуралнă хĕрлĕ пичĕ.

Йăтса кĕреççĕ те ăна,
Сараççĕ вырăн:
— Вырт, тархасшăн. —
Кил пуçĕ тек ăшталанать:
Ачан ыратăвне чарасшăн.

Анчах пĕлмест майне-шывне,
Ма тухтăр мар-ши хăй, Богданов?
Йĕри-тавра пăхать аптранăн,
Шăлать тарланă çамкине.

Вăл арăмне часах хушать:
— Эс Марука чĕнсе килсемччĕ,
Çак чир-чĕртен аван сиплетчĕ...
Леш Тукаса тухса чупать.

— Мĕн пулчĕ-ха, ачам, — тесе
Часах пӳрте кĕрет хĕрарăм, —
Шыв ăшăтăр, таса пир парăр, —
Хушать те, пуçăнать ĕçе.

Иван чăтать, шăлне çыртать,
Хĕрарăма сăнанăçемĕн:
"Нивушлĕ асапа тартать? —
Иккĕленет. —
Чăнах-ши?
Темĕн"...

— Сан аттуна хывас пулать...
Выртах, выртах, — пуплет йăвашшăн,
Хăй Ивана калаçтарать, —
Ăçтан-ха эсĕ?
Кам тавраşĕ?

Чеелĕх ку — хăйне кура —
Ача сисмен чухне, сасартăк

Туртать те урине кăрт-карттăн,
Леш вырăнне чипер ларать.

— Халь еплерех сывлать ман йĕкĕт? —
Марук аппан сăн йăл çиçет. —
Ура шыççи чаксассăн, йĕрĕх
Тек шар кăтартмĕ.
Чир иртет.

---

Çапах та эп, ачам, ыйтасшăн,
Тăхтамалла çула тухмашкăн.
Килӳ тармасть, эс ан васка,
Ыран татах килеп, халь кан.

Чăнах та, паçăрхи пекех
Ури пит ыратмасть.
Мĕн калăн?
Марук аппа маттур иккен.
Ĕçне пĕлет аван.
Ку — паллă.

**Тепĕр кунхине**

Пӳртре сехет шакканă сасă
Пĕр кĕвĕллĕн хитре янрать.
Иван пĕччен, сывлать хăй ассăн,
Кашни япалана сăнать.

Ял старшини мала хурать-тĕр
Кĕнекене. Вĕсем чылай.
Сĕтел çинче те пур, шкапра та,
Эппин, хăйне кура ăслай.

Кил ăш-чикки епле типтерлĕ:
Урайĕ шурă, çук тусан.
Тасалăхĕ хăех систерĕ —
Кӳршисенчен пурнать аван.

(Иванăн ĕç-хĕлне пула
Тӳр килнĕ-çке çитме таçта та,

Хальччен тĕл пулнă такама та,
Çынна пĕрре курсах хаклать.)

Кĕç алăк уçăлать. Богданов
Иртет те тĕпеле, ыйтать:
— Вăрантăн-и? Çисем апат.
Урун шыççи чакать-и санăн?

— Самай пек халь.
— Çтаппан кĕтмерĕ.
Ирех вăл кайрĕ, итлемерĕ.
Тен, тĕрĕс турĕ,
Ан кулян.
Килне хамах леçеп кайран".

— Ваççа тете, кĕнекĕрсем
Нумай-çке сирĕн. Эх, вуласчĕ!
— Чармастăп-çке, ак, тыт, тархасшăн,
Чăнах та, пур кунта вĕсем:

Вырăслисем те, чăвашли те.
— Чăнах-и, чăвашли те пур?"
— Çапла,
Чăвашлисем те, кур,
Шел, ăнланмашкăн йывăр питĕ.

Çыраканни вирьял çынни çав.
Сас паллисем те вырăссен.
Чĕлхемĕре пăвать-çке нишлĕх,
Çырулăх пирĕн вăй илмен.

Кĕнекине кайран эс пăхăн,
Салма яшки кĕç сивĕнет.
Иван илтмест.
Çиме-и вăхăт?
Чăмать пĕлӳлĕх тĕнчине.

Богдановăн куллийĕ çутă:
"Йăлт путрĕ кĕнеке ăшне"...
Тухать вăл сассăр картишне,
Паян тавăрмалла ун утă.

Иван вулать те, шухăшлать:
*Çырма пулать*-çке *чăвашла та.*
Умри тĕнче аслăланать,
Вĕçеççĕ ĕмĕтсем, хăлат пек.

Кĕнекепе паллашнăçем,
Ӳпкелешет-ха хăй пĕр хушă:
Ытла кăнттам сăмахĕсем,
Темскер çитмест.
Чунра та пушă.

Чăваш чĕлхи хитре, янравлă,
Ăçта-ши унăн чăн кĕвви?
Ăçта-ха çепĕçлĕх, ачашлăх?
Тен, çырмалла çĕн алфавит?..

Каç пуласпа Марук аппа
Килсе кĕрет. Тĕпчет вăраххăн:
— Сана хăратмĕ чир хураххăн,
Сиплен-ха, — тет, — çак курăкпа.

Утта кайсан ăна пуçтартăм
Сан ятупа,
Сывал тесе. —
Иван ăна укçа сĕнсен, —
Чик каялла,
Атту вăрçатăп.

Туянмăн сывлăхна унпа,
Эс пуррине упра, тăванăм.
Ӳс, ырă пул кăмăлупа,
Сăмахăм çакă çеç халь манăн.

Иван шутлать:
"Мĕн чул сăпайлăх,
Ыркăмăлăх халăхăмра,
Ĕçченлĕх, *тӳсĕмлĕх, йăвашлăх*, —
Телей çеç çук ун пурнăçра..."

## Сывалнă вăхăтра

Пĕр вунă кун пӳртре вăл ларчĕ,
Сиплерĕ урине ялтах.
Çапах, чирне мансах вуларĕ,
Сая ямарĕ вăхăта.

Иртмест-çке ун асапĕ хăвăрт,
Ура шыççи чакать вăрах.
Тухас пулать çула ыран,
Выртать Иван чĕнмесĕр, шăпăрт.

Епле-ши ăраскал, малашĕ,
Шанма пулать-ши кĕтнине?
Çул-йĕрĕ кăткăс, тен, аташмĕ,
Тен, пурнăçлайĕ ĕмĕтне?

Богданов ăс пани пуçра-ха:
"Сан малашне вĕренмелле..."
Хирĕçлеместĕп: ку çапла-ха,
Анчах ĕçрен тухас епле?

Саккун хаяр. Эп кам? Эп — тарçă.
Пăркаланма та майĕ çук.
Çĕр виçекен пулса вун çул
Тар тăкмалла.
Никам хăтармĕ.

Ăçта ан пăх: çул-йĕрĕм хупă,
Эп тăр-пĕччен, ман çук нухрат.
Çут тӳммелли илесшĕн тупăш,
Шăп çавăнпа ăс-хал пухать.

Пуянăн ĕмĕтне хурлатăп,
Хам вĕренни кăна сахал.
Пĕлӳ парасчĕ Чăваша та,
Кун-çул ан ирттĕрччĕ ахаль".

Çак шухăшпа ыйха путать те,
Ытла та тутлăн çывăрать.
Ыр тĕлĕкпе çунатланать-тĕр:
Хутран-ситрен йăл-йăл кулать.

## Çул çинче

Асамçă пуль эс, çутçанталăк,
Паян епле çиçет вăрман.
Тем-тĕрлĕ кайăксен хаваслă
Юрри-кĕвви янрать ян-ян!

Лĕп çил вĕрет те ачашланăн,
Пуçне пĕкет хитре чечек.
Пыл хурчĕсем çухатнă канăç,
Çунат сарса вĕçеççĕ тек.

Иван ачаранах юратнă
Вăрманăн шухăшлă шавне.
Çӳренĕ чух Паххум патне
Мăнаç юмансене сăнанă.

Шутланă: эх, пуласчĕ манăн
Пурнăçăмра çак йывăç пек!
Епле патвар, кирек хăçан та
Вăйсăррине парать тĕрек.

Çиллес çил-тăвăлĕ урать-и
Е шартлама сив хĕл тăрать?
Ăна усал вăйсем хăратмĕç,
Унра нихçан чакмасть хăват.

— Сывалсанах, Иванăм, санăн
Гимназире вĕренмелле.
Хăвна ху шан, вара пултарăн
Тӳрре тухма ĕçӳпеле.

Вăрттăнлăх мар, чухлан хăвах:
Умри çул-йĕр чăрмавлă, хурлă.
Ху ăслипе çеç ан çырлах,
Тантăшусемшĕн те вăй хур эс.

Чăваш çыннин малашĕ пулĕ,
Пĕлӳлĕхе çеç çул хывсан.
Эппин çакна асра тыт ӳлĕм,
Çакна ан ман, ачам, ан ман

— Тавах, тавах сире пуриншӗн,
Ӑс панӑшӑн тата шаннишӗн.
*Ҫырулӑх пирӗн пулмаллах!*
Чӑваш вулатӑр чӑвашлах!

Ларса пыраҫҫӗ иккӗн.
Ик чӑвашӑн
*Калаҫӑвӗ юхать хаваслӑн.*
Вӑрман тӑнлать пек вӗсене.
Ҫул-йӗрӗ Чӗмпӗр хулине.

Якку Иванӗн асӗнчен
*Ҫак тӗлпулу нихҫан та каймӗ.*
Ӳссен, пӗлӳ, ят-сум илсен,
Богданова, пӗлетпӗр, манмӗ.

Мӑнна хумасӑр час-час килӗ
*Хӑй сывӑ* чух *Турхан ялне.*

Ял чиперленӗ, унӑн пилӗ
Йӑлт пурнӑҫланӗ малашне.

*Ҫакна вӗсем пӗлмеҫҫӗ-ха,*
Ҫакна, тен, чухламасть вӑрман та.
— Но, хӑвӑртрах! — урхамаха
Мала чупма хистет Богданов

*1989 ҫул.*

# ТӐВАН ЕН ЙЫХРАВӖ

*ПОЭМА*

## I

Пурнатӑп хулара, куллен ҫӳретӗп
Ӗҫе пиншер ҫынпа пӗрле ирех.
Кун хыҫҫӑн кун иртет, хӑш чух сисетӗп,
Темскершӗн ӑш вӑркать.
Сӑлтав мӗнре?

Кун пек самантсенче эпир час-час
Пӑшӑрханмасӑр иртмӗ ӗмӗр тетпӗр.
Шӑп ҫапларах — кӑна аван пӗлетпӗр —
Тӳлек кунра та ҫил тухать кас-кас.

Е тепӗр чух тус-тантӑшпа алхапӑл
Пуплес килет чуна уҫса темччен.
Хӗрӳллӗ шухӑшсен ялтравӗнче
Сисместӗн те, ҫивӗчленет ӑс-хакӑл.

Пӗр улшӑнусӑр вӑхӑт шунӑҫем
Хула шӑв-шавӗ, тен, пит йӑлӑхтарчӗ?
Асилӳсем пуҫра капланнӑҫем
Кӗтмен ҫӗртен вӑл канӑҫа мантарчӗ.

Мӗскер ҫитмест мана?
Хамрап ыйтатӑп.
Юлхаврах мар-ши эп юлташсемчен?
Калас шухӑшӑма, тен, пытаратӑп,
Юлмарӑм-ши кун-ҫулӑн уттинчен?

Ҫапла ыйтсан, туссем те хирӗҫлеҫҫӗ:
«Хӑвна сӑлтавсӑр, кӑлӑх ӳпкелен.
Ҫитсе пырать ӗмӗтленнин кӗтречӗ,
Умри пуласлӑхна ӗненнӗрен.

Пурнатӑн хӑтлӑ хваттерте, ҫемйӳ сан
Хӗн-хур мӗнне нихҫан курман, туйман.
Кирек хӑҫан хыпса ҫунан ӗҫӳшӗн,
Мӑшӑрупа кил ӑшшине упран.

Пур савăнмалăх сирĕн хĕр те ывăл,
Вĕсен кулли шăнкăртатать ир—каç.
Шутланă пек ӳсеççĕ ырă—сывă,
Ниме тăман ĕç—пуçшăн ан калаç.

Чĕрре ан кĕр, çырлах мĕн пуррипе эс,
Пĕр шухăшсăр куллен ĕçе çӳре.
Умра çиçен хитре ĕмĕтӳпе те
Ан каппайлан, вĕçеймĕн тӳпере...»

Сăлтавĕ пур—çке, хаклă вулаканăм,
Эппин, сана кĕттерес мар хытах.
Ĕнер каçпа çыру илсе вуларăм.
Аннем çырать.
Пурнать—ха хăй ялтах:

«Аçу вилнĕренпе çитет çулталăк,
Яла та мантăн—шим.
Килсем часрах...»
Сисетĕп, чунĕ кӳтнĕ, ку йăлт паллă,
Тăрать пек, хавшаксkер, юнашарах.

Эрленнĕ ĕнтĕ эсĕ, ыр аннеçĕм,
Кулянтарас килмест—çке ман сана.
Килтисене:
«Яла каятăп», — терĕм.
Ăш вăркани те иртрĕ пĕр кана.

## II

Умра юратнă ял.
Чĕрем пăлханчĕ.
Сăрт тăрринчен сăнатăп халь ăна.
«Инçе çулта кăшт йăшрăн пулĕ, канччĕ»,—
Хаваслăн вăл кĕтсе илет мана.

Мĕн ывăнни!
Кунта епле чун усă,
Лĕп çилĕ вăрттăн чуптăвать питрен.
Çунат çапса автан сас пачĕ уççăн:
«Ман киккирик галстукунтан хитре!»

«Кăшт шахвăртан пуль, —
тейĕ пĕр—пĕр критик.—
Ăна—кăна пит чухлаймасть автан».
Калатăп шӳтлесе:
«Ун пурнăç çитнĕ,
Анранă ĕнтĕ шăрăх пуснăран...»

Шур пĕлĕт çĕклесе умран иртеççĕ
Хир еннелле пĕр вĕçĕм машинсем.
Ват йăмрасем кăштах йĕкĕлтесе:
«Тусанлă сывлăша та çăт—ха», — теççĕ.

«Асфальт та хăтлăх хулара куратăр,
Манма пăхатăр çăкăрăн хакне.
Ăна, типсе кайсассăн, пăрахатăр
Подъездсенче ларан витресене.

Анчах та тар тăкмаççĕ мар—и уншăн
Тантăшусем куллен—кун уйсенче.
Вăй—хал хурса ĕçлеççĕ çĕн тырпулшăн
Вĕри вучах—хĕвелĕн айĕнче.

«Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ пултăр», — теççĕ,
Ĕмĕтленни, чăнах, çитсе пырать.
Çĕр пулăхне çултан—çул ӳстереççĕ,
Мĕн палăртни вара пурнăçланать.

Эс ӳснĕ чух çитместчĕ çăкăр, çимĕç,
Имшер, хавшак туяттăмччĕ хама.
Çĕршывăма таптанă хыççăн нимĕç,
Пит йывăрччĕ тӳрех ураланма.

Çапах та парăнмарĕ паттăр халăх,
Лармарĕ пуç усса, мĕскĕнленсе.
Çĕкленчĕ те вăл улăпла вăй—халлăн,
Кĕрешрĕ пĕрмаях хĕрӳленсе.

Çак кĕрешӳ шăв—шавĕ илĕртӳллĕ,
Ĕçчен çынна мала утма хистет.
Эс ху та, ывлăм, ĕмĕтлĕ, çӳл пӳллĕ,
Тӳр пилĕк мар, килех, ялу кĕтет».

III

Ват ăсчах пек çапла калаçрĕ енĕм,
Йăмра тураттипе саламласа.
Ун ытамне кĕрсессĕн хĕпĕртерĕм:
«Салам, Турханăм!»— терĕм хумханса.

Манса каймарăн — и, тахçан шух юнăм
Санпа пĕрле чухне пăлханнине.
Ют çĕрсенче чылай эреш эп куртăм,
Анчах та юлтăн эс çеç чун тĕпне.

Ирпе — каçпа ялан умра çиçеттĕн
Тăри юрриллĕ хир анлăшĕпе.
Шухăшăмра санпа кăна пуплеттĕм,
Сывлаттăм тăван ен сывлăшĕпе.

Шăп çавăнпа çуллен курма килетпĕр
Чăваш тĕрриллĕ сан çуртусене.
Кунта пуçа таятпăр, ĕненетпĕр
Малашлăх иртнипе çыхăннине.

Мĕн — ма тесен, кунта кашнин тымарĕ,
Мĕн — ма тесен, кун курнă çакăнта.
Эппин, юлташ, яла асран — и ярăн,
Асамлăн йăлкăшсан вăл умăнта.

Урамĕсем çип çапнă пек тӳп — тӳрĕ,
Кашни кил умĕнче — лаштра йăмра.
Ем — ешĕл тумĕ — симĕс пурçăнран.
Вĕсен ăш хӳттинче хаваслăн çӳрĕн.

Çак чунлă йывăçра пин тĕрлĕ шухăш,
Кашниййĕ калаçать пек чăвашла.
Е çил тухсассăн каш! кашлаççĕ шуххăн,
Çĕклеççĕ ăс — хала та кăмăла.

Чĕтренчĕк çулçисем пĕр ӳркенмесĕр
Миçе çул ал çупаççĕ каç та ир.
Калаççĕ пек: «Çĕртен сĕткен илмесĕр
Çӳле пĕр шит те хăпарман эпир».

Йăмра!
Чăваш çыннишĕн хӳхĕм йывăç,
Тымар ярать кирек ăçта лартсан.
Тен, халăх хăй çапла хунанăран
Вăл унăн чунĕшĕн ялан пит çывăх.

...Ача çуралсанах чăваш васкавлăн
Йăл—йăл кулса йăмра лартать вăр—вар.
Атте калатчĕ куç хĕссе ытарлăн:
«Хăв хыççăн, ывлăм, йывăççем хăвар».

Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ пит аслă,
Ăна пуçларăм ăнкарма эп тин.
Ман ятпала лартни те, ав, хаваслăн
Калать пек шăппăн: «Таврăнтăн эппин».

Аттен хĕр—ывăлĕ — эпир тăваттăн,
Çурт умĕнчи йăмри те çавăн чул.
«Атте, — сывлатăп ассăн, пăлханатăп,—
Эп ăнланман çакна эс сывă чух».

Ман ачасен йывăççисем ӳсмеççĕ
Тăван ялта тымар ярса патвар.
Вĕсен тымарĕ хулара — пĕлмеççĕ
Ял пурнăçне манпа сан пек аван.

Çапах шанса тăратăп эпĕ çирĕп,
Ӳссен те манмĕç, ват йăмра, сана.
Эппин, кашла эс шуххăн каçăн—ирĕн,
Турат çумне турат хушса хуна!

## IV

Ачалăх кунĕсем ума тухаççĕ:
Шăхлич кĕвви янрать пек хăлхара.
Хăй тĕнчине вăл йыхăрать хальхаççăн,
Çӳретнĕ май мана кăваклăхра.

Унта «чип—чип» тухиччен чупаттăм
Юлташсемпе пĕрле çара уран.
Чĕнетчĕ ирсерен кăтра вăрман,
Серте—пултран уçланкăра тататтăм.

Пěчěккěллех вут—шанкă пухнă хамăр,
Ěне урийě пуснă çамрăклах.
Шап çавăнпа пире хăйса калаймěç:
«Вěсем, ав, ўсрěç терт курмасăрах».

Ĕçченлěхпе ăшра кашни мухтаннă,
Кахал çынна ман халăх юратман.
Аттесенче тымар вăл çирěп янă,—
Эппин, ачийěсем патвар йăхран.

Апла пулин те, эп пит мухтамастăп,
Çав иртнě вăхăта пуç каçăртса.
Тертре—хěнре анне сывланă ассăн,
Тырри пулман—çке хальхи пек ăнса.

Епле йунеçтерес?
Ир—каç шутланă:
«Атьсем ан лекчěр хурлăх ытамне,
Вěсем вěренччěр, курччăр ырлăх—канăç,
Ан пěлччěрех кун—çул йывăррине».

Анчах ăна эпир кашни активнě,
Аван чухлатпăр çăкăран хакне,
Тăраниччен мăнкун çитсен çеç çинě,
Ытти чух пěлнě перекет мěнне.

Ир пуçласа каçчен тар такнă мар—и
Аннемěрсем каçалăксем çинче?
Ĕç куршанакě пирěнтен хăпмарě,
Чăтма вěрентěмěр аслисенчен.

Тен, çавăнпах сăввămсене илемлěх
Куçа йăмăхтарса иленеймест.
Чун—чěреме пусать те сив кичемлěх,
Хěвел çути вара йăл—йăл çиçмест.

## V

Тăван яла килсе каймассерен
Çакна эп темиçе хутчен сăнанă:
Атте—анне çуртне ват сан кăшт çапнă,
Унчченхинчен те вăл тěксěмтерех.

Мĕн калăн, иксĕлет çуллен ăшшийĕ,
Кĕр кунĕсем çитсессĕн çапларах,
Тем тĕрлĕ кайăксен тулли йăвийĕ
Пушаннă, кăнтăра ăсаннăран.

Паллах, ăçтан ăшши — хевти упрантăр
Вĕр — çĕнĕ çуртсем пек ларма ялан?
Ачи — пăчи килсен сайра хутра çеç,
Ăна, кивĕскере, юсамасан?

Пÿрте кĕретĕп шаккамасăр, шăппăн,
Аннем ларать, ав, тĕпелте пĕччен.
«Мĕнле пурнатăн — ха?» — ыйтатăп лăпкăн,
Сăмах — юмах юхма пуçлать хуллен.

Çÿрет — ха вăл. Пĕрре пăхса калаймăн:
Кĕçех тултарĕ сакăр теçетке.
«Миçе çулта?» — ыйтсассăн,—
«Пурте хамăн,
Вилме те маннă мар — и çав, эккей.

Вăй — хал çитмест,— тет,— усрамашкăн выльăх.
Мĕн тăвăн — ха?
Хавшатăп çулсерен.
Автансăр ялĕ те кĕтет пуль, ыльăм,
Тур çырнинчен хальччен никам иртмен...»

Хуланалла чĕнсе сăмах хушсассăн,
«Хупмастăпах сыв чух аçу çуртне.
Мĕн калĕç кÿршĕсем, — сывлать вăл ассăн,—
Пит йывăр хăнăхма хула шавне».

Татах пуплет:
«Кĕтÿ кĕтме çÿреççĕ
Ылмашăнса, кĕрĕшекен халь çук.
Эрнесерен çитсех тăрать черечĕ,
Кашни касра ик — виç кĕтÿ ку чух.

Ялта ÿсет ĕне те сурăх йышĕ,
Хур — кăвакал, чăххи — чĕппи — чакмасть.
Ирпе халь шартлатмасть пăшалĕ — пушă,
Выльăхсене кĕтÿç ачи вăрçмасть.

Çуллен патшалăха какай сутаççĕ,
Сĕт пуçтараççĕ халĕ килсерен.
Хула çыннишĕн пурте тăрăшаççĕ,
Укçи — тенки те хушăнать хăйсен...

Çемйӳпеле килсе пурнас тесессĕн,
Пĕрре те кая мар хуларинчен.
Тен, лайăхрах та пуль, туйсамччĕ эсĕ,
Вара эп пулмăп ватлăхра пĕччен...»

Ват çын чĕри, шутлатăп, эх, мăнтарăн,
Кĕтсе пурнать, шанать — çке ыррине.
«Эп хирĕç мар — ха та... мĕн калĕ арăм,
Малтан пĕлесчĕ унăн кăмăлне...»

Çакна илтсен, аннеçĕм хаваслаччĕ,
Çӳрет вăш — ваш, сăйласшăн хăй мана:
«Паян эс килессе кушак чухланă,
Питне ирех вăл çурĕ пĕр кана».

«Аннеçĕм, — тетĕп, — тен, малтан каятпăр
Атте патне, ăна сума сăвар».
Ĕçме — çиме илсе, çула тухатпăр,
Ял хĕрринче пире кĕтет масар.

## VI

«Ак çитрĕмĕр, — сăмах пуçлать аннеçĕм,—
Пире ан асăн эс унта, Кĕçтен.
Сан ятупа пĕçертĕм эп икерчĕ,
Эрех тавраш хампа илсе килмен.

Ăна сивлеттĕн — ха, аван пĕлетĕп.
Çав шĕвеке çавман пурнăçунта.
«Вăл сывлăхăн чее тăшманĕ теттĕн»,—
Аттепеле хăй калаçать чунтан.

Пуçа пĕксе, унпа пĕрле тăратăп
Умра курса юратнă çын сăнне.
Шухăшăмпа çитетĕп эп таçта та,
Тухса — и пулĕ ун вĕçне — хĕрне?..

Масар.
Сăваплă вырăн чĕррисемшĕн.
Чуна уçса, аттеçĕм, калаçар.
Кĕтетĕн ĕнтĕ, тăтăшах килменшĕн
Ӳпкелешетĕн пуль, каçар, каçар.

Курасчĕ сан, йĕри-тавра ĕлккенлĕх,
Çил вĕрнĕ май пуçне пĕкет çеçке.
Каçса кайса тăри юрлать илемлĕн,
Анчах та эс çакна илтместĕн-çке.

Сан хĕресӳ, ав, канăçна сыхланăн,
Хуралçă евĕрех тăрать пăхса.
Выртатăн пĕр чĕнмесĕр, кĕç тăрассăн,
Утасшăн пек тăван ене савса.

Паян та эп сана умрах куратăп,
Каймастăн манăн асăмран нихçан.
Тӳлек сассупала, ак, эс ыйтатăн:
«Çут тĕнчере епле-ха пурăнан?

Çумра тус-тантăшу чылай-и санăн?
Пĕр хăвшăн çеç эс тăрăшмастăн-и?
Çын ĕç-хĕлне сума сăватăн-и?..»
Ыйту çине ыйту, час хуравлаймăн.

Масар.
Сăваплă вырăн чĕррисемшĕн,—
Никам хăй урипе кунта килмест,
Яланлăха юлассине сисмест.
Пулсан та, пысăк ял пек вăл çынсемшĕн.

Мана каçарччăр çак танлаштарушăн.
Анчах ыйтас килет чĕррисенчен:
Пурнатпăр-и пĕр-пĕринпе татуллăн,
Туятпăр-и çын тивĕçне куллен?

Чăвашăн ыр енне — сăпайлăха,
Атте-анне пилленĕ сумлăха
Хăш чух манса каймастпăр-ши? Хăр-харшăн,
Пур вак-тĕвекшĕн сапалатпăр мар-ши?..

Масар.
Сăваплă вырăн вăл кашнишĕн.
Çапах та тунсăх, тунсăх чĕрере.
Кун пуçланнишĕн, сар хĕвел ăшшишĕн
*Яваплă эпĕр çакă тĕнчере...*

Кунта ман тантăшсем те пур, канаççĕ.
Чăрмантарас шут çук–ха вĕсене.
*Шухăшăмсем чарусăррăн кумаççĕ,*
Мĕскершĕн шеллемерĕç хăйсене?

Пит хĕсĕк марччĕ–çке Турхан урамĕ
Йăмра шавне савса тăн–тăн утма,
Е тĕп килтен тухса çурт çавăрма.
Çакна хăйсемсĕр ĕнтĕ кам хуравлĕ?

Пĕр вăхăтра ĕçке пит савнăран,
Çил–тăвăл тухнăн çемьесем арканчĕç.
Хăшпĕрисем касамата çакланчĕç,
Виççĕмĕшсем... выртаççĕ шăплăхра.

Масар.
Сăваплă вырăн вăл çынсемшĕн,
Унра — пулса иртнин кĕтрет çути,
Асаилӳ, кун–çул йӳççи–тути,
Вĕри куççуль чакмасть кунта этемĕн.

*Мĕнех, шăлне хăйрин эсрел–усаллăх,*
Ӳсет, ав, пурпĕр çĕн ăру хастар.
Çынра вăй илтĕрччĕ хăйне сыхласлăх,
Вара сив вилĕм уншăн хăруш мар.

«Хам пурăнса юлас — ытти тĕп пултăр...»—
Тесе калакансем те пур, паллах.
Эппин, этем пĕр хăйшĕн çеç ан çунтăр,
Кӳрши пирки те ун шутламаллах.

Ма пытарас?
Кунта пулатпăр пурте.
Çапах мĕн пӳрнине йышăниччен,
Çав, леш... эсрелĕпе тĕл пуличчен,
Иртинччĕ теп тĕллевлĕрех ман пурнăç...

Аннем тăрать.
Ун пěркеленнě пичě,
Хальччен çакна курман, — салху ытла.
Шеллес килет ватăскере ман питě,
Сисмесěрех çěре куççуль тумлать.

«Нумай кěттермěп, юнашар пур вырăн,
Чартакě хўхěм — иксěмěр валли,—
Килсе выртасчě сан пата ман ыррăн,
Ку — пурнăçăн улăштарман йăли».

Сăмахсене калать те вăл пит лăпкăн,
Такам питрен çат çупнăн туйăнать,
Чунра тем татăлать, тем тăвăнать.
Анчах... йěри–тавра тўлеклěх, тăплăх.

Хам сывă чух килсе пуçа эп тайăп
Ачамсемпе сан тăпруна, атте.
Ăна калатăп:
«Эс ан туччě айăп,
Халь каймалла, пускил, тăван кěтет...»

### VII

Ял пурнăçне аван пěлес тесессěн
Тěпчемелли, сăнамалли чылай.
Ват çынсемпе эс ăшшăн пуплесессěн
Хав ăстăнна пуянлатан самай.

Анчах хăшпěрисем пит мухтанаççě:
«Эх, ěлěк чух,— юрлаççě пěр кěвве,—
Йăли–йěркийě çыхăннăччě тачă
Тăван çěрпе пěр уйрăлми тěвве».

Сěт çумăрě çеç ěлěк çунă имěш,
Кулач та пыл нихçан кайман умран.
Çултталăк тăршшěпех–мěн пулнă çимěç,
Тумланнă хальхинчен те чапларах.

«Тырри гектар пуçне мěн чул тухатчě?»—
Ыйтатăп эп юмах яраканран.
«Пěлсех каймастап та — анчах чылайччě»,—

Хыҫать вӑл ӗнсине
Аптранаран.

«Ҫич—сакӑр центнертан ытла пулман—ҫке,
Пухаҫҫӗ халӗ виҫӗ хут нумай.
Вӗт шӑллӑ ҫурлана та ӗнтӗ манчӗҫ,
Ҫав вӑхӑта кирлех—ши мухтама?»

Ыйтатӑп:
«Ӗлӗк пенси, тен, илетчӗҫ
Сире халь панинчен те ытларах
Е выльӑх—чӗрлӗхӗ чылай ӗрчетчӗ,

Хур—кӑвакал нумайччӗ—и, ара?»
«Чӗлхен шӑммийӗ ҫук, пӗл виҫене эс! —
«Ҫӑвар уҫнӑскере кӳрши чарать.—
Сисместӗн—им, айван, шахвӑртнине те,
Ним шухӑшсӑр ача пекех павран».

Аптранипе леш:
«Эй, ҫапла пулмасӑр,
Чӑнах, ара, кум тӗрӗс сӑмахлан...»
Вӗсен ятне хӑварӑп каламасӑр,
Пит айӑплаймӗ уншӑн вулакан.*

Утатӑп малалла.
Тӑрсах сӑнатӑп
Шлипшур ҫырмин вӗр—ҫӗнӗ кӗперне.
Бетон урийӗсем ват юмана та
Кӗвӗҫтерме пултарӗҫ хӑш чухне.

Ӑста платник Элеш Якку Антунччӗ,
Унран канаш ыйтатчӗҫ—ха ҫынсем,
Кирек ӑҫта ертуҫӗччӗ, маттурччӗ,
Нумай вӑл ҫапнӑ йывӑҫ сӑвайсем.

Антун тете те пит мухтатчӗ пулӗ
Ҫак илеме — хӑй пурӑннӑ пулсан.
Вӑл тунӑ кӗперсен кӗскеччӗ ҫулӗ, —
Бетонлипе епле танлаштаран?..

**VII сыпӑкӑн тулли варианчӗ «Тӑван ялӑйышӑм хушшинче» поэмӑн XIV сыпӑкӗнче /207 стр./ пичетленнӗ.*

Кăшт леререх тимĕрç лаççи ларатчĕ,
Сунтал сасси янратчĕ ян та ян!
Кил–тĕрĕшри вак–тĕвеке юсатчĕç,—
Ирпе–каçпа çын таталман кунтан.

Хашкатчĕ вăл, чахутка чирĕ ернĕн,
Ӳпки — кив вĕркĕч — пит хавшанăран,
Вĕри вучах — чĕри — лăш курманран.
Ялйыш унпа миçе çул йӳнĕçтернĕ:

Лашасене хĕлле таканлаттарнă,
Сӳре–плугне кун панă çĕнĕрен.
Ытлашшипех вăл тивĕçне тултарнă,
Ăна пăснишĕн кăшт сӳлет чĕре.

Ыйтатчĕ–шим вăл пысăк енчĕк хăйшĕн
Шыв хĕрринче ларнишĕнех пĕччен?
Такам алли ăна ишме, ав, хăйнă,
Пĕлмест халь ун çинчен иртен–çӳрен.

Вăл кивĕ имĕш — кирлĕ мар хальхаççăн,
Чупса анмасть сукмакĕ ун патне.
Ку вырăнта шур хурăнсем хунаççĕ,
Кармашнă май тăп–тăрă тӳпене.

Юнашарах пĕр мастерской ларатчĕ,
Салма Кĕçтук ĕçлетчĕ пĕр–пĕччен.
Сĕтел–пукан, çĕн рамăсем тăватчĕ
Çункав шăршийĕпе киленнĕçем.

Ăстаçăсем, чăнах, ялта нумайччĕ,
Вĕсем нихçан та кăкăра çапман.
Сăпайлăхпа çеç палăрса тăратчĕç,—
Чăвашăн мухтанас йăла пулман.

Уй–хирсенче акатчĕç селĕм кантăр,
Тĕртетчĕç пир.
Ĕç хатĕр — йывăçран.
Катка–пичке, чӳлмек–чĕресĕ, алтăр —
Хресчен хăй тунă — ал усса ларман.

Вĕсен вăрттăнлăхне алла илменшĕн
Пит хĕрелет те, халь тин мĕн тăван?
Çак айăпа тӳр килĕ пĕтермешкĕн,
Патшалăх май туса парать, аван...

Сăрт тăрринче çил армансем ларатчĕç,
Çĕртен кĕç—вĕç хăпса вĕçес тесе.
Кĕрпе çуратчĕç, çăнăх авăртатчĕç,
Чĕриклететчĕç йывăç çунатсем.

Ялйышшăн ютчĕ—шим вĕсен сăнарĕ,
Иăлăхтарса çитерчĕç—шим çаплах?
Çак шухăшсем ăша пĕрмай вăркатрĕç,
Хурав кĕтсе эп чарăнтăм тăпах.

Ыр тунине часах манатпăр мар—ши
Эпир, çĕннишĕн пит çунакансем?
Аваллăхран кирлех—шим йăлт хăпмашкăн,
Мĕн калĕç—ха кайран ачамăрсем?

Владимир, Суздаль таранах каятпăр
Илĕртнĕрен унти шедеврсем.
Килте вара — мĕн пуррине вататпăр,
Кайран: пулнах—ши тетпĕр палăксем?

*Ан тив, хăлаçланса арманĕ лартăр,*
Тимĕрç лаççи те пултăр çавăнтах.
Хĕн пурнăçăн сăнарĕ те упрантăр,
Пире вăл асилтертĕр тăтăшах:

Хĕвел шевлиллĕ тăнăçлăх сасартăк,
Юмахри пек хăй тĕллĕнех пулман.
Кăвак хуппи те тертсĕр уçăлман,
Килес ăру çакна йăлтах ăнлантăр.

Çакна туйса тăрсассăн, тен, пушанмĕ
Ача—пăча сассиллĕ хухĕм пӳрт,
Çуралнă кил хăй ăшшине чакармĕ,
Мĕн—ма тесен, телей кунта та пур.

## IX

Куллен – кун улшӑнать ял сӑн – сӑпачӗ,
Пурнаканни, тен, пит туймасть ҫакна.
Кассерен ҫӗн ҫурт, ав, купаласҫӗ,
Кайран тӑрласҫӗ тимӗрпе ӑна.

Пӗр кӗвӗллӗн янрать мотор кӗрлевӗ,
Касчен шӑт – кулӑ илтӗнет кунта.
Кам ҫурт тӑвать — кун – ҫулӗ ун тӗллевлӗ —
Алхапӑл каймӗ пӑрахса ялтан.

Йӑва ҫавӑракан килпус кӗрнеклӗн,
Мӑнаҫланса ҫӳрет картишӗнче.
Тӑн – тӑн пусать вӑл, улӑп пек, тӗреклӗн,
Малашлӑхӗ кунта ун, ҫӗр ҫинче.

Хӑрми тымар ярать ҫав ҫын яланлӑх
Йывӑрлӑха ҫӗнсе пырать ялан.
Пӗлетӗп эп: унра ҫук ҫӑмӑлттайлӑх,
Ҫак ырӑ ен ҫӗклет ман кӑмӑла.

...Эп ӳснӗ чух кив пӳрт ялта нумайччӗ,
Витетчӗҫ улӑмпа лупассене.
Ҫак сӑнарсем куҫран халь йӑлт ҫухалчӗҫ.
Шеллетӗп – им? Ҫук! Ҫук! Ҫӑва патне!

Сахалӑшӗн ҫурт – йӗр йӑл – ял ҫиҫетчӗ,
Йӗри – тавра эреш тултан пӑхсан.
Шалта — саксем те пӗр сӗтелччӗ,
Савӑт – сапа —тӑмран та йывӑҫран.

Атте калатчӗ /ман асран каймасҫӗ/:
«Май ҫукчӗ, шут тытсан та, сад чӗртме.
Кам улмуҫҫи лартать — налук хурасҫӗ,
Касаттӑмӑр, пӗлмен пек шелleме.

Ҫав йывӑҫсем, ӳпкелесе пире,
Юлашки хут хаш сывласан, тӳнетчӗҫ.
Мӗскӗнсене хытах хӗрхеннӗрен,
Куҫсем, шур илнӗ пек, тӗтреленетчӗҫ...»

Килти тик – такӗ чарӑнса ларсассӑн:
«Униҫӗмсен сехечӗ тӗрӗсрех».—
Мана пӗлсе килме хушса ярсассӑн,
Чупаттӑмччӗ вӗсем патне ирех.

Мӑч – мӑч краҫҫын ҫутипе эп вӗреннӗ,
Вунҫич ҫулччен унран пач уйрӑлман.
Ҫав йӳнӗ шӗвеке перекетленӗ
Укҫи – тенки шав хӗсӗк пулнӑран.

Вӗр – ҫӗн ҫурта пушар тӗп тунине те
Ҫулсем иртсен те манас ҫук нихҫан.
Тавах, ҫав терт – нуша хыҫра халь тетӗп,
Ҫапах вӗсен мӗлки каймасть умран...

Юмахлӑхра халь пурӑнатпӑр мар – и?
Сӑна тӗпчевҫӗ куҫӗпе, юлташ.
Паянхипе епле – ха танлаштарӑн,
Аса илсен ҫав иртнӗ вӑхӑта?

Килсеренех Ильич лампи, экранӗ,
Диван – кравачӗ, тӗрлӗ гарнитур.
Газ баллонне те, авӑ, кӳрсе панӑ,

Юп – ырлӑхне курмашкӑн пурте пур.
Чӳречерен шаккать улма турачӗ,
*Сӗнет хӑй ҫимӗҫне сар кӗр ҫитсен.*
Ӳркенменнин ытла та хухӗм сачӗ,
Вӗллийӗсем те пахчинчех хӑйсен.

Пыл хурчӗсем сӗрле – сӗрле вӗҫеҫҫӗ,
Чечек ҫинче пухаҫҫӗ пыл – нектар.
Ӗҫчен ҫынна вӗсем асилтереҫҫӗ,
Кам наян мар — ҫав курӗ пархатар.

X

Ҫил ачисем чупсан – чупсан лӑпланчӗҫ,
Пытанчӗҫ, ахӑр, тулӑ пуссине.
Ҫӳл тӳпере тӑри юрри шӑранчӗ,
Сӑнанӑҫем ҫынсем ӗҫленине.

Тăван уй—хир, сывлатăн лăпкăн, канлĕн
Киленĕç туйăмпа.
Хĕрарăм пек.
«Çĕр хĕсĕртен курайман ырлăх тек», —
Тесе сана паян хăйса кам калĕ?

Ăçта ан пăх: ĕçченĕн ĕçĕ сапăр,
Ыраш, пăрçа, сар тулă çитĕнет.
Тулли пучах: «Эй, сăвăç, мухтамасăр
Манран иртме пултарăн—и эс?» — тет.

Лайăххине, паллах, йăлт асăрхатăн,
Иртен—çўрен курать хăй куçĕпе.
Анчах, уй—хирĕм, шухăша путатăп,
Килĕшнĕрен поэт каланипе:

«Мĕскер вăл ясмăк, ачасем пĕлмеççĕ,
Пăри те вир халь çук уй—хирсенче.
Анчах та пăттине килĕштереççĕ,
Час—час вăл пăсланмасть сĕтел çинче».*

Хуратулне аксан та тертлĕ тетпĕр,
Саватпар мар—ши çăмăлрах çула.
Такам туса парассине кĕтетпĕр,
Çак чир ан кайтăрччĕ шалтан шала...

*Ахальтен мар çĕре эп танлаштартăм*
Çынна кун—çул пиллен хĕрарăмпа.
Вăл чунлă та ăшшиллĕ, сис, юлташăм,
Хăй ĕмĕрне этем тăсать унпа.

Эппин, пĕр—ик ача ўстернĕ евĕр,
Çур тăлăх пек ан курăнтăрччĕ хир.
Пăри те хуратул çĕклентĕр евĕк,
Çĕр—аннерен вăй илтĕр каç та ир...

Ĕçчен ушкăнпала кĕç тĕл пулатăп,
Паллас шутпа тĕсетĕп хăшпĕрне.
Чăваш йăлипеле: «вăй патăр!» —

*Г. Ефимов сăвви.

Тесе калатăп çывăхрисене.
Кунтах, ав, председатель, манăн тантăш
Ялйышăн хисепне тивĕçнĕскер.
Унпа сăмахлама эп тапрататăп,
Ăна—кăна ыйтатăп: йăлт пĕлтер.

## XI

«Ĕçлекенсем çитмеççĕ çав хальхаççăн,—
Тет Ляпкин, тарăн шухăша путса.—
Шкул пĕтерсен, яшсем, хĕрсем каяççĕ
Хуласене.
Юлмаççĕ колхоза.

Кĕçех ача садне хута яратпăр,
Юлас тесен, хваттерĕ те пулать.
Асфальтлă çул та васкасах тăватпăр,
Ял пурнăçĕ куллен лайăхланать.

Тĕштыррине пухса илме ансат—ха,
Кăшман та çĕрулми тума асап.
Каçалăкра ĕçлет механизатор,
Çумкурăкне тăрать вăл тасатсах.

Вĕсем кăна—и?
Эпĕ те пай илнĕ,
Ман инженер та,— вăл кулать чунтан.—
Хăй çемйипе, ав, агроном та килнĕ,
Ветеринар та, скотник та кунтах».

Чăн—чăн ниме!
Эппин, ĕç—пуçĕ ăнтăр,
Çумкурăкĕ тасалтăр уй—хиртен.
Рет—ретĕн симĕс çутă çунтăр йăлтăр,
Ăна ан пустăр йытпырши, пиçен.

«Тавах шкула, чăнах та, пулăшаççĕ,—
Тет председатель, сăмахне тăсса.—
Ĕçе пĕчĕккĕллех, кур, хăнăхаççĕ,
Вĕсемсĕр ним тăваймăн, иçмасса».

Ял пурнăçĕ кичем, тет, çамрăксемсĕр,
Ăна туятпăр хамăр та аван.
Малашлăх пуш пучах пекех вĕсемсĕр,
Каяканни каять çав, мĕн тăван?..

Çапах пуçа усмастпăр, тăрăшатпăр,
Путрет меслечĕ вăй илет çуллен.
Ĕçчен çынна кирек хăçан чыслатпăр,
Чăн хисепе кашни тивĕçлĕрен.

Палăрнисем илеççĕ орденсем,
Ялта вĕсем халь пурĕ вуннăн.
Чылайăшĕн çиçеççĕ медальсем,
Уявсенче клубра лараççĕ сумлăн.

Ывăлĕсем те, чăн та, паттăр кăйкăр,
Çарта-çке пулнă — Афганистанра.
Пĕрне вилсессĕн панă «Хĕрлĕ Çăлтăр»,
Перлов Володя, вăл каймасть асран.

Фашист йăхне тахçан аслашшĕ унăн
Тустарнă вăйлăн хыт курайманран.
Мăнукĕ те унран кая юлман,
Хăй кун-çулне вăл хунă тăнăç куншăн.

*Упрать савса ялйышăм ун ятне,*
Ăна аса илсе эп шăп тăратăп.
Хăюллăскер тухать те куç умне,
Чысне-сумне яманшăн савăнатăп.

Володя шăллăм, хумханса калатăп:
Эс юн тăкни ахаль сая кайман.
Куллен-кун лăпланаççĕ халь унта та,
Тупать çĕн çул-йĕр пурпĕрех афган.

Тĕнчен нуши-хуйхи, ун йуçĕ тарĕ
Яшсемшĕн нихăçан та ют пулман.
Инкек çитсен, пĕр çын пекех патваррăн
Çĕкленĕç кар.
Эпир — хастар йăхран!

## XII

Юратнă ялăм, сан сăнна сăнарăм,
Йăмран салху шавне ăша хывса.
Пăшăрханса та шантарса каларăм:
Нумай кĕттермĕп, таврăнăп часах.

Юратнă ялăм, анлă, ирĕк хирĕн
Сар хумĕ лăпкăн – лăпкăн куçнăçем
Кунта çуралчĕ шухăш, вăл пит çирĕп:
Нумай кĕттермĕп, таврăнăп кĕçех.

«Тăван çĕре мансан юп курмăн эсĕ...» —
Çак сăмахсем вырнаçрĕç чĕрене.
Юлташăм, эп те, эс те килмесессĕн,
Çĕнетĕ кам – ха пирĕн ял сăнне?

Юратнă енĕм, эсĕ чун йыхравĕ,
Çул – йĕрĕм паллă: пулăпăр пĕрле.
Эп таврăнсан, ĕçчен тăри шăнкравĕ
Саламлĕ уççăн сарă хĕвеле.

*1987—1988 çç.,*
*Турхан — Шупашкар.*

# ТĂВАН ЯЛ-ЙЫШĂМ ХУШШИНЧЕ

ПОЭМА

Чăваш ялĕсенчен нимпе те
Уйăрăлса тăмасть Турхан.
Вăл маншăн пит илемлĕ тетĕп,
Çулла, хĕлле — кирек хăçан.

«Уа!» — тесе кунта сас панă,
Систернĕ: «Çут тĕнче, эп пур!
Аннем ачашласа лăпканă:
«Пурнăçунта телей-юп кур!»

Тăвата çул иртсен те вăрçăн
Асапĕ, хĕнĕ йăлт çĕтмен.
Салтаксене вăл сăхнă вăрттăн
Çĕлен пек сăннипе куллен.

Вăрман хĕрриийĕнче вырнаçнă
Пульницăра çав вăхăтра,
Тен, юнашар палатăра
Эп палламан салтак аташнă.

Нихçан тÿрленейми суран
Ун пурăнас кунне чакарнă.
Кăшкăрнă вăл: «Урра! Урра!»
Тăна кĕрсессĕн çеç лăпланнă.

«Уа!» «Уа!» тени çапла
«Урра!» кăшкăрнипе пĕрлешнĕ.
Çав палламан салтакпала
Ун чух эп пурнăçшăн кĕрешнĕ.

Пуçа ватса шухăшласан
Туятăп: пур çав икĕ енлĕх —
Пурăннă чух кирек хăçан
Эсрелпе çапăçать этемлĕх.

Мана, тен, çав хастар салтак
Систернĕ: «Маншăн та эс пурăн.

Хамран мӗн килнине эп турӑм,
Ӑраскалу килет халь хӑвӑнтан.

Эп ҫутӑ тӗнчене килсен
Хӗл кунӗсем хуллен ҫывхарнӑ.
Сар ҫулҫӑсем ҫӗре ӳксе
Тавралӑха тунсӑхлаттарнӑ.

Вӑрман, уйсем-хирсем ҫаралнӑ,
Ҫил ачисем ши! шӑхӑрса,
Арҫури евӗр алхасса
Кирек ӑҫта та хуҫаланнӑ.

II

«Тӗп кил-ҫурт пирӗн Тукасра,
Масар касси юнашарах.
Петя тетӳ унта пурнатчӗ.
Ман шӑллӑм вӑл. Йӑли ҫаплаччӗ

Чӑвашӑн ӗлӗк-авалтан:
Тӗпре чи кӗҫӗнни юлатчӗ.
Вӑл Сухвипе мӑшӑрлансаччӗ...
Хӑй килеймерӗ вӑрҫӑран.

Сухви инкӳ виҫ хӗр ӳстерчӗ:
Анюк пурнать халь Атӑкра
Лидя кил-ҫурчӗ Шуркасра,
Таня аппу тӗпрех тӗпленчӗ.

Эп шӑллӑма пит хисеплеттӗм,
Тетӳ ҫуралсанах ӑна
Петя ятне парас-ха, терӗм.
Кӗҫ пурнӑҫларӑм эп ҫакна.

Эс ҫуралсан — пуплет атте —
Вӑрҫӑра вилнӗ Мӗкӗтен —
Ывӑлӑм сӑнӗ асӑмраччӗ,
Шур хут ҫинче вӑл Николайччӗ.

Ун ячӗ куҫтӑр терӗм эпӗ
Йӑх тымарне, хӑй шӑллӗне.

Сана, ачам, тетӳн хисепӗ
Хавхалантартӑр малашне...”

Чӑнах, халь шухӑша каятӑп
*Ят-сум пирки пуҫа ватса.*
Ҫур ӗмӗр ҫӗр ҫинче пурнатӑп,
Ыйту тем чухлӗ иҫмасса.

*Ку таранччен, тен, малашне те*
Ик ҫыншӑн ман пурӑнмалла.
Яваплӑхӗ чылай ҫав, тетӗп,
Ҫакна куллен-кун туймалла.

Тетеҫӗм — Мӗкӗте-Миккуль
Тухсассӑн ят — вӑрҫа ӑсаннӑ.
Тӑнӑҫлӑха хӑй шаннӑ пуль,
Ҫемье-йӑва ҫавӑрайман вӑл.

Ялтах, тен, савнӑ хӗрӗ пулнӑ,
Ӑна курас тесе щав ҫуннӑ.
Анчах пиншер салтаксем пек,
Килне таврӑнайман вӑл тек.

Ял-йыш чылай ята упрать,
Вӗсемпеле тетен ятне те.
Хыпар унран килмен пӗрре те
Пуҫне вӑл хунӑ вӑрҫӑра.

Ӑсчах пек, тӗплӗн шутласан,
Чӑнах, хуҫа ҫав икӗ енлӗх:
Пурӑннӑ чух кирек хӑҫан
*Эсрелпе кӗрешет этемлӗх.*

Атте тетен ятне мана —
Пӗчӗкскере — парсассӑнах,
Тен, шаннӑ: ун ӗҫне эп тӑсӑп,
Вӑл ӗмӗтленнине йӑлт тӑвӑп.

Эппин, чӑнах та, манӑн парӑм
Пурӑннӑҫем ӳссех тӑрать.
Тетеҫӗм, тен, ҫӳлтен сӑнать,
Ӑна пулах ӳсет пуль халӑм.

Ун ячĕ куҫнăшăн мана
Вăл савăнать-тĕр: тав сана,
Йăх тымарне тăсатăн, шăллăм,
Эп юн тăкни пулмарĕ кăлăх...

### III

Калас-тăк тӳррипе: Хăй Турă
Пурăнăҫа йăлт йĕркелет.
Кунта ырри е хурлăх курăн,
Этем шăпи Унран килет.

Ҫут тĕнчене, яш чух шутлаттăм,
Йĕрсе эп килнĕ ăнсăртран.
Ҫак шухăш йăнăш пулнăран,
Ăна халь эп тĕпе хумастăп.

Чăнах та, ман атте-анне
Хура-шурра тем чухлĕ тӳснĕ.
Туррăмăр ҫырнинче мĕн пӳрнĕ —
Йăлтах астивнĕ ҫавсене.

Анне ҫуралнă ял — Шăхач,
Кунтан виҫ ҫухрăмра вырнаҫнă.
Тăрса юлсан сĕм тăлăха
Вăл куҫҫульне чылай юхтарнă.

Хут вĕренмен. Качча кайсан,
Мăшăрĕн хӳттинче ҫич ҫул ҫеҫ,
Пулма тӳр килнĕ ун. Кайран
Ик ачипе пĕччен вăл юлнă.

"Тăлăх-туратăн пурнăҫне
Курма-тӳсме Турри ан хуштăр!" —
Чăваш ҫапла каланине
Аса илме тивет пĕр хушă.

Хĕрарăма, пулсан тĕревсĕр,
Нуша ялан ура хурать.
Тăрса юлсан хӳтĕлекенсĕр
Ăна такам та хăратать.

Аннемёрсен хуйхи-суйхи
Йăлтах пётмест эпир ўссен те,
Çунат сарса вăй-хал илсен те.
Çапла-тăр пурнăçăн йёрки.

Мён-ма тесен ахлатнă сасă
Чун-чёрене кăшт амантсассăн,
Ачисене куçсан тўрех
Юлать вăл аса илўре.

Поэт каланă çапларах:
"Пёчёккёллех, çуралсанах
Хёрарăм шăпипе амантăм
Унпа пёрпек кун-çулăм манăн"...*

### IV

«Аçу сан кам?» — тесе ыйтсан,
Çапла пулать хуравăм ман:
«Аттеçём пит хастар чăвашчё,
Тёреклёскерччё те йăвашчё.

Кун-çул ăна тем чул авсан та
Шывра путман, вутра çунман вăл:
Виç вăрçă витёр тухнăскер,
Юлашкинче — аманнăскер.

Хăй Турă «виççё» хисепе
Пит юратать тесе каласçё.
Аттемшён çак сăмах хальхаççăн
Çўрет тулли пёлтерёшпе.

Кил-çурчё ун виç хут кёлленнё.
Тăрса вăл юлнă нимсёрех.
Пуçне усман, каллех çёкленё
Хуралтă, пўрт çён никёсрен.

Тата вăл...виçё хут авланнă.
Виççёмёш арăмё — анне.
Шыранă Турă çырнине,
Унпа хуйха-суйха пайланă.

* *Борис Пастернак сăввин шухăшё.*

Шăп та лăп вăтăр сакăр çул
Вĕсем пĕр çăвартан çеç сурнă.
Ытарлăн каласан, ун мул —
Ачисем пурĕ вуннă пулнă.

Тăн-тăн çӳретчĕ вăл ялта,
Шӳтлетчĕ: «Эпĕ саккăрта çеç.
Кĕçех пулатăп тăххăрта».
Яш каччă пек, чăнах, хастарччĕ.

Вăл хăйĕн иртнĕ кун-çулне
Хутран-ситрен аса илетчĕ.
Эп çамрăк чух хастар çав, тетчĕ,
Хам палăртмастăм вăйлине.

Тĕп кил-çуртран тухса кайсан
Ман пулнă мунча пек пĕр çурт çеç,
Тата тиха, ят çĕрĕ. Пурпĕр
Шанаттăм ураланасса.

Вăрманĕ пулнă çывăхрах.
Ирпе мĕн кирлине куçлаттăм.
Юравлă йывăç тупсанах
Ăна касса çĕрле йăтаттăм.

Ик-виç çултан ял хушшинче
(Эп хам кĕтмен) сăмах та тухрĕ:
«Кĕçтен маттур, пуянлăх пухрĕ,
Халь иртсе кайрĕ ашшĕнчен».

«Уй куçлă та вăрман хăлхаллă» —
Тесе калать чăваш ытарлăн.
Çын пурнăçĕ — ку чăн сăмах,
Ума тухать ялта йăлтах.

Анчах та варласан ятна
Ăна ачу та тасатаймĕ.
Аттеçĕм, тавтапуç сана,
Пурăнăçна никам хурлаймĕ.

### V

«Çын пурăнăçĕ çип çинче,
Çиппи вара йĕп пек çинçе...
Е ÿкессе пĕлес пулсассăн,
Тÿшеккине сарса хурсассăн

Усал чире сирсе яратăн,
Инкек-синкерлĕхрен таратăн...» —
Çапла калаççĕ халăхра,
Ачаранах çаксем асра.

Чăваш пуплет тата ытарлăн:
«Ăша чир-чĕр пăтпа кĕрсен,
*Кайран та вăл хăпасшăн мар-çке*,
Пĕрчĕпе çеç тухать ÿтрен».

Пĕррехинче (эп сывă марччĕ)
Хăй тĕлĕкĕ пирки атте
Ирех аннепе сăмахларĕ:
«Мĕне ку пĕлтерет-ши, теп?

Пĕр пĕчченех пура хăпартрăм,
Пĕренисем сап-сар хыртан.
Пĕри çухалчĕ куçăмран,
Ăна шырарăм, тупаймарăм...»

Анне сасси кĕç хăлхана
Пырса кĕрет, хăй пăшăрханнă:
«Инкек пулмасть-ши Коляна,
Вăл ĕнерех темскер аптранă.

Ĕçлетĕн ху пульницăра,
Ачу пирки шухăшламастăн.
Илсе кайсам ăна часрах,
Килте пĕччен сыватаймастăп».

Пульница сăмаха илтсен,
Йĕппе укол тăвассинчен
Кашни ача-пăча хăранă,
Унта лексен тарма хăтланнă.

Ун чух апачĕ те килте
Çитсе тăман-çке ытлăн-çитлĕн.
Пульницăра тулли сĕтел,
Унта умран каиччен çинĕ.

Канихветне, пĕремĕкне те
Атте-анне туяннине
Астивнĕ сывă мар чухне.
Чирлемесен — курман тĕсне те.

Шур тумлă тухтăрсен ĕçне
Мĕн пĕчĕкрен эп хисеплетĕп.
Вĕсем асамçă евĕр, тетĕп,
Сирсе яраççĕ çын тертне.

Пулни-иртни асрах. Ĕретлĕн
Укол тусассăн шутлама,
Ун хисепне асра тытма
Вĕрентĕм эп сывалнăçемĕн.

Тен, тухтăрсем хавхалантарнă?
«Купарчуна мĕн чуль шăтарнă?» —
Тесе ыйтсан эп васкаса,
Параттăм тĕрĕс шутласа.

Мĕнпе кăсăкланать ача,
Çавна курса тăрать ăсчах.
Пĕрремĕш хут, тен, сиплекенçĕ
Мана пĕлӳ пухма пилленĕ.

Ӳкерĕнет пач улшăнмасăр
Сăн-пит шыв тĕкĕрĕ çине.
Ача та лайăх çын патнех
Шав туртăнать ырра туйсасăн...

Ансат пăхсан: çулсем-йĕрсем
Çиçеççĕ пек, шав ырă енлĕн,
Анчах мала шав утнăçем
Сиссех тăран: çумрах эсрелĕ...

## VI

Çемье ертӳçӗн йывӑр лавӗ:
Тӗпре тӑрать çурт тӑвасси,
Хуралтӑсем çавӑрасси.
Ун канӑç çук, çавна пула вӑл

Мӗнпур вӑйне хурса ӗçлет,
Йӳнеçтерет, перекетлет.
Ӑна пит илӗртмест тум-тирӗ.
«Вӗçкӗнленме,— пуплет вӑл,— ир-ха».

Ялта ун чух кив пӳрт нумайччӗ:
Улӑмпала çеç витнисем,
Хӗç тимӗрпе шиферлисем,
Ма пытарас, чӑнах, сахалччӗ.

Лайӑххисем йӑл-ял çиçетчӗç,
Эреш кӑна тултан пӑхсан.
Шалта — саксем те пӗр сӗтелчӗ,
Савӑчӗсем вара — тӑмран.

Атте калатчӗ: «Май та çук
Йӗри-тавра садсем чӗртмешкӗн.
Улмуççишӗн хураç налук,
Укçи сахал, пурри — çитмест-çке.

Йывӑçӗсем ӳпкелесе,
Кассан, хаш! сывласа ӳкетчӗç,
Калаттӑмӑр: «Эх, мӗскӗнсем!
Куççем вара тӗтреленетчӗç...»

Килти сехечӗ чарӑнсассӑн:
«Унисӗмсен аван çӳрет»,—
Пӗлме хушса ярсассӑн,
Чупаттӑмччӗ вара тӳрех.

Мӑкӑртаттӑм: «Çиччӗ çурӑ» —
Чупа-чупа çул тӑршшӗпех.
Атте: «Ан чарӑнтӑрччӗ урӑх».
Сехет вара шаккатчӗ ирчченех.

Çурт-йĕрĕ пирĕн пысăк марччĕ,
Ăна пĕрре аçа çапсаччĕ.
Урайĕнче выртни пире
Ун чух хăтарнă вилĕмрен.

Мĕн-ма тесен, çав вăхăтра
«Çăмхаллă çиçĕм» хуçаланнă.
Пÿрт ăшчикне йăлт çавăрттарнă,
Кайран чÿречерен вăл «тарнă».

Пĕр кантăка чăл-пар салатнă.
Урам енне, çынсем умне
Этем пек лартнă теприне.
Каланăн: «Эпĕ çеç хăватлă!..»

Турăш кĕтессине анне
Таса питшăллисем çакатчĕ.
Шур пустава вакланине
Курмашкăн кÿршĕсем каçатчĕç.

Пÿрте аçа çапни е урăх
Тупăннă пуль ун чух сăлтав.
Атте шутланă: «Çĕн çурт пурпĕр
Лартатăп тепĕр çул выртанта».

Укçи-тенки çитсех пыман,
Кĕç сутрĕç ĕнене васкавлăн.
Сĕт-турăхне вара кайран
Тутанайман эпир ир-каçăн.

Йÿнеçтерсе, ырра шанса
Атте-анне укçа пуçтарнă.
Пĕр пус çумне ик пус хушса
Çурт çавăрма вăрман каларнă.

Вĕр-çĕнĕ пÿрт часах çĕкленчĕ,
Ик пÿлĕмлĕ. Шала кĕрсен
Урам та питĕ илĕртместчĕ,
Лараттăмччĕ унта пĕччен.

Букварьпеле шав паллашаттăм,
Çырма хам тĕллĕн хăтланаттăм.

Хёвел тӳпиллӗ тӗнчере
Ун чух эп пулнӑ ҫиччӗре.

## VII

Авалтанпах ҫынсем тӗпчеҫҫӗ
Тем тӗрлӗ тӗлӗк тупсӑмне.
Курни кӗҫех пулассине
Чылайӑшӗ пит ӗненеҫҫӗ.

Е выльӑх-чӗрлӗх картара
Хӑйне тытсан урӑхларах
Кӗтсех тӑр: улшӑнать ҫанталӑк
Е нимсӗрех юлан сасартӑк.

Ялти юмӑҫсене атте
Ытти ҫынсем пек ӗненместчӗ:
«Ан сӳтӗл» — тетчӗ, хирӗҫлетчӗ,
Вара сӑмахламастчӗ тек.

Пӗррехинче, тӗттӗмленсен
Чун-чӗрене ҫӳҫентерсе
Касри пӗр йытӑ хыт уларӗ,
Анне вара ҫапла каларӗ:

“Ку ырра мар, инкек пулать,
Унран хӑпмашкӑн май та ҫук пуль...”
Пуҫра ҫӗн шухӑш ҫуралать:
Пурнӑҫӗнче этем, тен, суккӑр?

Мӗн-ма тесессӗн, вӑл ыран
Хӑй мӗн курассине пӗлеймӗ.
Кӑвапунтан ҫӳле сикеймӗн,
Иртме май ҫук ҫав шӑпаран...

Анне сӑмахӗ виҫ кунтан
Пророк каланӑн ҫирӗпленчӗ.
Ҫумра касран пушар тухсан
Ҫич кил-хуҫалӑх йӑлт кӗлленчӗ.

Вут-ҫулӑм кӑнтӑрлах алхасрӗ,
Ҫунтарчӗ умрине веҫех.

Вӗр-ҫӗнӗ ҫурт вырӑнӗнче
Кӗл купи ҫеҫ тӑрса юлайрӗ.

Чуна ҫурса саспа йӗни,
Ах! Ах! тесе кӑшкӑрашни
Тӑратчӗ илтӗнсе, ҫакна эп
Ҫулсем иртсессӗн те манаймӑп.

Ҫире саплӑклӑ шӑлавар
Тата кивелнӗ майка пулнӑ.
Анчах шутлаттӑм, шел, букварь,
Пенал, звездаллӑ ручка ҫуннӑ.

Ма вӗсене хампа илмен?
Кӑранташсем, портфель те пурччӗ.
Кӗлленнӗ-ҫке мӗн чухлӗ пурлӑх?
Ҫавна пӗлмен эп шеллеме.

Ачан хуйхи, ун тавракурӑм
Ытла ансат, йӑлт ӑнланмасть.
Асли курать-и юп е хурлӑх,
Ҫавна лайӑххӑн чухламасть.

Кил хуҫисем ҫапла пуплеҫ:
"Ачамӑрсем мӗн чухлӗ аслӑ,
Хуйхи те ҫавӑн чухлӗ теҫ,
Пурӑннӑҫем ӳсет яваплӑх..."

Ача чух шухӑш та сахал,
Хӗвелӗн хӗмӗ ӑшӑ, ҫутӑ.
Ача чух иксӗлмест вӑй-хал,
Ҫут ӗмӗтсем ҫеҫ ырӑ, тутлӑ.

## VIII

Ҫу хыҫҫӑн ылтӑн кӗр ҫитсен
Кунсем хуллен-хуллен кӗскелчӗҫ.
Тавралӑх сар тӗспе ҫиҫетчӗ,
Чупаттӑмӑр шкула куллен.

«Чи лайӑх вӑхӑт ачасемшӗн
Хӑҫан пулать?» — тесе ыйтсан.

Хуравĕ паллă: вĕренсессĕн,
Пĕр ÿркенмесĕр ăс пухсан.

Тăхтав çитсессĕнех хăш чух,
Пĕрне-пĕри кÿрентермесĕр
Иртместчĕ вăхăт, ма тесессĕн,
Кам пуçтахрах, çав пулнă шух.

Учитель — ватăрах хĕрарăм —
Таисия Ивановна.
Ырлатчĕç Турханта ăна,
Калатчĕç: арçын пек вăл харсăр.

Туска çине хитре çырсан
Пит шелччĕ хуратса тăкмашкăн.
Ачасене хăр-хар вăрçмашкăн
Вĕрентекен нихçан хăйман.

Пире хăех тетрадь çине
Çĕн сас палли çырса паратчĕ.
Ачасем хытă тăрăшатчĕç,
Çитме май çукчĕ ун шайне.

"Атьсемĕр — тăхтавра ыйтатчĕ —
Ирĕк паратăр-и туртма?"
Чÿречене кăшт çеç уçатчĕ,
Пуçлатчĕ тĕтĕм кăларма.

Кăмăлĕ ырăччĕ, куллен
Хăй хушнине йăлт итлесен,
Пĕр такăнмасăр вуласассăн,
Вăл хăвармастчĕ палăртмасăр.

Портфелĕнче махоркăпа
Пĕрле канихветсем нумайччĕ.
Ăна вăл валеçсе паратчĕ,
Тулатчĕ клас хавас шавпа.

Ача-пăча ялан хăйне
Ыр тунине манмасть, ку паллă.
Учитель — иккĕмĕш анне
Тесе калаççĕ çавăнпа пуль.

Вĕрентекенĕн ывăлне
Ялта “Леля” тесе чĕнетчĕç.
Чăн-чăн ăстаччĕ, хисеплетчĕç,
Мухтатчĕç ун ĕçĕсене.

“Ильич” лампи те çутататчĕ
Кил-çуртĕнчи пӳлĕмсене.
Хăйех фотограф, çынсене
*Сăн ӳкерсе савăнтаратчĕ.*

Таисия Ивановна
Нуша тӳсекен ачана
Май килнĕ чух шав пулăшатчĕ,
Кĕнекесем илсе паратчĕ.

Тетрачĕ, тĕрлĕ кăранташĕ
(Туяннă хăй ял лавккинче.)
Чылайччĕ ун сунтăкĕнче.
Ăна тӳлевсĕр салататчĕ.

Калатчĕ: “Тăрăшăр, атьсемĕр,
Пĕлӳ пулмасть хал хумасан.
Вĕренмесен, тар тăкмасан
Ыр çын шутне час кĕрейместĕр”.

Пĕчĕккĕллех ыр вăрлăх сапнă
Вĕрентекенĕмĕр чуна.
Çулсем иртсессĕн те çакна
Асран ямастăп эп нихçан та.

## IX

Çити çитми пулсан та пурнăç
Юмахри евĕр çав кунсем.
*Анчах ĕне ури те пуснă*
Пире куллен-кун ӳснĕçем.

Куçа хупсан ума тухаççĕ
Шăхлич кĕввиллĕ самантсем.
Кăваклăха илĕртнĕçем
Унта пулмашкăн йыхăраççĕ.

Тантӑшсемпе пӗрле вара
"Чип-чип" тухичченех чупаттӑм.
Туссем те ав серте-пултран
Уҫланкӑра тем чухлӗ татнӑ.

Е вутӑ-шанкӑ туртнӑ хамӑр
Траттайкӑпа атте хушсан.
Пире эппин хӑйса калаймӗҫ:
«Вӗсем ача чух тар тӑкман».

Ӗҫчен ҫынна ял-йыш мухтанӑ,
Кахалсене килӗштермен.
Хӑй тымарне вӑл ҫирӗп янӑ,
Чӑваш ҫавна пула пӗтмен.

Апла пулин те мухтамастӑп
Ҫав вӑхӑта пуҫ каҫӑртса.
Тертре анне сывланӑ ассӑн,
Тырри пулман-ҫке пит ӑнса:

«Епле йӳнеҫтерес, — шутланӑ —
Лекес килмест хӗн ытамне.
Атьсем вӗренччӗр, курччӗр канӑҫ,
Ан туйччӗрех асап мӗнне».

Анчах ӑна эпир астивнӗ,
Чухлатпӑр ҫӑкӑрӑн хакне.
Тӑраниччен Мӑнкунра ҫинӗ,
Ӑнланнӑ перекет мӗнне.

Кун тӑршшӗпех тар тӑкнӑ мар-и
Аннемӗрсем уй-хирсенче?
Ӗҫ куршанакӗ пач хӑпмарӗ
Аслисемпе ачисенчен.

Тен, ҫавӑнпа сӑвва илемлӗх
Куҫа шартса иленеймест.
Кас-кас чуна пусать кичемлӗх,
Хӗвел шевли йӑл-йӑл ҫиҫмест.

### X

Ыйткалакансем курӑнатчӗҫ
Урамсенче хутран-ситрен.
Кашни киле кӗрсе ыйтатчӗҫ:
«Хӑтарӑр вилӗмрен пире».

Кам куштанрах, ҫав хӑвалатчӗ
Пач шеллемесӗр вӗсене.
Ҫемҫерех чунлисем паратчӗҫ
Пашалупа ҫӗрулмине.

Ҫынна — пуплетчӗҫ — пулӑшсан
Тухмастӑн кӗлмӗҫе нихҫан.
Енчен те иртӗхсен ир-каҫӑн
Кӳршӳн ылханӗнчен тараймӑн.

Тӑн-тӑн пурӑнакан пирки
Калатчӗҫ: «Унӑн кушакки
Ухутара тытать мулкач ҫеҫ.
Вӗсен умран каймасть какайӗ".

Епле-ха — эпӗ тӗлӗнеттӗм —
Мӑр-мӑрӗ шав килте вӗсен.
Хуҫи: шӑши тытмасть тесе
Ӑна эппин мӗн-ма хӗнет-ха?

Ванькка тете — ман ырӑ кӳршӗ
Пулман ача-пӑчапа сӳрӗк.
Ярӑнтаратчӗ кӑмӑлтан
Машинине йӑлт пушатсан.

"Ҫынсем патне кайсан, чӗнсен
Сӗтелӗн хушшине ан ларӑр.
Апат сӗнсен кӑшт ҫеҫ тутанӑр,
Ан ҫиййӗр апшурла темччен.

Хӑна килсен сӗтел ҫине
Сӗлекӗре ҫӑтса ан пӑхӑр.
Вӑл пӗтермест мӗн панине,
Тухса кайсан ҫиетӗр хӑвӑр".

Атте кайсассӑн хӑнана
Унтан выҫӑхнӑн таврӑнатчӗ.
Яшка антарса парсанах
Тирӗк тӗпне ним хӑвармастчӗ.

“Алри ҫӑкӑра ан тӗпретӗр,
Чаплаттарса ан ҫиӗр” — тетчӗҫ.
“Ман татӑк пӗчӗккӗ” — тесен
Апат лекместчӗ мӗн касчен.

Ҫӳре-ха, тенӗ, выҫӑлла.
Йӑлӑнтарнишӗн шеллемен пач.
Хута кӗмен тем чуль йӗрсен те,
Ҫапла ӑс панӑ ачаллах.

Ҫисе тӑрансан пыл карасӗ,
Пуплетчӗҫ, йӳҫӗ-ҫке ытла
Е хура ҫӑкӑр выҫӑхсассӑн
Хӑех пулса тӑрать кулач.

Тухатчӗ ял ҫине сӑмах
Ӑс панӑ евӗр ҫаплараx:
Пуян ҫын кӑмӑлне йӑлт уҫнӑн
Хӑй килӗнче пуплет пит сумлӑн.

Ӗҫме-ҫиме тулли сӗтелӗ,
Пӗр кас тӑранӗ, ку чӑнах.
“Тутан хуплу, черкке тыт,— тет вӑл,
Хӑй пач килӗштермест сана.

Эс ан астив ун ҫимӗҫне,
Ытла та ан ӑмсан мулне.
Кирек хӑҫан та, ма тесессӗн,
Пулатӑн уншӑн ют ҫын эсӗ.

Чӑваш ҫынни хӑй кӑмӑлне
Уҫмасть пит хӑвӑрттӑн, ал-хапӑл.
Тӗпченӗ хыҫҫӑн ҫеҫ ӗҫне
Сана тивӗҫлипе вӑл хаклӗ.

Сӑнарӑм ачаран ҫакна:
Чухӑнрах ҫыннӑн чунӗ ырӑ.

Хӑй пурӑнсассӑн та пит юрлӑ,
Вӑл хатӗр пулӑшма сана.

“Тусна та, унӑн ашшӗне те, —
Атте калатчӗ: ан пӑрах.
Вӗсемпеле хӗне ҫӗнетӗн,
Юлмастӑн нихӑҫан хӑрах.

Пулӑшӑвна вӗсем манмаҫҫӗ
Енчен пулсан хӑв хурлӑхра.
Сана вӗсем те ал параҫҫӗ
Тӑвансенчен те маларах.

Пӗрле пурӑннине ним ҫитмӗ:
Пурри, ҫукки — йӑлт ҫурмалла,
Пӗр ҫӑвартан ҫеҫ сурмалла.
Вара пулать тин ытлӑх-ҫитлӗх...”

**XI**

Ҫунса кайсан Милюк тете,
Пускилӗмӗр ҫурт лартаймарӗ.
Вӑл куҫрӗ Ваттисен ҫуртне,
Куҫ умӗнчех-ха ун сӑнарӗ.

«Каҫҫуннӑй ҫуртрисен — пуплетчӗҫ —
Хуйхи-суйхи сахалтарах.
Ӗҫме-ҫиме ҫитет пурне те,
Унта вӗсен чӑн-чӑн ҫӑтмах».

Анчах та... шухӑша эп путрӑм:
Ҫын куҫӗнчен куллен пӑхни,
Янтине ҫеҫ пӗрмай кӗтни
Чӑвашӑн чунӗшӗн пит ют-ҫке.

Милюк тетен пурнас килмен-им
Пӗрле тӑван-пӗтенӗпе,
Ӑш-чик ҫунсан ачисемпе
Вӑл хурлӑхне пайлас темен-им?..

Ҫу кунӗсем ҫитсен час-час
Эпир — ялти ача-пӑча

Уçланкăра çырла татсассăн
Каяттăмăр ăна сутмашкăн.

Пире хапăлласа кĕтетчĕç
Каççуннăй çуртрисем ялан.
Çырлашăн укçине сĕнетчĕç,
Йӳнеçтереттĕмĕр çапла.

Стакан çырлашăн аллă пус
Ветерансем пире паратчĕç.
Фронтра аманнисем чылайччĕ,
Вĕсем кашнийĕш пулнă тус.

Милюк тете те курăнатчĕ,
Пире курсассăн йăл кулса
Мăнукĕсем пирки ыйтатчĕ,
Итлетчĕ ассăн сывласа.

Туйман эпир ун асапне,
Çулăмсăрах вăл çуннине.
Пулсан та çыннăн тутă пурнăç,
Тăван кил хаклă уншăн пурпĕр...

Хирте вырнаçнă кив масар,
Ваттисен çурчĕ юнашар.
Уй витĕр такăр çул выртатчĕ,
Пире вăрман енне йыхратчĕ.

“Масар ăçта?” — тесе ыйтсассăн
Пуçна çеç сулласа илен.
Пӳрнепеле эс тĕллесен,
Калатчĕç: “Кĕç вилсе выртатăн.

Пĕртен-пĕр çăлăнăç пур санăн —
Пуплетчĕç аслăраххисем —
Сырт пӳрнӳне эс, юн тухсассăн
Пĕтеççĕ тин çылăхусем”.

Шеллеттĕмĕр “çылăхлине”,
Унран кулас йăла пулман пач,
Каçарттарсан вăл айăпне
Эпир кашнийĕш хавасланнă.

Хыҫра юлсассӑнах масар
Утаттӑмӑр шав кӑларса.
Ҫул хӗрринчи пӑрҫи: тат, тенӗн,
Ҫисе пӑхмашкӑн илӗртетчӗ.

Анчах уй хуралҫи кунтах,
Ҫӳретчӗ вӑл юланутпах.
Саламатпа хӑмсарнӑҫемӗн
Кулатчӗ: "Пӑрҫана ҫиеймӗр!"

Хур кӗтӗвӗ уя кӗрсен
Хуралҫӑ хуҫине тупатчӗ.
Калатчӗ вӑл: "Тепре лексен
Ҫыратӑп акт е штраф паратӑп..."

Шав хыҫнӑ ёнсине хресчен:
"Выльӑхӑмсемшӗн те яваплӑ.
Хирӗҫлесе сӑмах чӗнсен
Кун-ҫул тата пулать тӑварлӑ..."

## XII

«Ял варринче чиркӳ ларатчӗ,
Ӑна пӑстарчӗҫ те кайран
Кунта халь «клуб» тесе уҫтарчӗҫ,
Хирӗҫлеме никам хӑйман.

Эп лартнӑччӗ ун хӗресне,
Ҫав саманта нихҫан манмастӑп.
Вӑй-халӗ ҫитнӗ ун чухне,
Ӳкессинчен те хӑраман ҫав.

Ун чух Турра ӗненекен
Усал ӗҫпе пит айкашман-ха.
"Эх, ан амантӑрччӗ Кӗҫтен" —
Тесе ял-йыш мана сӑнанӑ.

Чиркӳ ҫывӑхӗнче чылай ҫын
Пӑхатчӗҫ шикленсе, сӑпайлӑн.
Ҫӳлте ӗҫе вӗҫлесенех
Сӑхсӑхрӑм, антӑм ҫӗр ҫине.

Колхоз йёркелесен, кайран
Ăна уксах Федькка антарнă.
Çавна эп хам куçпа курман,
Чылай çын пуçтаха ылханнă.

Этем куççулĕ нихăçан та
Çĕре ахаль ӳкмест, ăнланăр.
Ав çитрĕ Федьккăна ылхан,
Кашни ачи ухмах, айван..."

Атте çапла аса илетчĕ,
Çав иртсе кайнă кунсене:
"Пĕртен-Пĕр Турă пур-ха — тетчĕ,—
Сăнать çӳлтен вăл çын ĕçне".

Вулакана сĕнсе каласшăн:
Вĕрен эс хăв шухăшламашкăн.
Атте каланинче, чăнах,
Тĕрĕслĕхĕн тĕшши пурах.

Ман тусăм Исмуков поэт:
"Çак пулăма тĕпчерĕм, — тет, —
Хĕрессене сирпĕтекен çын
Хăй пурнăçне пӳкле вĕçленĕ..."

Ват карчăксем тĕттĕмленсен,
Çын салансан клуба утатчĕç.
Чул никĕс хăмине сирсе
Унта вак укçасем хуратчĕç.

Нухрачĕсем, пит шел, вĕсен
Çав вырăнта упранаймастчĕç.
Ăна тупатчĕç ачасем,
Кайран ял лавккине чупатчĕç.

Пĕремĕк, клентăр туянсан
Клуб алăкĕ яр уçăлать-çке.
Шаккур Толи ырăланать ав,
Çав çимĕçе хăй тутансан.

Ялан вăл выçăччĕ, апшур,
Мĕн панине хыпса çăтатчĕ.

Унтан мӑн сассипе калатчӗ:
«Чару ман ҫук, кино халь кур».

«Толя тете, кино пӑхтар»,—
Урамрисем пит йӑлӑнатчӗҫ.
«Йӗпе сӑмса! Вула букварь», —
Тесе вӑл шав кутран тапатчӗ.

Шаккур Толи чее этемччӗ,
Ҫын умӗнче нимскер илместчӗ.
Хӑяр е помидор парсан
Ҫисе яратчӗ васкаса.

Иртетчӗ ҫак ӗҫ тӗттӗмре,
Ҫутӑ ҫутман вестибюльре.
“Хӑв юлташна кала, — хушатчӗ, —
Эп куртӑм кинине песплатнӑ”.

Суйма тиветчӗ ачасен,
Кино пӑхас килет куллен.
Укҫа ҫукки шав чӑрмантарнӑ,
Кашнийӗн ӗнсине хыҫтарнӑ.

Чӑх ҫӑмарта тӑвассине
Чылай ача куллен сӑнанӑ.
Хӑш чух вӑрланӑ майӗине,
Вӑрҫтарнӑ амӑшӗсене.

Ҫав ҫӑмарта пит кирлӗ пулнӑ
(Ку — ҫӑлӑнӑҫ, пӗртен-пӗр мел.)
Укҫа тума, билет илме.
Ҫапла кино чылайӑш курнӑ.

## XIII

Ҫав аллӑмӗш ҫулсем асра-ха:
Ҫӗршыв хӑй хӑватне саратчӗ.
«Телей ҫеҫ курччӗр ачасем» —
Ӗмӗтленетчӗҫ аслисем.

Уй-хирсенче е фермӑра
Ӗҫленӗ ытларах ал вӗҫҫӗн.

Лайăххине çеç шаннăран
Çĕнтернĕ чăрмава пĕр вĕçĕм.

Куç умĕнчех ӳкерчĕксем:
Ялта фронтовиксем çӳретчĕç.
Ал-урине çухатнисен
Пĕрмай чаксах тăратчĕ речĕ.

Пĕри шур юр çине выртсах
Кив тракторне пĕччен юсатчĕ.
Тĕллевĕ пулнă çапларах:
"Хура çĕре вăл сухалатăр!"

Тепри ял варринчи лаçра
Ĕçлетчĕ кунĕпе канмасăр.
Сăн-пичĕ хăйĕн хуп-хура,
Сӳре е плуг юсатчĕ маçтăр.

Шух вăхăчĕ васканăран
Атте-анне ĕçне манатпăр.
Вĕсем куллен тăрăшнăран
Паян эпир пит аптрамастпăр...

Килте хăна-вĕрле пухсан
Аслисене пĕрмай тăнлаттăм.
Пуплетчĕç ăшшăн, кăмăлтан,
Эп кашнине пит кăмăллаттăм.

Килти махоркăн тĕтĕмне
Реххетленсе пĕрмай çăтуçăн
Фронтра хăйсем мĕн тӳснине
Аса илсе сăнлатчĕç уççăн.

Пуплетчĕç: "Кăмăл туличчен
Эпир туртса курман пирус та,
"Атакăна!" — приказ илтсен
Çĕкленнĕ те чакман пĕр пусăм.

Ирех куç хупрĕç йĕкĕтсем
Хаяр вăрçа пула чылайăн.
Çĕнтертĕмĕр. Тăшман килсен
Тавăруран вăл хăтăлаймĕ".

Ман савнă ялăмран ăсаннă
Хаяр вăрçа чылай салтак.
Çĕр вуннăшĕ таврăнайман ав,
Кĕлте пек, тăкăннă унта.

Шухăшласан: мĕн чухлĕ хурлăх
Тиеннĕ пирĕн ял çине,
Мĕн чухлĕ юхнă çын куççулĕ,
Кашниййĕш чăтнă пӳрнине.

Кĕрешнĕ те çĕнтернĕ халăх
Ыр ĕмĕтне мала хурса,
Çĕнтерĕве шав çывхартса.
Ун иксĕлмен нихçан вăй-халĕ.

Çĕршывăн çут пуласлăхне
Фронтовиксем шанса тăратчĕç.
Ларатчĕç те шуçăмччĕнех,
Унтан кайма пуçтарăнатчĕç.

"Асран кайми" юрра хуллен
Куççулленсе тăрса юрлатчĕç.
Кăпăклă сăрана ĕçсен
Шăв-шавсăр, лăпкăн уйрăлатчĕç.

Пит çирĕпчĕ кăмăлĕпе,
Ĕçре — хастар, килте те ырă.
Чылайăш çук халь пирĕнпе,
Хĕвел вĕсемшĕн çунмĕ урăх...

## XIV

Ал ăстисем ялта нумайччĕ:
Çуна, урапа тăвакан,
Чĕрес, чӳлмек çавăракан.
Тĕпре «йӳнеçтерес» сăмахччĕ.

Уй-хирсене акатчĕç кантăр,
Пир шурататчĕç килсерен.
Катка, пичке, лаххан е алтăр —
Пурне те тунă хăй хресчен.

Хула тум-тирĕ, çитсă, пурçăн
Пусма çынсем туянайман.
Ял лавккинчен илмешкĕн сутăн
Укçи-тенки çитсех тăман.

Хăюлланах килтен киле
Тутар арăмĕсем çӳретчĕç.
Пусма, кĕпе, боти сĕнетчĕç:
Туянăр, тетчĕç, йӳнĕллех.

Хальхи пек каласассăн «бартер»
Çырлахтаратчĕ вĕсене.
Улшу тума кашнийĕ хатĕр,
Пĕлетчĕç çав майне, шывне.

Е Шăнкăртам çынни, мишер,
Хăй лашипе çӳрекенскер:
«Малай,— пуплетчĕ,— парăп хăмпă,
Илсе килсен эс тимĕр-тăмăр».

Писменĕ, тараси ун пурччĕ,
Илсе çӳретчĕ хăйĕнпех.
Виçетчĕ те калатчĕ: “Курăр,
Хаклатăп эпĕ тĕрĕсех”.

Хăш чух вăл укçине паратчĕ:
Татах та кил, тесе калатчĕ.
Хуратчĕ урапи çине
Ача-пăчан пур таварне.

Вăлах пухатчĕ çĕтĕк-çатăк,
Нимскер те тиркесе тăман.
Пит тĕлĕнеттĕмĕр унран:
“Вăл чăн та ăслă-ши е катăк?”

Кĕрсе ларсассăн çак мишер
Столовăйне апатланмашкăн,
Тăсланкă, хĕрлĕ питлĕскер
Чемпион пек памастчĕ маххă.

Ик-виç этем çиессине
Куç хупиччен хыпса çăтатчĕ.

Хăйма ĕçсен те лăпланмастчĕ,
Кĕтетчĕ чей парассине.

Ун утăмне ялан сăнанă
Эпир, ялти ача-пăча:
"Ăçтан тупать-ха вăл укçа?" —
Пĕлес тесе пуçа шав ватнă.

Ялта пуплетчĕç çапларах:
"Тутар çынни çунать апатшăн.
Пурнать суту-илÿ тусах..."
Ют пулнă кун пек ĕç чăвашшăн.

Çулла цыгансем чарăнатчĕç
Хутран-ситрен ял çывăхне.
Тĕл пулсанах айвансене
Юмăç ярса шав улталатчĕç.

Ача-пăча каçпа йĕрсен
Шав хăрататчĕç аслисем:
"Мишер хĕрарăмне паратăп,
Цыгансемпе лартса яратăп..."

Тăвар, краççын е шăрпăк, супăнь
Шутланнă хаклă таварсем.
Илсессĕн çавсене çеç сутăн,
Вăра пит аптраман çынсем.

Тĕлĕнмелле! Чăваш çырлахнă
Çак япаласемпе кăна.
Ытти таварĕ хаклăрах-çке,
Пулман май туянма ăна.

XV

«Хура тĕспе кăна сăрлатăн,
Пулни-иртни ытла кичем».—
Тен, вулакан çапла калать пуль
Хайлавăмпа паллашнăçем.

Хăш чух ялта пулса курсассăн,
Ват çынсемпе сăмахласассăн

Чуна пулать йӑлтах уҫма,
Тата...ачалӑха курма.

Хӑш-пӗрисем пит мухтанаҫҫӗ,
Вӗсем юрлаҫҫӗ пӗр кӗвве:
«Йӑлийӗ ҫыхӑннӑччӗ тачӑ
Ҫӗрпе пӗр уйрӑлми тӗвве».

Ҫӳлтен сӗт ҫунӑ имӗш, ӗлӗк,
Кулач та пыл кайман умран.
Чӑваш кал-кал сывланӑ, пӗл эс,
Тум-тирӗ пулнӑ ун аван.

«Тыр-пул вара мӗн чул тухатчӗ
Пӗр гектартан?» — тесе ыйтсан.
«Пӗлместӗп ҫав, анчах чылайччӗ».—
Хуравлаймасть аптранӑран.

«Ҫич центнертан ытла цулман-ҫке», —
Сӗнетӗп эп танлаштарма. —
Вӗт шӑллӑ ҫурлана та манчӗҫ,
Кирлех-ши кӑкӑра ҫапма?»

Вӑлтсассӑн: «Пенси, тен, илеттӗн
Халь панинчен нумайтарах?
Хур-кӑвакалӗ картара
Е выльӑхӗ чылай ӗрчетчӗ?»

Юлташӗ: «Пӗл-ха виҫене, эс, —
Пушпараппанҫӑна чарать. —
Сисместӗн-им шахвӑртнине те,
Айван ача пекех павран».

Аптрать леш:
«Эй, ҫапла пулмасӑр,
Ҫапла кум, тӗрӗс сӑмахлан...»
Ҫынсен ятне эп асӑнмасӑр
Хайлавӑма тӑсам мала.*

*XIV сыпӑкӑн кӗске варианчӗ «Тӑван ен йыхравӗ» поэмӑра та пичетленнӗччӗ /172 стр./

Трахомпунктри Нина аппа
Чылай киле кӗрсе тухатчӗ.
Куç чирӗнчен вӑл сӑмахпа,
Укол туса та сывататчӗ.

«Куçа хыртарнине чӑтмашкӑн
Пит йывӑр», — тетчӗç ачасем.
Мӗн тӑвӑн? Тӳснӗ çав вӗсем,
Пултарнӑ-çке суккӑрланмашкӑн.

«Трахома ерекен чир», — тетчӗç
Ялти çынсем пӗрне-пӗри.
Эпир пулманччӗ ун хурри,
Атте ман сыхланма пӗлетчӗ.

«Саплӑклӑ шӑлавар-кӗпешӗн
Пит ан вӑтанӑр, ачасем.
Таса çеç пулччӗр тумӑрсем,
*Вара чир çулӑхаймӗ*", — тетчӗç.

Атте ӗçпе тухса çӳретчӗ,
Çуртсене дезинфекцилетчӗ.
Таракана, хӑнкӑлана
Дустпа пӗтернӗ яланах.

Пӑхаттӑм эп ун тетрадьне.
Хӑш-хӑш ялта хӑй пулнине
Шур хут çине йӑлтах çыратчӗ,
Çав отчета врача паратчӗ.

Шкула пырсан кашни класа
Медсестрапа кӗрсе тухатчӗç.
Пуçсем çинче пыйтӑ шыратчӗç,
Тупсан сиплетчӗç васкаса.

Тӑхтавӑн вӑхӑчӗ çитсен,
Пит-куçӗ хӗрлӗ пуличчен
Пыйтлапнӑ ачаран шав кулнӑ —
*Йӗпленинчен усси, тен, пулнӑ?*

Калас пулать, витлес йӑла
Нумайлӑха пыман, кӗç маннӑ.

Унпа хуçман шав кăмăла,
Кăшт тăрсанах пĕрле вылянă.

## XVI

Сăрт тăрринче çил армансем
Çĕртен хăпса вĕçес тесе
Çӳл тӳпене пăхса ларатчĕç,
Çуначĕсем кăлтăртататчĕç.

Унта ял-йыш кĕрпе çуратчĕ,
Ыраш с тулă авăртатчĕ.
Арманçă пулнă хисепре,
Çын пынă лаççине ирех.

Ăна аптратнă: "Вĕтĕ авăрт!"
Тухсассăн çăнăх ытларах
Кашниййĕн пулнă кăмăл савăк,
*Арманçăна тав тумаллах.*

Мĕн-ма тесен, ун кусĕнчен
Мехел çитсен пăхан кĕçех.
Черечĕ те пит вăрăм пулнă,
Ытла та майĕпен вăл шунă.

Е ĕçлесессĕн тракторпа,
Е çӳресен машинăпа —
Пулсассăн эс механизатор,
Калатчĕç: "Вăл ăстаçă, паттăр".

Тум-тирĕ ун пулсан хура пит,
Вăл илнĕ ытларах укçа.
Çав çыннăн татăлман нихçан
Кĕлетĕнчен тулли, ырашĕ.

Ун чух машина паркĕнче
Комбайн, трактор нумай марччĕ.
Эпир куллен-кун ӳснĕçем

Вĕсен те шучĕ йышлăланчĕ.
Яшсем ялтан тухса каятчĕç

Пĕлӳ пухма Казахстана.
Çитсессĕн Карагандăна
Унта ик çул хушши пурнатчĕç.

Кайран çав хуларан яла
Чылайăшĕ калла килсессĕн,
Тăван килте те вырăсла
Пакăлтататчĕç именмесĕр.

Ӳсĕрĕлсен, пирус ĕмсе
Шăл витĕр сурнă май вăрçмашкăн,
"Я хто!" — тесе хăлаçланмашкăн
Ăстаччĕ çав "стилягăсем".

Çапах та пуçа тивнĕ сĕрĕм
Пымастсĕ нумая. Çав чир
Иртсе каятчĕ хăвăрт, ир.
Диагнозне лартсан тĕп-тĕрĕс.

Хырăм выççи каластаратчĕ
Çав йĕкĕте амăшĕпе.
Ик-виç кунтан вăл сăмахлатчĕ
Чăн чăвашла пускилсемпе.

Е кĕрепле пуçран çапсан,
Куçран вут-çулăм кăларсассăн
Кăвак куçпа чăваш пулса вăл
Тухатчĕ мунчаран вăрçса.

Сăмах ял хушшинче çӳретчĕ:
"Çав çын ачи вĕçкĕнленет,
Чăваш ятне ярать, çĕртет-çке,
Ачашлани кӳмест тивлет..."

Пĕр-пĕр майра тупса ярсан,
Унпа ывăлĕ таврăнсан
Ял хушшинче сăмах тухатчĕ,
Ăна чылайăшĕ хурлатчĕ.

Калатчĕç: эс чăваш пулсан
Кăк тымарне ан хăрт нихçан.

Ют йăх хĕрне качча илсессĕн
Чăвашлăха йăлт пĕтеретĕн.

Мĕн-ма тесессĕн, хулара
Ачу сан чăвашла пуплеймĕ.
Тăван чĕлхене вĕренеймĕ,
Тӳр пилĕк пулĕ вăл ҝайран.

Калас-тăк тӳррипе: чăвашшăн,
Чĕлхемĕршĕн кирек хăçан
Чăн малтанах эпир яваплă.
Ăна упрамалла ялан.

Чĕлхемĕре ют халăхсем
Нихçан та уççăн хурламан-ха.
Ăна сивлеççĕ вырăсланнă
Чăвашран тухнă пуçлăхсем.

## XVII

Асрах-ха радио кĕртни,
Кашни килте вăл калаçни.
Çынсем епле пит савăнатчĕç,
Ун умĕнчен малтан каймастчĕç.

Ял варринче те çакнă питлĕх
Янратчĕ Гимн кĕрличченех.
Ял-йыш ăна тăнлатчĕ тимлĕн
Ир пуçласа мĕн каçченех.

Ялтан тухса курман çынсем,
Уйрăммăнах хĕрарăмсем:
"Епле-ха — тĕлĕнетчĕç питĕ —
Сассем куçаççĕ пралук витĕр?"

Е питлĕх ăшĕнчи çынна
Ача-пăча хăш чух шыранă.
Приемникне йăлт салатсан та.
Ĕç-пуç ăнман çав яланах.

Çав питлĕхрен артисчĕсем
Сӳтсессĕнех тухса таратчĕç.

Пулас йăстаçăсем аптратчĕç:
Йăçта çухалчĕç-ха вĕсем?

Тин çеç юрлатчĕç юрăсем,
Такмакласа ташша çапатчĕç.
Пĕлеççĕ çав куçа пăвма та,
Кĕске вĕсен хўрийĕсем.

Шупашкартан концерт парсассăн
Итленĕ, сасă кăлармасăр.
Спектакльсем, çĕн хыпарсем
Çынсемшĕн пулнă хăнасем.

Кайран хăйсем мĕн илтнине,
Пĕлсен Мускав каланине
Пĕрле ларса сўтсе яватчĕç,
Çапла çынсен куç уçăлатчĕ.

Саппун е тутăр вĕçĕпе
Шăрçа пек куççульне тăкуçăн,
Нарспин телейсĕр шăпипе
Килĕшменрен пуплетчĕç уççăн:

"Тавах, халь самани аван,
Хĕрарăмсен енче саккунĕ.
Пурнать вăл арçынпа пĕр тан,
Чылай хĕн курнă эпĕр уншăн..."

Çапах та, тўррĕн каласан,
Килте арçын хуçа шутланнă.
Хăшĕ-пĕри пит пуçтахланнă
Эрех е сăмакун сыпсан.

"Кашăкпа тирĕк сас парать,
Хутран-ситрен шакăртатать..."—
Чылай чухне çапла пупленĕ,
Хирĕçнине килтех вĕçленĕ.

Яла килсессĕн артистсем
Йĕри-тавра чăн-чăн уявчĕ.
Хитре тумпа вара çынсем
Ун чух клуб еннелле утатчĕç.

Эп хам та пулнăччĕ пĕрре
Спектакльте. Пит тĕлĕнсеччĕ
(Художник декорацире
Колхоз уйне те ÿкерсеччĕ).

Ун чух эп çапларах шутланă:
Артисчĕсем — чăн улăпсем.
Çынсем киличченех вĕсем
Клуб стенине сÿтме пултарнă.

Ăна хирпе ав çыхăнтарнă.
Суха касси куç умĕнчех.
Трактор сасси çине-çинех
Кĕрлет кĕç-вĕç килсе таптас пек.

Е аслатин чăн-чăн шавне,
Вут-çиçĕм ялтăр! çиçнине
Кăтартрĕç артистсем пит лайăх,
Асра вăл юлчĕ асăнмалăх.

Чăваш театрĕ!.. Вăл чăнах та,
Пĕлет чуна тыткăнлама.
Савăнтарма, кулянтарма,
Куçа пăвма та, тухатма та.

Пĕрремĕш хут çапла, ун чух
Ăçта хам ларнине йăлт маннă.
Илем патне туртăннă чун,
Ăна курас тесе вăраннă...

Пыльчăк касри Салма Леви,
Ман тантăшăм пит пултаратчĕ.
Вулатчĕ вăл, хĕрÿ сăвви
Пур халăха та тыткăнлатчĕ.

Меçник Вови те тăрăшатчĕ,
Лева унран маттуртарахччĕ.
Çуралнăскер артист пулмах
Хăйне пĕлетчĕ кăтартма.

Пĕлÿ шайне ÿстернĕрен,
Шкулта аван вĕреннĕрен

Крыма кайма вăл тивĕç пулчĕ,
Унта ун ĕмĕчĕ те тулчĕ.

Пионерсен Артекĕнче
Таланчĕ палăрнă кĕçех.
Чăваш ятне çӳле çĕкленĕ,
Ăмăртура пĕччен çĕнтернĕ.

Пире вăл ылтăн медальне,
Жюри хăйне çеç панине
Яла килсессĕнех кăтартрĕ,
Сар тĕс сăнне-питне çутатрĕ.

Кĕлпук мучин е Кудряшовăн,
Е Родионов сассипе
Тĕлĕнтеретчĕ, чăннипе,
Кашниййĕншĕн ку пулнă шоу.

Анчах та шел, шкул пĕтерсен
Ун ĕмĕчĕ пурнăçланмарĕ.
Куçлăхпа çеç çӳренĕрен
Артист пулма вăл каяймарĕ...

## XVIII

Чăваш ятне çĕклекенсем,
Малашлăха шанакансем
Турханăмран чылайăн тухнă,
Вĕсем кунта малтан ăс пухнă.

Радиопа параççĕ юрă,
Ун ячĕ: «Савнă ялăмра».
Ăна Денисов — паллă юрăç
Юрлать пит тунсăхлăн, вăрах.

«Ăна çыраканни, — пуплеççĕ, —
Петров-çке, хамăр ялсемех.
Ун ашшĕ Катемес Лекçей-çке,
Толи сăнĕпе амăш пек.

Çав паллă композитора
Ача чух курнăччĕ клубра.

Çулла яла килсе каятчĕ,
Ватти-вĕттипе сăмахлатчĕ.

(Каярахпа Шупашкарта
Пĕр юрă эп унпа çырсаччĕ,
Ăна шкула халалласаччĕ.
Ăс пухнă-çке эпир унта.)

Ял-йыш вĕреннĕ çынсене
Кирек хăçан та хисеплетчĕ.
Шур сухалсем те тĕлĕнетчĕç:
Мăна хумаççĕ хăйсене.

Сăлтав мĕнре-ши?
Шухăшлаттăм:
Чап илнĕ çын ма мухтанмасть?
Уй хуралçин пĕлӳ çич клас çеç,
Ачасемпе пач калаçмасть.

Ӳссе пыруçăн эп ăнлантăм:
Ăс çимĕçĕ сар ылтăнран та,
Çут кĕмĕлрен те хаклăрах,
Пĕлӳ çăлкуçĕ çеç пылак.

Анчах ăспа çиçсе тăма
Кирек хăçан та çăмăл мар.
Шăп çавăнпа вĕреннĕ майăн
Çын нушине куратăн лайăх.

Шăп çавăнпа чăн-чăн этем
Хăйне мăна хумасть нихçан та.
Вăл малалла ăнтăлнăçем
Кӳрет ахаль çынна та шанăç.

Атте калаччĕ çапларах:
Усал çынран тар хăвăртрах.
Кам ăслă, ун ури вĕçне те
Выртсассăнах пулан тивлетлĕ...

Турхан ятне çӳле çĕкленĕ
Мухтавлă Кокель, вăл кунтан.

Малтан ялти шкулта вёреннĕ,
Ăс пухнă Питĕрте кайран.

Епископ Герман — шăллĕ унăн,
Чупне таса упранăскер,
Святой ятне тивĕçнĕскер
Калать пек: "Эп сире ыр сунăп!.."

Тури Тăрмăшĕнче (Ку ял
Турханпала пĕрлешнĕ халь)

Кутузов генерал кун курнă,
Кунтан Андреев сăвăç тухнă.
Чекушкинпа Смирнов çӳренĕ
Пĕлӳ пухмашкăн Турханах.
Упамсари ман тус Кервен те
Вĕреннĕ çак вăтам шкултах.

Чылай вĕсем, ят-сумлисем.
Шанатăп: чаплăраххисем
Турханăмра татах çуралĕç,
Чăваш сумне çӳле хăпартĕç.

### XIX

«Илем çăлать çут тĕнчене...»—
Тесе каланинче пур чăнлăх.
Унран çеç тĕвĕленнĕ вăрлăх
Аксан парать хăй çимĕçне.

Ват ăсчахсем тата çапла каланă:
«Нихçан икпитлĕ çын ан пул.
Сан тăшману вăлтса ыйтсан та,
Эс хăвăн шухăшупа юл.

Енчен те тĕрĕсмарлăха
Ыр вăрлăх ку тесе, аксассăн,
Кайран чăн инкеке выратăн,
Тар юхтарни пулать ахаль.

Е ачăрсем малтан утсассăн
Пĕртен-пĕр тĕрĕс çулпала,

Унран хăпмаççĕ ватăлсан та,
Ултав вĕсемшĕн ют ялан.

Каварлă е усал çынсен
Хĕн-хурлă, серепеллĕ çулĕ.
Таса чунна упрас тесен,
Кĕлмĕçленме хушмаççĕ мулшăн».

Шкула чупаттăмăр ирех:
«Ӳссессĕн ăслă çын пуласчĕ,
Атте-аннене пулăшасчĕ».—
Çак шухăш пулнă чĕрере.

Илья Сергейч, чăваш чĕлхин
Учителĕ пĕрре каларĕ:
«Ыран сăввăрсене вулатăр,
Çырас пулать ăна кашнин.

Хитре тĕрленчĕк е калав,
Юмах пулсан та йышăнатăп.
Кам ăнăçлă çырать хайлав,
Çавна шкул хаçатне паратăп».

Хыçатпăр эпĕр ĕнсене:
Кĕнекерс хитре çыраççĕ.
Кашни поэт чăн-чăн ăстаçă,
Ăçтан-ха çитĕн вĕсене!

Пĕрремĕш хут тар юхтарса
Пĕччен ларса эп çыртăм сăвă.
Учитель хушнă-çке, мĕн тăвăн?
Май çук тăмашкăн юнтарса.

Вĕренмелле çеç çырнинче,
Тен, пулнă илĕртӳллĕ çулăм?
Çапах та пуçласа эп туйрăм:
Ас пухмалла поэтсенчен.

Илья Сергейч Сергеева —
Вĕрентекенĕме тавах.
Чуна вăл ырă вăрлăх акнă,
Пуласлăха пророк пек шаннă:

«Кĕнекере пĕлӳ çăлкуçĕ,
Унпа çеç паллашсан — çул уçă.
Вĕреннĕ çын çеç малашне
Тупма пултарĕ телейне».

Çак сăмахсем чуна иленнĕ.
Çунатлă, ырă ĕмĕтсем
Ӳсессĕн ăслă пул тесе,
Илемшĕн кĕрешме хистенĕ.

**XX**

Калаççĕ: çыннăн утнăçемĕн
Умри çул-йĕрĕ уçăлать.
Ача-пăчан та ӳснĕçемĕн
Ăс-хакăлĕ анлăланать.

Ват ăсчахсем каланă пек:
Çут тĕнчене пĕрре килетпĕр.
Çĕртен тухсан, çĕрех кĕретпĕр,
Тусан пулатпăр кашниех.

Тăван пĕтенĕн умĕнче
Кашни этемĕнех пур парăм.
Татма май çук мĕн виличчен,
Хăть темĕн чухлĕ ылтăн пар эс.

Кун-çул сакки пит сарлака,
Хăми пулмасть ялан яка.
Пурнас çулсен, вĕсен хисепĕ
Харкамăн та тем-тĕрлĕ тетпĕр.

Пĕрин ĕç-пуç ăнса пырать,
Теприн — çул-йĕрĕ пит тумхахлă.
Виççĕмĕшĕн — такăннăран —
Шăпи синкерлĕ, хурлă, тарлă.

Çак хĕвĕшӳллĕ пурнăçра
Этем ялан шанать ырра.
Пуян ялан сумне çĕклесшĕн,
Чухăнраххи — йӳнеçтересшĕн.

Екклезиаст каланă пек:
Этем хуçа мар чунĕпе.
Мехел çитсессĕн çын хĕвелĕ
Лап сӳнĕ, пулмĕ тек тивлетлĕх.

Е шахвăртса: мĕскер акатăн,
Кайран çавна вырса илен.
Е: ашшĕ-амăшĕ епле,
Ачисене çапла куратăн.

Ялта мĕнпурĕ палăрать,
Ун тĕкĕрĕ пĕрмай сăнать:
Çĕн йăх ламран лама куçать-и,
Несĕллĕхне мала тăсать-и?

Вара пуплеççĕ, хак параççĕ:
Ак çак йăхран тухать ăсчах,
Кусем курнăçланмашкăн маçтăр,
Вĕсен ăрачĕ çаплăрах.

Ялйыш пĕлсе, виççе йăлт калĕ
Кам тухасса хăй йышĕнчен.
Улма ӳкмест йывăçĕнчен
Пит аякка. Ку чăнлăх паллă.

Амăшĕ еплерех-ха, хĕрĕ
Асилтерет ун шăпине.
Чылай чухне арçын çул-йĕрĕ,
Пĕр евĕр куçĕ ывăлне.

Çын çуралсан — тăват тĕревлĕ,
Упаленет, утать кайран.
Вăл виç ураллă-çке кайран,
Алтуйинче шырать тĕреклĕх.

Çапах та ача чух шав илтнĕ:
“Ват çын тăват çынна тăрать.”
Яш-кĕрĕм: çиттĕрчĕ тет пилĕ,
Пире те вĕсенчи хăват.

Сумраччĕ шурă сухалсем,
Кашнийĕшне курсан пуç тайнă.

Вĕсем каланă сăмахсем
Ачиссене куçса упраннă.

### XXI

Çу кунĕсем çитсессĕнех
Ялта Шлипшур юханшывне
Ниме туса пĕвелени те
Пурне те килĕшетчĕ питĕ.

«Пĕччен сурсан типет тӳрех,
Эртелĕн сурсассăн пулĕ кӳлĕ»,—
Тени тухатчĕ кĕç тӳрре,
Ял-йыш ĕçлетчĕ килĕшӳллĕн.

Тăп-тăрă шыв часах тулатчĕ,
Ача-пăча кунтан каймастчĕ.
Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла
Ишеттĕмĕр шав «чаппайла».

Масар касси урамĕнче,
Анаткасра, шкул çумĕнче,
Ял варринче ик-виç тĕлте те
Шыв юхăмне çуллен пӳлетчĕç.

Хĕрарăмсем кĕпе ухатчĕç,
Пĕр-пĕринпе сăмах çапатчĕç:
Пĕвери шыв, чăнах, аван,
Вăл çемçерех пусри шывран.

Кĕвентисем те кивнĕ хыççăн,
Валашкипе юнашарах
Выртса юлатчĕç çавăнтах,
Вăрлас йăла пулман выç куçлăн.

Те пурнăçĕ пит хĕсĕкрен,
Те упăшки хĕненĕрен
Хĕрарăм пĕвене сикни те,
Унта хăй кун-çулне татни те,

Ачи-пăчи çур тăлăха
Тăрса юлни те пулкаланă.

Кайран, пӗлсессӗн чӑнлӑха
Кил хуҫине ҫынсем ылханнӑ.

Пупленӗ: темӗнччен тытаймӑн
Пуш михӗре пӑшатана.
Вӑл пурпӗр шӑтарать ӑна,
Вӑрттӑнлӑха шав пытараймӑн.

Ӑс панӑ та, асӑрхаттарнӑ
Килте кашнийӗшнех пире:
Шыва ан кӗрӗр пӗвере,
Унта виле тытма пултарӗ.

Эпир, шик туйӑмӗ пулсан та,
Пӗрне пӗри мӑшкӑласран,
«Хӑравҫӑ» ят ҫыпӑҫасран,
Туссем пӑрӑнасран хӑранӑ.

Шыв хӗррине ҫитсессӗнех
Килте вӗрентнине йӑлт маннӑ.
Паттӑрланса, шыв ытамне
Ним пулман пек чӑмма васканӑ.

Тавлашнӑ: ҫӳллӗ вырӑнтан
Чул евӗр эсӗ сикеетне,
Е тепӗр ҫырана кунтан
Пӗр курӑнмасӑр ҫитеетне?

Шлипшур ҫырмин тарӑнӑшне
Пӗр шикленмесӗр виҫеетне?
Тӗпне ҫитсе ун пыльчӑкне
Хӑв аллупа эс илеетне?..

Пӗчӗккисен — ҫулпа кам кӗҫӗн —
Витлевлӗ ячӗ пулнӑ «шӗпӗн».
Эй, вӗт ура касси! тесен,
Вӗсем шӑп ларнӑ та чӗнмен.

Ҫав ушкӑнтан, пӗррехинче,
Пӗри — аслӑраххисенчен —
Ӑмӑртӑва кӗртмешкӗн ыйтнӑ.
Лешсем шӑл йӗрнӗ: «Пӑрӑн, пыйтӑ!»

Ан чăрмантар, туту çинче
Аннӳн сĕчĕ те типеймен-ха.
Ача шухăшламан темччен,
Вирхĕннĕ пĕвене çĕмрен пек.

Шывра часах вăл курăнман,
Çӳлтисене хытах хăратнă.
Ун хыççăн сикнĕ, кĕç хăтарнă
Сив вилĕмрен ăна кайран.

«Кортни, шыва чăмаç çапла»,—
Куçне уççан ача мухтаннă.
Ку сăмахсем, ун чух, паллах,
Пире, кашниййĕшне култарнă.

Эпир çапла мĕн ачаран
Шикленнине пач кăтартман.
Тăван енри шывпа çĕр, сывлăш
Кашниййĕшне пилленĕ сывлăх.

## XXII

Хайлавăма, паллах, кĕртеймĕп
Кашни ята, хушамата.
Тивĕçлисем чылай ялта,
Çакна никам та хирĕçлеймĕ.

Ют çĕршыври çынсем пĕлеççĕ
Хăйсен тĕп тымарне аван.
Сума сăваççĕ, хисеплеççĕ
Ăру пуçлакана ялан.

Чăваш çынни те тин вăранчĕ,
Тĕпчет аваллăхри çулне.
Чи ватă халăх пулнине
Çирĕплетет кирек хăçан та.

«Хăв ĕçекен çăла ан сур,
Чăваш ятне ан çĕрт нихçан та,
Ват çынсене эс сума су...» —
Каларăшсем хитре, чăнах та.

Лексҫей Васильевич Богданов
Чи сумлӑ ҫынччӗ Турханта.
Кун-ҫулӗнче пуҫне усман вӑл,
Пулсассӑн та кирек ӑҫта.

Эп ун патне шав туртӑнаттӑм.
Хӑй ачине пит савнӑ пек,
Мана вӑл хытӑ юрататчӗ,
*Тӗлӗнтерсе ӑс-халӗпе.*

Ӑсчах пек palӑрма тӳр килнӗ,
Ӗҫленӗ Академире.
Анчах та кӗҫ синкерлӗхре
Чи хаклӑ вӑхӑчӗ ун иртнӗ.

Ярлыкӗ: «Халӑхӑн тӑшманӗ»,—
Ытла хӑрушӑ-ҫке сӑмахӗ.
Малтан — тӗрме, унтан — ГУЛАГ,
Влаҫа эс пурпӗр ан хурла!

Ҫынсем ҫынна кумир тусассӑн,
Йӑпӑлтисем элек сарсассӑн,
Пуҫлать иккен асап асма,
Хӑй хӑватне аслӑлатма.

Пӗр лагерьтен тухса тарсассӑн,
Хӑй хыҫҫӑн йытӑ янине,
Леш кашкӑр евӗр сикнине
Аса илсе, сывлатчӗ ассӑн:

«Юрать-ха, анчӑк чӗлхине
Кинолог пек аван пӗлеттӗм.
Чухлаймасан хӑтланӑшне
Ҫӗпӗрӗн ҫӗрӗнчех пӗтеттӗм...

Турхан вырнаҫнӑ лапамра,
Ӑна, пач курӑнми тумашкӑн,
Каласшӑн эп танлаштармашкӑн:
Мӗн чухлӗ кирлӗ чул, тӑпра?

Касаматра куллен-кунах
Эп пурнӑҫланӑ пур ӗҫе те.

Виçес пулсассăн, чăнласах,
Яла та хуплама çитет-тĕр.

Хирĕçлемесĕр, алă вĕççĕн
Турттарнă чул, тăпра пĕр вĕçĕм.
Енчен те норма тулмасан,
Апатсăрах тăрса юлан.

Кам хăнăхман хура ĕçе,
Çавсем шăна пекех пĕтетчĕç.
Пĕр-пĕр рабочи е хресчен
Нушалăхран тухма пĕлетчĕ.

Атте-анне хресчен пулнишĕн,
Ĕçс куллен хăнăхтарнишĕн
Эп тав тăваттăм кулленех,
Аса илсе Турхан çĕрне.

Калас-тăк тĕррипе, чăваш
Кăмăлĕпе ялан йăваш.
Ĕçченлĕх, тÿсĕмлĕх, сăпайлăх
Çынна упраççĕ — çакă лайăх...

Зексен çĕршывĕ — Колыма
Чылайăшне калла яман.
Вĕрентекенĕм ман, Богданов
Чĕр тамăкран тухма пултарнă.

Эп Солженицын çырнине
Каярахпа тупса вуларăм.
Архипелаг ГУЛАГ мĕнне
Тата та лайăхрах ăнлантăм.

### XXII

Ыйтма пултарĕ вулаканăм
Вĕрентекен пирки татах.
Ун кун-çулне сăнлас пулсан халь
Шур хут çитеес çук, чăнах.

«Архипелаг ГУЛАГ» хайлав
Вĕсемшĕн пурнăçри чăн палăк.

Солженицына пысăк тав,
Ăна асра шав тытĕ халăх.

Вăл çырнă хайлавра яр уççăн
Тĕрме асапĕ курăнать.
Е лагерьти зексен кун-çулĕ
Вулакана шутлаттарать.

*Ача чухне эп тĕлĕнеттĕм:*
Мĕн-ма хĕн-хур хуçаланать?
Ăсчах пурăнаймасть ĕретлĕн,
Ăсне пула инкек курать.

Пĕр енлĕн, лăпкăн пурăнма
Çынна нумай та кирлĕ мар.
Мĕскершĕн халсăр килĕшӳлĕх,
Мĕн-ма хавалла кĕвĕçӳлĕх?

«Вăл çапларах та, ку ун пек...»
Тӳр кăмăллă çынна вăрçни те,
Сăлтавсăрах элек сарни те
Тĕл пулкалать çине-çинех.

Вĕрентекен мана калатчĕ:
«Çынсем пĕр-пĕринчен хăратчĕç.
Чылайăшĕ хăтăлайман
Пускилĕ çырнă çăхавран...»

Богдановăн аслашшĕне
Хăй Яковлев пит хисепленĕ.
Вăрманта чух вăл урине
Сиктерсен, çак килте сипленнĕ.

Вĕсен ăрăвĕнчи çынсем
Вăрман ĕçне пит кăмăлласçĕ.
Мăнукĕсем те тăрăшаççĕ,
Кашнийĕн сумĕ пур, хисеп.

Богданов вăйлă шахматистчĕ,
*Вĕрентрĕ çак вăййа мана.*
“Чи хаклă мул вăл, вăхăт,— тетчĕ,—
Ирттер эс усăллăн ăна.

Шкулта кăна пĕлў пухни çеç
Мал ĕмĕтлĕ çынна çитмест.
Институтра диплом илни те
Сана кайран тивĕçтермест.

Ниме тăман хĕвĕшўре
Иртет чылай этем кун-çулĕ.
Хăшĕ-пĕри çунать шав мулшăн,
Тепри хăпать ыр тĕллеврен.

Яш чух умри кунсем нумай пек,
Анчах çын ĕмĕрĕ кĕске.
Вĕççĕрлĕхре пурнас çул пайĕ
Шыври тумлам кăна иккен.

Ыр ĕçĕн çимĕçĕ мухтавлă,
Ăс-хал тымарĕ пĕтес çук.
Çынсен çулне тĕпченĕ чух
Чухлан: вĕсен кашнин хăй майлă.

Пĕри нумай çул пурăнсан та,
Тепри хисеп те ыр курсан та —
Кун-çулĕ вĕçленсен вара,
Вĕсем пулмаççĕ чыслăхра.

Пĕлетĕп эп: суя телейĕ
Пĕрмай килмест мул пухнинчен.
Эп, тăнă май çул юппинче,
Ултавлăха çуллен сивленĕ.

Калас-тăк тўррипе: ыр ватлăх
Нумай пурăннинче çеç мар,
Унпа май çук шав хаклама.
Этем ĕçпе çеç ăслă, аслă!

Хăш чух этем вилсе выртассăн,
Ăс-халĕпе пит сумлăран,
Пурнăçпа хăвăрт уйрăлсан та,
Маттуртарах вăл ват çынран.

Айванăн ăсĕ çўлте мар:
Куллен-кун тĕттĕмре утать хăй.

Сисмен чухне улталанма,
Тусне те вăл сутмашкăн хатĕр.

Сумне çухатнă этемсем
*Суя чапне час çухатаççĕ.*
Сăнне, ятне пĕтернĕçем,
Ытла та чыссăррăн кăнаççĕ.

Эп тĕрмере те, лагерьте те
Этем ятне ниxçан яман.
Вăлтса ыйтсан та, хĕнесен те
Чи çывăх туссене сутман...”

Богданов, ман вĕрентекен, теп.
Тытатăп ун ятне асра.
Пуçа таятăп, хисеплетĕп,
Ăна манмастăп пурнăçра.

## XXIV

Аса илӳ тĕнчи хитре,
Мĕн-ма тесен, вăл чĕрере.
Çулсем иртсессĕн те каймарĕ
*Асри Богдановăн сăнарĕ.*

Калатчĕ вăл: ыр ĕç тусан
Пит васкаса ан хăпартлан.
Пурне те халăх курĕ, виçĕ,
Ун куçĕ çеç куллен кун вичкĕн.

Ун амăшĕ чи сумлă ватă
Çĕр вунă çул пурăннăскер,
Ĕмĕрĕнче чирлеменскер,
Чĕлĕмне шав паклаттаратчĕ.

Ӳсетчĕ хыр пӳрт умĕнче
Ик ват çынна сыхланă евĕр.
Çил ачипе калаçнăçем,
Мана кĕтсе илетчĕ евĕк.

Çеремлĕ картишне кĕрсен
Кураттăм кĕç овчаркăсем.

Ытти йытăсем пек вĕрместчĕç,
Ăслăскерсем çынна тивместчĕç.

Лекçей Васильевич мана
Кĕтсе илетчĕ тараватлăн.
Хăйне нихçан тытман мăнаç,
Чун-чĕрипе вăл пулнă аслă.

Унпа хуйха-суйха пайланă
Шкулта чухне те, яш пулсан та.
Чуна ыр вăрлăх акнăран,
Кун-çул тĕллевлĕ пулчĕ ман.

Калас-тăк тӳррипе: ман парăм
Ун умĕнче çуллен ӳсет.
Халь лараймастпăр юнашаррăн,
Çавна пула чĕре сӳлет...

Аван, чăнах та, пурнăçра
Шур сухалсен пулсан ăс-хакăл.
Канашĕсем яшсемшĕн хаклă,
Сыхлаççĕ йăнăш тăвасран.

Чун çĕкленет, аксакалсем
Куллен пире шанса тăрсассăн.
Енчен те тавлашу хĕрсен,
Вĕсем тĕрĕслĕхе уçсассăн.

Вĕрентĕвĕ, чăнах та, анлă,
Хăйсем тем те пĕр курнăран.
Вĕсемшĕн чăнлăх пулнă аслă,
Çакна тӳр çын хаклать ялан...

Ялти кунсем шуса иртетчĕç
Черетленсе, пит майĕпен.
Ача чух шав ĕмĕтленен:
Эх, манăн хăвăртрах ӳсесчĕ.

Лекçей Васильевич хуллен,
Пит васкамасăр сăмахлатчĕ.
Куçа уçатчĕ вăл куллен,
Калаçăвĕ шутлаттаратчĕ:

«Кĕнекере пĕлӳ çăлкуçĕ,
Ăс-хал пухма вĕренмелле.
Кам вăхăтне перекетлет,
Çав çыннăн умри çулĕ уçă.

Ир-каç суха тăваканран
Пит ăслă шухăшсем илтеймĕн.
Пĕлет вăл лайăх трактора,
Анчах пĕлӳ уйне кĕреймĕ.

Ăсчах пулма ун вăхăт çук,
Хирте куллен тар тăкмалла-çке.
Килте те тĕрлĕ ĕç пур чух,
Канмасăр шав тăрăшмалла ав.

Çурт тăваканăн е платникĕн
Ялан тар тăкмалла ĕçре:
Пĕри хывать тĕреклĕ никĕс,
Тепри мала хурать тĕрре.

Касса тĕрлет вăл йывăçа,
Ун ăсĕ палăрать ак час.
Ĕçне пăхсассăнах калатăн:
Ӳкерчĕкĕ, чăнах та, лайăх.

Куллен кун тимĕр туптакан çын
Йӳç тĕтĕмпе вут-хĕм пулсан та,
Сунтал умне тăрсан шутлать:
Ман япала епле пулать?

Кăмакинчен палкать вут-çулăм,
Хăлхисене шăв-шав хуплать.
Тимĕрçĕ ĕмĕтне шанать:
Ун чаплă савăчĕ кĕç пулĕ.

Чун-чĕрипе вăл ăнтăлать,
Япалан ĕлки илĕртет-çке.
Кайран ăна хитрелетет те,
Унтан хуллен тарне шăлать.

Чӳлмекçĕ те яра куна
Шав çавăрать кустăрмана.

Тăвать тăмран çеç савăта вăл,
Ун ăпалишĕн пурте хапăл.

Кăкшăмĕ кирлĕ çынсене,
Хаклать куллен кунах ĕçне.
Минучĕ хисепре ăстаçăн,
Мехелĕ çук пакăлтатмашкăн.

Алпа сар тăм çăрать пĕрмай,
Урисемпе çемçетнĕ май.
Ăпалине час калăплать те,
Ăна пăхса пит савăнать хăй.

Илемлĕ савăтне тăвасшăн
Çине тăрса вăл тăрăшать.
Ыр ĕмĕчĕ йăлтах тулсассăн
Кăмакине кĕç тасатать.

Эп асăннă ăстаçăсем
Хăйсен ĕçне кăна шанаççĕ.
Çын умĕнче курнăçланмаççĕ,
Вĕçкĕнленмеç нихçан вĕсем.

Ĕçчен этем тар тăкмасан
Хула е ял ӳсмест нихçан.
Вĕреннĕ çын та ыр кураймĕ,
Çĕн ăрусем те савăнаймĕç.

Анчах та пурлăх хуçисем
Пурнаççĕ-çке кĕлмĕçленсе çеç.
Кĕтмеççĕ вĕсене залсем,
Хавхаланса ĕмĕтленсен те.
Т
ем тĕрлĕ шавлă уявсем,
Ларусемпе канашлусем
Ĕçлекенсемсĕрех иртеççĕ,
Вĕсем пĕлӳ вăйне сисмеççĕ.

Çапах та халăха пула
Çĕршыв тĕрекленет ялан.
Кирек мĕнле ăстаçăна та
Хакла тата мухта ăна эс.

Тахҫан,—тӑсатчӗ сӑмахне,—
Ҫав залсене, керменсене
Хам куҫӑмпа пурне те курнӑ,
Тултан ҫеҫ мар, шалта та пулнӑ.

Чӑваш юмахӗнчи пекех,
Чи тутлӑ ҫимӗҫе астивнӗ.
Кайран, ав, йӳҫҫине те тивнӗ
Йӑлт тутанма ытлашшипех.

Ҫапла вӑл пурӑнӑҫ йӗрки:
Хӑй шӑпинчен никам иртеймӗ.
Савӑнӑҫпа пӗрле хуйхи
Черетленет. Хӑть ту эс тем те...»

Тӗл пулсанах куллен мана
Вӗрентекенӗм ӑс паратчӗ.
Каланине ӑша хываттӑм,
Чунтан сума суса ӑна.

### XXV

Сана, хисеплӗ вулаканӑм,
Шухӑшлама сӗнесшӗн эп:
Терт тӳснӗ ҫын хӑй чӑн хисеп
Кун-ҫулӗнче курмасть пулсан та,

Мӗн-ма кайран ун ачисем,
Мӑнукӗсем чипер пурнаҫҫӗ?
Ӑспа, мулпа та палӑраҫҫӗ,
Тулаҫҫӗ ыр ӗмӗчӗсем?

Ҫакна «Кокель» поэмӑра
Сырса кӑтартрӑм.
Ӳркенмеҫҫӗ
Вӗсем, чӑнах та, пурнӑҫра
Е тӗлсӗр хывӑх вӗҫтермеҫҫӗ.

Пӗр тӗслӗх ҫеҫ илсе кӑтартӑп,
Сана ытла та йӑлӑхтармӑп:
Кокель йӑхӗнчен тухнисем —
Ялти пит сумлӑ ӗҫченсем.

Ялта кăна-и, хулара та
Вĕсем кашниййĕ ырă ятлă.
Сергеев Микулай тӳрех
Çакна çирĕплетет хăех.

Вăл хула пуçлăхĕ пулса халь
Ĕçлет Çĕнĕ Шупашкарта.
Ун йăх-тымарĕ Турханта,
Ăна хăй асĕнче тытать-ха.

Çынпа тӳлеккĕн сăмахлать,
Чунра мĕн пуррине калать.
Ун кăмăлĕ, чăнах та, уçă,
Ĕçре çуллен-çул пултаруçă.

Куккашĕ ун — хастар Иван
Лексей Кокельпе пĕр тăван.
Вăталăх куккăш — Кĕркури те
Пĕлӳ пухасшăн çуннă питĕ.

(Эп çак йăх çыннисен ĕçне
Кирек хăçан сума сăватăп.
Май килнĕ чух вĕсен ятне
Халăхăм умĕнче саратăп.)

Тен, ашшĕ-амăш шутламан та,
Кун панă виçĕ ывăлтан
Пĕри те юлмĕç Турханта,
Кашни ют кĕтесе ăсаннă:

Иванăн, ав, арман лартнишĕн
Ялпа тӳр килнĕ уйрăлма,
Архиерей ятне илтни те
Кĕркурине хăтарайман.

Профессор Кокель пурнайман
Чăваш çĕрне хыт юратсан та.
Мĕн-ма тесен, элек пĕрмай
Умри çула пӳлсе картланă.

Лексей Васильч Богданов пек,
Иван яла таврăнайман çав.

Касаматран вăл тухайман-çке,
Пĕтмс тӳр килнĕ Çĕпĕртех.

«Аксассăн курăк çитĕнет»,—
Тесе калаççĕ-çке ытарлăн.
Иванăн хĕрĕсем, ку паллă,
Ял хушшинче яман ятне.

Çемйеллĕ те ача-пăчаллă
Пулсан, ӳстернĕ кашнине.
Кун-çул тени çапла, хăй майлă,
Каярахпа йĕркеленет.

Кил хуçине тытса кайни те,
Çемье çурт-йĕрсĕрех юлни те
Хĕрĕсен çул-йĕрне пӳлмен,
Синкерлĕх ĕмĕр иртĕхмен...

Çĕн Шупашкар ертӳçине
Калап: асил куккусене.
Пĕри — ӳнерçĕ, вăл ӳкернĕ,
Тепри шав чунсене сипленĕ.

Влаçри этем эс, Микулай,
Тăванусен ĕçне тăсатна,
Культурăшăн çине тăратна,
Кама куллен кунах хаклан?

Çителĕклĕ-и чун апачĕ
Чăваш çыннин сан хулунта?
Куçна уçсам: пасар хăвачĕ
Асилтермест-и Пилата?

Христос пурăннă вăхăтра
Сутуçăсем таса храмра
Алла мĕн лекнине йăлт сутнă,
Хăйсем çеç пуяссишĕн çуннă...

Ытла та кĕлмĕçе тухмаççи
Поэтсемпе писательсем,
Музыкçăсем, ӳнерçĕсем?
Вĕсем епле пурнаç хальхаççăн?

Сан тĕрекӳ пĕр вĕсенче,
Хăв тĕллĕнех мала каяймăн.
Çакна çеç лайăх ăнлансассăн
Йĕркеленет умри тĕнче.

Культура, тетпĕр, яланах
Çиес çăкăрпала танлашĕ
Е сахалрах лексен те ашĕ,
Пуян пулсан чун — аванрах.

Çакна авал ăнланнă лайăх,
Илемлĕх юлнă мухтанмалăх.
Рембрандт, Пуссен палитрисем
Е Репинăн картинисем

Çулсем иртсен те пурăнаççĕ,
Çут тĕнчене савма хушаççĕ.
Вĕсемсĕр, эп ыйтап сиртен:
Мала ăнтăлĕ-и этем?

Анчах художник нушине
(Поэт та кĕрĕ ун йышне.)
Эпир — кашнийĕ — ăнланмастпăр,
Чĕри çунать-и — чухлаймастпăр.

Мĕн чухлĕ тар юхтарнине
Халех, кайран-и — хаклĕ вăхăт.
Пĕришĕн пулĕ вăл пит тăкăс,
Тепри тупать час вырăнне...

Тĕп темăран, асри юлташăм,
Эп пăрăнтăм ятарласа.
Туятăп-çке, сана пĕр ташă
Алхапăл йăлăхтарасса.

Ялан пĕр çемĕ: «Ĕлĕк, ĕлĕк,
Хальхи пирки те шухăшла,
Тăр кăнтăрлах ан кур-ха тĕлĕк...» —
Вăрçан мана эс, тен, çапла?

Апла-капла-и, эп туясшăн
Чăн-чăн этемĕн тивĕçне.



*Алексей Кокелён тăванĕсемпе пĕрле Шупашкарти ӳнер музейĕнче*

Ăна кăштах çеç чухласассăн,
Чăнах та, çăмăл чĕрене.

Ялан мала утас тесессĕн
Пĕлес пулать ĕлĕкхине.
Камсен ачи хăв пулнине
Эс тивĕç ăнкарса илмешкĕн

Нимскер те ахалех иртмест,
Çут тĕнчере пур килĕшӳлĕх.
Нимскер те курăмсăр пĕтмест:
Паян палăрмасан е ӳлĕм.

Мĕнпур ăнлав уçăмланать
Çине тăрсассăн, вăй хурсассăн.
Е тунă ĕç калăпланать
Куллен кунах хастарлансассăн...

# БИБЛИН КИВĔ ЗАВЕТĔНЧИ
## «Соломонăн хайлавĕсем» *

*Çак сыпăкра «Соломонăн хайлавĕсем» пуçланаççĕ. Малалла çырса кайнисенче кашни сыпăкăн содержанийĕ тĕрлĕ енлĕ. Кĕске, тăватă йĕркеллĕ сăвăсем пĕр-пĕрипе çыхăнман, вĕсем çынсем хуш-шинчи килĕшĕве, хирĕçĕве тата ытти тĕрлĕ пулăма анлăн, сăнарлăн çутатса, уçса параççĕ. Вулакан умĕнче этемĕн пĕрмай улшăнса тăракан пурнăçĕ иртет. Сăвă йĕркисенче эпир пуян çын-па чухăна, ăсчахпа айвана, тăрăшакан этемпе кахала, тӳрĕ кăмăллă таса мар чунлă йăх-яха, ашшĕпе ывăлне, упăшкипе арăм-не, улпутпа тарçине, патшапа ăна пăхăнакансене куратпăр. «Биб-ли» кĕнекин оригиналĕнче вĕсене икĕ йĕркерен тăракан сăмахсемпе çырнă. Эпир куçару ĕçĕнче тăватă йĕркепе усă курнă. Кун пек сăвăлани «Библи» кĕнекине тата та лайăхрах ăнланма пулăшать.*

### I

***

Ăслă ывăл ашшĕне
Савĕ, савăнтарĕ.
Айванни хăй амăшне
Ĕмĕр кулянтарĕ.

***

Тĕрĕсмарпа пуçтарнă кĕмĕл
Çынна нихçан та ыр кӳмен.
Çут чăнлăхăн сăваплă хĕмĕ
Ялан хăтарĕ вилĕмрен.

***

Кахалăн ĕçĕпе
Хуçалăх юхăнать.
Хастар çын вăйĕпе
Куллен мул пухăнать.

**Автор асăрхаттарни. Кĕнекене Турра ĕненменнисем те вулаunion шута илсе, "Турă" сăмаха асăнман, притчăсен тулли вариантне "Чун кĕнекин" 2-мĕш томĕнче, 2000 çулта пичетленĕ.*

***

Ăслă ывăл çу çитсен
Вăхăтра тыр-пул пухать.
Кахалли ÿркеннĕрен
Маччана сурса выртать.

***

Тÿрĕ çыннăн ырă çулĕ
Килĕшÿ шырать куллен.
Саккуна хирĕçлекен
Чăнлăха вăйпа шав пÿлĕ.

***

Таса çыннăн хушамачĕ
Халăх асĕнче упранĕ.
Усаллин йĕрĕнчĕк ячĕ
Манăç çырминче пăчланĕ.

***

Ăсчах чун-чĕринче ялан
Çынна савма чĕнен халал.
Айванăн çулĕ урăхла:
Кирек хăçан чакать ракла.

***

Таса туйăмлă çынсен
Çулĕ-йĕрĕ пĕр сиенсĕр.
Урăхла ик питлисен —
Пурнăçĕ ялан ыр енсĕр.

***

Куç-пуçне вылятакан
Эрлĕк шухăшсем çуратĕ.
Ыр кураймăн тăмсайран,
Ма тесен ун ăсĕ катăк.

***

Тÿрĕ çыннăн пурнăç çулĕ
Сар хĕвел пек йăлтăрать.
Усалли пĕр хăйшĕн çунĕ,
Килĕштерĕ пусмăра.

***

Курайманлăх харкашу çуратĕ:
Ун чухне шăртланчăк çын усал.
Юрату çеç пурнăçра хăватлă,
Такама та вăл пиллет вăй-хал.

***

Икĕ енлĕх çынсенче ялан:
Ăс-халлин тĕллевлĕ, пиллĕ çулĕ.
Айванни пурнасшăн урăхла,
Çавăнпа та астивет вăл хулă.

***

Ăсчах пĕлӳлĕхе упрать:
Пакăлтатмасть вăл урлă-пирлĕ.
Тăмсай чĕлхи пит вăрăмран
Чылай чухне тупать терт, вилĕм.

***

Куç умĕнчех пуянăн пурлăх —
Вăл куллен-кун тĕрекленен хула.
Ĕçлекеннин шăпи пач урăхла —
Пĕрмай ун пурнăçĕ пит юрлă.

***

Тӳр кăмăллă ĕçченĕн
Чун-чĕринче упранĕ çынлăх.
Ялан хĕсĕрлекенĕн
Ăнăçура та пулĕ çылăх.

***

Ăсна упран пулсан —
Кун-çул тĕллевлĕ сан.
Кам ӳкĕте кĕмест,
Çавна телей кĕтмест.

***

Чунунта пулсассăн курайманлăх —
Сăмахусенче пулать ултавлăх.
Е элек кăна саран пулсан —
Эс çынсемшĕн пĕрмаях айван.

***

Чĕлхӳн чаракĕ пулмасан
Кĕретĕн çылăха сисмесĕр.
Ăсчах сăмах вăйне туйса
Пурнать тĕллевлĕ, шар тӳсмесĕр.

***

Тӳр çыннăн пиллесе калан сăмахĕ
Суйланă кĕмĕл пек ялан.
Санпа юнашарах пурнан йăх-яхăн
Чун-чĕм нихçан таса пулман.

***

Таса кăмăллисен ăс-халĕ
Хăтарĕ çынсене хĕнре.
Ăс çитменни çут тĕнчерен
Ыр ятсăр, сумсăрах çухалĕ.

***

Усал ĕç тăвасси тăмсайшăн
Ача вăййи пекех иккен.
Ăслишĕн ют ялан инкек,
Пĕрмай вăл тӳр çулпа утасшăн.

***

Кам айăпа кĕрет,
Çав курĕ-ха тип шар.
Ыр кăмăллин кĕтрет —
Ĕненччĕ — юнашар.

***

Йртсе кайсан çил-тăвăл,
Усаллăх çухалать.
Ыр çыннăн, хăть мĕн тăвăр,
Яш ĕмĕрĕ юлать.

***

Уксус хыт чĕпĕтсен шăла,
Йӳç тĕтĕмпе куç шывлансан та,
Тем-тĕрлĕ пулăм нихăçан та
Кăсăклантармĕ кахала.

***

Чăтса, кĕтсе илсессĕн чăнлăха
Этемлĕх курĕ савнăç, танлăх.
*Икĕ питли ун чух пит тарăхать*
Яланлăхах пĕтнишĕн шанчăк.

***

Иккĕленӳсĕр, чăнлăха савса,
Таса этемĕн ĕмĕр иртĕ.
Черетленет-и касĕ, ирĕ —
Нихçан юп курмĕ çĕр çинче усал.

***

Тӳрĕ çын чĕлхи-çăварĕ
Ăслăлăх пиллет сана.
Усаллин, сиссем çакна,
Хăш чухне пуçна кастарĕ.

***

Чыса мала хуран этемĕн
Кирек хăçан та ăнăçу.
Çакна ясар çын тивĕçеймĕ —
Иртĕхнĕрен ун ним те çук.

## II

*Малалла эпир сăвăсен кĕске содержанийĕ пирки çырса пырăпăр. 2-мĕш сыпăкра çынсен хутшăнăвĕсенчи тĕрĕслĕх пирки, йăнăш айăпланин инкекĕ çинчен çырса кăтартнă, пустуй пакăлтатнине, элекленине хирĕç, çынна пĕлмесĕр унăн хутне кĕме кирлĕ марри пирки асăрхаттарнă, çавăн пекех кунта калаçу хыткукарлăха сивлени тата çын кулянинине ăнланманни çинчен пырать, юлашки йĕркесенче ырă кăмăллăх çимĕçĕ ĕмĕрлĕхе текен шухăш палăрать.*

***

Юсавлă мар-тăк тарасу,
Çиллентерен çынна, асту.
Тĕп-тĕрĕс вăл виçет пулсан
Ăш-чик нихçан пăтранмĕ сан.

***

Пулать мӑнна хурас тени те,
Намӑсланма та вӑхӑт ҫитӗ.
*Кӑмӑлласан лӑпкӑлӑха*
Ҫивӗчленет чунра ӑс-хал.

Тӳр кӑмӑллӑ этем вилме выртсан
Пӑшӑрханать тӑшман юлнишӗн.
Ҫапах та халӑх савӑнать кайран
Кӗтмен ҫӗртен усал кӑннишӗн.

***

Тӳр кӑмӑллӑхӑн ҫулӗ-йӗрӗ
*Сивлет шав тӗрӗсмарлӑха.*
Чейи малтан ултталӗ-ха,
Кайран хӑех ларса вӑл йӗрӗ.

***

Пуянлӑхпа тем те тума пулать
Тесе ытла ан шан айваннӑн.
Хаяр кунсем ҫитсен ӑнланӑн:
Ҫут чӑнлӑх ҫеҫ сив вилӗмрен ҫӑлать.

***

Таса чунлин
Ҫул-йӗрӗ ӗмӗр такӑр.
Киревсӗррин
Умрах ав тӗпсӗр авӑр.

***

Тӗрӗслӗхе савакансем
Пӗтмеҫҫӗ пурнӑҫра нихҫан та.
Ҫут чӑнлӑха хурлакансем
Тӳре серепине ҫакланӗҫ.

***

Ӗретсӗр ҫын вилсен
Калаҫҫӗ: «Анчӑк».
Тинех ун майлисен
Ҫухалӗ шанчӑк.

***

Ан чав-ха шăтăк, тетĕп,
Тӳре валли эс нихăçан.
Никам та мар, пĕлетĕп,
Хăвах унта кĕрсе выртан.

***

Чее этем — каварçă
Хĕнре тусне сутать.
Ăсчах пулман-ха тарçă,
Çут çăлăнăç тупать.

***

Çын савăнать, калать вăл, тав,
Чечекленсен тавралăх, пурнăç.
Тăшман пĕтсен саманчĕ урăх:
Ун чух çĕршывĕпех уяв.

***

Ăсчахăн пилĕпе
Хула çĕкленĕ.
Айванăн ăсĕпе
Хур курĕ енĕм.

***

Пĕри, эп ăслă теекен,
Тус-юлташне вăрçать сăлтавсăр.
Тепри пач урăхла иккен,
Чĕнмесĕр пулăшать, шăв-шавсăр.

***

Пакăлтин чĕлхи чараксăр,
Вăрттăн шухăша тытаймĕ.
Шанчăклă тусун çук айăп,
Çавăнпа вăл саншăн хаксăр.

***

Ăсчахçăсем чылай пулсан
Юп курĕ ĕмĕр-ĕмĕр халăх.
Хута кĕрекенсем чаксан
Тертленĕ, сӳнĕ унăн халĕ.

***

Енчен те эс ют çын хутне кĕрсессĕн
Сиен çеç курăн,
Теприн, çакна шав сивлекенĕн,
Шăпи пач урăх.

***

Чипер сăн-питлĕ арăм
Чапа та тухĕ.
Ĕçченĕн пулмĕ парăм —
Пуянлăх пухĕ.

Чăнлăха савман этемĕн
Чысĕ-сумĕ çук.
Ӳркенсе тăран лўпперĕн
Пулмĕ ăнăçу.

***

Ыр кăмăллă çынсен
Çап-çутă-çке чун-чĕмĕ.
Ытла хаяррисен
Хура каç евĕр — сĕмлĕх.

***

Юлхавăн ĕçĕнче
Куратпăр кăлтăк çеç.
Упран-тăк чăнлăха —
Тупан ят-сумлăха.

***

Ырă, лайăх пурнăç килĕ
Тĕрĕслĕхĕ çунат сарсан.
Ăнтăлсан мала усал
Хăй валли çеç тупĕ вилĕм.

***

Çум курăкне паян, ыран-и
Йăлтах кăклаççĕ, пур-ха шанчăк.
Эппин, аксассăн ырă вăрлăх,
Шеп çимĕçĕн тымарĕ хăрмĕ.

***

Сăмси çинче сыснан пулсан та ылтăн çĕрĕ
Çавах çынсемшĕн выльăх вăл, сыснах.
Хĕрарăмĕ, чăнах, хитре, хута та кĕрĕн,
Анчах пуш чунлă, ăсĕ çук пачах.

***

Хаяр инкек килсе çапсан
Пит савăнать вара усал.
Çынсем юп курччăр тет ялан
Ырра кăна кăмăллакан.

***

Тараватлă, ыр хуçан
Вĕççĕр ÿсĕ пурлăх.
Хыткукарлансан ялан
Пурнăç пулĕ хурлă.

***

Çынна юп ту: ĕçтер, çитер,
Ялан пулатăн хăв та тутă.
Çитменнине пĕрмай çитер:
Ыр çыннăн чунĕ ĕмĕр çутă.

***

Тырра пытаракан
Ылхан сăмахĕ илтĕ.
Суту-илÿ тусан
Упранĕ халăх пилĕ.

***

Хĕвеллĕ куншăн кам çунать —
Çав тупĕ килĕшÿлĕх.
Усал усаллăх çеç тупать,
Ăна хал памĕ пÿлĕх.

***

Пулмĕ ылтăнра çут шанчăк,
Вăхăт çитĕ — вăл пĕтет.
Тÿрĕ çын — хăй çутçанталăк —
Ыррине кăна чĕртет.

***

Япăх, юхăннă çуртра
Çил ачи вылять хавассăн.
Ун хуçи — айван чура —
Пилĕкне авать ăсчахшăн.

***

Пурнăç йывăçĕнчен, теççĕ,
Тӳрĕ çыннăн çимĕçне.
Илĕртнишĕн чунсене
Ăсчаха шав хисеплеççĕ.

***

Ырăшăн ырăпа тавăр,
Пулĕ вара çыннăн тавĕ.
Айăп пулсан çĕр çинче
Çăлăнăç çук пӳрнинчен.

## III

*Ырăлăхпа усаллăхăн шалти тата тулашĕнчи хирĕç тăраслăхĕ. Килти пурнăçăн телей-тăнăçлăхĕпе синкерлĕхĕ тата вĕсен сăлтавĕ. Общество пурнăçĕнчи лайăх тата япăх енсем пирки. Чĕлхепе кирлĕ чух е вăхăт çитмесĕрех усă курнин çитменлĕхĕ е кирлĕлĕхĕ. Тĕрĕслĕхе, чăнлăха тата тăрăшулăха хирĕçлекен пулăмсем.*

***

Тăрă шыв çине кăларччĕ
Суяна кирек хăçан.
Ӳкĕте кĕрет, ăнланччĕ,
Пĕлĕве çеç савакан.

***

Юман тымарĕ евĕр çирĕп
Тӳркăмăллă çынсен кун-çул.
Саккунлăха ан тăр эс хирĕç,
Тĕрекленмест капла влаçу.

***

Хёвел пек çутă, ырă арăм
Арçыншăн яланах тĕрев.
Ят яраканĕ — çĕрĕк-марăк,
Типшĕмлетет шăмма-тире.

***

Ăслă çыннăн шухăш евĕк:
Тĕрĕслĕх вăл тупĕ пурпĕр.
Урăхла усал тĕллевĕ:
Ыр çынсем хĕн-хур çеç курччăр.

***

Ултавçăна шав ĕненсессĕн
Юн тăкăн хуптĕре лексен.
Çав тамăкран тухсассăн эсĕ
Хăвна çăлакана ĕнен.

***

Усал йăхсен терте лексен
Йĕрри-палли юлмасть иккен.
Анчах та тўрĕ çыннăн, курччĕ,
Ларать ним пулман пек кил-çурчĕ.

***

Ăс-тăн шайне курса мухтаççĕ
Кирек ăçта та çынсене.
Аскăнчăка ялан хурлаççĕ,
Унран такам та йĕрĕнет.

***

Калать пĕри: эп ыр йăхран,
Анчах хăй çăкăрсăр ялан.
Хуçашăн ĕнтĕ лайăхрах,
Ахаль çын çеç — ĕçлет пулсан.

***

Выльăх-чĕрлĕхшĕн те çунĕ
Ырă кăмăллă хуçа.
Тискер çын ватмасть пуçа,
Хытă ун чулланнă чунĕ.

***

Çĕр çинче ĕçлекенсен
Пурте пур. Вĕсем вăй-халлă.
Уявра шав сикекен
Уй-хирте пĕрмай юлхавлă.

Вăхăтна эрех-сăрашăн
Çухатсассăн кăлăхах
Кил-çуртна йăлт чухăнлатăн:
Пурăнаймăн ху вăрах.

***

Серепене шав çаклатасшăн
Усал вăя каварçăсем.
Анчах çакна эп палăртасшăн:
Хур курмĕç тÿрĕ чунлисем.

***

Чĕлхи вăрăм пулнăран,
Пакăлти хăй шар курать.
Чăнлăха тĕпе хурсан
Хăвăрт тухăн нушаран.

***

Йăваш куçпа пăхакана
Каçарĕç айăпа кĕрсессĕн.
Пÿлсе тăрсассăн хапхана
Тухакансен çулне хĕсетĕн.

***

Кăмăл ырăпа тулать
Ĕç-хĕлÿ пĕрмай ăнсан.
Çынра курăн вăй-хăват
Ал-ури ун çыпăçсан.

***

Айван умра курать
Тÿп-тÿрĕ çул анчах.
Тепри тавран утать,
Вăл çавăнпа — ăсчах.

***

Куçне чарса пăрахĕ хăвăрт
Айванçă çилленсе кайсан.
Ăсли, чунне пулсан та тăвăр,
Кӳренĕвне памасть уçса.

***

Хăй курнине пĕлтерекенĕн
Сăмахĕнче тĕрĕслĕх çеç.
Чее сăн-питлĕ кӳнтеленĕн*
Ултав кăна халапĕнче.

***

Талпас**, хĕç каснă пек, сана
Сăмахĕпе чунна амантĕ.
Ăсчах чĕлхи ав яланах
Шав сиплĕ, парса тăрĕ шанчăк.

***

Ултавçăсен сăмах-юмахĕ
Самантлăха кăна иккен.
Тӳр кăмăллин, хăвах сисен,
Çут чăнлăхĕ ялан ахах пек.

***

Усал шухăшлă каварçă
Пултăр тет шав вăрçă-харçă.
Тăнăç пурнăçшăн çунать
Чунлă çын. Унра — хăват.

***

Нимле элек те çыпăçаймĕ
Таса та чунлă çын çумне.
Тӳрккес этем унран хăпаймĕ,
Унпах вăл виçĕ çул-йĕрне.

***

Тусне улталакан этем
Хăйне валли хăй тупĕ çылăх.

****Кӳнтелен —свидетель.***
*****Талпас —шапăлкка,сӳтĕк,пакăлти.***

Чăн сăмахпа тупан илем,
Ыр чунлисемшĕн пулăн çывăх.

***

Пултаруллă шухăшлавçă
Мухтанмасть уçса чунне.
Айванни — ялан халапçă —
Систерет ăс çуккине.

***

Тăрăшуллисен хăвачĕ
Куллен-кун вăй-хал илет.
Кахаллин пĕр сумсăр ячĕ,
Хырçă-марçă çеç тӳлет.

***

Пуссан сив тунсăх чĕрене,
Йĕри-тавра — кичемлĕх.
Ăш сăмахсем илтсессĕнех
Вăй илĕ тин илемлĕх.

***

Тӳрĕ çын тус-юлташне
Тĕрĕс çул кăна кăтартĕ.
Сив чунли чылайăшне
Уй-хирте те аташтарĕ.

***

Хăйĕн кайăк какайне те
Кахал çын ăшалаймасть.
Тăрăшан хуçан пур тем те —
Ырлăх-пурлăх юхăнмасть.

***

Чăнлăх çулĕ-йĕрĕнче
Пурнăç ешерет,
Вилĕме питленĕçем
Малалла чĕнет.

## IV

*Çамрăксене тĕрĕс вĕрентсе-пăхса ӳстерес пирки кĕскен калани. Пуянлăха пĕлсе хакламалла тата унăн пĕлтерĕшĕ. Ырă сăмахăн тивлечĕ. Ăна итлемелле тесе ӳкĕтлени.*

***

Ывăлĕ, пит ăслăскер,
Итлĕ ашшĕн сăмахне.
Юлхавли, чарусăрскер,
Йышăнмасть питленине.

***

Хатĕрлен пулсан эс çимĕç —
Савнăç, ырлăх шав куран.
Усал çыннăн çеç çук ним те,
Унăн чунĕ те хура.

***

Тытма пĕлсессĕн сăмаха
Хăв чун-чĕмне шав упрăн.
Пĕр вĕççĕр пакăлтатакан
Инкек-синкек çеç тупĕ.

***

Наян: ман ĕмĕт çиттĕр, тет,
Анчах та — кăлăхах.
Тӳр кăмăлли тупать тивлет,
Нихçан чакмасть ун хал.

***

Тĕрĕслĕхе хисеплекен
Суялăха хĕрӳллĕн питлĕ.
Тӳрĕ марри — ят çĕртекен —
Кирек хăçан тĕрексĕр, пилсĕр.

***

Таса этем çула тухсассăн
Хĕвеллĕ чăнлăх шав унпа.
Кĕрсе ӳксессĕн айăпа
Пĕтен ултавлăхран тухмасăр.

***

Пĕри: пуян тет эпĕ питĕ,
Анчах пурнать хăй юрлă.
Тепри калать: ман çук-çке ним те,
Çавах та пур ун пурлăх.

***

Хăрушлăха кĕрсе ӳксен пуян
Хăй пурнăçне те сутăн илĕ.
Чухăнраххи инкек сиксе тухсан
Хăратнине те сисмĕ, илтмĕ.

***

Ҫăнлăх çунĕ-ха çап-çутăн
Тӳрĕ кăмăллă çынсен.
Лап! сӳнет тӳрккессисен,
Вĕсенчен эппин эс ютшăн.

Усал шухăшлă чунсем
Çылăха кĕрсе аташĕç.
Тӳрĕ, ырă чунлисем
Пит хĕрхенĕç, пăшăрханĕç.

***

Мăнаçлăха пула
Тухма пултарĕ хирĕçӳ.
Туспа кам канашлать —
Пурнăçĕнче ун килĕшӳ.

***

Ниме тăман хĕвĕшӳре
Пуянлăх иксĕлет.
Ăна пухсан хĕрӳ ĕçре
Вăл куллен-кун ӳсет.

***

Шанчăк чакĕ те, хытах ĕшенĕ
Шух чĕрӳ чылай эс çуннăран.
Ĕмĕтӳ тулсассăнах кайран
Пурнăç йывăç евĕрех ешерĕ.

***

Сăмаха хакламасассăн
Эс хăвна çеç сăтăр тăвăн.
Ӳкĕтленине туйсассăн
Пурнăçу сан пулмĕ тăвăр.

***

Ыррине кĕтсе илеймĕн
Чее сăнлă пепкӳрен эс.
Ăслă-тăнлă чурасен те
Чылай чух кун-çул илемлĕ.

***

Хĕвеллĕ, тăнăç пурнăçăн çăлкуçĕ
Ăс-хакăла çивĕчлетен ăсчах.
Сив вилĕме вăл йышăнмасть пачах,
Малашлăха вĕрентĕвĕ çул уçĕ.

***

Ырă, çут ăс-хакăл
Кăмăллăх пиллет.
Чунсăр çын сукмакĕ
Терт кăна сĕнет.

***

Пĕлĕве мала хурса
Ĕçлĕ ăслă çын кал-кал.
Ăссăрлăхне кăтартса
Кăкăрне çапать кахал.

***

Ĕçĕ ăнмĕ усал элчĕн,
Шанчăк чакĕ, курăн шар.
Халăх янă çын хĕрхенчĕк,
Унпа çеç чакать нуша.

***

Намăс курăн, чухăн пурнăн
Вĕренмешкĕн ӳркенсен.
Пулĕ санăн чыс та пурлăх
Ăс пухсассăн эс куллен.

***

Чунпа ӳт-пӳ пит ырӑ, евӗк
Ӗмӗтленни пурнӑҫлансан.
Тарӑхтарать айван тӗллевӗ
Инкек-синкек шыранӑран.

***

Ӑсчахпа ҫеҫ хутшӑнсан
Пӗлӗвӳ тин ӳсӗ сан.
Айванпа эс туслашсассӑн
Ятна ҫӗртӗн, пулӑн аскӑн.

***

Ҫылӑхлӑ ҫынна шав йӗрлӗ
Пурнӑҫра усал-тӗсел.
Ыр ҫынна хӑратмӗ йӗрӗх,
Шух чӗри ун — теветкел.

***

Мӑнукӗсем валли ҫитеҫҫӗ
Еткерлӗх-мул ыр кӑмӑллин.
Айӑплисен те вӑл тулли:
Тӳр чунлисем ӑна валеҫӗҫ.

***

Кахал уй-хирӗнче те
Тыр-пул ҫуллен ӑнса пулать.
Анчах ҫакна пӗлетпӗр:
Ҫав мул унтах тӑрса юлать.

***

Чӗр хуллуна шеллен пулсассӑн —
Хӑв ывӑлна эс юратмастӑн.
Ӑна ҫын тӑвасах тесен
Унпа та усӑ кур куллен.

***

Ӗҫчен пурнӑҫӗнче
Ҫиет тӑраниччен.
Выҫса пурнан этемӗн
Тӳсет ӑш-чикӗ тем те.

## V

*Ăслăлăхпа айванлăх çинчен. Ăсчахпа ăссăр çыннăн кун-çулне, тĕпрен илсен, пӳрнĕ шăпине кура сăнлани. Пуянлăхпа чухăнлăх хушшинчи пĕлӳ пĕлтерĕшĕ. Ăсчахпа айвана, пуянпа чухăна, хуçапа ăна пăхăнакана юнашар тăратса сăнлани.*

***

Ăслă-тăнлă арăмун
Çурт-йĕрте тирпейлех.
Мăшăрĕ айван кӳршӳн —
Çук вĕсен йĕркелĕх.

***

Çулу-йĕрӳ тӳп-тӳрĕ сан,
Эппин, сăвап куран кайран.
Ырра ĕненменнин сукмакĕ
Кирек хăçан та кукăр-макăр.

***

Айван чĕлхи, чăпăркка евĕр,
Хăйне ытла мăнна хурать.
Ăсчах сăмахĕ питĕ евĕк —
Йывăрлăхра сана сыхлать.

***

Пулмасан ĕç вăкăрĕ,
Пӳлмӳсем те пушă-çке.
Усламу та хушăнмĕ,
Çитмĕ тулă çăкăрĕ.

***

Нумай пакăлтатать ултавçă:
Пин сăмахран пĕри чăн мар.
Кӳнтеленӳ — пулман хăравçă —
Çут чăнлăхшăн пĕлет çунма.

***

Аскăнчăк шырать те чăнлăх,
Вăл ăна тупаяс çук.
Çын пулсассăн ăслă-тăнлă
Унран тармĕ ăнăçу.

***

Пăрăнма хушаççĕ
Ухмахран ялан.
Ма тесен хальхаççăн
Ун чĕлхи айван.

***

Утса тухас çулне куллен
Ăсчах пĕлсе тăрать аван.
Айван иккĕленет ялан
Е аташса çӳрет пĕччен.

***

Çылăха кĕрсен кулаççĕ
Айвансем ялан.
Тӳрĕ чунлисем шанаççĕ:
Тухăн нушаран.

***

Чĕре пит ыратать
Синкерлĕх тĕл пулсассăн.
Çитсессĕнех хавaслăх
Çын терт-хĕне манать.

***

Саккуна пăсать пулсан
Юхăнать ултавçăн çурчĕ.
Арканмасть хуралтă-пӳрчĕ
Ырă кăмăллă хуçан.

***

Тĕтрелĕх çук пек пуç çинче,
Çул-йĕр тап-такăр курăнать.
Анчах та пурнăç вĕçĕнче
Этем леш тĕнчене каять.

***

Ахăлтатса кулан пулсан та
Хăш чух чĕрӳ хыт ыратать.
Хĕпĕртӳ хыççăнах хурланăн —
Çут савăнăç пач çухалать.

***

Усала вӗреннӗ чупкӑн
Ҫулне вӗҫлӗ иртӗхсех.
Ырӑ ҫын утмасть-ха чуххӑм:
*Юп курать, пурнать пӗлсе.*

***

Ан ӗнен-ха айван евӗр
*Ӑҫтиҫукӑн сӑмахне.*
Ӑслӑ-тӑнлӑ пул, тиркевлӗх
Питӗ кирлӗ ҫынсене.

***

Ӑсчах усаллӑхран хӑрать,
Май килсенех унран хӑпать.
Айван этем ытла та вӗчӗх,
Хӑйне кӑна шанать пӗр вӗҫӗм.

***

Авӑк ҫилӗллӗ этем сисмесӗр
Япӑх ӗҫ тӑвать хутран-ситрен.
Анчах ҫын юри сиен кӳрсен,
Курайманлӑх ӳсӗ пӗр чикесӗр.

***

Тӗттӗм ҫын кун-ҫулӗ паллӑ:
Ӑна пӳрнӗ шав айванлӑх.
Урӑхла теприн шӑпа:
Пурӑнать ялан ӑспа.

***

Ҫиллес ҫынсем те пурӑна-киле
Ӑсчах патне ҫитсе тӑрайӗҫ.
Чыссӑррисем те вӗсемпе пӗрле
Хапхи умне ҫитсе пуҫ тайӗҫ.

***

Чухӑна тӑванӗсем те
Юратмаҫҫӗ ҫав хӑш чух.
Пуян ҫыннӑн пур хисепӗ,
Тусӗсем ун темӗн чул.

***

Тусёнчен йёрёнекен
Тупё хăй валли çеç çылăх.
Чухăна ялан кам çывăх,
Рехет курё çав куллен.

***

Юри усал тăвакан —
Пурнăçра аташакан.
Ăшă кăмăл, çутă ёмёт
Ыр тусра çеç пулё ёмёр.

***

Кирек мёнле ёçрен
Услам илетён.
Ялан сўпёлтетсен
Тăкак тўсетён.

***

Пёлў — чи çўллё пусăм,
Ăсчах çакна сисет.
Айванăн çулё уссăр,
Тёттёмлёхрс иртет.

***

Тўрё чунлă кўнтелен
Терт-хёнрен хăтарё.
Улталама пёлекен
Шăхăртса хăварё.

***

Ўссех тăрсассăн халăх йышё
Патшан мухтавё çёкленет.
Çынсем чаксан ăна та йывăр,
Ун чух вăл хăй те хён тўсет.

***

Чăтăмлă этемён
Пысăк ăнланулăх.

Час çилленекенĕн
Пулмĕ ăнăçулăх.

***

Йăваш чĕре
Ӳт-пӳшĕн — ырлăх.
Тупатăн шырлăх
Кĕвĕçӳре.

***

Чухăна кам хĕсĕрлет,
Çав хăйĕн çулне пӳлет.
Çынлăхна çухатмасан
Ырлăх-пурлăхлă пулан.

***

Усал этем тӳрккес ĕçсемшĕн
Лекет чĕр тамăка.
Тӳр кăмăлли пурнать хисепшĕн,
Упрать çут шанчăка.

***

Пĕлӳ шыраканра ăс-хакăл.
Шăп çавăнпа тĕллевлĕ унăн çул.
Ăна хăш чух айван та хапăл,
Анчах кашнийĕн чунĕнче вăл çук.

***

Çут чăнлăхшăн кăна
Çӳле çĕкленĕ халăх.
Пăссассăнах ăна
Пĕтет ун чысĕ, халĕ.

***

Ăслă-тăнлă чурана
Кăмăллать патша.
Хăйне хирĕç кам? Çавна
Кăтартать вăл шар.

## VI

*Сӑмах каласа ҫылӑха кӗнине хирӗҫлени. Кирек мӗнле усал чӗреллӗ ҫынран йӗрӗнни тата ӑна курайманни ҫинчен. Чӑн-чӑн тӗрӗслӗхӗн витӗмӗ, таса пурнӑҫӑн ҫирӗп ҫыхӑнӑвӗ, ырӑлӑхӑн нумай енлӗхӗ тата ҫитменлӗхсем пирки.*

***

Тарӑхӑва сирсе ярать
Ачаш та лӑпкӑрах хурав.
Тем те пӗр каласа хӑртсан
Ҫиллеслӗхе ҫеҫ вӑйлатан.

***

Айван сӑмахӗ хӑсӑк евӗр
Тухать те сирпӗнет.
Ӑсчах чӗлхи ытла та евӗк,
Пӗлӳ ҫеҫ парнелет.

***

Кирек хӑш вырӑнта та
Пур сӑнакан куҫсем.
Усалпала ырра та
Кураҫҫӗ шав вӗсем.

***

Сапӑр та хитре сӑмахӗ
Пурнӑҫ йывӑҫӗ пекех.
Пулмасан чӗлхе чаракӗ,
Чунлӑху пӗтет веҫех.

***

Ашшӗ вӗрентсе каланине
Ывӑлӗ шута илмест.
Кам ялан тӑнлать ӑс панине,
Ӑна хурлӑх тӗкӗнмест.

***

Пилленӗ вӑй-хӑват
Тӗрӗслӗхе.
Ултав унран тарать
Тӗттӗмлӗхе.

***

Тӳр чунлă çыннăн çуртĕнче
Тем чул пуянлăх та илемлĕх.
Усал йăх- яхăн килĕнче
Юхăнчăк çеç — çук ун йĕркелĕх.

***

Ăсчах çăварĕ
Пĕлӳ сарать ир-каçăн.
Анчах айванăн
Ăс-тăн çитместь хальхаççăн.

***

Пăрăнсассăн тĕп çулран
Терт куратăнах кайран.
Кĕмесессĕн ӳкĕте,
Питĕ шел — хăвах пĕтен.

***

Аскăнчăк питленине
Нихăçан та юратмасть.
Хăть хăçан ăсчах патне
Тӳрĕ çул вăл тупаймасть.

***

Савăк кулă, ырă кăмăл
Илемлетĕ сан сăнна.
Янкăр кун та питĕ ăмăр
Хурлăх иленсен чунна.

***

Ăслă-тăнлă çын вĕри,
Çут пĕлӳшĕн ăнтăлать.
Урăхла айван чĕри,
Хăйшĕн ăссăрлăх тупать.

***

Телейсĕррин кун-çул салхуллă,
Пурнать асаппала хĕнре.
Теприн питре шав йăлтăр кулă,
Иртет ун пурнăçĕ хитре.

***

Юрату та чухăн пурнăç
Ылтăн-кĕмĕлрен аван.
Ма тесен пуянлăхран
Вăй илет чылай чух хурлăх.

***

Час çилленен çынна пула
Вăй илĕ харкашу ялан.
Чăтăмли çеç, ун пур хăват,
Хирĕçĕве шав пусарать.

***

Çул-йĕр услапăн
Ытла асаплă.
Тӳр кăмăллин яка —
Лекмест хĕн-хурлăха.

***

Ăслă ывăлĕ пĕрмай
Савăнтарĕ ашшĕне.
Айванни пурăннă май
Ниме хумĕ амăшне.

***

Катăк çын сăлтавсăрах
Савăнмашкăн пултарать.
Ăс пухни ав яланах
Тӳрĕ çулпала утать.

***

Канаш-сĕнӳсĕр пурăнсан
Йăлт юхăнать мĕн пур пуянлăх.
Ăсчах çын юнашар пулсан
Тĕрекленет, ӳсет хуçалăх.

***

Çут тĕнчере ăш сăмахран
Пахи пек ним те çук.
Илтсен ăна эс вăхăтра
Сан кăмăлу — сар çу.

***

Ăнтăлать ăсчах шав çӳлелле:
Çакăн пек ун пурнăçра тĕллев.
Пăрăнасшăн вăл хăрушлăхран,
Çĕрĕн айĕнчи чĕр тамăкран.

***

Выç куç ялан услам тăвасшăн,
Анчах çурт-йĕрĕ юхăнать.
Тӳр кăмăлпа çеç пурăнсассăн
Мĕн шутлани йăлтах пулать.

***

Явап нихçан та пулмĕ пăсăк
Шухăшлакан çынсен.
Сăмахăн вырăнне ав хăсăк
Тухать усаллисен.

***

Çутă чăнлăх умĕнче
Таса çыннăн ырă çулĕ.
Вăл куллен тăрăшнăçем
Тăшмансем те туслă пулĕç.

***

Куçусем савса пăхсассăн
Чун-чĕре хăпартланать.
Ырă шухăшсем пулсассăн
Ӳт-пĕвӳ те юп курать.

***

Хăлхусем, чăнах та, çивĕч,
Йăлт илтесшĕн.
Ăсчах пек пуласшăн çирĕп,
Вĕренесшĕн.

***

Тăрăшмаççĕ чун-чĕришĕн
Ӳкĕте кĕмен çынсем.
Пач çилленмĕç питленишĕн
Ăс-хала пухакансем.

## VII

*Этемӗн пурнӑҫӗнчи пур ҫул-йӗре те патша пек йӗркелесе тытса тӑни ҫинчен. Ҫынсен ырӑ тата усал ӗҫӗсене тӗрӗслӗхпе, ҫутӑ ӑс-хакӑлпа тивӗҫлӗн хаклани. Ҫутӑ тӗнчене патшасем урлӑ тытса тӑни пирки. Ӑсчах тата айван тӗлӗшӗпе йӗркелекен ҫыхӑнури тӗрӗслӗх. Тӳрӗ чунлисемпе усал этемсен расна шӑпи ҫинчен.*

***

Сахал пулсан та тупӑшу
Ултавлӑхпа эс ан туслаш-ха.
Пуян усламшӑн ҫеҫ аташтӑр,
Ӑна кӗтет шав харкашу.

***

Хавхалануллӑ та эрешлӗ
Кирек хӑҫан патша сӑмахӗ.
Ҫынсемшӗн сумлӑ унӑн хакӗ:
Судра та чӑнлӑхшӑн кӗрешӗ.

***

Патшасем те кураймаҫҫӗ
Саккуна хирӗҫлесен.
Чӑнлӑхпа вӗсем лараҫҫӗ
Вырӑнне ҫирӗплетсе.

***

Илтсессӗн тӗрӗс сӑмаха
Патшан та питӗ ырӑ кӑмӑл.
Ун чух шӑм-шакӗ тӗк пек ҫӑмӑл,
Савать-ҫке вӑл та чӑнлӑха.

***

Сив вилӗм хыпарҫи пек
Патшан ҫилли хӑш чух.
Ӑсчах сӑмахӗ ҫитӗ —
Вара хаярлӑх ҫук.

***

Патша тинкерлӗн пӑхнинче
Иртет пек пурнӑҫ сумлӑн.

## VII

*Этемĕн пурнăçĕнчи пур çул-йĕре те патша пек йĕркелесе тытса тăни çинчен. Çынсен ырă тата усал ĕçĕсене тĕрĕслĕхпе, çутă ăсхакăлпа тивĕçлĕн хаклани. Çутă тĕнчене патшасем урлă тытса тăни пирки. Ăсчах тата айван тĕлĕшĕпе йĕркелекен çыхăнури тĕрĕслĕх. Тӳрĕ чунлисемпе усал этемсен расна шăпи çинчен.*

***

Сахал пулсан та тупăшу
Ултавлăхпа эс ан туслаш-ха.
Пуян усламшăн çеç аташтăр,
Ăна кĕтет шав харкашу.

***

Хавхалануллă та эрешлĕ
Кирек хăçан патша сăмахĕ.
Çынсемшĕн сумлă унăн хакĕ:
Судра та чăнлăхшăн кĕрешĕ.

***

Патшасем те кураймаççĕ
Саккуна хирĕçлесен.
Чăнлăхпа вĕсем лараççĕ
Вырăнне çирĕплетсе.

***

Илтсессĕн тĕрĕс сăмаха
Патшан та питĕ ырă кăмăл.
Ун чух шăм-шакĕ тĕк пек çăмăл,
Савать-çке вăл та чăнлăха.

***

Сив вилĕм хыпарçи пек
Патшан çилли хăш чух.
Ăсчах сăмахĕ çитĕ —
Вара хаярлăх çук.

***

Патша тинкерлĕн пăхнинче
Иртет пек пурнăç сумлăн.

Ыр кăмăлĕ пĕлĕтсенчен
Юхтарнăн ăшă çумăр.

***

Ăс-хала çивĕчлетни
Ылтăнран та чаплăрах.
Ыр пĕлӳ пĕрмай пухни
Кĕмĕлрен те пахарах.

***

Тӳрĕ кăмăллă çынсен
Усалпа пĕрлешмĕ çулĕ.
Çут пуласлăхшăн çеç çунĕ
Чун-чĕри куллен вĕсен.

***

Вилĕм-çĕтĕм çитес умĕн
Çыннăн чунĕ питĕ аслă.
Чыссăррин çеç чакĕ сумĕ,
Уншăн ют, иккен, мăнаçлăх.

***

Пайличчен хăв тупăшна
Мăн кăмăллă çынпалан,
Лăплантар та эс чунна
Çураçу туп, сапăрлан.

***

Ăсчаха ялан çынсем
Пархатарлă, ăслă теççĕ.
Ун хитре сăмахĕсем
Пĕлĕве шав ӳстереççĕ.

***

Çыннăн ăсĕ-тăнĕ —
Пурнăçăн çăлкуçĕ.
Пакăлтин çук ăнĕ,
Курмĕ ним те куçĕ.

***

Ăсчахăн чун-чĕри —
Ытла та пит вĕри.

Хăй пĕлĕвне ӳстерĕ,
Йывăрлăха çĕнтерĕ.

***

Ăшă, евĕк сăмахсем
Хурт пылĕнчен симлĕрех.
Вĕсене эс итлесен
Вĕçĕн анлă тӳпере.

***

Туйăнаççĕ çул-йĕрсем
Кашниех ялан ыр енлĕ.
Малалла васканăçем
Тин сисен: çумрах эсрелĕ.

***

Хырăм выççи хистенĕрен
Хресчен ялан хĕрӳ ĕçре.
Вăл хăйшĕн пĕрмаях вăй хурĕ,
Инкек-синкек вара тек курмĕ.

***

Чее этем пĕр хăйшĕн çунĕ:
Ун шухăш-кăмăлĕ усал.
Ăна эс лайăх сăнасам:
Çăварĕнчен палкать пек çулăм.

***

Элекçĕ туссене
Уйăрттарать.
Ултавçă çынсене
Харкаштарать.

***

Ырă шухăшлă марри
Аскăнлатĕ юлташне.
Пулас çук вара ырри:
Татĕ леш ыр ĕмĕтне.

***

Усал тăвас текен этем
Куçне хĕсет те шухăшлать.

Тутисене хăй çыртнăçем
Хура ĕçне вăл пурнăçлать.

***

Мухтавăн çўлти пусăмĕ —
Ват çыннăн шурă çўçĕ.
Этемĕн пурнăç утăмĕ
Тĕрĕслĕхе яр уçĕ.

***

Пурне те чăтакан
Хăюллă салтакран маттур.
Хăйне хăй тытакан
Çĕнтерекен çынран сатур.

## VIII

*Пурнăçри ырăлăхпа виçеллĕн тата сăмах пуянлăхĕпе чипер усă курмалли çинчен. Тăнăçлă пурăнма ўкĕтлени, мăн кăмăлланни тата тавлашни кирлĕ марри пирки асăрхаттарни. Тĕрлĕ содержаниллĕ хайлавсем (притчăсем), ытлашши пакăлтатнин усси çукки çинчен.*

***

Çапăçу та тавлашу
Пурлăх йăтăнан çуртра.
Пултăрччĕ çеç килĕшў —
Чухăн пурнăç лайăхрах.

***

Пуянăн ывăлĕ тăрлавсăр,
Чури унран ав ăслăрах.
Пиччĕшĕсемпе вăл шăв-шавсăр
Эткерлĕхе пайлать йăлтах.

***

Чунилли итлет ялан
Саккуна пăсакана.
Суяна кăмăллакан
Шав тăнлать ултавçăна.

***

Хӗн кураканран кулсан
Асапланӑн ху кайран.
Ырӑ кӑмӑллӑ ҫынна
Хисепле эс яланах.

***

Ватӑсен сӳнми мухтавӗ
Ӑслӑ мӑнукӗсенче.
Ачисен те чакмӗ тавӗ
Ашшӗ-амӑш умӗнче.

***

Айванккана пит килӗшмест
Мӑнна хурса пакӑлтатни
Ят-сумлине те чыс кӳмест
Пӗр вӑтанмасӑрах суйни.

***

Ҫын кусӗ умӗнче парне —
Чи хаклӑ чул пек.
Хуҫи кама парассине
Йӑлтах хӑй чухлӗ.

***

Тӗрӗс мар ӗҫе пытаракан
Юрату шырать.
Тусӗ те кӑштах вӑлтса ыйтсан
Пӑрӑнать унран.

***

Айван ҫынна ҫӗр хут хӗне,
Вӑл ним пулман пекех пурнать.
Пӗрре кала ӑс-тӑнлине,
Вӑрҫать хӑйне хӑй, шухӑшлать.

***

Тӑрлавсӑр ҫын ав кулленех
Усаллӑха ҫеҫ пуҫҫапать.
Хӑрушӑ ангел ҫул ҫинчех,
Унпа часах вӑл тӗл пулать.

***

Çурисĕр юлнă упапа
Тĕл пул, сана унпах аван.
Пуплес килмест-ха тăмсайпа —
Айван кирек хăçан айван.

***

Кам ырра манса кайса
Усал ĕçпе тавăрать —
Лайăха ан кĕт шанса:
Хĕн çеç курăн çак çуртра.

***

Хирĕçӳ пуçламăшне пăхсам:
Татса кайнă пек шыв пĕвене.
Курма пулĕ хăвăрт инкекне,
Вăхăтра, эппин, эс чарăнсам.

***

Кăларсассăн усала тӳрре,
Айăплан-тăк ыр çынна сăлтавсăр
Ылхану тупатăн та, тӳрех
Халăх умĕнче пулан тăрлавсăр.

***

Кирлех-ши айвана пуянлăх,
Мĕн тăвĕ-ха унпа вăл?
Пухасчĕ те ăс-хакăл,
Пĕлӳ сахал. Ун çук пуласлăх.

(Камăн çурчĕ-йĕрĕ çӳллĕ,
Çав ӳксе вилме пултарĕ.
Камăн çук пуçра пĕлӳлĕх,
Хĕнлĕхĕ унран час тармĕ.)

***

Çут тĕнчере туссем сахал,
Юп курнă чух кăна нумай.
Пиччӳ пек çын хуйха-суйха
Санпа пултарĕ пайлама.

***

Пĕлӳ пухман этем те
Пĕр хăйшĕн тăрăшмасть.
Ăна эс сĕн-ха тем те,
Çавах тусне сутмасть.

***

Кам шав çылăха кĕресшĕн,
Кам ялан пит хирĕçесшĕн?
Камăн-ха хапхи пит çӳллĕ, —
Çав ӳксе вилесшĕн пулĕ.

***

Усал чĕре
Тĕл пулмĕ ырăпа.
Чее этем
Хăех лекет таппа.

***

Айван ывăл çуралсассăн
Терт-хĕнне куран хăвах.
Ашшĕн çук ун чух хаваслăх,
Кулянать пĕччен вăрах.

***

Хăпартланнă чух чĕре —
Тухтăр кӳнĕ пек юп-ырлăх.
Тĕл пулатăн хурлăх-шырлăх
Пĕр-пĕччен кичемлĕхре.

***

Таса мар çын ялан
Улталаса парне илет.
Тӳр сăмаха кайран
Çине тăрсах вăл хӳтĕлет.

***

Ăсчахăн ĕçĕ-хĕлĕ
Кирек хăçан куç умĕнче.
Айван пăхать хăй тĕллĕн,
Çавах та тикĕс ун тĕнче.

***

Кăнттăм-канттăм ывăлне пула
Тӳсме тивĕ ашшĕн эрлĕк.
Пăшăрханĕ амăшĕ ялан,
Чакĕ питĕнче илемлĕх.

***

Тӳр кăмăллисене айăпласассăн,
Чăн сăмахсемшĕн улпута хăртсассăн
Влаçра ларакана нихçан чыс кӳмĕç,
Кайран çавсем хăйсен çулне çеç пӳлĕç.

***

Сăмах хакне чухлаканран
Илтеймĕн тӳрĕ мар пуплев.
Чипер ăсли те пурнăçра
Хăйне хăех тытма пĕлет.

***

Айван та, шăп ларать пулсан,
Ытла та сумлăн курăнать.
Кам çынсенчен шав ютшăнать —
Çав ăсчах евĕр туйăнать.

## IX

*Тăнăçлăха юратманнине, хĕрсе кайса тавлашнине тата ытти ăссăрла, çынна хисеплемен кăмăл-туйăма хирĕç каланисем. Ырра шанса тата сапăр пулса, чăн-чăн тĕрĕслĕх çулне тупма май пурри. Хĕрӳленсе судлашнине тата сăмах пуянлăхĕпе киревсĕр ĕç тăвакансене хирĕçлени. Юратун тĕрлĕ енлĕхĕ çинчен.*

***

Кăмăлне улăштарать кас-кас
Улшăнчăк этем куллен.
Пĕлĕве вăл хирĕçлет,
Хисепне унра ăсчах курмасть.

***

Хăйне ăслăн тыткалать
Ушкăнра чух ăçтиçук.

Пурĕпĕр кашни чухлать:
Унăн пĕлĕвĕ пач çук.

***

Этемлĕхĕн сăмахĕсем
Тулли юхан шыв пек юхаççĕ.
Унта — ăсчах çăлкуçĕсем,
Унтан çынсем пĕлӳ пухаççĕ.

***

Усал ним вырăнне хумасăр
Пĕрмай çынна хурлать.
Чыс-сумлăха манса сăлтавсăр
Таса ята варлать.

***

Тӳрккес çынна кăмăллани
Пит аван мар.
Çумри тусна судра сутни
Тата начар.

***

Айван сăмахĕсем
Шыраççĕ харкашу.
Каярахпа çынсем
Пуçлаççĕ çапăçу.

***

Тăмсай чĕлхи чараксăр —
Хăй вилĕмне хăех тупать.
Сăмахĕсем ун хаксăр,
Чун-чĕмĕ лекĕ сив таппа.

***

Кахал чĕтрет хăранипе,
Кайран ятне ярать.
Алла уссан, хĕрарăм пек,
Тертленĕн выçлăхра.

***

Çимĕç евĕрлĕн сĕнет
Хăйĕн хыпарне элекçĕ.

Пӑтратсан ҫеҫ ӑш-чикне
Сисӗн: вӑл наркӑмӑш пек-ҫке.

***

Ӳрӗк-сӳрӗклӗх ӗҫре
Ыр туман нихҫан,
Туслашсан унпа хӗнре
Пурлӑх салатан.

***

Мӗн пур хуҫалӑхӗ пуянӑн —
Ялан тӗрекленен хула.
Ӑсри сӑнарлӑхне пула
Ҫут ӗмӗт ун виҫесӗр анлӑ.

***

Тӳпене ҫӗкленӗ
Ӳкес умӗн чун.
Чап-сум ӳснӗ чух
Сапӑрлӑх иленӗ.

***

Ҫын сӑмахне итленӗ чух
Ан пӳл, кайран эс хуравла.
Айван сӳпӗлтетет ялан,
Паллах, ун намӑс-симӗс ҫук.

***

Куҫать, хал ҫук пулсан та,
Таса ҫынна хӑват.
Теприн чунӗ аманнӑ,
Ӑна кам пулӑшать?

***

Пуянсене парне парсассӑн
Умри ҫул-йӗр час уҫӑлать.
Ун чух улпут та пит хавассӑн
Сана хӑй аллине парать.

***

Пĕр çын каланипе кăна
Тупаймăн чăнлăха нихçан.
Ĕçе йăлтах тĕпче, сăна,
Тĕрĕслĕхе кайран уçан.

***

Тавлашу хĕрсе кайсан
Васкасах шăпа яраççĕ.
Вăйлисем те пăхăнаççĕ
Пӳрнĕ элчеле кайран.

***

Тăван пиччӳ пит шăмарсан
Хула хупать пек хапхине.
Пĕр вартисем вăрçса кайсан
Çухатăн пурăнăç хакне.

***

Пĕлӳ хăй çимĕç евĕр,
Унпа чĕре пуян.
Юп курăн ĕмĕр-ĕмĕр
Ăна ăша хывсан.

***

Ырă пурнăç, сивĕ вилĕм
Чĕлхе ирĕкĕнчен килĕ.
Сăмаха шав хаклакан
Ун вăйне туять ялан.

***

Хăвалан тăк ырă арăмна —
Уйрăлатăн çутă телейпе.
Аскăнсассăн ĕмĕр тăршшĕпе
Çухататăн ăс-тăнна, пуçна.

***

Ыйткалакан шăпи çапла:
Мĕскĕнленсе вăл йăлăнать.
Пуян чĕлхи кăнттам ялан,
Тӳрккес саспа çеç хуравлать.

***

Юлташсем пулсан— эс халлă,
Вĕсемпе çеç ут ялан.
Хăш чухне тусу çеç хаклă —
Вăл пур тăванран тăван.

## X

*Тĕрлĕ енлĕ хайлавсем: пуянлăхпа чухăнлăх, ăслă-тăнлă пулмалли, айванлăх тата ытти хутшăнусем çинчен, çавăн пекех чухăнсене пулăшмалли, сапăрлăх, çыннăн уйрăм енĕсем пирки.*

***

Чухăнсен чун-чĕмĕ ырă,
Кăмăл-туйăмĕ таса.
Пуян çын айван, усал,
Ĕмĕр суйĕ, кӳрĕ хурлăх.

***

Пуçунта пĕлӳ пулсассăн —
Çĕкленӳллĕ кăмăл.
Хăвăрт урусем чупсассăн —
Такăнма та çăмăл.

***

Пуянсен юлташ чылай
Ылтăн-кĕмĕле пула.
Чухăна ав систермесĕр
Тусĕ те пăрахĕ шелсĕр.

***

Судра чух кӳнтелен
Улталасан,
Тухаймĕ хĕнлĕхрен
Хăех кайран.

***

Йăпăлтатакана мухтаççĕ
Ят-сумлисем:
Ку пирĕн тус тесе ырлаççĕ
Ăна вĕсем.

***

Курайmaççĕ чухăна
Тăван пиччĕшсем те.
Тус-юлташĕ пăрăнать,
Калаçмаççĕ темшĕн.

***

Ăс-тăнна çивĕчлетсен —
Хăв чунна çÿле çĕклен.
Кам пĕлÿшĕн тăрăшать,
Çав юп-ырлăха тупать.

***

Ултавçă кÿнтеленĕн
Шăпи тулать.
Çынна хисеплеменшĕн
Кăнса выртать.

***

Килĕшмест айван çынна
Капăрлăх, мăнаçлăх.
Тухсан чура хуçана,
Сивлĕ ăна халăх.

***

Ăслă-тăнлă этеме
Çиллентермĕн час.
Хăйне хисеплеттерме
Пур ун сумĕ, чап.

***

Тарăхса кайсан патша
Арăслан пекех усал.
Пилĕ ун, иртсен нуша,
Сывлăм евĕрех таса.

***

*Айван ывăл кулянтарĕ*
Хăйĕн ашшĕне.
Асилтерĕ чăркăш арăм
Мăшкăлтăк шывне.

***

Çурт-йĕрпе мĕн пур хуралтă
Несĕлне кăна юлать.
Ăслă арăм çеç — ку паллă —
Шăпа çырнипе пулать.

***

Кахаллансан —
Ыйха путан.
Тăрăшмасан —
Выçса пурнан.

***

Халалпа пурăнакан
Чун-чĕмне упрать ялан.
Тăрăшулăх пулмасан
Çул çинчех вилсе выртан.

***

Хирĕçленине пăхмасăр,
Лăпкăн, виçерен тухмасăр
Хытă тыт хăв ывăлна,
Çын тăвас тесен ăна.

***

Çиллес этем вăхăтĕнче
Пĕр хĕрхенӳсĕр айăплантăр.
Хытармасассăн çийĕнчех
Кайран хăех вăл асапланĕ.

***

Енчен те эс ăсчах пулас тесессĕн
Тăнла питленине.
Çын канашне пĕрмай ăша илсессĕн
Чăн тăвăн ĕмĕтне.

***

Этем пулăшура
Тĕл пулмĕ терт, хĕн-хур.
Юмарт çын пурнăçра
Ултавçăран маттур.

***

Ӳркенчӗкӗн алли măран:
Хăйне хăй пăхаймасть.
Сӗнсен тултарнă алтăра —
Ăна та тытаймасть.

***

Мăшкăллакансене хур кăтартсан
Ахаль çынсен ӳсет ăс-хакăл.
Тӳр кăмăлли хăй айăпне туйсан —
Çакна вăл ăнланать алхапăл.

***

Ашшӗне çука хăваракан,
Амăшне килтен хăвалакан —
Çакăн пек ача пит çăмăлттай,
Намăс курăн унпала пӗрмай.

***

Пысăк шухăшлă пуплев
Саншăн, ывăлăм, пит кирлӗ.
Вăл çеç витӗмлӗ те вирлӗ,
Эс ăна пӗрмай итле.

***

Ытла чее-çке кӳнтелен:
Мăшкăлласа кулать судран.
Çут чăнлăха пӗрмай питлет,
Шап-шур тӗсрен тăвать хура.

***

Ялан патак çиет айван:
Ӳт-пӗвӗ пӗрмаях суранлă.
Кӗтмест вăл ыррине судран,
Мӗн-ма тесен унта çук танлăх.

## XI

*Ăслă-тăнлă пулма ÿкĕтлени, тÿрккесленессинчен тытăнса тăма ыйтни, тÿрĕ кăмăллă, ĕçчен пулма хистени. Çылăха кĕрсенех такăнса ÿкесси пирки. Ырă шанăçа тÿрре кăларма, ĕçчен, сăпай пулма ÿкĕтлени. Ашшĕ-амăшне хисеплемен çынна питлени, вăрланине, тавăрнине, улталанине сивлени. Усал ĕç тăвассинчен пăрăнма ÿкĕтлени, тÿрĕ кăмăллă пулма вĕрентни.*

***

Эрехе пит иленсессĕн
Çын чăрсăрланать.
Мăкатать вăл хĕрхенмесĕр
Çивĕч ăс-тăна.

***

Аслатиллĕ сас патшан,
Арăслан пекех вăл паттăр.
Эс ăна тарăхтарсан
Ĕмĕр çылăхра пулатăн.

***

Айван çын тавлашура
Хăйне май хĕрÿленсен те
Пăрăнма харкашуран
Чыслă-сумлăх кирлĕрех-тĕр.

***

Хĕлле кахаллансан,
Алла усса ларсан
Çу кунĕнче хурланăн,
Пуш ĕмĕтÿ путланĕ.

***

Тĕпсĕр кÿлĕре пытаннăн
Тарăн шухăшĕ ăсчахăн.
Витĕр куракан кăна
Ăнланать йăлтах ăна.

***

Хĕрхенме пĕлнишĕнех
Çав çынна мухтаççĕ.
Чăнлăхшăн ĕçлекене
Кам курать хальхаççăн?

***

Кăлтăксăр çӳрет
Тӳрĕ çын ялан.
Кураççех рехет
Ачисем кайран.

***

Вырăнĕ патшан пит çӳллĕ,
Хăратать пурне те.
Усала хăвалĕ, пӳлĕ
Вичкĕн куçĕпе те.

***

Кам пĕлтерĕ уççăн:
«Чун-чĕрем таса.
Кăмăл пулмĕ хуçăк,
Хăратмасть усал?»

***

Тарасу пит улталать,
Тĕрĕс мар виçен.
Çылăха çапла кĕретĕн
Çынсен умĕнче.

***

Мĕнпе кăсăкланать
Ача шкулта чухне.
Вăл кам пулассине
Ăсчах йăлтах чухлать.

***

Чухăн пулас мар тесен
Ĕçлемешкĕн ан ӳркен.
Тулăх пурнăçа куран
Эс ыйха манса кайсан.

***

«Япали пит япăх», — тет
Тавара туянакан.
Урамрах, çынна курсан,
Урăхла сӳпĕлтетет.

***

Пур сан ылтăн-кĕмĕл,
Пур тем тĕрлĕ пурлăх.
Анчах юп эс курăн
Ăсупа çеç ĕмĕр.

***

Ил кĕпине эс палламан çынран
Ун майлă çын пулсассăн.
Саклат сĕнекенни кăна пулсан
Çав çăкçăна * шанатăн.

***

Улталаса туяннă çăкăр
Малтанлăха пит тутлă пек.
Каярахпа сисетĕн хăвăрт:
Çăвар йăлт тулнăн чулсемпе.

***

Хуçалăх йĕркеленĕ
Канаш паракансем ялан пулсан.
Татах вăл çирĕпленĕ.
Сӳпĕлтетекен çынсене чарсан.

***

Чĕлхин чаракĕ çук çынпа
Ан хутшăн-ха шухăшламасăр.
Малтан мухтанĕ вăл санпа,
Кайран сутать пĕр вăтанмасăр.

**Çăкçă — хăй çине илекен.*

***

Ашшё-амăшне ялан
Шелсĕр хурлакан ачан
Чун çути сӳнет тӳрех
Сивĕ сĕм тĕттĕмлĕхре.

***

Васкаса туртса илсессĕн
Çыннăн пурлăх-эткерне,
Тем пекех кĕтсен те эсĕ
Илтес çук пил сăмахне.

***

Пĕрмай тупа тăвать
Этем танатана лексен.
Каярахпа, хĕн-хур иртсен,
Тем те пĕр шухăшлать.

***

Тăрă шыв çине кăларĕ
Тасамарлăха патша:
Çутă чăнлăха кăтартĕ,
Кӳрĕ усала тип шар.

***

Çутă чăнлăх, ырă кăмăл
Сыхлĕ патшана ялан.
Малаш кунĕ пулмĕ ăмăр
Халăхпа пĕрле утсан.

***

Чап-мухтавĕ çамрăксен —
Вĕрекен вăй-хал.
Кĕмĕл çӳçлĕ ватăсен —
Иксĕлми ăс-хал.

***

Ăш-чиккӳне сиенлетет суран
Çапаканни хĕнет-тĕк вирлĕ.
Çак асапа тăнишĕн хирĕç,
Эс вăйлă яланах усал çынран.

## XII

*Тĕнчене, çынсен çул-йĕрне пăхса-тытса тăрас ĕççем пирки. Мăнкăмăлланнине, çăткăнланнине, улталанине, çына хĕсĕрленине хирĕçлени. Çынпа ăшă пиллĕ, çывăх пĕлĕшсемпе ырă кăмăллă пулманнине тата ытти кăлтăксене сивлени.*

***

Чыссăр çын нихçан тӳрленмĕ,
Мăнна хурĕ шав хăйне.
Ĕçĕ-хĕлĕ ун пĕр енлĕ,
Курмĕ çылăх сăлтавне.

***

Пуçаруллă çын ялан
Юп курасшăн тăрăшать.
Васкама юратакан
Юрлăхра çеç пурăнать.

***

Мул-пурлăха ултав чĕлхипеле
Пуçтаракан малтан йăпанĕ.
Кайран вăл вилĕм варкăшĕпеле
Кĕтмен çĕртен ӳксе йăванĕ.

***

Чыссăр çын хĕсĕрлени
Пырса çапĕ-ха хăйнех.
Чăнлăха хирĕçлени
Сиен кӳрĕ путсĕрех.

***

Улшăнчăк этемĕн çулĕ
Ясара çеç вĕрентет.
Кам çут чăнлăхшăн шав çунĕ —
Çав çын тупатех тивлет.

***

Чăркăш арăмпа ялан
Хӳхĕм пӳртре пуличчен
Çуртăн тăрринче пĕччен
Пурăнсассăн та аван.

***

Чыссăр çын усал тăвасшăн
Таврари мĕн пур çынна.
Тусĕ, шел, унпа пуласшăн,
Пурпĕр вăл сутать ăна.

***

Усала айăпласассăн
Ахаль çын та ăнланать:
Кирлĕ вĕренӳ ăсчахшăн,
Вăл та çĕн пĕлӳ пухать.

***

Тӳрĕ çын сăнать, тĕпчет
Путсĕрĕн çуртне пĕччен.
Еплерех унта куллен
Çухалать тивлет хуллен.

***

Чухăн нушине туйсассăн
Курмăш-илтмĕше персен —
Хăв та хĕн-хура лексен
Пулăшу ниçта тупаймăн.

***

Вăрттăн панă парнепе
Усала лăплантаран.
Пĕрмай шăл хăйранипе
Тăшманна хаярлатан.

***

Чăнлăх çиеле тухсан
Тӳрĕ çын пит савăнать.
Ĕмĕчĕ йăлт путлансан
Усалли чунтан хăрать.

***

Пăрăнсассăн тĕп çултан
Ăс-хална йăлтах çухатăн.
Вилнĕ çынсемпе пĕр тан
Манăç çырминче пулатăн.

***

Кам савӑнма юрататъ —
Ҫавӑ чухӑна юлатъ.
Эрехе кам кӑмӑллатъ —
Вӑл та юрлӑха путатъ.

***

Тӳрӗ ҫын лексен хӗне
Улӑштар-ха путсӗрпе.
Уҫҫӑн калаканнине
Хӑтарсамччӗ чейипе.

***

Ҫиллес те чӑркӑш арӑмпа
Пӗрле пурӑниччен
Килен эс уҫӑ сывлӑшпа,
Пул пушхирте пӗччен.

***

Ёмӗтленнӗ, кӗтнӗ пурлӑх
Упранатъ килте ӑсчахӑн.
Айван ҫын ҫакна йӑлт куртӑр —
Салататъ ӑна васкавлӑн.

***

Ыр кӑмӑлпа чӑнлӑха
Упракан этем
Шырӗ пурнӑҫра вӑй-хал,
Тупӗ чап, илем.

***

Хулана кӗрсен ӑсчах
Аркататъ мӑн крепоҫа,
Вӑйлисем те хӑш чухне
Чухлас ҫук пӗлӳ хакне.

***

Вырӑнлӑ калаҫакан,
Чыс-сумне шав сыхлакан
Ӳкмӗ пурнӑҫ авӑрне,
Упрӗ хӑйӗн чун-чӗмне.

***

Мăн кăмăллă вăрă-хурах
Çынран пĕрмай кулать.
Каппайланса кайсан вăрах
Виçесĕр мухтанать.

***

Ытла та сăхă пулнăран
Хăй вилĕмне тупать наян.
Мĕн-ма тесен ун нихăçан
Алли ĕçе пит çыпăçман.

***

Выç куç çăткăнланать куллен,
Асап курать хĕне лексен.
Тӳр чунлă çын мул парнелет,
Ачи-пăчи курать рехет.

***

Таса мар çын чӳклени
Пит киревсĕр япала:
Уйрăмах чееленни,
Усал шухăшлă пулни.

***

Ултавçă кӳнтелен пĕтет
Хăй суйнине пула.
Тĕрĕслĕхпе пурнан этем
Чысне упрать ялан.

***

Пуçтах сăн-питĕнче
Чарусăрлăх куратăн.
Таса çын çулĕнче
Çут чăнлăх çеç тупатăн.

***

Пĕлӳ, ăс-хакăл çулĕ —
Ват çыннăн ыр пехилĕ.
Ырра ан тăр çеç хирĕç —
Вара çаксем йăлт пулĕç.

***

Хатĕрле урхамахна
Çапăçу пуçланиччен.
Çĕнтерӳ, чухла çакна,
Пулĕ чăнлăхăн енче.

## XIII

*Ырă ята епле тупасси тата ăна мĕнле сыхласа хăварасси çинчен. Ăсчах сăмахне чунпа йышăнма чĕнни. Чыслăха упрамалли çинчен вĕрентни, пурнăçри ытти пулăмсем пирки асăрхаттарни.*

***

Ырă ят кирек хăçан
Лайăх теççĕ нухратран.
Ылтăн-кĕмĕл нихăçан
Чап-сумпа танлашайман.

***

Пуян çын пурнаймĕ уйрăм,
Тĕл пулать вăл кĕлмĕçе те.
Ма тесессĕн иккĕшне те
Пĕр пекех пилленĕ пурнăç.

***

Ăслă-тăнлă çын курать те
Пытанать-ха инкекрен.
Айванни çула тухать те
Тертленет нуша-хĕнре.

***

Хĕн-хурлă, серепеллĕ çул
Каварлă та усал çынсен.
Таса чунна упрас тесен
Пĕрмай эс пăрăн вĕсенчен.

***

Тĕрĕс çул çине тăрат
Яш çынна эс çамрăклах.
Пăрăнмасть вара кайран
Ватăлсан та вăл унран.

***

Пуян çын пăхăнтарать
Хăть хăçан та чухăна.
Кĕтмелле илекене
Кăларать вăл чурана.

***

Тĕрĕсмарлăх эс аксан
Инкекне хăвах выран.
Çилленсе пурăнакан
Çил арманĕ лартайман.

***

Ырă кăмăллă çынсен
Яланах кун-çулĕ пиллĕ.
Чухăнсемшĕн, кур, вĕсен
Çăкăрĕ пур ытлă-çитлĕ.

(Ырлăх-пурлăх паракан
Çĕнтерӳ те чыс тупать.
Чунсене пăхăнтарать,
Хăйне майлă çавăрать.)

***

Тӳрккес çынна ялан
Сирсем эс хăв çумран.
Санран вăл пăрăнсан
Юлмасть харкашакан.

***

Камăн чунĕ тап-таса,
Ун чĕлхи те çепĕç питĕ.
Патшана вăл кӳрĕ витĕм,
Пурнĕ хаклă тус пулса.

***

Урама тухмасăрах
Сăмахпа вылять услап:
«Площадьре пур арăслан,
Вăл мана тытса çурать!»

***

Айванлăх çӳресессĕн
Яш çамрăк çумĕпе,
Ăна час хӳтереççĕ
Чĕр хулă вăйĕпе.

***

Чухăна кам хур тăвать,
Çавă пурлăх пуçтарать.
Кам пуяншăн вăй хурать,
Çавă юрлăхра пурнать.

***

Пуçна пĕксе тăнла пĕрмай,
Итле ăсчахăн сăмахне.
Ăша хывсан вĕрентнине
Чуну лăпланĕ хăйне май.

***

Пĕлӳ кăна сана йăпатĕ
Енчен те эс ăна упран пулсан.
Халтан кайсан та ун хăвачĕ
Çулпуçĕ евĕр пулĕ-ха ялан.

***

Асра тытсам вĕрентнине,
Паян татах сана эп ăс парасшăн.
Ăсчах пĕрмай çут ĕмĕтне
Ыр ĕçпе çеç çыхăнтарасшăн.

***

Сана виç хут çырса пĕлтертĕм
Ӳкĕтлесе, канаш парса.
Куллен-кун тăрăшса вĕрентрĕм:
Пурăнмалла ырра савса.

Ăна кăна шанас пулать,
Ăс-хакăл çивĕч мар-ха унсăр.
Пĕчченлĕхре сахал хăват,
Тĕрĕслĕхӳ ан юлтăр сумсăр.

***

Ан туслаш çиллес çынпа,
Харкашма тупать сăлтав,
Е час тарăхаканпа
Калаçаймăн-ха чунтан.

Вĕсем пек эс пурăнсан
Телейне йăлт çухатан:
Инкекне хăвах тупан,
Чунна хăвăрт йăлмаклан.

***

Çын парăмне пĕлмесĕрех
Çăка кĕме хушмаççĕ.
Çăмăлттайсем кăна ирех
Васкавлăн ал параççĕ.

Курнасшăн теветкеллĕ,
Анчах укçу сан пач та çук.
Пурнас тесен йĕркеллĕ
Вак-тĕвексемшĕн çеç ан çун.

***

Авалхи аçун çĕрне
Эс упра.
Ан пăссам ун чиккине
Пурнăçра.

***

Ĕçре вăр-вар çынна курсассăн
Тӳрех эс ан мухта, тархасшăн.
Вăл пуççапать шав патшана,
Асăрхамасть ахаль çынна.

## XIV

*Çăткăнланса апат çинине сивлени, хăвна ырă сунман çынсемпе асăрхануллă пулмалли çинчен. Ачасене ӳстернĕ чух ашшĕн хăйне епле тытмалли пирки. Апат-çимĕçе виçеллĕн çимелли, чуна таса упраса хăварасси çинчен. Эрех сиенĕ тата вăл çынлăхран кăларни.*

***

Хуçапа пĕрле ларсассăн
Мăн сĕтелĕн хушшине,
Лайăх, тĕплĕн сăнамасăр
Ан тутан ун çимĕçне.

Кирлĕ-ха апачĕ, унсăр
Вăй-халу хавшать выçсан.
Çăткăн çын çавах та усă
Кураймасть, пит сăхлансан.

***

Сурчăкна та юхтарать
Питĕ илĕртӳллĕ çимĕç.
Асăрхан, çук унăн симлĕх —
Илемпе çеç улталать.

***

Пуш ĕмĕтпе ан хăпартлан
Пуятăп эп часах тесе.
Пит илĕртсен те шухăшсем,
Вăл кăлăх пулнине туян.

Ав ăмăрткайăк та умрах
Вĕçет-ха — пур вăй-хал.
Анчах та çухалать часах —
Мул шыракан та çавнашкал.

***

Кĕвĕç чунлă çын калать-ха:
«Çи ăна та çи çакна».
Сăмаххи ун çапларах-ха,
Юратмасть хăй пач сана.

Ан тутан ун ҫимĕҫне,
Ан ăмсан пуянлăхне.
Сăхă ҫыншăн, ма тесессĕн,
Пулăн ĕмĕр ют ҫын эсĕ.

***

Хăнара-ха сăйланатăн,
Хуҫана хĕрсех мухтан.
Апатне ак тутанан та
Урама тухсан... хăсан.

***

Хăвăн ăслă шухăшна
Ан пĕлтер ҫав айвана.
Вăл ăна пач хакламасть,
Ăнланма пултараймасть.

***

Тăлăх-туратсен ҫĕрне,
Авалхи чикĕсене,
Улăштарăн та, кайран
Ĕнсӳне хăвах хыҫан.

Ма тесессĕн вĕсене
Хӳтĕлет пĕрмай Тӳре.
Санăн йăнăшусене
Тӳрлетет кĕрешӳре.

***

Тăнла пĕрмай
Ыр сăмаха:
Пĕлӳ пухма
Хăвах туп хал.

***

Айăпа кĕрсен ача,
Ним пулман пекех ан пурăн.
Хулăпа ăна кăшт ҫап,
Иртĕхмест вара вăл урăх.

Патакна тутаннипех
Несёлӳ вилмест тӳрех.
Йăнăшне кăна туйтарĕ,
Инекекрен ăна хăтарĕ.

***

Ывăлăм! Эп савăнатăп
Эс пĕлӳшĕн тăрăшсан.
Куллен-кун вăй хунăран
Ăс-хална анлăлататăн.

Тĕрĕс çул шыранăран
Кăмăл-туйăм ĕнтĕ евĕк.
Ут, эппин, мала тĕллевлĕн,
Туп телей çут чăнлăхра!

***

Ывăлăм, мана тăнла:
Мала хур ăс-хакăла.
Хăв чĕрӳн сӳнми вăйне
Ăнтăлтар тӳр çул енне.

***

Эрехпе киленекен,
Аш-какай шав çиекен
Саншăн ют çынсем пек пулчăр,
Аташса вĕсем шав супчăр.

Яланах çăткăнлансан,
Кĕленче ăшне путсан
Çĕтĕк-çатăка тухатăн,
Ят-сумна йăлт çухататăн.

***

Аçуна сума сусассăн
Курăн ĕмĕр пархатар.
Аннӳне — вăл ватăлсан та —
Çынлăхран эс ан кăлар.

***

Ăс-хална, вĕрентĕвне
Нихăçан ан сут.
Шав ÿстер те пĕлĕвне
Чăнлăхпа çеç ут.

***

Тÿрĕ ывăлĕпе ашшĕ
Мухтанать пур кăмăлтан.
Ма тесессĕн, вăл ашшĕ
Ăслă пулнăран ялан.

***

Савăнать аçу чунтан
Эс маттур пулнишĕн.
Хĕпĕртет аннÿ те сан
Ĕмĕчĕ тулнишĕн.

***

Ывăлăм! Ирĕкĕмрен,
Ырă енлĕ йĕркерен
Эс хăв тĕллĕнех ан тух,
Ман çине пăхса ăс пух.

Ма тесессĕн çул çинче,
Е таса çăл юппинче
Тĕл пулатăн аскăна —
Хурлăх кăтартакана.

Илĕртет вăл, куç пăвать,
Çынсене аташтарать,
Хурах евĕр вĕскĕртсе
Саккуна шав пăстарать.

***

Камăн килĕнче йĕреççĕ,
Пĕр сăлтавсăр аманаççĕ,
Чашăк-тирĕк çĕмĕреççĕ,
Йынăшаççĕ, харкашаççĕ?

Камăн кусĕсем хĕп-хĕрлĕ?
Камăн ĕмĕрĕ пит хĕнлĕ?
Паллă ĕнтĕ, ху чухлатăн:
Эрехе юратаканăн.

***

Илĕртӳллĕ-çке эрехĕ,
Хĕмленет те чашкăрать.
Ĕçсенех сăнна хĕретĕ,
Е аспид пекех сăхать.

Куçусем ясаррăн пăхĕç
Ют хĕрарăмсем çине.
Чун-чĕмӳ те пулĕ сăхă,
Манăн сапăрлăх мĕнне.

Хăвна туйăн тинĕсри пек,
Карапу хум ăшĕнче.
Мачта тăрринче ав типĕ,
Çывăран ун вĕçĕнче.

Хăв пуплен: «Хытах хĕнерĕç,
Пурпĕр ним те ыратмасть.
Патак çирĕн теç, ĕнер эс,
Ман ӳт-пӳ çакна туймасть.

Вăрансан ун-кун пăхатăп,
Мĕн кĕтет мана каллех?
Паллă ĕнтĕ, йăлт чухлатăп:
Илĕртет татах эрех».

## XV

*Таса мар çынсем хыççăн кайма кирлĕ марри пирки асăрхаттарни. Ăса мала хунин пĕлтерĕшĕ, унăн ырă енĕ лайăххи çинчен. Айванланнине тата çылăха кĕрессине сивлени. Тĕрмене лекнисене шеллесси пирки. Ăс-хакăлăн шанăçĕ çинчен. Ырă кăмăллă пулма, пăлхавçăсенчен айккинче тăма чĕнни. Икĕ питленни, ултав çулĕ япăх пирки асăрхаттарни. Кахалланнин япăх енĕсем çинчен.*

***

Эс ан тăрăш кĕвĕçмешкĕн
Хаяр чунлă çынсене.
Сивлесе вĕсен çулне
Вăй-хал пух хĕнрен иртмешкĕн.

Пусахлас, ирĕксĕрлес —
Çавăн пек усал тĕллевĕ.
Унпа çеç утсан пĕрле
Пурăнаймăн эс пит евĕк.

***

Хуралтă-çурт йĕркеленет
Хуçи ĕçчен пулсан.
Куллен-кун вăл çирĕпленет
Ăса мала хурсан.

Килĕшӳре, тăнăçлăхра
Ӳссех пырать тупра.
Хушăнакан пуянлăхра
Çемье телей курать.

***

Çирĕп кăмăллă этем
Вăйлă хăйĕн ăсĕпе.
Вăл ăна çирĕплетет
Куллен-кун ĕç-хĕлĕпе.

Хисеплет те пĕрлĕхе,
Пит сивлет пĕчченлĕхе.
Çынсемпе вăл канашлать,
Ăнăçу вара тупать.

***

Ăс-хакăл шайĕ
Ытла та пĕчĕк-çке айванăн.
Пĕлӳ пухасшăн ăнтăлсан та
Çук унăн шанчăк.

***

Усал çыннăн шухăшĕ
Палăрать куллен.
Халăх терчĕ пухăнĕ,
Чакĕ ун тивлет.

***

Çылăха кĕрекенсен
Ĕмĕт-шухăшĕ тискерлĕ.
*Вĕсене пула çынсен*
Пурнăçĕ пĕрмай синкерлĕ.

***

Ахăр самана çитсен,
Чун-чĕмӳ хавшаклансан,
Чухăн пулнăран сисен:
Чăн та, вăй сахал çав сан.

***

Çăл-ха сивĕ вилĕмрен
Тĕрмене лекнисене.
Пĕтме пӳрнĕ çынсенчен
Пăрăнма шутлатăн, тен?

Калăн-шим: «Илтмен. Курман».
Çынсем пĕлмĕç тетĕн-им?
Ырă тунине, ăнлан,
Халăх хаклĕ йăлт кайран.

***

Уйăрса сар карасран,
Ывăлăм, пылна тутан.
Хаклă апата ялан
Кирек кам савса мухтать.

Пыл пекех çынри ăс-хал,
Эс унпа тăк — чакмĕ хал.
Шанчăку та хăвăнпах,
Малашу — хаваслăрах.

***

Чыссăр чун, санран ыйтатăп:
Усал шухăшлă пулса
Таса çын çуртне ан ват-ха,
Юп ан кур хĕн кăтартса.

Çичĕ хут тип шар чăтсан та
Тÿрĕ çын вăй пуçтарать.
Иртĕхнишĕн çул-йĕр санăн
Вĕçленет кĕç тамăкра.

***

Ан тарăхтар усаллăха,
Пит ан ăмсан чыссăрлăха —
Вĕсен çул-йĕрĕ илĕртÿсĕр,
Вĕсем нихçан курмаççĕ ÿсĕм.

Усалшăн ют пĕрмай малашлăх
Тискерлĕхпе туслашнăран.
Чыссăррисен те çук пуласлăх
Ултавлăха пуççапнăран.

***

Ывăлăм, эс усалтан та,
Патшаран та шав чĕтре.
Пăлханакансем пулсан та,
Пăрăн вĕсенчен тÿрех.

Ăнкараймăн, вĕсенчен
Тухĕ те хĕн-хур сасартăк,
Хăтăлаймăн вилĕмрен,
Кăнса выртăн эс ним маршăн.

***

Ăсчахсем çапла каланă:
Икĕ енлĕ эс ан пул.

Тӳресем вӑлтса ыйтсан та
Хӑвӑн шухӑшупа юл.

«Айӑпланакан суймасӑр
Кӑтарту парать», — тесен,
Тӗрӗс ҫул шыракансем
Чӑтаймасҫӗ ылханмасӑр.

Ултава питлекенсен
Халӑхра туссем йышланӗҫ.
Чӑнлӑха хисеплесен
Хура вӑй ялан путланӗ.

***

Чунне сутман ҫынна,
Сӑмах тытакана
Ӗҫре пит юратаҫҫӗ
Юлташӗсем хальхаҫҫӑн.

***

Пурнӑҫӑн йӗрки ҫапла-ха:
Уй-хирте, картишӗнче
Эс малтан вӗҫле ӗҫе,
Ҫурт ҫӗкле кайран вӑраххӑн.

***

Ҫывӑх пӗлӗшне судра
Кирлӗ-шим, юлташ, сутма?
Пӗр сӑлтавсӑр хурласан
Юлӑн-ши хӑв тап-таса?

«Хӑй мӗнле те, эп ҫапла,
Пӗлтӗр хаклама мана»,—
Ан аташ-ха айванла,
Хисепле малтан хӑвна.

***

Иҫӗм сачӗ витӗрех тухатӑп
Ҫу кунне йӑлт астуса:
Ак кунта лӳппер этем тӑратчӗ
Пакӑлтин ӗҫне пӑхса.

Пăх та кур! Ытла кичем тавралăх,
Юхăннă хӳми кашнин.
Ашкăрать вĕлтрен çын пытанмалăх.
Шухăшларăм эпĕ тин.

Чунăм-чĕрempe йăлтах ăнлантăм,
Юлхавсем вĕрентрĕç çав.
Пит хăпартланатчĕç, кăшт вăлтсан та:
«Ӳркенместпĕр-ха пачах.

Кăшт кăна-ха çывăратпăр, — тетчĕç. —
Тĕлĕрсе илни аван.
Каннă хыççăнах тăрсан ĕçлетпĕр,
Çакна курăн ак хăвах...»

Чăн та, чухăнлăх килет васкавлăн,
Вăл кĕтсе тăмасть нихçан.
Кахалсен çуртне уçать те алăк
Тĕпелрех ларать ялан.

## XVI

*Патшасен тата вĕсен тивĕçĕсемпе пултарулăхĕ пирки. Патшасемпе тата ятлă çынсемпе асăрханууллă пулмалли çинчен. Уссăр тавлашнине, нумай пакăлтатнине сивлени. Сăмах хакĕ, чăтăмлăх, туслăх шанчăклăхĕ пирки. Ĕмĕтсĕрленнине, йăлăхтармăш пулнине, туслăха сутакана, çăмăлттайлăха сивлени. Çĕнтернĕ тăшманпа ырă пулмалли пирки. Хĕрӳленсе тавлашнипе, çын хăйне виçере тытманнипе килĕшменни.*

***

Аслă çĕр ытамĕнче
Тӳпен çӳллĕшĕ пит анлă.
Тĕпчесессĕн те ăнланмăн
Патшасен чунне веçех.

***

Кĕмĕлне йăлт уйăрсассăн
Тĕрлĕ тĕслĕ хутăшран
Пухăн эсĕ мул пĕр савăт,
Чухăн пулмăн нухратран.

***

Суя чунлă усала
Уйăрсассăн патшаран
Çирĕплетĕн престола,
Юп тупатăн чăнлăхра.

***

Патша çывăхĕнче нихçан
Хăмпăланса ан мăнаçлан.
Ят-сумлă çынсемпе тăрса
Кĕме пултарăн намăса.

«Кил кунтарах,» — тесе чĕнсен
Пуянсемпе тăр юнашар.
Хăй тĕллĕнех килмест хисеп,
Кирек ăçта та кирлĕ шай.

***

Тавлашăва кĕмешкĕн ан васка
Сăлтавсăр, кăлăхах.
Тухсассăн çиеле тупăшакан
Мĕскер эс калăн-ха?

***

Сутлашура хĕрсе кайсан
Вăрттăнлăхна йăлт ан пĕлтер.
Санпа пĕрмай тупăшакан
Çакна чухласшăн çунтăр тек.

Енчен те урăхла пулсан
Намăсланан та терт куран.
Суя сăмах сарăличчен
Хăвна тытма вĕрен куллен.

(Çирĕп туслăх, юрату:
Пурăн теççĕ эс тату,
Хăв ятна упрас тесен
Ан тухсамччĕ виçерен.)

***

Çутă кĕмĕл савăтра
Ылтăн пан улми тупатпăр.
Килĕшÿллĕ сăмахра
Чун тасалăхне куратпăр.

***

Килĕшет ăсчах сăмахĕ
Итлекенсене,
Ылтăн укă пек, ахах пек
Сапалать хĕмне.

***

Тырă вырнă чух юр çунă евĕр
Ултава мала хуран сăмах,
Хуçипе ыр чунлă элчĕ евĕк,
Пултарать ăна савăнтарма.

***

Çил вĕрсессĕн ăмăр пĕлĕт
Çумăр çутарман пекех.
Чухăн мухтанать хăй тĕллĕн:
Пуйăп эп тесе кĕçех.

***

Улпут та çупăрлать
Хăйне итлекене.
Йăваш чĕлхе тататть
Чуралăх сăнчăрне.

***

Тупрăм тетĕн пыл, тутан,
Çи ăна тăраниччен.
Анчах ан ĕмĕтсĕрлен,
Виçерен иртсен — хăсан.

***

Тусун килне кĕрсе ялан
Сăлтавсăрах чăрмантарсан,
Калаçуран йăлăхнăран
Вăл пăрăнма пуçлать санран.

***

Мăлатукăн, хĕçĕн, çивĕч уххăн
Ултава чармашкăн çук хăват.
Тус текен тусне сутать те туххăм,
Ним пулман пек пурăнма хăять.

***

Катăк шăлупа куран-и усă,
Халсăр урупа утайăн-ши?
Пĕлĕшӳпеле пурнатăн туслăн,
Терт-хĕнре ăна шанайăн-ши?

***

Сурана уксус сапакана,
Тунсăхланă чух юрлакана
Танлаштарăн сивĕ кун çитсессĕн
Тум-тирне хывса перекенпе эс.

***

Шĕкĕ çийĕ йывăçа,
Кĕве — çĕнĕ тум-тире.
Хурлăхĕ пуссан пуçа
Аманать-çке чун-чĕре.

***

Тăшману апат ыйтсассăн
Ан хыт кукарлан — çитер.
Е вăл шывшăн антăхсассăн
Хĕрхенмесĕрех ĕçтер.

Чунĕ ун вутпа çунать
Кулленхи ыр ĕçӳсемшĕн.
Айăпне туйса, хисеплĕн
Тав тăвать сана, хаклать.

***

Çурçĕр пĕлĕчĕ пĕрмай
Илсе килĕ сивĕ çумăр.
Пач кĕтсе тăман сăмах
Тӳрĕ çыншăн пулĕ сумсăр.

***

Чăкăлтăш арăмупа
Пысăк пўртре пурниччен
Ĕмĕр ĕмĕрле пĕччен
Кĕтесре, мачча çинче.

***

Сивĕ шыв, чăнах та, симлĕ
Ăш хыпсан, чун ĕшенсен.
Ыр хыпар та питĕ кирлĕ
Эс ăна темччен кĕтсен.

***

Аркатнă çут çăлкуçăн
Пăтраннă пек тăп-тăрă шывĕ,
Тўр чунлă çын, ўксен те, шырĕ
Тĕрĕслĕхе хăюллăн.

***

Пылшăн çăткăнланăн питĕ,
Çиейместĕн-ха нумай.
Сĕмсĕррĕн хуçаланни те
Хăв шутланă чап-сум мар.

***

Ишĕлсен йăлтах хула
Çирĕп стенисем те çук-çке.
Халсăр çын имшер ялан,
Ăнтăлусăр унăн чунĕ.

## XVII

*Ăссăрлăха сивлени. Кахала питлени. Виçерен тухса кайса шўтленине йышăнманни пирки. Чееленнине, улталанине, вăрттăн каварлашнине хирĕçлени.*

***

Тăмсай чыс-чапшăн ăнтăлни,
Ĕренкерен йăлтах тухни —
Çулла шур юр вĕлтĕртетни пек,
Вырма тухсассăн пăр çуни пек.

***

Çерçисем пăрр! вĕçсе кайнăн,
Вирхĕннĕн чĕкеç çÿле,
Кăлтăк-айăп пулмасассăн
Çын ылханĕ сирĕлет.

***

Чăпăркки — лашашăн,
Сар йĕвен — ашакшăн,
Патакки те кирлĕ
Чылай чух айваншăн.

***

Ăссăр çыннăн ыйтăвне
Кирлĕ мар хуравлама.
Пуçлăн хăв сисмен чухнех
Шăп ун евĕр курăнма.

***

Айван çын пĕлменнине
Кирлĕ мар уçса пама.
Пуçлĕ хăй сисмен чухнех
Ăсчах евĕр курăнма.

***

Тăмсай хутне кĕрсессĕн
Сисмесĕрех тип-шар куран.
Ун чух кун-çул илемсĕр,
Нуши те вăйлăрах санран.

***

Катăккин ăслав-хайлавĕ
Хăйне евĕр ĕренкесĕр.
Шăп çапла уксах-чăлахăн
Урисем утмаççĕ танлăн.

***

Усă пур-и чулравра
Ылтăн, кĕмĕл упрасассăн?
Тăрри шăтăкрах çынра
Кирлĕ-ши чап шырамашкăн?

***

Ӳсĕр ҫын пит йĕплĕ кӳкене,
Чечек пухнă пек, татасшăн.
Шăп ҫапла тăмсай чылай чухне
Ăслă хайлавсем каласшăн.

***

Ырă ҫыннăн ĕҫĕ-хĕлĕ
Пурнăҫланĕ-ха хăй тĕллĕн:
Пулăшĕ вăл айвана,
Парне парĕ чухăна.

***

Малтан хăснă вырăннех
Таврăнать-ха йытă.
Ăссăр ҫын та хыттăн
Пĕлтерет кив шухăшнех.

***

Хăйне ăслă теекен те
Пурнăҫлаймĕ сăмахне.
Айвана эс ĕненмен те,
Чăн тăвать сан ĕмĕтне.

***

Наян этем пӳртре ларсах
Ҫине-ҫинех пит хăратать:
«Енчен те урама тухсан
Мăн арăслан тытса ҫурать!»

***

Алăк ҫекĕле пула
Хупăнать те уҫăлать.
Вырăнĕ ҫинче услап
Ир те каҫ йăваланать.

***

Мĕшĕлти иккен услап,
Тĕлĕнтерĕ ҫынсене,
Куркине тытсан алла
Шыв ĕҫме те ӳркенет.

***

Чĕнменнине пула кахал
Ытла та ăслăн курăнать.
Хирĕçлеймест вăл ăсчаха,
Шăп çавăнпа çеç шăп тăрать.

***

Кирлех-ши тĕк тăран йытта
Туртмашкăн *хăлхинчен* сăлтавсăр.
Ют çын хирĕçĕвне курсассăн
Кирлех-ши-ха кĕме хута?

***

Ăсран тайăлнă пекех
Курнăçланĕ юлташу.
Çулăм, вилĕм витĕрех
Вĕççĕр шырăн пулăшу.

Пит улталĕ вăл сана
Куртăрччĕ тесе тип шар.
Ĕмĕчĕ путлансанах
Эп шўтлерĕм тет, каçар.

***

Вучĕ пулмасассăн
Çулăмĕ сўнет.
Элек сармасассăн
Хирĕçў пĕтет.

***

Кăмрăкĕ — вĕришĕн,
Вучĕ — вучаххишĕн,
Çатăркка этем шав
Хирĕçў чĕртесшĕн.

***

Элекçĕсен сăмахĕ
Пĕришĕн пыл пекех.
Чунне кĕрсе чăрмавсăр
Сăхлантарать иккен.

***

Тултарсассӑн кӗмӗле эс
Таса мар тӑм чашӑка —
Вӗчӗлӗх хупланӑ пек-ҫке
Чи хӗрӳллӗ сӑмаха.

***

Сар ҫу пек чӗлхипе
Курнӑҫланать тӑшман,
Анчах та ӗҫӗпе
Сиен тӑвать ялан.

***

Ытла та ҫепӗҫ ун чӗлхи,
Анчах ӑна ан шан.
Сӑмахӗнчен пулать хуйхи,
Ҫич хут куратӑн шар.

***

Курайманлӑх пит пытанчӑк
Тӗл пулсан та куҫа-куҫӑн.
Халӑх умӗнче сасартӑк
Ун ҫилли тухать яр уҫҫӑн.

***

Ҫынщӑн шӑтӑк кам алтать,
Ҫав унта кӗрсе выртать.
Кам чулпа пеме хӑять,
Ҫав хӑех инкек тупать.

***

Суеҫ чӗлхе кирек хӑҫан
Сӑлтав тупса ҫынна йӗплет.
Йӑпӑлтатма юратакан
Влаҫ тытӑмне йӑлт пӗтерет.

## XVIII

*Сӑлтавсӑр каппайланнине, кӗвӗҫнине, икӗ питлӗ пулнине сивлени. Туслӑха пӗлсе хаклакана мухтани. Чӑркӑш арӑмӑн ҫитменлӗхӗ пирки. Ӑс-хакӑл вичкӗнлӗхӗ, тӑрӑшулӑх, ҫӑткӑнлӑх ҫинчен. Хуҫалӑха типтерлӗ тытасси, перекетлӗ пуласси пирки ӑс пани.*

***

Ӗмӗтленни пулать ыран
Тесе сӑлтавсӑр ан мухтан.
Мӗн сиксе тухӗ-ха кайран,
Ҫавна пӗлмесӗрех юлан.

***

Ӗҫне кура чыслаччӑр
Ялан ҫынсем сана.
Чӗлхӳ пулсан вылянчӑк
Ҫухатӑн ят-сумна.

***

Йывӑр мӑн чула йӑтма,
Йывӑр хӑйӑр пуҫтарма.
Вӗсенчен те йывӑр питӗ
Усала памашкӑн витӗм.

***

Тарӑхун та пур-ха вӗҫӗ,
Чарӑнать-ха ҫилӗ-вӗчӗ.
Кӗвӗҫекене кӑна
Хӑть такам та парӑнать.

***

Уҫҫӑн суяна питлен-тӗк,
Хӑвӑншӑн аван.
Вӑрттӑн юратнин илемӗ
Ҫывӑх ултава.

***

Таса туйӑмлӑ ҫынсен
Килӗшӳллӗ-ха ӳпкевӗ.
Шав суйма хӑнӑхнисен
Чуптуни те... сӑхнӑ евӗр.

***

Тутӑ ҫыншӑн пыл карасӗ
Эрӗм евӗр йӳҫӗ теҫҫӗ.
Хытнӑ ҫӑкӑр, выҫӑхсассӑн,
Кулачран та ирттерет-ҫке.

***

Кайӑк ӑшӑ йӑвинчен
Уйӑрлнӑ пекех сасартӑк,
Ҫыннӑн ют ҫӗре лексен
Шухӑш-туйӑмӗ арканчӑк.

***

Тӗрлӗ тӗс, йӳҫек пирус
Лӑплантарӗ чӗрене.
Вӑхӑтра пӗртен-пӗр тус
Парӗ ырӑ канашне.

***

Тусна та, унӑн ашшӗне те
Йывӑрлӑхра эс ан пӑрах.
Вӗсемпеле хӗне ҫӗнетӗн,
Юлмастӑн нихӑҫан хӑрах.

Пулӑшӑвна вӗсем манмаҫҫӗ
Енчен пулсан хӑв хурлӑхра.
Сана вӗсем те ал параҫҫӗ
Тӑвансенчен те маларах.

***

Ывӑлӑм! Сан ӑсупа
Савӑнтӑр чӗремҫӗм ман.
Усал ят сараканпа
Пӗлӗп вирлӗн ҫапӑҫма.

***

Ӑслӑ-тӑнлӑ ҫын сисет те
Пытанать терт-нушаран.
Айванни сӗмсӗрленет те
Тухаймасть-ха хурлӑхран.

***

Саклат сӗнекенни ҫумра тӑрсан
Ун кӗпине илсем эс сутӑҫран.
Вӑл саншӑн ют пулсан та
Ҫав ҫӑкҫӑна шанатӑн.

***

Кусне усна-усманах
Хӑй тусне мухтакана
Танлаштарӗҫ усалпа,
Ыр ята варлаканпа.

***

Ҫумӑр ҫунӑ чух тумла
Вӗҫӗмсӗр пӑт-пат тумлать.
Чӑркӑш арӑм шӑп ҫапла
Чарӑнмасӑр вӑрҫӑшать.

Ҫынсенчен ҫак кӑлтӑка
Пытарни те кӑлӑхах.
Ҫакӑн евӗр чылай чух
Ҫил ҫулне пӳлме май ҫук.

Ҫакӑн евӗр аллуна
Пытарсан та хӑв хыҫна
Асилтерӗ тӑтӑшах
Хӑй пурри ҫинчен сана.

***

Тимӗр тимӗре хӑйрать те,
Ҫивӗчлӗх татах ӳсет.
Ҫын ҫынпа шав сӑмахлать те
Туйӑмне вичкӗнлетет.

***

Смоква йывӑҫҫине хураллакан
Вӑхӑт ҫитсен ҫырлаллӑ пулӗ.
Хӑй хуҫине куллен-кун упракан
Кирек хӑҫан та пурнӗ сумлӑ.

***

Ӳкерӗнет пӗр улшӑнмасӑр
Сӑн-пит шыв тӗкӗрӗ ҫине.
Этем чӗри те ҫавӑн майлӑ,
Шав туртӑнать ҫынсем патнех

***

Аваддон* тата чӗр тамӑк
Тӑранма пӗлмест нихҫан.
Выҫӑ куҫ ҫухатӗ намӑс
Мулшӑн ӗмӗр ҫунӑран.

(Сӗмсӗр ҫын, чӑнах та, пуҫсӑр,
Куҫӗ ирсӗррӗн пӑхать.
Тӳре умӗнче чарусӑр,
Ҫавӑншӑн хӑй терт курать.)

***

Шӑратакан ҫурт — ҫут кӗмӗлшӗн,
Хаклӑ, сарӑ ылтӑнӗ — вучахшӑн.
Шӑп ҫапла ҫынсем те ӗмӗтлӗ:
Ыр сӑмах вӗсемшӗн халь ахах пек.

(Саккуна хирӗҫлекенӗн
Усал шухӑш чӗринче-мӗн.
Чӑнлӑхшӑн кӗрешекен
Ҫут пӗлӳ шырать куллен.)

***

Кашни килӗ яланах
Хӑйӗн кисӗпне шырать.
Ӑс парсан та айвана
Вӑл шутланинех тӑвать.

***

Выльӑх-чӗрлӗх ан чирлетӗр,
Лайӑх пӑх эс вӗсене.
Кӗтӳре ялан ҫӳреччӗр
Ӳстерсе хӑйсен йышне.

---

**Аваддон (евр.) — тӗпсӗр, тарӑн шӑтӑк.*

Ылтăн-кĕмĕл ĕмĕр пулмĕ,
Мĕн пурри пĕтет часах.
Влаç ламран лама шав куçмĕ,
Пурнăç тăрĕ улшăнсах.

Шăннă çĕрĕ ăшăнсассăн
Симĕс курăкĕ шăтать.
Çĕр çыпни кайран хавассăн
Утă, улăм пуçтарать.

Пулĕ унăн ытлăх-çитлĕх:
Кĕрек — сурăх тирĕнчен,
Аш-какай сутса çĕр илĕн,
Пухăн тыр-пула çуллен.

Ялан кирлĕ перекетлĕх
Ўстĕрччĕ тесен нухрат.
Сĕчĕ качакан çитет-ха
Хатĕрлес тесен апат...

## XIX

*Тўрĕ кăмăллисемпе таса мар çынсен хире-хирĕçлĕхĕ. Чухăнсене хĕсĕрленине, саккуна пăсакансене питлени. Влаçшăн çунса вăрттăн çылăх тăвакан этеме, çын юнне ахалех юхтаракан йăх-яха сивлени. Мул пуçтарас тесе иртĕхсе пурăнакансене питлени.*

***

Усал хăй мĕлкинчен хăрать,
Унран вăл шикленсе тарать.
Тўр чунлă çын хăюллă, çирĕп,
Кĕрешĕ, арăслан пек, вирлĕ.

***

Çĕршыв саккунлăхне пăссан
Пуçсăррисен эшкерĕ ўсĕ.
Ăс-хакăла мала хурсан
Тертленмĕ халăх, пулĕ ўсĕм.

***

Чухăн çын ларса влаçра
Хĕсĕрленĕн вăйсăра —
Шалкăм çумăрĕ çапла
Юхтарать çĕн тыр-пула.

***

Саккунран пăрăнакан
Таса мар çынна мухтать.
Чăнлăха юратакан
Вĕсене пит тарăхать.

***

Çынна усал сунакансем
Тĕрĕслĕхе пач ăнланмаççĕ.
Ырра чунтан шанакансем
Пурне те лайăх ăнкараççĕ.

***

Чухăнсен чун-чĕмĕ ырă
Кăлтăксăр пурăннăран.
Виçерен тухать пуян,
Кăтартать çынна хĕн-хурлăх.

***

Ывăлу пĕлӳ пухсан
Пăхăнать саккунсене.
Пурлăха салатакан
Намăс кӳрĕ ашшĕне.

***

Хуçалăха сарса пырсассăн
Пуянлăху ӳсет.
Çук çынсене те пулăшмашкăн
Укçу-тенкӳ çитет.

***

Турă саккунне пач пăхăнмасăр
Пурăнать пулсан этем,
Кĕлĕ сăмаххи çав çыншăн майсăр,
Çук ун чунĕнче илем.

***

Тӳр çынна кам астарать,
Çав суялăха путать.
Камăн кăлтăк-сăлтăк çук,
Çав этемĕн ырă чун.

***

Ăсчах пек курăнма пĕлет
Пуян пур халăх умĕнче.
Анчах ăна хайлавĕнче
Çук çын ялан питлет.

***

Çутă чăнлăх çĕнтерсессĕн
Уявра ĕçчен ташлать.
Хĕнлĕ пурăнăç çитсессĕн
Хăраса вăл пытанать.

***

Ăнăçу та канăç тупмĕ
Айăпне пытаракан.
Хăйĕн çылăхне кам туйĕ,
Çав çеç çăлăнĕ кайран.

***

Юратушăн çунакан чĕре
Киленӳ, рехет тупать.
Кам сăлтавсăр тарăхать,
Çав тухаймĕ терт-хĕнрен.

***

Чухăн халăхăн нуши
Иксĕлмест. Çапла патши:
Арăслан пек ахăрать,
Выç упа пек хăратать.

***

Ăссăр пуçлăхăн пĕр ĕмĕт:
Укçа-мулшăн хĕсĕрлес.
Кам нухратшăн хирĕлмест,
Çавăн пулĕ вăрăм ĕмĕр.

***

Юхтарнăшăн çынсен юнне
Этем мĕн виличчен тертленĕ.
Хăйне çеç йĕрлекенсене
Тĕлĕкĕнче курса тĕлленĕ.

***

Тӳп-тӳрĕ çулпала утсан
Телей те юп куран ялан.
Ултав сукмакĕпе кайсан
Инкек курса ӳксе юлан.

***

Çĕр çинче шав ĕçлекенĕн
Апат-çимĕç ытлă-çитлĕ.
Уявра шав сикекенĕн
Çăкăрĕ çиме те çитмĕ.

***

Ырра паръннă çынсен
Пурнăçĕ тĕллевлĕ, пиллĕ.
Кам çунать-ха мулшăн питĕ,
Çав хăпаймĕ сехметрен.

***

Кăмăллани тӳрккес çынна
Чылай чух аван мар.
Пĕр татăк çăкăршăн сана
Пултарĕ вăл сутма.

***

Ăмсанакан çын яланах
Пуясшăн пит ăшталанать.
Çука юлассине нихçан
Чухласшăн мар айван.

***

Ултава шав питлекен
Тус-юлташ кайран тупать.
Йăпăлтатма пĕлекен
Пĕр-пĕччен тăрса юлать.

***

Ашшӗ-амӑшне ҫаратакан
Калаҫать-ха: «Манӑн ҫылӑх ҫук».
Чунӗ усалпа туслашнӑран
Вӑл хӑрушӑ вӑрӑ-хурахран.

***

Мӑн кӑмӑллӑх ялан
Шав хирӗҫӳ чӗртет.
Ырра ҫеҫ шанакан
Пӗрмай курать тивлет.

***

Хӑйне хӑй ҫеҫ шанакан
Хӗн-хурпа тӗл пулӗ.
Тӳрӗ чунлӑ ҫын ялан
Тӗрӗс-тӗкел юлӗ.

***

Чухӑна пулӑшакан
Кӗлмӗҫе тухмасть нихҫан.
Иртӗхсе пурӑнакан
Пӑрӑнаймӗ ылханран.

***

Тӗрӗсмарлӑх ҫӗклесен пуҫне
Пытанаҫҫӗ-ха ҫынсем.
Ҫухатсассӑнах вӗсем вӑйне
Йышланаҫҫӗ паттӑрсем.

## XX

*Тӗрлӗ ҫитменлӗхсене, уссӑр тавлашнине, хӗрӳленсе вӑрҫӑшнине, вӗчӗрхенсе ҫилленнине сивлени. Ертсе пыракансене ырӑ кӑмӑллӑ пулма, вӗрентекенсене ачасене вӑхӑтра ӑс пама ӳкӗтлени. Саккунсӑрлӑха, чарусӑрлӑха, шӑртланнине, мӑнна хунине хирӗҫлени. Таса мар ҫынсемпе ҫыхланасран асӑрхаттарни тата усал тӑвасран хӑрамалли пирки вӗрентни.*

***

Ӑс панине, питленине
Шута хумасӑр вӑрҫӑшсассӑн

Ун чух çав çын пуласлăхне
Ан шан, пĕтет вăл сывалмасăр.

***

Йышлансассăн тӳрĕ чунлисем
Ĕçчен çын хăпартланать.
Пуç пулсассăнах чыссăррисем
Мĕн пур халăх йынăшать.

***

Ăслă ывăл ашшĕне
Савĕ, савăнтарĕ.
Ҫаскăнни пуянлăхне
Салатса çеç ярĕ.

***

Тĕрĕслĕхе мала хурса
Патша çĕршывшăн кар тăрать.
Парне илме пит юратсан
Пуянлăхĕ ун саланать.

***

Сăна-ха эс йăпăлтине:
Епле вăл илĕртет тусне.
Ун сăмахне çеç тăнласан
Танатана лекме ансат.

***

Серепи те хăйшĕн çеç
Пит усал этемĕн.
Тӳрĕ çын пурнăçĕнче
Савăнать илемшĕн.

***

Чухăнсен тавлашăвне
Тӳрĕ çын тĕпчет йăлтах.
Чыссăрри хăй тивĕçне
Пурнăçласшăн мар пачах.

***

Аскăн-тĕскĕне курсассăн
Мĕн пур халăх тарăхать.

Пăлхава чарса лартмашкăн
Ват ăсчах çеç пултарать.

***

Ăслă çын пит тарăхать-и
Айванпа сутлашнă чух.
Е касса кайса кулать-и,
Унăн пурпĕр канăç çук.

***

Çылăхсăр çынна пит юратмаççĕ
Хыт кăмăллисем.
Унăн пурнăçне çавах упраççĕ
Тӳрĕ чунлисем.

***

Айван хăй çиллине
Йăлт палăртать.
Ăсчах чылай чухне
Ăна чарать.

***

Патша суя сăмахсене
Тăнлать пулсан пĕрмай,
Ăна пăхăнакансене
Пăрахĕç чыслама.

***

Ултавçă чухăнпа тĕл пулĕ
Ятарласа е ăнсăртран.
Ырăлăхпа хĕмленнĕ çулăм
Çутатĕ иккĕшне ялан.

***

Енчен те чухăн çынсене
Патша пĕлсе айăпласан,
Яланлăхах хăй престолне
Ун чух хăварĕ сыхласа.

***

Хулăпа кăштах çапсан
Пăсăлмасть ача нихçан.
Амăшĕ ăс памасан
Намăсне курать кайран.

***

Йышлансассăн чыссăрсем
Саккуна пĕрмай пăсаççĕ.
Кăнса выртнине вĕсем
Тӳрĕ чунлисем кураççĕ.

***

Ывăлна асра тытсан çеç
Эс туйма пултарăн канăç.
Ун чухне çеç курăн савнăç,
Чун-чĕрӳ те хăпартланĕ.

***

Çӳлтисем çĕн çул сĕнсен çеç
Халăха пăхăнтаран.
Саккуна хисеплесессĕн
Ырлăхне вăл тин курать.

***

Сăмах каланипе кăна
Вĕрентейместĕн чурана.
Ăна вăл лайăх ăнкарсан та
Ун чунĕ хупă пулĕ саншăн.

***

Эсĕ курнă-и шухăшламасăр
Сăмахпа вылякана.
Айвана хăш чух пулать шанмашкăн,
Пач ĕненмĕн çав çынна.

***

Мĕн ачаран рехет курма
Хăв чуруна эс вĕрентсессĕн,

Мехел çитсессĕн, çитĕнсессĕн,
Вăл хатĕр ывăлу пулма.

***

Тарăхма юратакан
Хирĕçӳ чĕртет.
Авăк çилĕлли ялан
Çылăха кĕрет.

***

Хăйне мăнă тытакан —
Мĕскĕн çын иккен.
Саккуна пăхăнакан
Чыс курать куллен.

***

Вăрăпа хутшăнакан çын
Шав сутать чунне.
Халăх ылханне туйсан та
Пытарать ĕçне.

***

Шиклĕх хăй серепине
Хăвалать-ха çынсене.
Ырă вăй кăна куллен
Хăтарать çав сехметрен.

***

Чылайăшĕ шырать тивлет
Патшан сăн-питĕнче.
Анчах та иксĕлми телей
Шăпа çырнинче çеç.

***

Чăнлăха савакана
Тӳрĕмарлăх йĕрĕнтерĕ.
Ултавпа пурнакана
Çут пуласлăх шиклентерĕ.



*Алеметкин К.М., Кушманова М.И. çемйи.1962 ç.*



*Салтакран аттепе аннене курма килсен. 1979 ç.*



*Алеметкин Константин Михайлович,*
*Кушманова Матрена Ивановна. Шупашкар, 1962 ç.*



*Анатолий Богданова салтака ăсатни. Алексей Васильевич Богданов пĕрремĕш ретре купăсçăпа юнашар ларать.*



*Мускаврă чăваш литература кунĕсем. Писательсем Çăлтăр хулара “Мир” карап çумĕнче. А.Г.Николаев малта тăрать.*



*Чăваш писателĕсем Хĕрлĕ площадьре*



*Мускаврa чăваш литература кунĕсем. Президиумра: Н. Кушманов, Ю.Айдаш, В.Игнатьев. Д.Семенов сăмах калать*



Чăваш писателĕсен XIV съезчĕ.



*Раççей писателĕсен Союзĕн членĕсем: Галина Дмитриева (Кушманова), Николай Кушманов писательсен дачинче*



*Чăваш писателĕсем Патăрьел районĕнче. Сулахайран сылтăмалла: В.Энтип, Г.Юмарт, В.Ахун, А.Хусангай, Е.Турхан, Н.Ларионов,Н.Кушманов,Н.Исмуков*



*Дачăра. Кушмановсем: Женя, Галина, Николай, Нина*



*Кушманова Нинăпа Николай Кушманов*
*Александр Кушманова пĕрремĕш класа, шкула ăсатаççĕ*



*Кушмановсем: Евгений, Наташа, Александр Хёрлё площадьре*

# ТУПМАЛЛИ

**Сăваплă вырăнсем** ....... 5
"Ытарайми, нихçан манми Чăваш çĕршывĕ!.." ....... 5
Тăван çĕршыв ....... 6
"Упи каçми" варсемлĕ ман çĕршывăм..." ....... 7
"Кашни пĕлет аван: çĕршыв мăнаçлă" ....... 7
"Çутçанталăк пытанчăк вăйпа..." ....... 8
"Кашни кунах, ялан савăнтаратăн..." ....... 9
"Чĕрчун тĕнчи валли кăна-и кирлĕ" ....... 9
"Пурнатпăр ирĕк çĕршывра телейлĕн..." ....... 10
"Этемлĕх ялан пурăнать кĕрешсе...." ....... 10
"Çын тӳснисем ума тухаççĕ..." ....... 11
"Тĕллев! Малашлăхпа эс йĕкĕреш-тĕр..." ....... 12
"Ытарайми илемлĕ ман çĕршывăм..." ....... 13
"Пин-пин тĕспе çиçет умра тавралăх..." ....... 13
"Юлташăм, канăçсăр эс питĕ..." ....... 14
"Йăшсассăн та кун каçипе..." ....... 14
"Кашнин пур хăйĕн вăхăчĕ..." ....... 15
**Икĕ уяв** ....... **16**
Ачалăх ....... 17
Тăван ялта ....... 17
"Ялйышăмăн калаçăвĕ ансат..." ....... 18
Чĕлхемĕре ....... 19
Мускав чăвашĕсем ....... 21
Заводри тĕлпулу ....... 23
"Мускав хулин ем-ешĕл паркĕнче..." ....... 24
Скульптор патĕнче ....... 25
Маковский мольберчĕ ....... 26
"Аннеçĕм, мана çӳл ту çине хăпартрĕç..." ....... 27
"Хăш чух чăваш ачинченех илтетĕп..." ....... 29
"Пӳрт умĕнче эс лартнă йăмрасем..." ....... 30
Больницăра ....... 31
Тухтăрсене ....... 32
"Çут тĕнче!.." ....... 33
Аннеçĕм умĕнче пуçа таятăп ....... 34
Аннене ....... 35
Ирсерен кама кĕтетĕн, эс, йăмра?.." ....... 36
Ĕмĕрхи ӳкерчĕк ....... 37
Данко пек ....... 37
"Кунта масар пулни çинчен..." ....... 38
**Ик чун шыранă юрату** ....... **39**

"Тин чĕрĕлен çанталăк сăнĕпе..." ....................................39
"Пĕрпск шутлатпăр,— тетĕн эсĕ..." ....................................39
"Тĕлпулусен хитре саманчĕсем..." ....................................40
"Мĕн чуль асамлăх сан куçусенче..." ....................................40
"Ытти хĕрсен сăнĕсене мантартăн..." ....................................41
"Çулсем иртӳçĕн тĕвĕленчĕ..." ....................................41
"Эп — чирлĕччĕ, эс шантараттăн..." ....................................42
"Санпа чухне кăна ман пӳлĕм çутă..." ....................................42
"Унччен сисмен çĕн туйăм..." ....................................43
"Кун пек хумхану чунăмра ман пулман.." ....................................43
Ун пурнăçĕ телейлĕ пултăр ....................................44
Утатпăр иккĕн... ....................................45
"Халăхăма пит çывăх авалтан..." ....................................46
"Халăхăма пит çывăх авалтан..." ....................................46
"Нумай çисессĕн пыл та йӳçĕ теççĕ..." ....................................46
"Ма пытарас?.." ....................................46
"Ĕнер кăна каçса кайса мухтатчĕç..." ....................................47
"Чăн инкеке сиссех эс йĕтĕн пулĕ..." ....................................47
"Чĕкеç чĕлхиллĕ пĕчĕк хĕрĕм..." ....................................48
"Ача ӳсет, чупса çӳрет хавассăн" ....................................48
*Йăмра кашлавĕ* ....................................***49***
**Шухăшăма** ....................................**49**
"Тапса тăран çăлкуçĕ хăй — поэзи..." ....................................50
"Хĕвелĕн çутинчи çăлкуçĕ..." ....................................50
**Манăçман поэтсем** ....................................**51**
Хĕвел ури ....................................53
"Мала кăнаваскать сукмакĕ..." ....................................54
"Тĕп хулара кун-çулăм иртнĕçемĕн" ....................................55
Эпир — **мир çыннисем** ....................................**57**
Килти калаçу ....................................58
*Çурхи илем* ....................................*63*
Хирти ӳкерчĕк ....................................64
"Тӳпе кăвак. Хĕвелĕ ывăнмасăр..." ....................................64
Шкул ачисен юрри ....................................64
"Август уйăхĕ тирпейлĕ..." ....................................65
Кун-çул кĕввисем ....................................66
"Этемлĕх ялан пурăнать кĕрешсе" ....................................68
"Йĕри-тавра халь ылтăн кĕркунне!" ....................................68
Пĕлĕтсем ....................................69
Дагестан ....................................69
Тинĕсе ....................................70
"Хумсем, пĕрне-пĕри тĕртсе..." ....................................70
"Ялан, ялан кĕрешмелле!.." ....................................71
"Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те..." ....................................72

Йăмра кашлавĕ ....................................................................73
“Çĕр çаврăнать хăй чиккинчен тухмасăр” ..........................................75
Суйлас марччĕ хурапа пурнс те ......................................................76
“Пĕлтер, этем, ун-çул юхăмĕнче...” ...................................................80
Йĕс шăнкрав кăна янратăр... ............................................................80
“Çĕрщывăм хăюллăн вăранĕ...” ........................................................84
“Çынсем...Çынсем... Сиртен вăй-хал илетĕп” ....................................84
“Выртакана çапма хушмаççĕ ĕлĕкрен” ..............................................85
“Çывăххине, инçетрине те” ...............................................................85
“Хуракăшсем,Эсир туятăр-ши...” .......................................................86
Кĕрхи шухăшсем ...............................................................................87
“Тунсăхларăм паян эп, юлташăм...” ..................................................89
“Вăрман хуралчĕ...” ..........................................................................90
Пĕрремĕш юр ...................................................................................90
Ыткăн-ыткăн йĕлме йĕлтĕр ...............................................................90
**Мул — эрнелĕх, ăс — яланлăх ......................................................91**
Уйрăлу ...............................................................................................110
“Элек çути чăрмав курмасăр...” .........................................................110
“Айăпăма эс витĕрех куратăн...” .......................................................110
“Чăтăмлăху йăлтах пĕтсен...” ...........................................................111
Уйрăлсан ............................................................................................112
“Кĕтмен çĕртен ик çул юпленчĕ...” ...................................................112
“Хальччен ик ăс çĕкленĕ кермене...” .................................................113
“Краççын сапса çунан вута сӳнтернĕн...” ..........................................113
“Хăш чух тивĕçлипе, чунпа туймастпăр...” ........................................114
“Чун ыратать — тупасшăн хӳтлĕх...” ................................................114
“Ик чун пĕрне-пĕри савать пулсассăн...” ...........................................115
“Пит кĕвĕçсен аманĕ юрату...” ..........................................................115
“Урлтавпа çĕкленнĕ сас-хуран ” .......................................................116
“Тĕлпулусен хитре саманчĕсем...” ....................................................116
“Юлашки хут курса калаçнă чух...” ...................................................117
“Пĕлтер — ӳкĕтлесе ыйтатăп...” ......................................................117
“Телейлĕ эп, кăвак куçсен хĕлхемĕ...” ..............................................118
“Эс ан илĕрт мана, авар хĕрĕ...” .......................................................118
“Каллех, каллех эп тăр-пĕччен...” .....................................................118
“Аллу чĕтрерĕ...” ...............................................................................119
“Васкаса эс пытантăн сасартăк...” ...................................................120
“Юр пĕрчисем — шур чечексем...” ...................................................120
“Сана пула ман савăнăç çухалчĕ...” .................................................121
“Сывпуллашар ӳпкелешмесĕр...” ......................................................121
“Хĕрпе каччăн çулĕсем...” ...............................................................122
“Çын сăмахне тек нихăçан итлемĕп...” ..............................................122
“Кĕтмен инкек пĕрре те шеллемесĕр” ..............................................123

“Юратнă ял енне ал султăм...” ............................................................123
Уйрăлу (поэма) ............................................................................124
Кун-çул ытамĕнче (сонет кăшăлĕ) ......................................................142
Çул пуçламăшĕ (поэма) ....................................................................150
**Тăван ен йыхравĕ** (поэма) ..........................................................161
Тăван ял-йышăм хушшинче (поэма) ....................................................181
**Библин Кивĕ Заветĕнчи «Соломонăн хайлавĕсем»** ...............................236
Тĕрлĕ çулсенчи ўкерчĕксем ..............................................................321

НИКОЛАЙ КУШМАНОВ
(АЛЕМЕТКИН)
НИКОЛАЙ КОНСТАНТИНОВИЧ

# ШУМ ВЕТЛЫ

Стихи и поэмы
на чувашском языке

Редактор *Дмитриева Г. С.*
Оригинал-макет *Кушманов Н.К.*

Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Усл. печ. л. 20.75. Гарнитура TimCH, Балтика.

